Ч-82
25200-Чув

# Чăваш юмахĕсем



Чăваш кĕнеке издательстви

Национальная библиотека ЧР
4-025200

25200 шув

Возвратите книгу не позже
обозначенного здесь срока

Зак. 3014.

Кор
С(Чув)
К 4-12

# чăваш ЮМАХĔСЕМ

Г. Ф. ЮМАРТ
пухса хатĕрленĕ

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1982

84.3 Чув
Ч 82

**Коллектив.**

Ч 82 Чăваш юмахĕсем.—Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви. 1982.—144 с. 60 п.

Кĕнекене халăх хушшинче анлă саралнă юмахсемпе пĕрлех халич-[illegible] пичетленмен юмахсем те кĕнĕ.

84.3 Чув

ПРОВЕРЕНО
20.. 17

ч $\frac{0763-088}{М136(03)-82}$ 84—82 4803010200

25200-чув

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1982 ç.

# ШАШИЕ — ВИЛĔМ, КУШАКА — КУЛĂ

## ТИЛĔ ТУС

Пĕр старик вăрмантан тилĕ чĕрĕллех тытса таврăнать те карчăкне калать:

— Карчăк, манăн кивĕ çĕлĕке кăмакана пăрахса çунтарса яр. Эпĕ çĕлĕклĕх питĕ аван тир тупса килтĕм, пăх-ха,—тет те мишук ăшĕнчен тилле кăларса урайне ярать.

Карчăкĕ вут хутса тăнă пулнă. Старик çĕлĕкне илет те кăмакана пăнлаттарать. Старик калать:

— Тилĕ тус, ĕнтĕ эпĕ сана çĕлĕк тума пусатăп. Виличчен эсĕ пире пĕрре ташласа кăтарт-ха.

Старик хай çĕçĕ хăйрать. Мĕскĕн тилли унталла-кунталла пăхкалать. Мăнтарăн чунĕ! Пит вилес килмест пуль! Тилĕ чӳречерен вăрман еннелле вăрттăн пăхать.

Старик çĕçĕ хăйраса пĕтерчĕ те тилле калать:

— Ну, тилĕ тус, ташла, ташламастăн пулсан—пусатăп.

Тилĕ калать:

— Ташласси ташлăп та эпĕ, манăн ташлама хитре кĕпе çук çавă.

Карчăкпа старик ку тилле кĕпе тупса тăхăнтараççĕ.

Тилли ташлама хатĕрленсе ура çине тăчĕ. Хăйне хăй тăрăххăн пăхкалать.

Старик калать:

— Мĕншĕн ташламастăн тата, тилĕ тус?

— Ташласса ташлăп та,—тет тилли,—манăн пуçра хушпу çук-çке.

Карчăкпа старик тилле хушпу тупса тăхăнтарчĕç.

Тилли хушпу тăхăнсан та çаплах ташламасть-ха. Хăйне хăй тата тăрăххăн пăхать.

Карчăкпа старик иккĕшĕ те:

— Ташла ĕнтĕ, тилĕ тус, ташла, мĕншĕн ташламастăн?—теççĕ.

Тилли калать:

— Ташласса ташлăп та, манăн тенкĕллĕ мăй çыххи çук-çке.

Карчăкпа старик тенкĕллĕ мăй çыххи те параççĕ. Тилли çаплах ташламасть.

— Манăн алăра сулă çук-ха тата, — тет.

Стариккипе карчăкĕ тилĕ мĕн ыйтнине пурне те тупса пачĕç те. тилли кăшт уçăлса кулкалама пуçларĕ. Старик кĕсле калама тытăнчĕ, тилĕ хуллен-хуллен ташлама пуçларĕ. Çăмăлланса, çăмăлланса ташлать. Хушпу тенкисем, мăй çыххи тенкисем шăнкăр-

татса çеç тăраççĕ. Карчăкĕ çунакан кăмакана пăрахсах алă çупа пуçларĕ.

— Çăмăлтарах ташла, тилĕ тус, ну, яра пар,—тет старик. Хăй те алхасса кайнă. Сиксе тăрса тилĕпе ташласси анчах. Тилли тем тĕрлĕ илемлĕ, çăмăллăн ташлать. Стариккипе карчăк тĕлĕнсе хытсах кайрĕç. Тилĕ ташласа çӳрерĕ-çӳрерĕ те хăйне ăшă пулнă пек тытса калать:

Алăк уççи уçăрах,
Кантăк хуппи уçăрах.

Хай карчăк вăр-вар алăкне, кантăкне уçса пăрахрĕ. Тилĕ хĕпĕртесе кулакула ташласа çӳрет. Тилĕ ташласа çӳрерĕ-çӳрерĕ те алăкран вĕлт тухса шурĕ. Карчăкпа старик çăвара карса юлчĕç. Пĕтĕм мул та, çĕлĕк те пĕтрĕ. Тилли те пит чее çав!

## ТИЛĔПЕ КАШКĂР

Пĕр тилĕ чупса пынă чухне пĕр шăтăка нăш шăршлать, тет те, ылтăн туталлă пулать, тет; çӳлелле пăхсан, çăлтăр куçлă пулать, тет; сикет, тет те, урхамах тăррине пулать, тет; пырать, тет, чуптарса. Кашкăра тĕл пулсан, кашкăр ыйтать:

— Ăçта пултăн капла, тилĕ тус? — тет.

Тилĕ калать:

— Чупса пынă чух пĕр шăтăка шăршларăм та ылтăн туталлă пултăм, çӳлелле пăхрăм та çăлтăр куçлă пултăм; сикрĕм те урхамах тăррине пултăм; пырап ĕнтĕ,— тет.

Кашкăр та çапла тăвать, тет: пĕр шăтăка шăршлать, тет те, тути таврăнать каять, тет; çӳлелле пăхать, тет те, куçĕ шăтса юхать, тет; сикет, тет те, çатан шалчи тăррине пулса вилет, тет. Пĕтрĕ.

## ТИЛĔПЕ УПА

Тилĕпе упа тус пулнă. Вĕсем пĕрле ĕçсе çинĕ. Вĕсен пĕр чĕрес пыл пулнă. Ăна тилли вăрттăн çинĕ. Упи калать, тет:

— Пыла кам çинĕ?—тесе калать, тет.— Эс çинĕ пуль!

Тилли калать, тет:

— Эп çимен, ху çинĕ пуль!— тесе калать, тет.

Упи калать, тет:

— Эп çимен!

Тилли калать, тет:

— Атя кăмакана кутăн тăрса хĕртĕнер!— тесе калать, тет.— Камран пыл тухать, çав айăплă пулĕ.

Упи калать, тет:

— Атя, эппин, тăрар!

Тăраççĕ, тет, кăмака хутнă чухне. Тăра-тăра упи çывăрсах кайнă, тет. Упи çывăрса кайнă, тет те, тилли пыл илнĕ, тет, упи çумне сĕркеленĕ, тет. Упана:

— Тăр-ха!—тесе калать, тет.— Санран пыл тухрĕ,—тесе калать, тет.

Упа айăплă пулчĕ, тилли тӳрĕ пулчĕ, тет.

## ТИЛĔПЕ УЛАКАЙĂК

Пĕрре тилĕпе улакайăк юлташланчĕç, тет. Пĕрле пурăнкаласан, тилĕ улакайăка каларĕ, тет:

— Эсĕ мана тăрантар,— терĕ, тет.

Улакайăк тăрантарма пулчĕ, тет.

Тилĕпе улакайăк пĕр çулпа кайнă чух пĕр арăма курчĕç, тет. Улакайăк çав арăм умне вĕçсе кайрĕ, тет те, арăм умĕн ни вĕçи, ни вĕçми хăтланса пырать, тет. Арăм, чĕрессине лартса хăварса, улакайăк хыççăн тытасшăн кайрĕ, тет.

Çавăн чухне тилĕ, кайран пырса, чĕрес ăшĕнчи апата ĕçрĕ, тет, юлашкине тăкса ячĕ, тет. Тăккаланчăкĕпе улакайăк та тăранчĕ, тет.

Тата çӳресен-çӳресен, тилĕ калать, тет, улакайăка:

— Тата эсĕ мана култар,— тесе калать, тет.

Улакайăк каллех култарма пулчĕ, тет.

Çаксем пĕр анкартине авăн çапнă çĕре кайрĕç, тет. Çакăнта, авăн çапнă çĕрте, пĕр кукша карчăк пулнă, тет. Çак анкартине килсен, тилĕ капан кутне выртса юлчĕ, тет. Улакайăкĕ кукша карчăк пуçĕ çине кайса ларчĕ, тет. Çав кукша карчăкăн упăшки, улакайăка çапас тесе, карчăка пуçран туртса çапрĕ, тет. Улакайăк хăйне çапиччен вĕçсе кайрĕ, тет.Упăшки карчăк пуçне çурчĕ пăрахрĕ, тет. Тилĕ, çавна курсан, каçса кайса кулать, тет, капан кутĕнче. Унтан, кулкаласассăн, тилĕпе улакайăк çак анкартинчен тухса кайрĕç, тет.

Тата çӳресен-çӳресен, тилĕ каллех улакайăкран ыйтать, тет:

— Тата эсĕ мана макăрт,— тесе калать, тет.

Улакайăк каллех макăртма пулчĕ, тет.

Улакайăк тилле пĕр кĕлет айне ертсе кайрĕ, тет те, тилле унтах хăварчĕ, тет. Хăй хуçа арăмĕ патне икерчĕ пĕçерне çĕре кайрĕ, тет. Алăк çине пырса ларчĕ, тет.

Çав арăмăн пӳртре икĕ йытă выртнă, тет. Улакайăк алăка так-так таккарĕ, тет. Йытăсем, çавна илтсен, улакайăка хăваларĕç, тет. Улакайăк кĕлетай витĕр тухса тарчĕ, тет. Йыттисем, кĕлет айне кĕрсен, тилле курчĕç, тет те, тапратрĕç, тет, хăвалама. Тилĕ аран тарса хăтăлчĕ, тет.

Вара тилĕпе улакайăк уйрăлчĕç, тет. Тилĕ кайран шухăшларĕ, тет: «Эпĕ чее те, улакайăк манран та чее»,— тесе каларĕ, тет.

## КАШКĂР

Пĕрре кашкăр вăрманпа иртсе пырать, тет. Курать, тет, вăл улатăпана. Улатăпа ун чухне йывăç шакканă. Кашкăр калать:

— Мĕн чухлĕ йывăç шаккатăн — шурă пӳрт лартаймастăн!— тет.

— Эсĕ мĕн чухлĕ сурăх çуратăн, çапах та шурă кĕрĕк çĕлетейместĕн! — тет улатăпи.

Кашкăр çĕвĕç патне кайрĕ, тет те:

— Мана кĕрĕк çĕлесе паратăн-и?— терĕ тет.

— Паратăп,— тет çĕвĕçи.

— Миçе тир кайĕ вара ăна?— тесе ыйтать кашкăрĕ.

— Аллă сурăх çурсан çитĕ,— тет çĕвĕçĕ.

Кашкăр каять те аллă сурăх çурса килсе парать.

Нумай тăрать-и, сахал тăрать-и— кашкăр килет кĕрĕк ыйтма. Çĕвĕçĕ калать:

— Çуррине çĕленĕ ĕнтĕ,— тет.

Хай кашкăр тепре килет те:

— Ĕлкĕртни?— тет.

Хуçи:

— Кĕр-ха!— тет.

Кашкăр кĕрсен, çĕвĕç калать:

— Пĕтернĕччĕ те-ха, арăм хăнана тăхăнса кайрĕ,— тет.

Хай кусем каяççĕ, тет, шырама. Кайсан-кайсан, чӳрече витĕр курать, тет, кашкăр шурă кĕрĕк выртнине. Кусем кĕчĕç, тет, пӳрте. Пурте çывăрнă, тет. Кашкăрĕ:

— Атя тĕпсакайне сăра ĕçме!—тет.

— Атя,— тет çынни.

Анчĕç. Малтан çынни ĕçрĕ, унтан кашкăрĕ ĕçрĕ. Иккĕшĕ кăшт çеç пĕр пичĕкене пĕтермерĕç, тет. Унтан татах çынни ĕçе пуçларĕ. Хăй калать, тет, кашкăра:

— Асту, ан юрла!— тет.

Хай унччен те пулмарĕ, тет, кашкăрĕ ӳлесе те ячĕ, тет. Куна илтсен, пурте сиксе тăчĕç, тет те, тытăнчĕç, тет, кашкăра чышкă нама: хăшĕ турчăкапа, хăшĕ çатма тимĕррипе, хăшĕ ухватпа. Хай кашкăра çапла вĕлерчĕç, тет те, тирне сӳсе сутрĕç, тет.

## КАШКĂРА АН ШАН

Тилĕ мулкача юлташа чĕнчĕ, тет. Тытăнчĕç, тет, иккĕшĕ вутă татма.



Мулкач урине хуҫрӗ, тет. Тилӗ мулкача кашкӑр патне тухтӑра леҫсе хӑварчӗ, тет.

Тепререн тилли кашкӑр патне пычӗ, тет те:

— Мулкача сыватрӑн-и? Ӗнтӗ киле илсе каясчӗ,—тесе калать, тет.

— Тахҫанах сыватрӑм, тирне илсе кайма пултаратӑн,— терӗ, тет, кашкӑр.

Вара мулкач тирне илсе тухса пачӗ, тет.

## УХМАХ КАШКӐР

Пӗр кашкӑр выҫса аптранӑ. Вӑл пӗр ӑйӑр курӑк ҫиме кӗҫенсе чупса пынине курнӑ. Кашкӑр ӑйӑра калать:

— Ман мӗн ҫиес?— тет.

— Манӑн хӳрере мӗн ҫырнӑ, ҫавна вулама пӗлетӗн-и?— тет ӑйӑр.

Кашкӑр чӑнахах ӗненчӗ те вулама тытӑнчӗ, тет. Ӑйӑрӗ ҫавӑнтах кашкӑра тапса ыткӑнтарса ячӗ, тет.

Унтан каллех кашкӑрӑн хырӑмӗ выҫнӑ. Вӑл апат шырама кайнӑ чух вӑкӑра тӗл пулнӑ. Кашкӑр вӑкӑра калать:

— Ман мӗн ҫиес?— тет.

Вӑкӑр калать:

— Манӑн мӑйрака вӗҫӗнче мӗн ҫырнӑ, ҫавна вулама пӗлетӗн-и?— тет.

Кашкӑр ҫавӑнтах вулама тытӑннӑ. Хайхи кашкӑра вӑкӑр тӗкнӗ те, кашкӑр ыткӑнса кайнӑ.

Вӑл хырӑм выҫса аптранипе каллех апат шырама чупнӑ. Ҫул ҫинче кайнӑ чух вӑл такана тӗл пулнӑ та калать:

— Ман мӗн ҫиес?— тет.

Така калать:

— Эсӗ ҫыран хӗрне аяла тӑр, эпӗ ҫӑварна чупса кӗрсе кайӑп,— тет.

Кашкӑр ҫыран айне ларчӗ, тет. Та-

ка, ту ҫинчен чупса анчӗ, тет те, кашкӑра тӗксе хырӑмне ҫурса пӑрахрӗ, тет. Кашкӑрӗ татах, хырӑмӗ ҫурӑлнӑ пулин те:

— Мӗн ҫиес?! — тесе ӳлесе выртать, тет.

Ҫавӑн чухнех кашкӑр патне пӗр курак вӗҫсе пычӗ, тет те, куҫӗсене кӑларса кайрӗ, тет. Ҫапла кашкӑр хӑй пырне пула пурнӑҫне пӗтерчӗ, тет.

## УПАПА ХӖРАЧА

Пӗрисен пӑру ҫухалнӑ. Ачисем пӑрӑва шырама тухса кайрӗҫ, тет.

Акӑ пӗр хӗрачи пырать вӑрманпа. Инҫех мар упа му-у-у тени илтӗнет. Хӗрача пӑру тесе пырать те, упа хӗрачана шӑтӑкне тытса кӗрет.

Пурӑнсан-пурӑнсан, хайхи хӗрача упа патӗнче пурӑнсах каять. Упи аван пӑхать: пыл та ҫу тупса пырса ҫитерет.

Пӗррехинче хӗр калать:

— Упа, аттесем патне хӑнана каясчӗ те,— тет.

Упи килӗшрӗ. Кучченеҫсем илчӗҫ те кайрӗҫ. Хайсен ял ҫӗрӗсем патне ҫитсен , хӗр калать:

— Ку пирӗн аттен ыраш ани,—тет.

Упи:

Аҫун ыраш анине
Шыра-шыра пырар-и!—

тесе пырать, тет.

Хӗрӗ:

— Ку пирӗн аттен урпа ани,—тет.

Упи:

Аҫун урпа анине
Уртӑна-уртӑна каҫар-и!—

тесе пырать, тет.

Хӗрӗ:

— Ку акӑ пирӗн аттен пӑри ани,— тет.

Упи:

Аҫун пӑри анине
Пӑрӑна-пӑрӑна каҫар-и!—

тесе пырать, тет.

Хӗрӗ:

— Ӗнтӗ аттен сӗлӗ анине ҫитрӗмӗр,—тет.

Упи:

Аҫун сӗлӗ анине
Сӗрле-сӗрле каҫар-и!—

тесе пырать, тет.

Хӗрӗ:

— Халӗ аттен тулӑ ани тӗлне ҫитрӗмӗр,—тет.

Упи:

Аҫун тулӑ анине
Тулла-тулла каҫар-и!—

тесе пырать, тет.

Ҫапла юрла-юрла ҫитрӗҫ, тет. Кӗчӗҫ, тет те, хӗрӗн ашшӗ-амӑшӗ те, хӑни-вӗрли те тӗлӗнчӗҫ кайрӗҫ, тет. Ҫапах та майласа хӑналаҫҫӗ, тет.

Упи, ырӑ пӑхнипе савӑнса, хӗпӗртенӗ, тет, юрлама пуҫларӗ, тет:

Ах, ыр ҫыннӑм, ыр ҫынҫӑм,
Санӑн ыраш уйӗпе килтӗмӗр.
Шыра-шыра килтӗмӗр—
Урпа уйӗпе килтӗмӗр—
Уртӑна-уртӑна килтӗмӗр.
Пӑри уйӗпе килтӗмӗр—
Пӑрӑна-пӑрӑна килтӗмӗр.
Сӗлӗ уйӗпе килтӗмӗр—
Сӗрле-сӗрле килтӗмӗр.
Тулӑ уйӗпе килтӗмӗр—
Тулла-тулла килтӗмӗр,—

тесе юрлать, тет.

Килтисем хӗрне каялла упапа ярасшӑн мар, тет, упана вӗлерес тесе канар тӑваҫҫӗ, тет. Сак алӑкне усрӗҫ, тет, сакайне шӗл-кӑвар лартрӗҫ, тет, тимӗр сенӗк тӑратрӗҫ, тет, ҫиелтен кӗҫҫе сарчӗҫ, тет, упана ларма вырӑн хатӗрлеҫҫӗ, тет.

Хӗрӗ сиснӗ, тет те, юрлать, тет:

Ан лар, упа мучи, ан лар,
Сак алӑкне уҫса хунӑ,
Шӗл-кӑвар ҫунса выртать,
Тимӗр сенӗк лартнӑ,
Хура кӗҫҫе сарнӑ.

Упи чухлаймарӗ, тет, лартнӑ ҫӗре ларчӗ, тет. Ларса ӗлкӗреймерӗ, тет,

сакайне кайса, сенĕкпе тирĕнсе, шĕлкăварпа çунса вилчĕ, тет.

## УЛА КАЧАКА

Ула качакан пăранлама вăхăт çитсен, вăрманти пĕр пысăк юманран çапла ыйтать:

— Юман, юман, путексене пăранлама икĕ тымару хушшине вырăн памăн-ши?

— Çук, вырăн памастăп,—тет юманĕ,—йĕкел татăлса анĕ те, путеккӳсене те, хăвна та вĕлерĕ.

Ула качака юман çумĕнчен уйăрăлса малалла утать. Вăрман улмуççийĕ патне çитет те ыйтать:

— Улмуççи, улмуççи,— тет, — хăвăн тураттусем айне пăранлама вырăн памăн-ши?

— Çук, памастăп,— тет вăрман улмуççийĕ— улма татăлса анĕ те, путеккӳсене те, хăвна та вĕлерĕ.

Ула качака вăрман улмуççи çумĕнчен уйăрăлса малалла утать. Пĕр шурă пӳрт тĕлне çитет те ыйтать:

— Пӳрт, пӳрт,— тет,— пĕр кĕтессӳне пăранлама вырăн памăн-ши?

— Парас,— тет пӳрчĕ.

Ула качака пӳрте кĕрет те пĕр кĕтессине виçĕ путек пăранласа парать. Пĕр путеккине Шăпăрти, тепĕрине Катямпи, виççĕмĕшне Кăшăлти ят хурать.

Ирхине ула качака апат пуçтарма тухса каяс умĕн путеккисене çапла калать:

— Эпĕ апат-çимĕçсем пуçтарма каятăп. Эсир, упа килсен, ăна пӳрте ан кĕртĕр, вăл сире пĕтĕмпех çисе ярать. Унăн сассийĕ мăнă, хулăн, манăн сасă çинçе,—тет.

Ула качака вăрмана апат пуçтарма кайсан, упа пырать те мăнă, хулăн сассипе юрлать:

Хир-хир урлă каçрăм—
Хир ути татрăм.
Вар-вар урлă каçрăм—
Вар ути татрăм.
Йĕкел хуппи тулли çăвăм пур,
Мăйăр хуппи тулли пылăм пур,
Енчĕкĕм тулли сĕтĕм пур.
Уçăр, уçăр, ачасем!

Путексем упан хулăн сассине илтеççĕ те, ку анне мар, хулăн сасăллă упа тесе, алăка уçмаççĕ. Упа алăк уçăлманнине кура, пусма айне кĕрсе пытанать. Каçхине ула качака киле таврăнать те çинçе сассипе юрлать:

Хир-хир урлă каçрăм—
Хир ути татрăм.
Вар-вар урлă каçрăм—
Вар ути татрăм.
Йĕкел хуппи тулли çăвăм пур,
Мăйăр хуппи тулли пылăм пур,
Енчĕкĕм тулли сĕтĕм пур.
Уçăр, уçăр, ачасем!

Путексем ула качака сассине палласçĕ те хавасланса алăка уçаççĕ. Упа килни çинчен вĕсем, пĕрне-пĕри пӳлсех, ула качакана каласа параççĕ.

— Упа сасси мăнă, хулăн. Манăн сасă çинçе. Мăнă, хулăн сасăллине ан уçăр,—тет ула качака путеккисене апат çитерсе май.

Тепĕр кунне ула качака каллех апат шырама тухса каять.

Упа, тимĕрçĕ патне кайса, чĕлхине хăйраттарса килет те çинçе сассипе юрлать:

Хир-хир урлă каçрăм—
Хир ути татрăм.
Вар-вар урлă каçрăм—
Вар ути татрăм.
Йĕкел хуппи тулли çăвăм пур,
Мăйăр хуппи тулли пылăм пур,
Енчĕк тулли сĕтĕм пур,
Уçăр, уçăр, ачасем!

Путексем: «Анне килчĕ!»— тесе, алăка уçаççĕ. Алăк уçакан Шăпăрти упана курать те хăранипе çавăнтах шăпăр айне пытанать. Кăшăлти милĕк валашки хыçне, Катямпи кăвас чĕресе хыçне выртать.

Упа, пӳрте кĕрсе, сăмсипе шăршлать те шăпăр айĕнчи Шăпăртине тупса çисе ярать. Унтан, каллех мĕнпур вырăна ухтарса, кăвас чĕресе хы-

çĕнчи Катямпине тупса çисе ярать. Унтан каллех ухтарать, анчах Кăшăлтине милĕк валашки хыçĕнчен тупаймасăрах тухса каять.

Упа тухса кайсанах, Кăшăлти алăка тĕкĕлесе лартать.

Каçхине ула качака таврăнать те алăкра юрлать-юрлать, çапах та алăк уçăлмасть. Кăшăлти, каллех упа килсе юрлать пуль тесе, хăранипе алăкне уçман. Ула качака, путексене упа çисе янă пуль тесе, сасăпах йĕрсе ярать. Çакна Кăшăлти илтет те алăка уçать, упа килсе Шăпăртипе Катямпине çисе яни çинчен калать.

«Упапа туслă пулас пулать»,—шухăшлать ула качака.

Тепĕр кунне ирех ула качака Кăшăлтине хăйпе пĕрле илет те, упана шыраса, вăрманпа пырать. Вăрманти пĕр уçланкăра упа канса выртнине курать те, ун патне пырса, сăмах хушать:

— Упа, —тет,— атя туслашатпăр.

— Туслашар,— тет упи.

— Упа тус, эсĕ вырт, эпĕ сан урлă малтан сиксе каçăп, кайран — эсĕ.

— Юрать,— тет упи.

Ула качака упа çывăхнелле сиксе пырать те ун урлă вăрт сиксе каçать:

— Халĕ эсĕ ман урлă сиксе каç,— тет.

Упа ула качака çывăхне чупса пырать те ун урлă сиксе каçма тăрать. Ула качака майракисемпе упа хырăмне çаклатса çурса пăрахать. Упа хырăмĕнчен Шăпăртипе Катямпи сиксе тухаççĕ.

## КАЧАКА ТАКИПЕ СУРАХ ТАКИ

Карчăкпа старик пурăнаççĕ, тет. Вĕсен пĕр качака таки пур, тет.

Карчăкĕ пĕрре картишне тухать, тет те, качака таки сиксе-сиксе пырать, тет, ку карчăка сĕкет, йăвантарать ярать, тет.

Карчăкĕ пӳрте кĕрет, тет те, старикки калать, тет:

— Старик,— тесе калать, тет,— пирĕн качака таки усалланнă: эпĕ тухрăм та — мана пычĕ йăвантарчĕ,—тесе калать, тет.

— Чăнах усалланнă-и вара?—тесе калать, тет те, старикки картишне тухать, тет. Качака таки сиксе-сиксе пырать, тет те, ку стариккине те тĕртет йăвантарать ярать, тет, каялла.

— Чăнах та усалланнă иккен,—тесе калать, тет, старикки. Пӳрте кĕрет, тет те, — Пусас ăна,—тесе калать, тет.

Акă хайхи карчăкпа старик çĕçĕ илеççĕ, тет те, тухаççĕ, тет, качака такине пусма. Вырттараççĕ, тет, качака такине; çĕççи мăка пулать, тет те, сĕреççĕ, тет, сĕреççĕ, тет,— çĕççи сĕрмест; пусаççĕ, тет, пусаççĕ, тет,— пусаймаççĕ, тет. Качака такине яраççĕ, тет те, кӳрши патне çĕçĕ илме каяççĕ, тет.

Çĕçĕ илсе килсен, хай качака таки тыттармасть, тет. Хăваласа çӳреççĕ, тет, ку качака такине картишĕнче. Карчăкне хапха патне тăратать, тет те, кăштах кăна уçма хушать, тет: качака такине хапхаран тухса кайнă чух хапхапа хĕстерсе тытасшăн, тет.

Качака таки сиксе пырать, тет те, хапха патне çитсен, калт çаврăнса каять, тет, каялла.

— Ытларах уç!—тесе калать, тет, старикки.

Ку ытларах уçать, тет. Качака таки, хапха патне çитсен, каллех калт çаврăнса каять, тет, каялла.

— Тата ытларах уç!—тесе калать, тет, старикки.

Карчăкĕ тата ытларах уçать, тет. Качака таки каллех каялла сиксе каять, тет.

— Пĕтĕмпех уç эппин!—тесе калать, тет, старикки.

Карчăкки пĕтĕмпех уçать, тет те, качака таки сиксе пырать, тет те, ту-

хать каять, тет, урама. Тытаймаççĕ, тет, ĕнтĕ куна.

Качака таки ялтан тухать, тет те, сурăх такине тĕл пулать, тет. Каяççĕ, тет, кусем иккĕшĕ пĕрле. Пыраççĕ-пыраççĕ, тет те, пĕр хутаç тупаççĕ, тет. Унтан каяççĕ-каяççĕ, тет те, кив кусар тупаççĕ, тет. Тата каяççĕ-каяççĕ, тет те, пĕр кашкăр пуçĕ тупаççĕ, тет. Кусене пурне те илеççĕ, тет.

Пырса кĕреççĕ, тет, хайхисем вармана. Пĕр уçланка чарăнаççĕ, тет те, выртаççĕ, тет. Акă кусем патне хĕрĕх кашкăр пыраççĕ, тет. Кусем хăраççĕ, тет. Мĕн тăвас? Сурăх таки калать, тет:

— Мĕн пĕçерес?—тесе калать, тет.

Качака таки калать, тет:

— Кашкăр пуçĕ пĕçерер,—тесе калать, тет.

Сурăх таки хутаçça салтать, тет те, хутаçри кашкăр пуçне илет, тет те, хурать, тет, кăларать, тет те, чикет, тет, шак-шак тутарать, тет, кусарĕпе.

— Свеширеххи çук-и-мĕн унта урăххи?—тесе выртать, тет, качака таки.— Свешийи çук пулсан, ав унта кашкăрсем нумай, пĕрне кайса тытса килес те пусас,— тесе калать, тет.

Сурăх таки кăшт тапранать, тет те, çавсен еннелле утать, тет. Лешсем каялла çаврăнаççĕ, тет те, тĕпĕр-тĕпĕр каяççĕ, тет.

— Мĕнтен хăрарăр эсир ку тери?— тесе калать, тет, кусене упа.

Лешсем калаççĕ, тет:

— Мĕнтен хăрасси... Ав унта уçланкăра икĕ темĕскер выртаççĕ,—тесе калаççĕ, тет,— темиçе кашкăр пуçĕ пуçтарнă; туртаççĕ те кăлараççĕ хутаçран, туртаççĕ те кăлараççĕ,—тесе калаççĕ, тет.—«Санăн свеширеххи çук-и-мĕн, тесе выртать пĕри»,—тесе калаççĕ, тет.—«Çук çав, тесе калать тепĕри»,—тесе калаççĕ, тет.—«Çук пулсан, ав унта кашкăр нумай, пĕрне тытса килес те пусас, тесе выртать леш мăйракалли, сухалли»,—тесе калаççĕ, тет.

— Качака такипе сурăх таки вĕт вăл апла. Атьăр-ха эртелпе хăйсене кайса çисе килер,—тесе калать, тет, упи.

Хайхисем каяççĕ, тет. Кусене курсан, качака таки улăхать каять, тет, йывăç тăррине. Ун хыçĕнчен сурăх таки сикет-сикет, тет, улăхаймасть, тет. Тепре сикет, тет те, мăйраки туратран çакланать, тет. Çакăнса тăрать, тет.

Лешсем çитеççĕ, тет. Упи тӳрех йывăç тĕпне чакалама тытăнать, тет. Çапла майпа йывăça тĕксе ӳкересшĕн, тет. Кашкăрсем çывăха пыма хăраççĕ, тет.

Сурăх таки качака такине хуллентерех:

— Качака-така, ӳкетĕп! Качака-така, ӳкетĕп!— тесе калать, тет.

Леш калать, тет:

— Ан шавла!—тесе калать, тет.

Унччен те пулмарĕ, тет, хай сурăх таки кĕрĕс! туса ӳкрĕ, тет, упа çине. Упа та, кашкăрсем те тараççĕ, тет.

— Умĕнчен пӳл, умĕнчен пӳл, ан яр!—тесе кăшкăрать, тет, качака таки.

Сурăх таки лешсем хыçĕнчен тĕпĕр-тĕпĕр чупса пырать, тет.

Упи питĕ хытă пынипе темĕн çине тăрăнса вилет, тет, кашкăрсем таçта кайса кĕреççĕ, тет.

Ку качака такипе сурăх таки çапла кусенчен хăтăлаççĕ, тет те, халь те пулин пурăнаççĕ, тет.

## ВИР ЮМАХĔ

Карчăкпа старик пулнă, тет. Вĕсем вир çапаççĕ, тет. Çапса пĕтерсен, кусен вир миххе кĕмест, тет. Вара вĕсем шăшие:

— Кил, шăши, вир çиме.— теççĕ, тет.

Шăшийĕ пымасть, тет. Кушака чĕнеççĕ, тет:

— Кил, кушак, шăшие тытма!

Кушакĕ пымасть, тет. Хăвана чĕнеççĕ, тет:

— Кил, хăва, кушака çапма!

Хăви пымасть, тет. Качакана чĕнеççĕ, тет:

— Кил, качака, хăвана кăшлама!

Качаки пымасть, тет. Кашкăра чĕнеççĕ, тет:

— Кил, кашкăр, качакана çиме!

Кашкăрĕ пымасть, тет. Упана чĕнеççĕ, тет:

— Кил, упа, кашкăра çиме!

Упа пымасть, тет. Вута чĕнеççĕ, тет:

— Кил, вут, упана çунтарма!

Вучĕ пымасть, тет. Шыва чĕнеççĕ, тет:

— Кил, шыв, вута сӳнтерме!

Шывĕ пымасть, тет. Вăкăра чĕнеççĕ, тет:

— Кил, вăкăр, шыв ĕçме!

Вăкăрĕ пымасть, тет. Çĕççе чĕнеççĕ, тет:

— Кил, çĕçĕ, вăкăра пусма!

Çĕççи витмест, тет. Хăйрана чĕнеççĕ, тет:

— Кил, хăйра, çĕççе хăйрама!

Хăйри тытăнчĕ, тет, çĕççе хăйрама. Çĕççи тытăнчĕ вăкăра пусма. Вăкăрĕ тытăнчĕ шыва ĕçме. Шывĕ тытăнчĕ вута сӳнтерме. Вучĕ тытăнчĕ упана çунтарма. Упи тытăнчĕ кашкăра çиме. Кашкăрĕ тытăнчĕ качакана çиме. Качаки тытăнчĕ хăвана кăшлама. Хăви тытăнчĕ кушака çапма. Кушакĕ тытăнчĕ шăшие тытма. Шăши тытăнчĕ вире çиме.

Шăшийĕ вире çирĕ-çирĕ, тет те, вир карчăкпа старикĕн миххине кĕчĕ вырнаçрĕ, тет. Пĕтрĕ.

## МĂЙĂР ЮМАХĔ

Чăхăпала автан вăрмана мăйăр çиме кайрĕç, тет. Автанĕ шĕшкĕ çинчен пĕр мăйăр ыватрĕ, тет те, чăх куçне шăтарсах пăрахрĕ, тет. Пырать чăхă çулпа макăрса. Хирĕç сынсем килеççĕ, тет.

— Чăхă, чăхă! Ма макăратăн?—тесе ыйтаççĕ.

— Епле макăрас мар манăн? Автан тусăм ман куçăма персе шăтарчĕ,—тет чăхă.

— Автан, автан! Чăхă куçне мĕншĕн шăтартăн эсĕ?—тесе ыйтаççĕ сынсем.

— Мана шĕшкĕ туратти аванса çапрĕ,— тет автанĕ.

— Шĕшкĕ, шĕшкĕ! Мĕншĕн эсĕ тураттупа автана çапрăн?—теççĕ сынсем.

— Мана качакасем кăшларĕç,—тет шĕшкĕ.

— Качакасем, качакасем! Шĕшке мĕншĕн кăшларăр эсир?—тесе ыйтаççĕ сынсем.

— Пире кĕтӳçсем сыхламаççĕ,—теççĕ качакасем.

— Кĕтӳçсем, кĕтӳçсем! Качакасене мĕншĕн сыхламастăр эсир?—тесе ыйтаççĕ сынсем.

— Пире хуçа майри сӳхе икерчĕ пĕçерсе çитермерĕ,—теççĕ кĕтӳçсем.

— Хуçа майри, хуçа майри! Кĕтӳçсене эсĕ мĕншĕн икерчĕ пĕçерсе çитермерĕн?—тесе ыйтаççĕ сынсем.

— Ман чустана сысна тăкса янă,—тет хуçа майри.

— Сысна, сысна! Хуçа майрин чустине ма тăкса ятăн эсĕ?—тесе ыйтаççĕ сынсем.

— Ман çăвăрăмсене кашкăр тытса кайрĕ,—тет сысна.

— Кашкăр, кашкăр! Сысна çурисене ма тытса кайрăн?—тесе ыйтаççĕ сынсем.

— Манăн çиес килчĕ!—терĕ, тет, кашкăр.

## ВĂКĂР, ТАКА, АВТАН, ХУР, КУШАК

Пĕр вăкăр юман кутне выртнă, тет те, йĕкелĕсем пăт-пат ӳкеççĕ, тет. Вă-

кăр ку йĕкел ӳкнипе хăраса каять: «Кунта пăшалпа переççĕ-çке»,—тет.

Пырать-пырать те такана тĕл пулать. Така çапла калать:

— Ну, вăкăр тус, —тет,—мана та илсе каятни?—тет.

— Атя, атя,—тет вăкăр,—пĕччентен иккĕн авантарах пулĕ,—тет.

Каяç-каяç те автана тĕл пулаç. Автан калать:

— Ну, вăкăр тус, мана та илсе каятни?—тет.

— Атя, атя,— тет вăкăр,—иккĕнтен виççĕн авантарах пулĕ,—тет.

Каяç-каяç, хура тĕл пулаç. Хур калать:

— Вăкăр тус, мана та илсе каятри?—тет.

— Атя, атя,— тет вăкăр,—виççĕнтен тăваттăн авантарах пулĕ,—тет.

Каяç-каяç, кушака тĕл пулаç. Кушак калать:

— Вăкăр тус, мана илсе каятри?—тет.

— Атя, атя,—тет вăкăр,—тăваттăнтан пиллĕкĕн авантарах пулĕ,—тет.

Каяç-каяç, пĕр вырăна чарăнаç. Кушак калать:

— Атя, вăкăр тус, пӳрт лартар,—тет.

— Мана пĕр хӳтлĕх пулсан юрать,— тет вăкăр.

Кушак калать:

— Атя, така тус, пӳрт лартар,—тет.

— Мана та хӳтлĕх пулсан юрать,—тет така. Ку та килĕшмерĕ.

Кушак каллех калать:

— Атя, хур тус, пӳрт лартар,—тет.

Хур калать:

— Мана пĕр вак куç пулсан юрать,—тет.

Кушак калать:

— Атя, автан тус, пӳрт лартар,—тет.

Автан калать:

— Мана пĕр кашта пулсан çитет,—тет.

Кушак тус пĕчченех пӳрт лартрĕ, тет. Пырать, тет, вăкăр кушак пӳрчĕ патне.

— Уç, кушак тус,—тет.

Кушак:

— Кайса тăр хӳтлĕхне,—тет.

— Уçсан уç, атту пӳртне ишеп,—тет вăкăр.

Кушак уçса кĕртрĕ, тет. Унтан така пычĕ, тет.

— Уç, кушак тус,—тет.

Кушак калать:

— Кайса тăр хӳтлĕхне, — тет.

— Уçсан уç, атту тĕксе йăвантарса ярап,—тет така.

Кушак уçса кĕртет. Унтан хур пырать те калать:

— Уç, кушак тус,—тет.

Кушак калать:

— Кайса лар вак куçна,—тет.

— Уçсан уç, атту мăкна йăлт çăлса пĕтереп,—тет хур.

Кушак уçса кĕртрĕ, тет. Хайхи автан пычĕ, тет:

— Уç, кушак тус,—тет.

Кушак калать:

— Кайса лар кашту çине,—тет.

— Уçсан уç, атту йăлтах тăприне чавса пĕтереп,—тет автан.

Кушак ирĕксĕр уçса кĕртрĕ, тет. Кусем çапла пурăнаç, тет. Пурăнсан-пурăнсан, кунта кашкăр ушкăнĕ пычĕ, тет.

— Тавай кунта кĕрер,—тесе калаç, тет.

Пирвай ват кашкăрĕ кĕрсе кайрĕ, тет. Кĕчĕ, тет те, вăкăрпа така ăна персе хĕстерчĕç, тет. Автанĕ:

— Кикирик-киик!— тесе авăтса ярать, тет.—Тавай тĕкне татас,—тет.

Хурĕ калать, тет:

— Кака-как, кака-как, тавай пуçне çурас,—тесе калать, тет.

Хайхи кашкăр тухса тарчĕ, тет.

— Ах тур, унта май мар,—тесе калать, тет.—Тавай тарар,—тесе калать, тет.— Вăкăрĕпе таки пĕтĕмпе сĕксе хĕстерчĕç,—тет.—Хурĕ: «Кака-как, пуçне çурас,—тесе калать».

тет.—Автанĕ: «Тĕкне татас,—тесе калать», тет.

Кашкăрсем:

— Тавай тарар,—теççĕ, тет.

Хайхисем каяç-каяç, тет. Халь те пулин каяç, тет.

## ПУКАНЕ

Çулпа пӳрне пек пĕчĕкçеç пукане утса пырать. Вĕр-çĕнĕ шап-шурă кĕпепе, çап-çут тухъяпа, сап-сар çăпатапа. Шурă кĕпи вăр-вăр вĕçет, çута тухйи шăнкăр-шăнкăр тăвать, çĕнĕ çăпати пусмассерен шатăртатать. Çак хитре пукане çулпа пырать-пырать те çерçие тĕл пулать.

— Ăçта каятăн, пукане тус?—тет çерçи.

— Каччă шырама каятăп,—тет пукане.

— Каччă терĕш хам пулам,—тет çерçи.

— Пулассу пулăн та,—тет пукане,—ташшу-юрру мĕнле-ши санăн?

Çерçи юрлама, ташлама пуçларĕ. Çӳçне-пуçне тăратса, пĕрре-иккĕ сиккелесе те илчĕ. Хăй чилик-чилик тесе юрлать.

Пукане тата ыйтать:

— Пурнăç йĕрки епле санăн?

Çерçи калать:

— Ăçта тыр пур, унта çиетĕп; ăçта улăм пур, унта чаваланатăп. Какай çиес килсен, хурт-кăпшанкă шыратăп.

Пукане шухăшласа тăчĕ-тăчĕ те çерçие калать:

— Аюк, сана качча пымастăп: санăн юрру та питĕ кĕске, сăвăллă мар, тата, улăм çинче чавалансан, манăн шурă кĕпе тусанланать.

Çерçи пĕр чĕнмесĕр, те хурланса, те хурланмасăр, вĕçсе кайрĕ.

Пукане хăй çулĕпе малалла утрĕ. Пырать-пырать— ула курака тĕл пулать.

Ула курак калать:

— Ăçта каятăн, пукане тус?

— Каччă шырама каятăп,—тет пукане.

— Каччă терĕш хам пулам,—тет ула курак.

— Пуласси пулăн та,—тет пукане,—санăн ташшу-юрру епле?

Ула курак, кра-ак, кра-ак тесе кăшкăрса, транк-транк сиккелесе илчĕ. Ташши-юрри çав пулчĕ.

Пукане тата ыйтать:

— Пурнăç йĕрки епле санăн?

Ула курак калать:

— Ăçта тирĕс пур, унта чаваланатăп; ăçта çӳп-çап пур, унта апат шыратăп.

Пукане каллех шухăшласа тăчĕ-тăчĕ те ула курака калать:

— Аюк, сана качча пымастăп. Санăн ташшу-юрру та илемсĕр, тата, çӳп-çап çинче çӳресен, манăн çĕнĕ çăпата вараланать.

Ку сăмахсене илтсен, ула курак та кăраклата-кăраклата вĕçсе кайрĕ.

Пукане малаллах утрĕ-ха. Утать-утать, ăна хирĕç пĕр шăши хăлхисене тăратса пырать.

— Ăçталла каятăн, пукане тус?—тет шăши.

— Каччă шырама каятăп,—тет лешĕ.

— Каччă терĕш хам пулам,—тет шăши.

— Пуласса пулăн та, санăн юрру-ташшу епле?—тет пукане.

Шăши сĕрме купăс сĕрнĕ пек çинçе сассипе юрлама пуçларĕ: чи-чи чикки-чикки-чи-и, чи тет. Хăй, пĕчĕкскер, вĕтĕ урисемпе йăпăртатса ташласа та илчĕ. Пукане пăхса тĕлĕнсе кайрĕ. Хăй çаплах шăширен:

— Пурнăç йĕрки епле санăн тата?—тесе ыйтать.

Шăши хăй пурнăçĕ çинчен калама тытăнчĕ:

— Чи-чи, чи-чи, пуçламан пӳлмене хам пуçлап, пуçламан çу чĕрессине хам пуçлап. Пĕр алли ман пыл çинче, тепĕр алли çу çинче. Мĕн çиес

терĕн, çавна çи. Эпĕ ампарта икĕ пӳлме хушшинче пурăнатăп. Манăн пурнăç тап-таса, яп-яка. Атя, курсан — ытараймăн.

Шăши чылайччен хăй пурнăçне мухтаса юрларĕ. Хăй хăрах аллипе, илемлĕн курăнасшăн, сухалне якаткаласа тăрать.

Каччăсене тиркекен пукане хайхи шăшие качча кайма шут тытрĕ. Хăй ăшĕнче кăшт шухăшласа тăнă пек турĕ те шăшие каларĕ:

— Юрĕ, эппин, сана качча пырас пуль.

Шăшипе пукане, алăран алла тытăнса, шăши патне кайрĕç. Килнеçуртне пăхса çӳресен, туй тăвас терĕç. Шăши хăй тусĕсене пурне те чĕнчĕ. Туя пурте часах çитрĕç. Кунта такам та пур: арлан, шăши-юс (яп-якаскер) тата нӳхрепри сăра пички хыçĕнче пурăнакан йĕкехӳре. Пурте хыпалансаĕштеленсе çӳреççĕ. Шăшипе пукане килте мĕн ĕçме-çиме пур, пĕтĕмпех кăларса лартрĕç.

— Ĕçĕр-çийĕр, хăнасем! Асăнăр пуян шăши туйне!

Хăнасем ĕçрĕç, çирĕç те ӳсĕрĕлчĕç. Кĕсле-купăс каласа, яра пачĕç ташша. Çĕр чаван арлан, тусан кăларса, кутăн-кутăн чакса ташлать. Пурте пит ташларĕç. Ташласан-ташласан, ывăнчĕç пулас — чарăнчĕç. «Пуканене ташлатас»,—тее пуçларĕç. Пукане сиксе тăчĕ те, хăйпе мухтанса, хăйне хăй тăрăххăн пăхса ташлама пуçларĕ. Калама та çук хитре ташлать. Тенкисене шăнкăртаттарса шуса çеç çӳрет. Пĕтĕм туй халăхĕ, тĕлĕнсе кайса, алă çупать. Пукане мĕн чухлĕ ташланă, çавăн чухлĕ пукане пуçĕ çӳлелле çĕкленет. Ĕнтĕ çĕре те пăхми пулчĕ, хăйне хăй тăрăххăн çеç пăхать. Çапла ташласа çӳренĕ чухне пукане ăнсăртран сăра катки çине кĕрсе ӳкрĕ. Шурă кĕпи вараланчĕ. Пукане, хăнасене пăрахса, кĕпине çума шыв хĕрне каять.

Шыв хĕрринче хайхи пылчăка путнă ларнă. Тухас тесе тапаланать —тухаймасть. Çăлкаланнăçемĕн лачакана шаларан шала кĕрсе каять. Кам та пулин курса туртса кăлармĕ-ши тесе, унталла-кунталла пăхкалать. Йăмра тăрринче хай çерçи лара парать, чилик-чилик тесе пĕр шухăшсăр юрлать. Аялта, пылчăк çинче, пуканене курах кайрĕ.

— Мĕн тăватăн эсĕ кунта, пукане тус?—тесе ыйтрĕ çерçи юрласа ларнă хушăран.

— Кĕпе çума килтĕм те пылчăка кĕрсе лартăм. Туртса кăлар-ха мана,—тет пукане.

— Чилик-чилик, аюк! Эпĕ сана пылчăкран туртса кăларса çӳреме ухмах мар: эсĕ ху мана тиркесе качча пымарăн,—терĕ çерçи.

Кайăк юрласа ларчĕ те урăх çĕрелле вă-ăр вĕçсе кайрĕ. Пукане пылчăк ăшнелле кĕнĕçем кĕрет, кам та пулин иртсе çӳрекен тĕл пулмĕ-ши тесе, унталла-кунталла хурлăхлă пăхкалать.

Ак хайхи ула курак лаплаттарса вĕçсе пырать.

— Кра-ак! Кра-ак! Мĕн тăватăн эсĕ кунта, пукане тус?—тесе ыйтать ула курак.

Пукане пылчăк çинче тапаланать. Хăй макăрас пек пулнă. Ула курака тилмĕрсе калать:

— Пылчăка лартăм-çке эпĕ, туртса кăлар-ха мана.

— Мĕн сана туртса кăларасси пур? Ху мана тиркерĕн, качча пымарăн,—терĕ ула курак. Çунаттисене лăппи-лаппи саркаларĕ те ăшă тирĕс салатма вĕçсе кайрĕ.

Пукане каллех пĕчченех тăрса юлчĕ. Пăхкалать-пăхкалать — никам та çук. Хăй лачакана путнăçем путать. Кăкăр таран кĕрсе ларчĕ ĕнтĕ. Хăлхине тăратса, çын иртсе кайнине итлет. Шăпăрт. Пĕр сас-чĕвĕ те çук, никам та иртсе çӳремест. Тĕттĕм пулса килет. Пукане чун хавалĕпе тухасшăн тапаланать — тухаймасть. Тапаланатапалана лăп мăй таран кĕрсе ларчĕ.

Кăшт тăрсан, хай ӳсĕр çын сассисем илтĕне пуçларĕç,—хайхи туя пынă шăши тусĕсем хăнаран саланаççĕ пулмалла. Пукане, çынна сиссен, çухăрма пуçларĕ. Хĕрĕнкĕрех хăнасем хыпаланса чупса пычĕç те пуканене кăларма тытăнчĕç. Пурте пуканене икĕ хулĕнчен тытрĕç те шăла çыртса, ура тапса туртаççĕ. Туртрĕç-туртрĕç — кăлараймарĕç, икĕ хулне те татрĕç. Хулĕсем тухса кайсан, тата пуçĕнчен тытса турта пуçларĕç. Ăшша пиçсе, пĕтĕм вăйран туртаççĕ — çук, тухмасть. Туртрĕç-туртрĕç те — пуканен пуçĕ те татăлса кайрĕ. Пĕтрĕ.

## ЮСПА ПĂСАРА

Пĕрисен тĕпсакайĕнче юспа пăсара пурăннă. Пĕрре кил хуçи арăмĕ йăва пĕçерне те сивĕнме çатмана кантăк умне лартнă. Хăй выльăх-чĕрлĕхне апат пама тула тухса кайнă.

Пӳртре шăпăртлансанах, юс йăпăртяпăрт урай хăми хушшинчен сиксе тухать те йăвасене ĕшелене-ĕшелене тĕпсакайне çĕкле пуçлать.

Сасартăк алкумĕнче такам витресемпе кĕмсĕртеттере пуçлани илтĕнсе каять. Юс çавăнтах çăварти йăвине пăрахать те, тĕпсакайне пытанса, çурăкран сăнаса пăхма тытăнать.

Часах кил хуçи арăмĕ пӳрте каялла кĕрет те, çатма çинче йăва сахалланнине курса, тĕлĕнсех каять.

— Ку мĕн пулсан та, кушак кайăк ĕçĕ!—тесе шухăшласа илет те вăл, пуленке илсе, урай çурăкĕ патĕнче пытанса, сыхла пуçлать.

Çакна сиссен, юс тăпрас çинчен йăпăрт сикет те тутлă ыйхăпа киленсе выртакан пăсара патне чупать.

— Тăр часрах, ыйхă чăпти!— тет вăл пăсарана.—Пăх-халĕ, мĕнле тутлă йăва пĕçернĕ кил хуçи арăмĕ! Эпĕ хам валли туртса çитертĕм. Сан паю кантăк умĕнче çатма çинче выртать. Чуп, пӳртре халĕ никам та çук чухне çĕкле хăвна валли часрах!—тет.

Пăсара, йăва çинчен илтсессĕнех, ыйхăран вăраннă-вăранман урай хăмисем хушшинчи çурăк патне кусне йăвала-йăвала чупать. Анчах çурăкран çурри таран хĕсĕнкелесе тухма çеç ĕлкĕрет—пуçĕ çине пуленке аçа çапнă пек персе анать. Мĕскĕн пăсара мĕн пулнине те тавçăрса илеймест, çавăнтах вилсе выртать.

## ЧĂХĂПА УСЛАМ ÇУ

Чăхăпа услам çу пурăнаççĕ, тет. Çаксен вутă пĕтнĕ. Чăхă вăрмана вутă патне кайнă. Услам çу апат пĕçерме юлнă, тет.

Чăхă вутă тиесе килнĕ. Услам çу апачĕ хатĕр пулнă. Вăл яшкана чăмпăлт чăмса тухнă. Апат тутланнă кайнă.

— Услам çу, тух вутă пушатма!— тесе кăшкăрать чăхă.

Услам çу тухать вутă пушатма. Пушатса пĕтерсен, вĕсем кĕрсе апат çиме тытăнаççĕ.

— Мĕнле санăн апат тутлă пулнă?—тет чăхă.

— Апат вĕресен, эпĕ анат ăшне чăмпăлт сиксе тухрăм, çавăнпа тутлă пулнă пулĕ,—тет.

Пурăнсан-пурăнсан, çаксен вутă каллех пĕтнĕ, тет. Услам çу вутă патне кайнă, тет, чăххи апат пĕçерме юлнă, тет. Апат вĕресен, чăхă шăмпăлт сикрĕ апат ăшне, çуначĕсемпе лăс-лăс турĕ те пиçсе те кайрĕ.

Услам çу вутă тиесе çитрĕ вăрмантан.

— Чăхă, вутă пушатма тух!—тет.

Тухакан пулмарĕ. Услам çу вутă пушатрĕ те пӳрте кĕчĕ. Кăмакаран апат кăларма тăрать те — апат ăшĕнче чăхă ярăнса çӳрет. Чăхха апат ăшĕнчен кăларчĕ те тислĕк купи айне кайса пытарчĕ, хăй пĕчченех тăрса юлчĕ.

## УЛА КУРАКПА ХУРЧАКА

Вăрман хĕрринче ула куракпа хурчăка тĕл пулнă. Ула куракĕ калать, тет:

— Эй, хурчăка, эсĕ мĕн чухлĕ чăхчĕп çиетĕн, çапах манран хăратăн. Эпĕ яланах сана ял енчен хăвалатăп,—тесе калать, тет.

— Апла, эппин, вăрманта чух манăн чĕрнесене тутанса пăх-ха!—терĕ, тет те, хурчăка чу-у сиксе ларчĕ, тет, ула курак çине.

## АЙВАН ЧĂХА

Пĕр чăхă ылтăн тупнă, тет те, саваннипе ял çурăласла кăт-кăтик, кăткăтик тесе кăшкăрать, тет. Вара, çакна илтсе, таçтан пĕр тилĕ шăвăнса тухрĕ, тет те, чăхха кап кăна çаклатса тарчĕ, тет.

## ВИÇĔ ПУЛĂ

Атăла юхса тухакан Шуршывра виçĕ пулă: çутка, хураçка, уланкă— пурăннă.

Пĕрре çак пулăсем пурăнакан вырăна ача-пăчасем пулă тытма пынă. Ăслă та чее çутка пулă инкек пуласса ачасене курсанах тавçăрса илнĕ те Атăлалла ишсе кайса хăтăлнă.

Хураçка пулă ачасем мĕн тума килнине тавçăрса илнĕ çĕре лешсем Шуршыв пуçне атма карса лартма ĕлкĕрнĕ. Вара чее хураçка вилнĕ пек пулнă та атма урлă çурăм çине выртса каçма шутланă. Ачасем, ку чăнахах вилнĕ пуль тесе, хураçкана тытнă та Атăлалла ывăтнă. Çапла хураçка та хăтăлма мел тупнă.

Уланкă, Шуршывра пĕчченех тăрса юлнине кура, унталла-кунталла çапкалана пуçланă та тӳрех атмана пырса лекнĕ.

Çапла çав, инкек-синкекрен хăтăлас тесен, ăс та, чеелĕх те кирлĕ.



# ПАТТАРАН ПУÇĔ ВЫРТНА, ХĂРАВÇАН ЙĔРĔ ВЫРТНА

## УЛĂП АЧИ

Этем ачисем уничере* выляса çӳреççĕ, тет. Çаксем патне Улăп ачи пынă, тет те, çавсемпе пĕрле вылясшăн, тет. Хăй çапла каласа юрлать, тет:

Этем ачи-пăчисем,
Пĕчĕк шăкăр-макăрсем!
Çӳл тӳпере çăлтăр вылять,
Çăлтăр тавра уйăх вылять,
Эсир — çăлтăр, эпĕ — уйăх,
Ман та сирĕнпе вылясчĕ,
Выляттарăр-ха мана пĕрле!—

тесе каларĕ, тет.

Ачасем каларĕç, тет:

— Выляма илессе илĕпĕр те, эсĕ малтан ухă персе кăтарт. Уххуна персе кăларса яр та вĕçсе анакан ухă йĕппине шăлупа çыртса чар. Ухă йĕппине шăлупа тытан-тăк—пирĕнпе выляма илĕпĕр, тытаймасан — айăпĕ хăвăнта,—теççĕ, тет.

Улăп ачи виçĕ аршăнлă уххине салтса печĕ, тет те, çӳлелле, хăй меселе выртрĕ те кĕтсе выртать, тет. Нумай кĕтнĕ-и, сахал-и — ухă йĕппи шăхăрса килет, тет. Улăп ачи ăна шăлĕпе кап анчах ярса илчĕ, тет. Унтан каллех, ачасем патне пырса, выляма илме ыйтать, тет. Ачасем, ухă йĕппи шăхăрнинчен хăраса, тарса пĕтнĕ, тет. Улăп ачи каллех юрлать, тет:

Этем ачи-пăчисем,
Пĕчĕк шăкăр-макăрсем!
Çӳл тӳпере çăлтăр вылять,
Çăлтăр тавра уйăх вылять,
Эсир — çăлтăр, эпĕ — уйăх,
Ман та сирĕнпе вылясчĕ,
Выляттарăр-ха мана пĕрле!

Этем ачисем ăна татах выляма илмеççĕ, тет-ха.

— Хăв вăйна кăтарт малтан, вара хамăрпа выляма илĕпĕр,—теççĕ.

Улăп ачи этем ачисенчен:

— Хамăн вăя кăтартас тесен, мĕн тăвас пулать-ха ман?—тесе ыйтать.

Лешсем:

— Ав çав Атăл кусне чăм та, шыв айĕпе виç çухрăм кайса, пăр шăтарса ишсе тух. Пăр шăтарса тухсассăн, хамăрпа выляма илĕпĕр, тухаймасан — айăпĕ хăвăнта,—теççĕ, тет.

Улăп ачи Атăл кусне чăмрĕ, тет, пăр айĕпе çичĕ çухрăм чăмса кайрĕ, тет. Çичĕ çухрăмран çичĕ аршăн шăннă пăра шăтарса тухрĕ, тет. Улăп ачи, çыран хĕрне тухса, этем ачисем патне пычĕ, тет те, юрлать, тет:

* Укăлчара.



25200-478
Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА



Этем ачи-пăчисем,
Пĕчĕк шăкăр-макăрсем!
Çўл тўпере çăлтăр вылять,
Çăлтăр тавра уйăх вылять,
Эсир — çăлтăр, эпĕ — уйăх,
Ман та сирĕнпе вылясчĕ,
Выляттарăр-ха мана пĕрле!

Этем ачисем Улăп ачине çаплах выляма илмеççĕ. Улăп ачине татах ĕç хушаççĕ, тет:

— Выляма выляттарăпăр та, эсĕ пире татах хăв вăйна кăтарт-ха. Атту пуçĕпе тапса, хĕрĕх чалăш хĕрлĕ тăва виççĕ тапса салатаятăн-и? Салатсан — хамăрпа выляма илĕпĕр, салатаймасан — айăпĕ хăвăнта.

Улăп ачи хĕрĕх чалăш хĕрлĕ ту патне пычĕ, тет те, сулахай урипе танрĕ, тет, ту сулланса илчĕ, тет; сылтăммипе тапрĕ, тет те, ту саланса кайрĕ, тет. Ту вырăнне тĕмеске кăна тăрса юлчĕ, тет.

Этем ачисем Улăп ачине вара хăйсемпе пĕрле выляма илчĕç, тет.

## ÇУНАТЛĂ УРХАМАХ

Ĕлĕк-авал, сĕм авал, аслă Атăл хĕрринче чăвашсен паттăрĕ Улăп пурăннă, тет. Çерем çĕтнĕ, тет, тырă акнă, тет, кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе выльăх-чĕрлĕх усранă, тет. Унăн амăшĕ пулнă, тет.

Пĕррехинче çапла Улăп çĕршывне

таҫтан-таҫтан инҫетрен виҫӗ пуҫлӑ Аҫтаха килсе пусать, хур кӑтартма тытӑнать. Асамат паттӑр Улӑп паттӑра ҫапла калать, тет:

— Манӑн вӑтӑр ҫул шутламан кӗтӳре санпа пӗр ҫулхи ҫунатлӑ урхамах пур. Палла та тыт эсӗ ӑна, этем чӗлхи кӑларттар,—тет.

Улӑп хайхи Асамат паттӑрӑн кӗтӗвӗнчен ҫав калаҫа пӗлекен лашана палласа илет те йӑлмак ывӑтса тытать. Шурӑ лаша чӑнах та этем чӗлхи кӑларать.

Тухать хайхи Улӑп Аҫтахана хирӗҫ. Ҫапӑҫрӗҫ, тет, ҫичӗ кун. Ниепле те ҫӗнме ҫук, тет, Аҫтахана: пӗр пуҫӗ кӑна тӑрса юлсан та, хаяр, тет, ҫӑварӗнчен ҫулӑм пӗрӗхет, тет. Юлашкинчен вара Улӑп, арӑслан пек хаярланса, ҫилленсе Аҫтахан юлашки пуҫне касса пӑрахрӗ, тет. Текех вара ҫакӑн хыҫҫӑн чӑвашсене усал аҫтахасем пусмӑрлайман, тет.

Темиҫе ҫул иртнӗ, тет. Улӑп паттӑр ватӑлса, шуралса пынӑ, тет. Вилсен, ӑна ҫӳллӗ сӑрт тӑррине пытарнӑ, тет. Халӗ те ун масарӗ ҫине ҫулталӑкра пӗрре ҫур ҫӗр тӗлӗнче ҫунатлӑ шурӑ лаша вӗҫсе пырать имӗш. Урисемпе кукале-кукале, пӗтӗм тавралӑха янратса, виҫӗ хутчен кӗҫенсе ярать, тет. Хӑш чухне тата ҫав масар тӗлӗнче Улӑп хӗҫӗ ялкӑшнине курма пулать.

## УЛӐППА ҪАТКӐН АЛТӐРКУҪ

Пурӑннӑ, тет, ҫӗр ҫинче, Алама ҫӗршывӗнче, пӗр куҫлӑ, элес-мелес хапаллӑ, чурӑс чунлӑ ҫаткӑн Алтӑркуҫ. Пӗр куҫ анчах пулин те, хӑй вӑл таҫти-таҫтине те курнӑ, тет. Хырӑмне унне пӗрре ҫинӗ чухне ҫитмӗл вӑкӑр, вӑтӑр касмӑк* шерпет кӗнӗ, тет. Алама ҫӗршывӗнчи пӗтӗм халӑх ҫав Алтӑркуҫшӑн ӗҫлесе пурӑннӑ, тет, ҫав Алтӑркуҫа тӑрантарса усранӑ, тет.

Алтӑркуҫа Алама ҫӗршывӗнче хуҫа пулса пурӑнни ҫӑна ҫитмен, тет, Улӑп паттӑр ҫӗрне-шывне туртса илес шухӑш пырса кӗнӗ, тет, ун пуҫне.

— Малашне Улӑп паттӑр та ман кӗтӳҫӗ пултӑр, ман кӗтӗве кӗттӗр! Мана вӑйлӑ кӗтӳҫӗ кирлӗ,—тесе ахӑрашма пуҫларӗ, тет.

Улӑп, ҫак сӑмахсене илтсен, хӑнк та тумарӗ, тет.

— Ҫаткӑн кӗтӳҫи пулас ҫук, ятӑма та варалас ҫук. Эсреметрен хӑраса, кут тивертсе тарас ҫук. Тытӑҫассу килсессӗн, атя, тух хир варрине,—тесе каларӗ, тет, Улӑп паттӑр Алтӑркуҫа хирӗҫ. Ҫапла каларӗ, тет те, Атӑл хӗррине, ҫеҫенхир варрине, тухса тӑчӗ, тет.

Леш усал килсе ҫитнӗ-ҫитмен тытӑҫса ӳкрӗҫ, тет. Пӗрне-пӗри лӑскаҫҫӗ, тет, пӗрне-пӗри хӗсеҫҫӗ, тет. Кӗрешсен-кӗрешсен, лутӑркансан-лутӑркансан, Улӑп хайхи, юлашки вӑйне пухса, хытӑ кӑна хӗссе леш усала пӗлӗтелле ҫӗклерӗ, тет. Лешӗн шӑршлӑ сывлӑшӗ пӑшӑл персе тухрӗ, тет.

Ҫав шӑршлӑ сывлӑшра кӑна пулнӑ, тет, Алтӑркуҫӑн вӑйӗ. Улӑп вара ҫаткӑна ҫичӗ тинӗс леш енне ывӑтрӗ, тет, кӑларса.

## ТЕРПЕТ ХУНА ҪӖНТЕРНИ

Ӗлӗк-авал, сӗм авал, пирӗн мӑн асаттесен аслашшӗсен ӗмӗрӗнче, ҫакӑ аслӑ тӗнчере Улӑп пурӑннӑ, тет. Кӗтӗвӗ-кӗтӗвӗпе лаша, ӗне, сурӑх усранӑ, тет, вӑл.

Пӗрре ҫапла Терпет хун, вӑрӑсен пуҫӗ, хӑйсен хурахӗсемпе Улӑп ҫӗрне-шывне пырса, унӑн выльӑхӗсене хӑваласа кайнӑ, тет. Улӑп паттӑр вара, хӑйӗнчен кӗҫӗнрех паттӑрсене пӗр ҫӗре пуҫтарса, Терпет вӑррисене йӗрлеме кайрӗ, тет. Ҫичӗ кун та ҫичӗ каҫ йӗрлерӗҫ, тет, паттӑрсем ху-

* Катка.

рахсене. Тупрĕç-тупрĕçех, тет, вĕсем усал тăшмансене. Çапăçма тытăнчĕç, тет, Улăппа ун юлташĕсем. Шыв вырăнне тăшман юнĕ юхрĕ, тет, йывăç вырăнне тăшман пуçĕ касăлчĕ, тет. Питĕ те йышлă, тет, Терпет хунăн хурахĕсем.

Лара-тăра пĕлмест, тет, Улăп амăшĕ ăшĕ вĕçнипе: пĕрре хире тухать, тет, тепре алачăкне* кĕрет, тет. Хĕрелсе тухакан хĕвеле хирĕç тăрса çапла каларĕ, тет:

Чăпар пăлан пăрушне чĕннĕ пек, кĕтнĕ пек,
Амăрткайăк чĕппине чĕннĕ пек, кĕтнĕ пек,
Хуркайăк чĕппине чĕннĕ пек, кĕтнĕ пек,
Хурчăка чĕппине чĕннĕ пек, кĕтнĕ пек,
Арăслан çурине чĕннĕ пек, кĕтнĕ пек,
Парăс кайăк çурине чĕннĕ пек, кĕтнĕ пек,
Урхамах тихине чĕннĕ пек, кĕтнĕ пек
Чĕнетĕп эпĕ сана, ывăлăм, кĕтетĕп эпĕ сана, ывăлăм.

Çĕнтерчĕç-çĕнтерчĕçех, тет, улăпсем Терпет хун хурахĕсене. Пĕтĕм вырăнсене чĕрлĕхне каялла хăваласа таврăнчĕç, тет.

## УЛĂППА СУПЕТЕЙ

Улăпсем чăвашсене пит пулăшса тăнă, тет, вăрман хăртса-тĕплесе пусăсем** тума, кĕçмерсене*** сухаласа аккалама пулăшнă, тет. Йышлă тăшмансем вăрçăпа тухсан, вĕсене хăвала-хăвала ярса, чăвашсене хӳтлĕх панă, тет.

Ĕлĕк çапла чăвашсене тутарсем**** пит аптăратса çитернĕ, тет. Чăвашсене вĕсем темиçе те вăрçăпа пыра-пыра тапăннă, анчах вĕсен çарне кашнинчех чăвашсем Улăп пулăшса пынипе хăвала-хăвала янă. Тутар патши Супетей* аптăрасах çитнĕ. Вара вăл асăмчахсемпе** тухатмăшсене пуçтарса канаш ыйтать:

— Калăр-ха мана, асăмчахсем: миçе халăха парăнтартăм эпĕ? Миçе халăх пиртен хăраса тăрать? Калăрха тата: миçе пин çын тăрать ман çарта?

— Атăл хăйăрне кам шутласа тухни пур!—теççĕ асăмчахсем.

— Калăр-ха тата, асăмчахсем: миçе çул эпир чăвашсемпе çапăçса тăратпăр? Миçе çул ĕнтĕ эпир чăвашсене парăнтараймасăр тăратпăр? Мĕн чухлĕ çар пĕтертĕм эпĕ вĕсемпе çапăçса?—ыйтать Супетей патша.

— Мĕн чухлĕ пулнă, çавăн чухлĕ пĕтнĕ; мĕн чухлĕ пĕтнĕ, çавăн чухлĕ çĕнĕрен тăнă,—тенĕ асăмчахсем.

— Калăр-ха тата, асăмчахсем: ăçта чăвашсен вăй-хăвачĕ, мĕнле пĕтерме пулать чăвашсен Улăп паттăрне?—ыйтнă Супетей патша.—Сиртен хăшĕ Улăпа çĕнтерме май тупать, çавна чăваш патши тăватăп!—тенĕ патша.

Асăмчахсемпе тухатмăшсем пĕри те ыр та, хаяр та шарламан. Супетей патша вĕсене шухăшласа пăхма хĕрĕх кун панă. Хĕрĕх кун иртсен, пурне те çĕнĕрен пуçтарнă та малтанхи пекех ыйтнă:

— Калăр-ха мана; асăмчахсем: мĕн чухлĕ халăх мана пăхăнса пурăнать, мĕн чухлĕ халăх хырçă-марçă тӳлесе тăрать?

— Атăл хăйăрне кам шутласа тухни пур!—хуравланă лешсем.

— Калăр-ха мана, асăмчахсем: мĕн чухлĕ çар пĕтрĕ манăн чăвашсемпе çапăçса?

— Мĕн чухлĕ пĕтнĕ, çавăн чухлĕ пĕтнĕ пуль!—хуравланă асăмчахсем.

— Калăр-ха тата, асăмчахсем: мĕн-

* Лаç.
** Хирсем.
*** Пулăхсăр, начар çĕрсене.
**** Кунта тутар-монголсем пирки сăмах пырать.

* Супетей тутар-монголсен çар пуçĕ пулнă.
** Асамçăсемпе.

ле парӑнтарма пулать чӑвашсен Улӑпне?—ыйтнӑ Супетей патша.

Асӑмчахсем халӗ те ӑна ыр та, хаяр та шарламан! Тутар патши вара кашни вунӑ асӑмчахран пӗрин пуҫне касма хушнӑ. Ыттисене шухӑшласа пӑхма ҫирӗм кун панӑ та салатса янӑ.

Ҫав вӑхӑтра пӗр аякри-аякри ялта тӑхӑрвун тӑхӑр ҫулхи ватӑ асӑмчах пурӑннӑ. Ҫула тухса ҫӳреме унӑн вӑйӗ пулман. Вӑл вилме хатӗрленнӗ, виличчен хӑй ӗҫне ывӑлне вӗрентсе хӑварасшӑн пулнӑ. Асӑмчахсем кама та пулин хӑйсен ӗҫне, ӑрӑмӑҫ ӗҫне вӗрентсе хӑвармасӑр вилеймесӗр асапланаҫҫӗ, тет. Супетей патша пуххине кайман ку асӑмчах, ватӑ тесе, килтех юлнӑ.

Ҫирӗм кун иртсен, Супетей патша асӑмчахсене виҫҫӗмӗш хут пухнӑ та малтанхи пек ыйтнӑ:

— Калӑр-ха мана, асӑмчахсем: миҫе халӑха пӑхӑнтарса тӑратӑп эпӗ?

— Атӑл хӑйӑрне кам шутласа тухӗ!—хуравланӑ асӑмчахсем.

— Калӑр-ха мана, асӑмчахсем: мӗн чухлӗ ҫар пӗтрӗ манӑн, чӑвашсемпе ҫапӑҫса?

— Мӗн чухлӗ пулнӑ, ҫавӑн чухлӗ пӗтнӗ; мӗн чухлӗ пӗтнӗ, ҫавӑн чухлӗ ҫӗнӗрен тӑнӑ!—тенӗ асӑмчахсем.

Каллех шӑпланса тӑнӑ асӑмчахсем. Каллех вунӑ ҫынтан пӗрин пуҫне касма хушнӑ Супетей. Ҫав ӑрӑмҫӑсем хушшине ватӑ асӑмчахӑн ывӑлӗ те лекет. Ватӑ асӑмчах, ывӑлне шеллесе, Супетей патша умне тухса чӗркуҫленет те калать:

— Эй, аслӑ патша! Ан кастар айӑпсӑр ҫынсен пуҫне! Хам каласа парам сана Улӑпа ҫӗнмелле ӑрӑма,— тет.

Супетей ӑна хӑтӑрса тӑкать:

— Эс, ватсупнӑ, карчамас, мӗншӗн малтанах каламарӑн? Ма пытартӑн аслӑ патшаран хӑвӑн пӗлӗве?— тет.

— Эй, аслӑ патша! Эсӗ нумай айӑпсӑр халӑха хӗн кӳтӗн. Чӑвашсем сана нимле шар та туман. Ма йӑваш чӑваша пӗтересшӗн эсӗ? Улӑп вӑйне пӗтермелли мая эпӗ кӑна пӗлетӗп. Сана пӗрех каламастӑп!—тенӗ ватӑ асӑмчах.

Супетей ватӑ асӑмчахӑн ывӑлне тытса килме хушнӑ. Ӑна тытса килнӗ те асаплантарма пуҫланӑ: унӑн куҫӗсене чавса кӑларма пӗрхӗт кайӑк илсе пынӑ. Пӗрхӗт кайӑк ывӑлӗн куҫӗсене чавма тытӑнсан, чӑтайман ватӑ асӑмчах. Вара ҫапла каласа панӑ:

— Улӑпа пӗтерес тесен, хӗрӗх чалӑш ҫӗр алтса шӑтӑк тумалла. Шӑтӑк ҫине ҫапӑ сарса шӑналӑк витмелле. Шӑтӑкне ҫиелтен тӑпрапа хупласа хумалла. Пирӗн ҫарсене ҫапӑ чӑтӗ, Улӑп йывӑрӑшне чӑтаймӗ, хуҫӑлса анӗ. Ун чухне тин эсӗ чӑвашсене ҫӗнтерме пултарӑн, эй, аслӑ патшамӑр!

Супетей патша тарҫисем шӑтӑк алтма чупнӑ. Шӑтӑк хатӗрлесе ҫитерсен, Супетей ҫар кӑларса янӑ. Ватӑ асӑмчах каланӑ пек, шӑтӑк ҫинчи ҫапӑ Улӑпа чӑтайман. Улӑп шӑтӑка кайнӑ та тухайман. Тутар ҫарӗ чӑвашсене хӑваласа кайнӑ.

Улӑп шӑтӑкра хӗрӗх талӑк выртрӗ, тет, кӑвак пӗлӗте тинкерсе. Тухма тапаланать — тухма ҫук. Пӑхать ҫӳлелле Улӑп — ҫӑхан вӗҫсе пынине курах каять. Улӑп ҫӑхана ҫапла тархаслать, тет:

— Эй, ҫӑхан, ҫӑхан! Эсӗ ирӗклӗ кайӑк. Таҫта та ҫитетӗн, таҫта та пулатӑн, тӑват кӗтеслӗ ҫут тӗнчере вӗҫсе ҫӳретӗн. Чӑвашсем патне вӗҫсе кайсамччӗ. Кала чӑвашсене ман инкекӗм ҫинчен. Мана тутарсем ултавпа шӑтӑка ячӗҫ. Халӗ шывсӑр, апатсӑр типӗтсе вӗлересшӗн. Килсе хӑтарччӑр мана чӑвашсем!

Ҫӑхан ӑна хирӗҫ:

— Вилех, вилех! Вилсен — куҫусене чавса кӑларӑп,—тесе кӑранклатрӗ те вӗҫсе кайрӗ, тет.

Тӑрсан-тӑрсан, чакак вӗҫсе иртет. Улӑп ӑна тархаслать:

— Эй, чакак, чакак! Эсӗ ирӗк кайӑк, таҫта та вӗҫсе ирӗкре ҫӳретӗн. Чӑвашсем патне вӗҫсе кайсамччӗ, килсе ҫӑлччӑр мана кунтан. Тутарсем мана улталаса шӑтӑка ячӗҫ, апатсӑр, шывсӑр типӗтсе вӗлересшӗн. Килсе пулӑшчӑр мана чӑвашсем!

Чакакӗ чак-чак терӗ, тет те:

— Вилех, вилех! Вилсен — куҫусене чавма вӗҫсе килӗп,—тесе чакӑртата-чакӑртата вӗҫсе кайрӗ, тет.

Улӑп пӗчченех хурланса юлчӗ, тет, шӑтӑкра. Ҫӳлелле пӑхать: тухасчӗ — тухма ҫук. Пӑхать те курах каять — кайӑк хур вӗҫсе килет.

— Эй, хуркайӑк, хуркайӑк! Эсӗ ирӗк кайӑк, таҫта та ҫитетӗн, тӑват кӗтеслӗ ҫутҫанталӑкра ирӗкре ҫӳретӗн. Кайса каласамччӗ чӑвашсене манӑн хуйхӑма. Тутарсем ултавпа мана шӑтӑка ячӗҫ, апатсӑр-шывсӑр типӗтсе вӗлересшӗн. Кайса каласамччӗ чӑвашсене, кӳлсе килччӗр хӗрӗх лав, хӗрӗх аршӑнлӑ вӗрен тиесе килччӗр, шӑтӑкран кӑларччӑр мана. Хӗрӗх лав ӗҫме-ҫиме илсе килччӗр. Унсӑрӑн пӗтеҫҫӗ чӑвашсем.

Вӗҫсе кайнӑ ки-как, ки-как хуркайӑк чӑвашсем юн юхтарса ҫапӑҫакан ҫӗре, каласа панӑ чӑвашсене Улӑп паттӑр инкеке лекни ҫинчен.

Чӑвашсем хӗрӗх лав хӗрӗх аршӑнлӑ вӗрен тиенӗ тата хӗрӗх лав ӗҫме-ҫимелли илнӗ те кайнӑ Улӑпа хӑтарма. Хӗрӗх кун кайсан, чӑвашсем Улӑп выртакан шӑтӑк патне ҫитнӗ. Улӑпа ӗҫтернӗ-ҫитернӗ. Хӗрӗх лав апат ҫисе янӑ хыҫҫӑн Улӑпа вӑй кӗнӗ. Унтан чӑвашсем шӑтӑка вӗрен яма пуҫланӑ. Ҫакна тутарсем сиснӗ те чӑвашсене вӗлерсе пӗтернӗ. Улӑп шӑтӑкне вӗсем чулпа та тӑпрапа хупласа тапратнӑ— Улӑпа ҫӗр айӗнче пӑчӑхса вилтӗр тенӗ.

Нумай пулнӑ-и, сахал-и,—пӗлместӗп,—тутарсем шӑтӑка ҫиелтен таптаса хупларӗҫ те кайрӗҫ, тет. Улӑп текех ҫӗр айӗнчен тухаймасть, терӗҫ пуль ӗнтӗ.

Хӗрӗх лав ӗҫме-ҫиме ҫисе вӑй илнӗ те Улӑп, мӗнпур вӑйне пухса, хӑйне хупласа тӑракан чулсене хирме пуҫланӑ. Хирсен-хирсен, шӑтӑкран хирсе тухнӑ Улӑп, тухнӑ та чӑвашсене ҫӑлма васкаса кайнӑ.

Улӑп пырса ҫитнӗ ҫӗре тутарсем чӑвашсене сӗм вӑрмансене хӑваласа кӗрсе кайнӑ иккен. Улӑп вара тутар ҫарӗсене пӗтӗмпех хирсе тухнӑ, тет. Чӑвашсем кайран та вӑрмантан тухмарӗҫ, тет, ҫавӑнтах юлчӗҫ, тет.

Улӑп шӑтӑкран хирсе тухнӑ ҫӗрте пысӑк тӗмеске пулса юлнӑ. Ҫав тӗмеске халь те пур. Ӑна Улӑп тӗмески теҫҫӗ. Ӗлӗкрех, суха тунӑ чух, асаттепе ҫав тӗмеске ҫине ларса канаттӑмӑр.

— Улӑп тӗмески ҫине ларса кансан, вӑй кӗрет,—тетчӗ асатте.

Ку халапне те асатте ҫавӑн пек Улӑп тӗмески ҫинче ларнӑ чух каласа панӑччӗ.

## ЮМАН ПАТТӐР

Тахҫан ӗлӗк-авалах ҫитмӗл те ҫичӗ тинӗс леш енче пӗр карчӑкпа пӗр старик пурӑннӑ. Старикки ку асамҫӑ пулнӑ та пӗтӗм тӗнчере пулса иртекен япаласене пурне те пӗлсе тӑнӑ. Вӗсен пысӑк сад пахчи пулнӑ, пахчара ылтӑн панулмисем ӳснӗ.

Пур енчен те пурнӑҫ аван пулнӑ карчӑкпа старикӗн, анчах вӗсен ачапӑча тавраш пулман. Ҫакӑн пирки карчӑкпа старик питӗ хуйхӑрса пурӑннӑ, тет.

Пӗрре старикки вӑрмана вутӑ патне тухса каять. Вӑрмана ҫитсенех сасартӑк ҫанталӑк сӗм-ҫӗрлехи пек тӗттӗмленсе ларать те, куҫран йӗп чиксен те курӑнми пулать. Старик пурӗпӗр килне таврӑнмасть; пӗр килнӗскер, вутӑ тиесех каяс тесе, лашине шав малалла чуптарать. Сасартӑк, лӑпкӑн пынӑ ҫӗртех, лаши тӑп чарӑнчӗ, тет те, хартлатса тӑпӑртатма пуҫларӗ,

тет. Пăхать старик малалла тинкерсе — пĕр ăвăс тураттил çинче çын вилли çакăнса тăра парать. «Ак тамаша! Мĕн тĕлне пултăм-ха капла?»— шухăшлать старик хăй ăшĕнче. Унтан вилене касмăкран вĕçертсе урапи çине хурать те татах малалла уттарать.

Кайсан-кайсан, кун лаши каллех тăп чарăнать. Пăхать старик — пĕр вĕрене тураттил çинче тепĕр виле çакăнса тăра парать. «Хăть ырра, хăть усала, кирлĕ кунта кирлĕ пулĕ»,—терĕ те старик ку вилене те касмăкран вĕçерсе урапи çине хучĕ. Унтан лашине каллех малалла уттарчĕ.

Нумай пулчĕ-и, сахал-и—лаша тата тăпах чарăнчĕ. Пăхать старик малалла—юман турачĕ çинче тата тепĕр виле çакăнса тăрать. «Ак тамаша! Аçтан ман тĕле пулчĕç-ха паянхи кун ку вилесем? Хурас куна та урапа çине, кирлĕ кунта кирлĕ пулĕ», — терĕ те старик, куна та хăйпе пĕрле илсе, малалла уттарчĕ.

Çанталăк малтанхинчен те ытларах тĕттĕмленсе çитрĕ. Вичкĕн çил сиксе тухрĕ, хура вăрман ахăрашса кашлалама тытăнчĕ. Нимĕн çулсăр-мĕнсĕр сĕтĕрĕнсе пырать старик сĕм-сĕм вăрман варрипе, чăтлăх йывăççем хушшипе.

Унччен пулчĕ-и, кунччен пулчĕ-и— сасартăк малта чăлл хăй çути курăнса кайрĕ. Старик лашине çав çутă еннелле тытрĕ. Унтан нумай та каймарĕ—пĕр уçланка çитсе тухрĕ. Шăпах уçланкă варринче сип-симĕс çурт ялкăшса ларать. Старик, кĕçĕр пурпĕрех киле таврăнас çук тесе, çак çурта хваттере кĕме шутларĕ. Лашине тăварса ячĕ те вăл, хăй шала кĕчĕ.

Пӳртре никам та çук иккен. Пĕччен выртма лайăх мар тесе, старик хăйпе пĕрле виçĕ вилене илсе кĕртрĕ. Унтан пушă вырăн çине выртрĕ те, ĕшеннĕскер, часах çывăрса кайрĕ.

Нумай та çывăраймарĕ вăл—сасартăк аçа-çиçĕмлĕ кĕрленĕ сасăпа вăранса кайрĕ. Старик шартах сиксе тăрса ларчĕ. Пăхать—икĕ вилли çук та. Чи лӳппер те пысăк вилепе пĕр хĕрарăм тĕрмешеççĕ. Хĕрарăмĕ вилене çутă пӳлĕмелле сĕтĕрет.

— Тархасшăн, мучи, мана çак çын аллине ан пар!— тесе йăлăнать виле старике.

Старик, вилнĕ çынна çăлса хăварас тесе, хĕрарăма ярса тытрĕ. Вăл та старикрен хăрарĕ пулас та йăлăна пуçларĕ:

— Ан тив, вилнĕ çын сана кирлĕ мар, мана кирлĕ. Çак вилене мана парсан, эпĕ сана пĕр телейлĕ япала çинчен каласа парăп,—терĕ.

Старик килĕшрĕ. Хĕрарăм вилнĕ çынна тепĕр пӳлĕме илсе кайрĕ те пĕр самантрах калле тухрĕ. Унтан старике çапла каларĕ:

— Ну, старик, ырра хирĕç ырăпа, усала хирĕç усалпа тавăрма каланă. Эсĕ маншăн ырă ĕç турăн, çавăнпа эпĕ те сана ырăпа тавăрасшăн. Итле ман сăмахăма,— терĕ.— Çĕрпе пĕлĕт хушшинче вĕççĕр-хĕрсĕр тинĕс пур, çав тинĕс варринче пысăках мар утрав пур,—тесе калама тытăнчĕ хĕрарăм.—Çав утрав çинче пĕр хăвăл юман янраса ларать. Ун тăрринче— кайăк йăви. Йăвара икĕ çăмарта выртать. Эпĕ сана çав çăмартасене илсе килме хушатăп,—терĕ.

Хĕрарăм сăмахĕсем старике шутсăр тĕлĕнтерсе пăрахрĕç.

— Эсĕ кам пулатăн вара?— тесе ыйтрĕ вăл нимĕн калама аптранипе.

— Эпĕ этем телейне валеçекен пирĕшти. Анчах амаçури аннем мана тухатнă та, мĕн ĕмĕр тăршшĕпех вилнĕ çынсем çисе тăранса пурăнмалла туса, çак вăрмана килсе янă,—тет.

Çапла каларĕ те хĕрарăм, старик куçĕ умĕнче темĕн кăвакăн-симĕсĕн хумханчĕ. старик пĕр самантрах хăй юман патне çитсе те ӳкрĕ. Пăхать старик юман тӳпинелле—юман тăрри пĕлĕте тĕкĕнсе тăрать. «Епле хăпарса илем-ха ĕнтĕ ку юман тăрринчи йăвара выртакан çăмартасене?»— тесе пă-

шăрхана пуçларĕ старик. Анчах та шăп та шай çак самантра шăпах юман тăрринчен пĕр кăвакарчăнпа хурчăка старик умне персе те ӳкрĕç. Хурчăки чĕрнисемпе кăвакарчăн кăкăрĕнчен ярса илнĕ те ăна урăм-сурăм тăпăлтарать. Старике мĕскĕн кăвакарчăн пурнăçĕ питĕ шел пек туйăнса кайрĕ. Вăл çавăнтах пĕр пысăк чул илчĕ те хурчăка пуçне çапса та лапчăтрĕ.

— Тавтапуç сана, ырă çын, мана çăлса хăварнăшăн!— терĕ вилĕмрен хăтăлнă кăвакарчăн, старик хулпуççийĕ çине пырса ларса.— Мĕн кăна ыйтнă, çавна сана парăп,— тет.

— Мана нимĕн те кирлĕ мар, çак юман тăрринчи йăвари ик çăмартана кăна антарса пар,— тет ку.

— Нумай ыйтатăн, старик,—тет кăвакарчăн.— Вăл йăвари çăмартасенче — манăн чĕппĕмсем. Анчах эпĕ вилнĕ пулсассăн, вĕсене пурĕпĕр хурчăка çисе янă пулĕччĕ. Çавăнпа та эпĕ вĕсене сана халаллăп,—тет.

Çапла каларĕ те кăвакарчăн, çав самантрах икĕ çуначĕ хушшине икĕ çăмарта хĕстерсе анса, старике пырса пачĕ.

— Ну, старик, сан аллунта — этемлĕх телейĕ. Лайăх пăхса ӳстер ывăлусене!— терĕ кăвакарчăн.

Унччен те пулмарĕ — старик куçĕ умĕнче каллех темĕн кăвакăн-симĕсĕн чĕтренсе илчĕ те, старик куçне хупма ĕлкĕричченех хăйĕн килне çитсе те тăчĕ. Карчăкпа старик кăвакарчăн çăмартисене кӳлĕри шывпа çуса тасатрĕç те хурама кунтăк ăшне юнашар хучĕç. Старикки çăмартасем çине чĕрĕлĕх шывĕ сапать, карчăкки икçĕр çитмĕл çичĕ кун пусса ларать.

Икçĕр çитмĕл çиччĕмĕш кунне пĕр çăмарти çурăлать те, шĕшлĕ аври пысăкăш ача сиксе тухать.

— Ку ывăл Мăйпăран ятлă пултăр,— теççĕ карчăкпа старик.

Унтан тепĕр çăмарти çав тери хытă шартлатса çурăлать. Ун ăшĕнчен чике тăршшĕ ача сиксе тухать.

— Ку паттăра аслашшĕ ятне парас, Юман ятлă пултăр!— теççĕ карчăкпа старик.

Карчăкпа старик хăйсен ывăлĕсене иккĕшне те пĕр пек пăхса çитĕнтерме тăрăшнă. Анчах ĕç апла пулмарĕ. Мăйпăран ятлă ачи Юман çиекен апатсене те, пахчари çимĕçсене те вăрласа çинĕ. Çавăнпа та вăл пĕр вăхăтра ытла та тăрук ӳссе кайнă. Юман кăшт ӳссе сарăлнă çех, лăп та шăп чике тăршшĕ пулса юлнă.

Мăйпăранпа Юман йĕкĕрешсем çирĕм çине кайсан, вĕсене ашшĕпе амăшĕ хăйсем патне чĕнсе илчĕç.

— Юратнă ывăлсем, сире кун чул пăхса ӳстертĕмĕр. Пирĕн вилес кунсем çывхарса килеççĕ. Халĕ ĕнтĕ эсир хăвăра валли хăвăр мăшăрсем шыраса тупăр,—терĕ старик. Çавăнтах вăл ши-ик! ши-ик! ши-ик! шăхăрчĕ те, вĕсен умне пĕр куç хупса иличчен икĕ урхамах кĕçенсе пырса та тăчĕ. Пĕр урхамахĕ çăмарта пек чăп-чăмăр, тепĕр урхамахĕ хĕç пек çӳхе, ырхан. Старик ачисем çине пăхрĕ те:—Кам хăш лашине илет?—тесе каларĕ.

Мăйпăран самăр урхамахĕ çине, Юман ырхан урхамахĕ çине утланса ларчĕç. Ашшĕ вĕсене хăйсен пахчинчен виçшер ылтăн панулми татса пачĕ те:

— Ну, халĕ кайăр. Хăвăра валли иккĕн пĕртăван мăшăрсем тупăр. Ун пек мăшăрсене тупаймасан, калла çаврăнса килĕр. Сул çинче пĕр-пĕрне ан кӳрентерĕр, пăрахса ан хăварăр. Сирĕнтен эп каланисене пурнăçласа пыраканĕ телей тупĕ, ман сăмаха çĕрти çӳпĕ выранне хураканĕ хурлăх та асап курĕ,—терĕ старик.

Мăйпăранпа Юман çапла мăшăрсем шырама тухса кайрĕç. Çитмĕл те çичĕ кун кайсан, Мăйпăран лаша çинчен сиксе анчĕ те:

— Эй, хырăм выçрĕ те! Пĕр панулмине çиес-ха,— терĕ.

Мăйпăран апатланчĕ, Юман апатланмарĕ:

— Хырăм выçман-ха,— терĕ.

Тата çитмĕл çичĕ кун кайрĕç те улăха çитсе тухрĕç. Урхамахĕсене апатлантарчĕç. Мăйпăран ашшĕ парса янă тепĕр панулмине çисе ячĕ, Юман каллех çимерĕ.

Тата çитмĕл çичĕ кун хушши кайса, çитмĕл çичĕ хир урлă каçрĕç. Пĕр калама çук илемлĕ яла çитсе кĕчĕç. Каç пулса килет. Мăйпăранпа Юман пĕр тăлăх карчăк патне хваттере вырнаçрĕç. Ку карчăкăн эреветлĕ питлĕ, тăп-тăпăл илемлĕ хĕр пулнă. Ытармалла мар ăна, пĕр кашăк шывпа ним мар çăтса ямалла. Ăна курсан, Мăйпăран вилсех каять:

— Юман, каяссу килсен, эсĕ малалла кай, эпĕ çак хĕре хам мăшăрăм тăватăп!— тет.

— У-у-у, анкă-минкĕ, атте сăмаххисене мантăн-им?— тет Юман.

Мăйпăран Юман сăмахне йышăнать. Тепĕр кун вара кăвак çутăллах малалла тухса каяççĕ.

Каяççĕ çитмĕл çичĕ кун та пĕр эрне. Пĕр улăха çитеççĕ. Мăйпăран юлашки панулмине çисе ярать. Юман, ĕшеннĕскер, ыйха путать. Тăранайман хырăм Мăйпăран икĕ панулмине те вăрласа çăтса ярать. Акă виççĕмĕш улмине илме хатĕрленнĕччĕ кăна вăл—Юман ыйхăран вăранать те, тӳпелешме пуçлаççĕ. Юман панулмине памасть, хăй пĕр çăвар çыртса илет те юлашкине урхамахне çитерсе ярать.

Юрĕ-ха, ĕç капла пулчĕ кусен. Анчах малалла кайма чарăнмаççĕ. Çитмĕл çичĕ хир урлă каçсан, патша пурăнакан хулана пырса кĕреççĕ. Çав патшан пĕр хĕр пулнă, ылтăн хĕр пулнă вăл. Ун çинчен Мăйпăран пынă кунхинех ыйтса пĕлнĕ. Çавăнпа та вăл ăна мăшăр тума кăмăлланă.

— Юман, эсĕ каях малалла, анкăминкĕленсе çӳре. Эпĕ çак патшан ылтăн хĕрне мăшăрăм тăватăп,— тет Мăйпăран Юмана.

Юман пăшăрханчĕ, салхуланчĕ, кулянчĕ те урхамахне малалла хăваларĕ.

Патша ытла та сыхă пурăннă, унăн темиçе пин çынлă çар пулнă. Ун патне ниепле те кĕме май пулман. Мăйпăран кунĕн-çĕрĕн патша хĕрĕ патне кĕресси çинчен шухăшласа çӳренĕ, анчах ниепле те май тупман.

Пĕррехинче Мăйпăран хула пасарне тухать. Пасарта вăл çак хула хĕрринчех пĕр урамра чаплă юмăç карчăк пурăнни çинчен илтет. Тепĕр куннех юмăç патне вĕçтерет.

— Манăн патша хĕрне качча илмелле, çавăнпа та сирĕн пата килсе ыйтас терĕм: патша патне епле майпа кĕме пулать-ши?—тесе ыйтать вăл юмăçран.

Юмăç карчăк унран саклат укçи пама ыйтать. Мăйпăран хăй ирĕкĕпех урхамахне парса хăварать. Юмăç карчăк ăна çапла калать:

— Патша хĕрĕ кашни кун хула хĕрринчи чăтлăх вăрманта, пĕчĕк кӳлĕре, шыва кĕрет. Шыва кĕме вăл акăш пулса вĕçсе пырать. Кĕпине хывсанах, хĕр пулать те кӳлле чăмса кĕрет, кĕписене вĕрене çине çакса хăварать. Санăн çав кĕпесене çеç илмелле,— тет.

Тепĕр кунхине кăнтăрла çитес умĕн Мăйпăран кӳлĕ хĕррине пырса выртать. Акă, чăнах та, кӳлĕ хĕррине таçтан пĕр акăш вĕçсе пырать. Хăй ылтăн тĕслĕ. Ылтăн тумтирне хывса хăварать те вăл тап-таса, чечек пек хитре хĕр пулса тăрать. Унтан кăвакал пек чăмать шыва. Мăйпăран, ерипен-ерипен утса пырса, çав хĕрĕн ылтăн кĕпине илет те тĕм хыçне кайса пытанать.

Нумаях та вăхăт иртмест—патша хĕрĕ шывран тухать. Унталла пăхать вăл, кунталла пăхать—анчах кĕписене ниçтан та тупаймасть. Ăçта кайнă? Чĕркĕмĕл пек шывра йăпаннă чухне

вăл тумтиррисем çинчен мансах кайнă. Шырасан-шырасан, патша хĕрĕ макăрма тапратать.

— Ах, киле мĕнле çитес-ха халь? Ăçта-ши ман кĕпемсем? Кам илчĕ-ши ăна? Хам кĕпесене тупса паракана мăшăрăм тăваттăмччĕ. Эх, тĕнче кулли!—тесе макăрать патша хĕрĕ.

Çав вăхăтра чăтлăх вăрмантан, пилеш тĕми хушшинчен, патша хĕрне систермесĕр, Мăйпăран сиксе тухать те кĕпесене хĕре пĕр сăмахсăр тыттарать. Патша хĕрĕ савăннипе хĕвел пек çуталса каять.

— Кам пулатăн-ха эсĕ?—тесе ыйтать хĕр.

— Эпĕ чаплă асамçă ывăлĕ, сана мăшăрăм тума шутларăм. Çавăнпа та çакăн пек латсăр ĕçе туса çылăхлантăм,— тет Мăйпăран.

Патша хĕрĕ ăна çавăтать те, вĕсем патша патне каяççĕ.

Çитеççĕ патша патне, васкамасăр кĕреççĕ.

Патша калама çук çилленет.

— Çакăн пек çĕтĕк, аçлăк-саплăк çакса çӳрекенсене хамăн хĕрĕме качча парса вараланмастăп эпĕ!— тет.

Патша хĕрĕ ашшĕнчен йăлăнса ыйтать:

— Вăл мана вилĕмрен çăлса хăварчĕ, эпĕ ăна чунтан-вартан юрататăп.—тет.

Вара патша ирĕксĕрех килĕшет.

— Ну, халĕ, ырă мăшăрăм, хамăр атте-аннене кайса савăнтарар, туй тăвасси çинчен калаçса татăлар,—тет Мăйпăран.

Патша вĕсене икĕ урхамах парса ярать. Пĕр-икĕ кун кайсан, Мăйпăрансем хăйсен килне çитеççĕ.

— Эпир килтĕмĕр, ку санăн кинӳ пулать.—тет Мăйпăран ашшĕне.

— Юман ăçта?— тесе ыйтать старик.

— Вăл манран таçта тарса çухалчĕ.— тет Мăйпăран.

Ку сăмахсене илтсен, асамçă старик хуйхăрма тытăнать, Мăйпăрана хирĕç сăмах та чĕнмест.

Мăйпăранĕ ыланах:

— Туй хăçан тăвăпăр, атте?—тесе ыйтать.

Ашшĕ ăна çилĕпе:

— Юман килмесĕр туй тумастпăр, —тет те килĕнчен тухса каять.

Ашшĕ сăмахĕнчен тем тусан та иртме пултарайман Юман хăйĕн тăванĕсенчен уйрăлнăранпа лăп та шăп хĕрĕх хут хĕрĕх кун каять. Вăл килĕнчен тухнăранпа апат пĕрре те тăраниччен çисе курман. Çавăнпа та унăн вăйĕ те пĕтĕмпех пĕтсе çитнĕ пулнă. Хăйĕн мĕнпур ĕмĕчĕсене, мĕнпур шанчăкĕсене вăл урхамахĕ çине хунă. Чăнах та, çур улма çинĕ хысçăн унăн урхамахĕ халь ĕлĕкхи пек ырхан та вăйсăр мар, самăр та тĕреклĕ пулса кайнă. Çитменнине тата этем чĕлхипе калаçать.

Çапла вĕсем шав малалла каяççĕ. Каç пулать. Йĕп чиксен те куç курми пулать. Акă чиперех пыратчĕç вĕсем, сасартăк юханшыва персе анаççĕ. Урхамах вĕçĕмсĕр ишет, Юман хăй урхамахĕ çинче ăнсăр пулса ларса пырать. Кайсан-кайсан, вĕсем каллех типĕ çĕр çине тухаççĕ. Çаплах тĕттĕм-ха, йĕп чиксен те куç курмасть. Вĕсем пурĕпĕр малаллах каяççĕ. Акă, пĕр виçĕ утăм çех ярса пусаççĕ вĕсем—чĕресрен тăкнă пек çумăр çума тытăнать. Юманпа урхамахăн йĕпенмен вырăн та юлмасть. Тата тепĕр икĕ утăм ярса пусаççĕ вĕсем—пĕр темĕскер çумне пырса тĕкĕнеççĕ. Хыпашласа пăхать Юман — ун аллине юман хуйăрĕ кĕрет.

— Ахă,— тет вăл,— кунта çумăр анман хӳтĕ вырăн пулас пулать,—тет.

Юман тавраллипех хыпашласа çаврăнать. Акă, пуç кĕмелĕх шăтăк пур. Юман, шăтăкран пăхас тесе, пуçне çеç чикнĕччĕ—хăй те сисмест, çав шăтăка пĕтĕмпех кĕрсе ӳкет. Ак тамаша! Юман хăвăлĕ мар, тап-таса та илемлĕ пӳрт! Тĕпелте пĕр старик

ларать. Вăл Юман çине йăвашшăн пăхать.

Юман хăрать, чĕтренипе сăмах та чĕнеймест. Старик ун патне пырать те:

— Кам пулатăн эсĕ, ачам?— тесе ыйтать.

Юман хăй камне каласа парать. Лешĕ вара:

— Апла эпĕ санăн аслаçу Юман пулатăп. Кил, лар, апатлан та выртса çывăр,— тет.

— Ман урхамах пур, вăл çумăр çинче йĕпенсе тăрать,— тет Юман.

— Юрĕ, лăплан. Эсĕ сĕтел çинчи апатсене çи те нимрен шикленмесĕрех выртса çывăр. Урхамаху та пĕтмĕ,— тет Юмана аслашшĕ.

Юман апатланать те выртса çывăрать.

Тепĕр кунне вăл лăпкă ыйхăран вăранать. Çап-çутă, илемлĕ пӳрт. Тулта чечексем ӳсеççĕ, кайăксем юрлаççĕ.

Юмана аслашшĕ хăна тăвать те хăйĕн пурлăхĕсене кăтартса çӳреме пуçлать.

Унăн вуникĕ ампар пулнă. Кашни ампарне ăрасна япаласемпе тултарнă. Вĕсенче ĕç хатĕрĕсем, ĕçме-çимеллисем тата тем те пур. Вунпĕрмĕш ампарĕнче урхамахсем ташласа тăраççĕ. Юман урхамахĕ те кунтах. Вунпĕрмĕш ампара курса пĕтерсен, вуниккĕмĕшне кĕреççĕ. Ку ыттисенчен пĕтĕмпех уйрăм. Тап-таса та çапçутă. Кунта ултă куçкĕски ялкăшса тăраççĕ. Юман пĕр куçкĕски патне пырса пăхать—ун витĕр темĕн тĕрлĕ ӳсентăран курăнать. Иккĕмĕш куçкĕски витĕр темĕн тĕрлĕ çĕршыв курăнать. Виссĕмĕшĕнчен сăртсем, тусем; тăваттăмĕшĕнчен чĕрчунсем; пиллĕкмĕшĕнчен тĕрлĕрен çынсем курăнаççĕ. Юлашки куçкĕски витĕр пăхсан, Юман хĕпĕртенипе кăшкăрсах ярать. Ун витĕр калама сук хитре хĕр курăнать. Вăл хĕр хĕвел шевлипе ялкăшса çех çиçсе тăрать.

— Мĕн ятлă хĕр-ши ку?— ыйтать Юман.

— Ука ятлă,— тет аслашшĕ.

— Ну, ку хĕр манăн мăшăрăм пулĕ! — тет Юман.

Аслашшĕ кулать те пуçне суллать.

— Тем, ачам, ăна паттăрсем çех илме пултараççĕ,— тет.

— Çавах та тытăнса пăхам-и, асатте, унсăрăн мана пурăнма йывăр, тамăкри пек хĕн куратăп эпĕ,— тет.

— Тытăнса пăх эппин, чармастăп. Анчах хытă кĕрмешмелле пулать вара,— тет аслашшĕ.

— Эй, вилĕп-и унта, чĕрех юлăп-и... Çак Укана пĕрех мăшăрăм тăватăп!— тет Юман.

Тата виçĕ кун хушши аслашшĕ патĕнче пурăнать Юман. Вара тепĕр кунне куçкĕски витĕр курăнакан хĕр патне кайма хатĕрленет.

— Ачам, мăшăр шырама каяс пулсан, эсĕ çуран кай, урхамаху ман патăмрах юлтăр. Кирлĕ чухне эпĕ унпала сана пулăшма пырăп. Тата эсĕ ак çак куркана виçĕ çăвар шыв сапса хăвар, ун тăрăх эпĕ, сана мĕн пулнине пĕлсе, пулăшма пырăп,— тет Юмана аслашшĕ.

Юман аслашшĕ вĕрентнĕ пек тăвать.

Тепĕр кунне Юман çăкăр чикет те тухса утать. Тула тухса ӳкме çеç ĕлкĕрет Юман — аслашшĕн кил-çурчĕ пы-ысăк юман пулса кашласа юлать. Юман çăп-çăра тĕтре витĕр малаллах пырать. Анчах нумаях та каяймасть вăл—çухалса каять. Ăсталла каймаллине пĕлми пулать. Йăлтах аптăраса çитет. Çавах та малаллах утас пулать, хăть каялла, хăть малалла—пурпĕр мар-и ĕнтĕ.

Виçĕ кун хушши пĕр чарăнмасăр сулланса çӳренĕ хыççăн, тепĕр кун кăнтăр ваççинче, Юман таçтан аякран çип пек çинçе сукмак тăрăх пĕр çын килнине курать. Ăна курсан, вăл утăмне хăвăртлатать. Часах вĕсем иккĕшĕ тĕл пулаççĕ те:

— Ăçта чуптаратăн?— тесе ыйтать хирĕç пулнă çын.

— Хам ăçта кайнине хам та пĕлместĕп,— тет Юман.

— Çапах та тĕрĕссине кала,—тет лешĕ.

— Тĕрĕссипе-и? Апла пулсан —ĕç шыратăп,—тет Юман.

— Ĕç шыратни? Юрĕ! Сана ĕç тупса пама пултаратăп эпĕ. Лаша пăхмалла пулать. Килĕшетĕн пулсан, хампа пĕрле пыр,—тет хирĕç пулнă çын.

Юман тĕл пулнă çын каланине итлет те ун хыçĕнчен утать.

Часах вĕсем пĕр капăр ĕшнене пырса тухаççĕ. Ĕшне варринче шап-шурă çурт ларать: пы-ысăкскер, тем мăнăшĕ. Юмансем таса пӳрте кĕреççĕ, апат çиеççĕ, унтан сăрнай каланине итлекелеççĕ те çывăрма выртаççĕ. Тепĕр кунхине ирпе ирех, кăвак çутă килсенех, Юман çыннăн виçĕ лашине пăхма пуçăнать.

Шăп пĕр çул хушши ĕçлет Юман çав çын патĕнче. Анчах унăн мăшăр тупма каймалла-çке-ха. Ун пирки вăл çав çынтан темиçе хут та тилмĕрсе ыйтоĕ. Лешĕ, вăл ĕçе чăкраш туса пыманнине кура, ярасшăн мар. Йăлăнсан-йăлăнсан, тин ӳкĕте кĕчĕ. Юмана пĕр тенкĕ вырăнне икĕ тенкĕ парса ячĕ. Юманĕ, хăнасемшĕн те, ĕçлекенсемшĕн те тарават эteме тав туса, хăй мăшăрне шырама тухса кайрĕ.

Нумай утать Юман, хырăмĕ те выçса çитет, ывăнать те. Юлашкинчен тата каллех хăй каяс тенĕ çулĕнчен çухалса каять. Ниепле те уя тухаймасть вăл, çатрака вăрман хушшинчех çĕтсе çӳрет.

Халтан кайрĕ Юман, аран-аран утать. Сав вăхăтрах вăл пĕр сунарçăна хирĕç пулать. Сунарçă, ватă енне кайнă çын, чыссăр калаçакanскер, Юмана курсанах хаяррăн чĕнет:

— Ăçта каятăн, çын?—тет.

Юманĕ шиклĕ сасăпа:

— Пĕр улпут патĕнчен ĕçлесе таврăнатăп,—тет.

— Сан пĕр тенкĕ укçа çук-и?—тет лешĕ.

— Икĕ тенкĕ пур, ме ил, кирлĕ пулсан,—тет Юман.

Сунарçă Юман панă укçана илет те çавăнтах çемçелсе каять.

— Пархатар пултăр сана, ачам. Акă сана укçашăн сăран хутаç. Кирлĕ чухне кирлĕ пулĕ. Кирлĕ мар чухне, хырăму тутă чухне, эсĕ ăна ан тив. Тивсен — сиен пулĕ. Хырăму выçса, чуну тухас патне çитсен çеç уç, вара сана кирли пурте пулĕ,—тет.

Вĕсем пĕр-пĕрне тав тăваççĕ те уйăрăлаççĕ, иккĕш те хăйсен çулĕпе малалла каяççĕ.

Юман утать, хырăмĕ чарлатать, чăтма терт. Чун тухса тарас патне çитет. Юман чăтаймасть урăх — пĕр тунката кутне ларать те сăран хутаçне уçать. Хутаç пуш-пушах. Тĕпĕнче çеç пĕр тутăр лӳчĕркенсе выртать. Юман ăна та кăларса пăхать. Тутăрĕ çӳплĕ, таса та мар.

— Эй-яй-яй, ку сунарçă улталарĕ иккен мана, пушă хутаç çеç пачĕ.— тет.

Çӳпсене тасатас тесе, Юман тутăра лаштăр суллать. И-их, патька! Çăкăрĕ, сĕчĕ-çăвĕ, пылĕ, эрехĕ, пуллишăрттанĕ, чăкăчĕ-яшки, уйранĕ, çăмарти, çĕрулми... Тем тесессĕн — темĕн те пур! Юман, пĕтет пуль тесе, хыпаланса çиет, анчах апачĕсем пĕтме мар, йышланса, пушшех тутлăланса пыраççĕ. Тăраниччченех çирĕ Юман. Тутăра илсе тепĕр хут силлерĕ те — тутăр малтанхи пекех çӳпленсе çех юлчĕ. Ăна хутаçа чикрĕ те малалла утрĕ Юман.

Акă хĕвел те анса ларчĕ, тĕттĕмленчĕ. Юман вăрмантан тухрĕ. «Ну, халĕ уйпа каятăп, пĕр-пĕр ял тĕл пулмăп-и»,—тесе утать Юман. Анчах апла мар, каллех вĕтлĕх вăрман пуçланчĕ. Юман вăрмана кĕчĕ. Çат-

рака та чӑтлӑх вӑрманта тӗттӗм. Юман хӑрать: ура айӗнче кутӑн-пуҫӑн ҫӗленсем шуса иртеҫҫӗ. Хӑш чухне ҫӗленсем Юмана уринчен тӑлланса ӳкереҫҫӗ, утма памаҫҫӗ. Аллинчен, мӑйӗнчен явӑнса хаяррӑн чӑшлатаҫҫӗ. Пӑч-тӗттӗм пулса ҫитет. Ҫатрака та чӑтлӑх, ҫӗмӗрсе тухмалла мар. «Ну, тинех чун тухать ӗнтӗ»,—тесе утса пыратчӗ кӑна Юман — сасартӑк 'я-а-анн аялалла анса каять. Чул пек хӑвӑрт вӗҫсе анать. Ҫапах та тӗпне пӗр талӑк кайсан тин анса ҫитет. Тӗпӗнче кӗленче пек яп-яка. Ҫӳлелле пӑхать — пӗчӗ-ӗк шӑтӑк анчах курӑнать, куҫлӑх пысӑкӑш ҫеҫ. Чи ҫӳлте шӑтӑк анинчен ҫӑлтӑрсем курӑнаҫҫӗ. Хушӑран пуслӑх пек ҫӗленсем шӑтӑк урлӑ шӑва-шӑва каҫаҫҫӗ.

Юман ҫапла тул ҫутӑличчен тӑрать. Тул ҫутӑлсан, Юман ҫаврӑнкаласа пӑхать те курать — тепӗр еннелле тепӗр шӑтӑк кӗрсе каять. «Хӑть вилем, кунтан ҫавах тухаяс ҫук, тавай ҫав шӑтӑк тӑрӑх утас!»—тесе шухӑшлать Юман. Шӑтӑкӗ ҫап-ҫаврака, кӗленче пек яка, утма ҫӑмӑл.

Талӑк хушшинче Юман тепӗр тӗнчене сиксе тухать. Кунта пушшех тамаша, ҫав тери илемлӗ ҫӗршыв. Чашкӑрса ӳсекен хӑмӑш хушшинче пӗр хӗрлӗ ҫурт аран-аран курӑнса ларать. Юман тӳрех пӳрт еннелле утать. Кӗленче алӑка уҫса пӳрте кӗрет. Пӳрчӗ тап-таса. Малти кӗтесре, йӗсрен тунӑ пукан ҫинче, пӗр хӗр юрласа ларать. Тинкерсе пӑхать Юман, сасартӑк чӗтресе ӳкет. Ун умӗнче аслашшӗ патӗнче куҫкӗски витӗр курнӑ хӗр, Юман мӑшӑр тума кӑмӑлланӑскер, лара парать. Хӗвел пек ҫиҫсе тӑрать хӗр. Ҫӳҫӗ ылтӑн, чӗрнисем кӗмӗл тӗслӗ.

Хӗр те Юмана курать те:

— Эс кам, мӗн ӗҫпе килтӗн?—тесе ыйтать.

— Эпӗ Юман, атте пилленӗ тӑрӑх, сана хамӑн мӑшӑрӑм тума шутларӑм,—тет.

Хӗр шӑнкӑрав пек уҫӑ сассипе шӑнкӑртатса:

— Эпӗ хӗр мар ҫав, арӑм, Ука ятлӑ,— тет салхуллӑн.— Эпӗ тамӑкра хӗн куратӑп. Манӑн упӑшка — чӑтма ҫук тискер чун. Вӑл — вуникӗ пуҫлӑ ҫӗлен. Качча пырӑттӑм та сана — ҫӗленрен ҫӑлӑнма йывӑр,—тет.

— Халь ӑҫта вӑл?—тет Юман.

— Вӑл виҫӗ кунлӑха ҫын ҫиме кайнӑ, виҫӗ кунтан килет. Эсӗ унччен ан тӑр кунта, ахалех пӗтмелле пулӗ,—тет Ука.

— Вӑл юрӗ-ҫке те-ха, анчах эпӗ пурӗпӗр сансӑр каймастӑп. Кунта килме пӗлнӗскер, ҫӗленпе те тавлашса пӑхам-ха,—тет Юман.

Ука Юман сӑмахне савӑнсах итлет.

Тепӗр виҫӗ кунтан Юман такам тискеррӗн шӑхӑрнӑ сасӑ илтет. Ука хыпаланса ӳкет.

— Ҫӗлен килет, Юман! Ав, шӑхӑрни илтӗнет. Вӑл — ҫӗлен патши вӗт, ав ӑна ытти ҫӗленсем хӗпӗртесе кӗтсе илеҫҫӗ. Сана ӑҫта пытарас-ха манӑн?—тет.

— Пытармасан та юрӗ-ҫке,— тет Юман.

— Пытармасан, вӑл сана та тӗп тӑвӗ, мана та хӗн-хур ӑшне чикӗ,—тет Ука.

Тӑвӑл кашланӑ пек сасӑ кӗрлени илтӗнсен, Юман кӑмака хыҫне ҫыврам пек туса выртрӗ. Тепӗртак тӑрсан, ҫӗлен чашкӑрса та ҫитрӗ. Хапха юписем ҫумне тумтиррисене хывса ҫакрӗ те, ҫын пулса, пӳрте кӗчӗ. Кӗнӗ-кӗмен:

— Фу-у-у, ҫын шӑрши пур!—тесе ахӑрса ячӗ.

— Ҫапла ҫав, таҫтан пӗр ҫын килсе ҫакланчӗ,—терӗ ӑна арӑмӗ, юрама тӑрӑшнӑ пек пулса.—Ҫывӑрать-ха вӑл, мӗскӗн, ҫул ҫӳрене ан вӑрат ахӑрашса,—тет.

— Тавай ҫиес ӑна,—тет ҫӗлен.

— Тархасшӑн, ан ҫи, манӑн шӑллӑм вӑл,—тет ӑна арӑмӗ.

Вара çĕлен Юмана вăрататъ те:
— Эй, арăм, суятăн. Ку сан шăллу мар, шăрши урăх. Вĕлеретĕп ăна,— тет.
Юман, çывăрман пулин те, куçпуçне шăлкаласа:
— Çиесси çиййĕн-ха та, сана малтан пĕр тĕлĕнмелле япала туса кăтартам-и?—тет.
— Ту эппин,—тет çĕлен.
Юманăн хырăмĕ чăтма çук выçса çитнĕ-мĕн. Вăл сăран хутаçран тутăр кăларса силлет те—темĕн тĕслĕ апатçимĕç ишĕлсе тухать. Ăна курсан, çĕлен тĕлĕнсе каять.
— Пар куна мана! — тесе ыйтать çĕлен.
— Хама ан çи, ан вĕлер, вара ахалех паратăп,—тет Юман.
Çĕлен килĕшет.
Каçпа çĕлен хăйĕн тăванĕ-тантăшĕсене пухать, хăна тăвать. Ĕçеççĕ, çиеççĕ вĕсем, анчах Укана нимĕн те çитермеççĕ. Ĕçсе-çисе тăрансан, çĕлен калать хăнисене:
— Манăн тĕлĕнмелле япала пур, кăтартас-и?—тет.
— Кăтарт, кăтарт,—теççĕ.
Çĕлен сăран хутаçран çўплĕ тутăр кăларса силлет. Ак тамаша! Тутăра тутă хырăмпа силленĕ пирки апатçимĕç выранне хĕçлĕ салтаксем шучĕ те çук сирпĕнсе тухаççĕ те ўсĕрĕлсе çитнĕ çĕленсене татăкăн-татăкăн вакласа тăкаççĕ.
— Ну, халĕ, Ука, пире кайма вăхăт, çĕленсен шăпи тулчĕ!—тет Юман.
— Чим халĕ, пирĕн çĕлен вакланчăкĕсене çунтарса ямалла. Унсăрăн вĕсем, шыва лексен, каллех чĕрĕлсе, пире хăвалама пултарĕç,—тет Ука.
Вĕсем вара çĕлен вакланчăкĕсене кăмака хутсах çунтарса яраççĕ.
— Ну, кайăпăр,—тет Юман.
— Чим халĕ, ан хыпалан,—тет Ука каллех.—Япаласене хатĕрлес пулать. Тата кунтан мĕнле тухса каяс тетĕн-ха эсĕ?—тет.
Юман ним сăмах та чĕнме аптăрарĕ.
Ука пĕр михĕ хурт-кăпшанкă илчĕ. Унтан, симĕс курăк çине çивитти сарса хучĕ те:
— Кил, Юман, хăвăр патăра кайăпăр,—терĕ.
Юман çивитти çине Укапа юнашар пырса ларчĕ. Ука темскер сăмах каларĕ çеç — çивитти çĕкленсе те кайрĕ. Нумаях та каймарĕç, шăтăкран çеç тухса ĕлкĕрчĕç — вĕсене пĕр кĕтў çĕлен сырăнса илчĕ. Ямаççĕ малалла. Вара Ука çĕленсене михĕри хурт-кăпшанкăсене сапса пачĕ те, çĕленсем тин сирĕлчĕç.
Çĕленсем сирĕлсе пĕтсен, çивитти таса пĕлĕте çĕкленчĕ. Вăрмансем, хирсем, шывсем, тусем, ялсем, хуласем урлă вĕçсе, вăл Юмансен пахчи умнех пырса анчĕ.
Асамçă старикпе карчăкки Юмансене кĕтсе илме тахçанах хатĕрленсе тăнă. Юманпа Укана хирĕç хĕпĕртесех чупса тухрĕç. Карчăкки икĕ аллипе сурпан тытнă. Сурпанĕ çине пуçламан çăкăр хунă. Çăкăрĕ çинче икĕ çăмарта. Старикки шерпет чаплашкисене йăтса тухрĕ. Ăна курсан, Мăйпăранпа арăмĕ тĕлĕнсех кайрĕç.
— Пире кун пек кĕтсе илмерĕ-çке атте, пăх-халĕ — Юмана епле кĕтсе илеççĕ,—тесе тĕлĕнеççĕ.
Старик икĕ чаплашкари шерпете Юманпа Укана ĕçтерет, карчăкки çăмарта çитерет.
— Пил сана, Юман, ăслă ывăлăм. Ман сăмахран тухмарăн, мана намăс тумарăн, çавăншăн сана мухтав! Ĕмĕр-ĕмĕрех ăслă пул,—тет Юман ашшĕ.
Вара карчăкпа старик иккĕш пĕрле Юманпа Укана çавăтса кĕрсе сĕтел хушшине лартаççĕ, тутлă шерпет ĕçтереççĕ. Тепĕр эрнерен туй пуласси çинчен пĕлтереççĕ те Юманпа Ука валли тата Мăйпăрансене валли те ятарласа тунă уйрăм пўртсене ăсатаççĕ. Лешсем хăйсен пўрчĕсене кай-

сассăн туя хатĕрленме тытăнаççĕ.

Майпăран арăмĕ, патша хĕрĕ, тĕрлĕ тутлă çимĕçсем, старике тăхăнтарма пурçăн кĕпе хатĕрлерĕ. Юмансен ни апат-çимĕç хатĕрлеме çăнăх çук, ни кĕпе çĕлеме май çук. Пĕтĕмпех хуйха ӳкрĕ Юман, ним тума та пĕлмест.

— Ука,— тет вăл хуйхăрса,—эпĕр намăс куратпăр вĕт. Пирĕн нимĕн те çук, ни çăнăхĕ, ни пир-авăрĕ,—тет.

Юмана арăм лăплантарать:

— Юрĕ, ытлашши пăлханса ан ӳк. Туй вăхăтне çитсен, хамăрах тăвăпăр, çын куçĕнчен пăхмăпăр,—тет.

Çапла ыран туй пулас вăхăт çитрĕ. Юман хуйхăрать. Пĕтĕм халăх вĕсен туйне чун хавалĕпе кĕтет. Майпăрансем туя хатĕрленсе те çитнĕ. Чаплă патшасем туя килнĕ те ĕнтĕ.

Каç пулсан, Ука Юмана калать:

— Эсĕ выртса çывăр, эпĕ ыран туя кайма апат-çимĕç хатĕрлем, тумтирсем çĕлем,—тет.

Юман итлет, выртать те çывăрать. Йывăр çывăрать вăл. Анчах темле, çурма ыйăхра вăранса каять те куç айĕн пăха пуçлать. Пӳртре тĕслĕрен тутлă апат-çимĕç шăрши сарăлнă. Укапа пĕрле пĕр хитре хĕрарăм калаçса тăраççĕ. Леш хĕрĕ Укана пĕр çĕклем тутăрпа чĕркесе çыхнăскер тыттарать. Ука илет те лешĕ васканă пирки ăсатма тухать. Çав вăхăтра Юман хыпаланса вырăн çинчен тăрать те çыххине салатса пăхать. Эй тамаша-а, тем тĕрлĕ тумтир! Кăмака умĕнче темĕн тĕрлĕ апат-çимĕç пăсланать.

Юман савăнса каять, ăшă вырăн çине кĕрсе выртать. Тин çеç выртнăччĕ вăл — арăмĕ, чипер Ука, кĕрет те Юманпа юнашар салтăнса выртать.

Тепĕр кун ирех туй кĕрлеме пуçлать. Пĕтĕм халăх туй курма пынă. Майпăран хуняшшĕсем, аслă патшасем, пакунĕсене ялтăртаттарса, атăсемпе шаклаттарса çеç утса çӳреççĕ. Юманпа Ука та туя çитеççĕ. Ашшĕсене тăхăнтармалли кĕпесемпе кучченеçсене вĕсем хăйсемпе пĕрле илсе пынă.

Акă аслă килкарти варринче туй кĕрлет. Майпăранпа арăмĕ ташлаççĕ, курма пынă çынсем шат-шат-шат алă çупса кулаççĕ, юрлаççĕ. Вĕсем чарăнсан, Юманпа Укана ташлама чĕнеççĕ. Вĕсем тухаççĕ те, малтанах пĕр виçĕ хутчен акăшсем пек шуса çӳреççĕ. Ун хыççăнах Ука тутăра кăларса вĕçтерме тытăнать. Ак тамаша, пĕтĕм тĕнче ташша яра парать! Туй халăхĕ, ĕнесем, сурăхсем ташлаççĕ, çуртсем те хавасланса сикеççĕ. Кайăксем ташă кĕвви юрласа ташлаççĕ. Йывăççсем пурте пĕр харăссăн алă çупса тăраççĕ. Кайран, ташлама чарăнсан, пурте Юманпа Укана ыр кăмăлпа алă пырса параççĕ.

— Ну, халĕ апат çийĕпĕр, — тет Юман ашшĕ.

Апатланма ларчĕç. Майпăрансен апачĕ кĕрекери çынсене çеç çиме çитрĕ.

— Ку апат выçлăх чухне çиекен апатран кăшт çеç маларах,— тет старик.

Унтан Ука шурă тутăрне сарса хучĕ. Темĕн тĕрлĕ апат-çимĕç сĕтел çине ларса тулчĕ. Туй курма пынисем те, выльăхсем те, кайăксем те — пурте апатланса тăранчĕç.

— Вăт ку апат та апат! Пил пултăр сире, Юманпа Ука кинĕм! Эсĕр çеç манăн сăмахран тухмарăр,— тет старик.

Унтан парне кĕписем тăхăнтартма вăхăт çитрĕ. Майпăрансем пурçăн кĕпесем тăхăнтартрĕç. Вĕсене курсан, пĕтĕм халăх тĕлĕнет.

— Кусем ака-суха тума юрăхлă,— тет старик.

Черет Укана çитет. Унăн тумтирри пĕтĕм халăха тумлантарма çитрĕ. Пĕтĕм тĕнчене чечек пек хитре тум хупăрласа витрĕ — ялкăшса, çиçсе, кăвар тĕслĕн çунса çеç тăраççĕ.

— Ку тумтире чи чаплă праçник

кунĕсенче çеç тăхăнма юрать,— тет старик.

Пĕтĕм халăх, пĕтĕм çĕршыв Юманпа Укана кăмăлпа тав тăвать. Мăйпăран таврашĕсем çеç сăмсисене усса, мăн шухăша кайса, сивлек куçĕсене мăкăльт-мăкăльт сиктерсе, тулса çитнĕ кăмăлĕсемпе пăчăхса тăраççĕ.

Виçĕ кунтан туй саланать. Юманпа Ука килне каяççĕ. Мăйпăранпа арăмĕ патшасене ăсатса яраççĕ.

Вара çапла пурăнма тытăнаççĕ вĕсем: Юман сунара çӳрет, Мăйпăран лавкка тытать, çынсене тара тытса ĕçлеттерет. Анчах çав-çавах Юманпа Ука Мăйпăрансенчен темиçе хут лайăх пурăнаççĕ. Çавăнпа та Мăйпăрансем Юмансене курайми пулаççĕ, вĕсем çине шăл хăйрама тытăнаççĕ.

Пĕррехинче, Юман сунара кайсан, вĕсем патне Мăйпăран пырса кĕрет. Шăпах çав вăхăтра Ука ним туймисывăрса выртнă, асамçă тутăрне хăй çумне хунă пулнă. Мăйпăран çав тутăра илсе тарать те, киле çитсен, тутăра кăмакана пăрахса çунтарас тесе, вучаха ывăтать. Çав вăхăтра усă кантăк витĕр мерчен тĕслĕ кăвакарчăн вĕçсе кĕрет те пӳрне пысăкăш çунса пĕтеймен тутăра çăварне хыпса вĕçсе тухса каять. Мăйпăран хытса кайсах тăрса юлать.

Каç пулать хайхи, Юман сунартан таврăнать. Анчах ытти чухне, вăл килнине сиссе, йытти вĕретчĕ, ăйăрĕ кĕçенетчĕ, шăнкăрчă юрлатчĕ, ĕни мĕкĕретчĕ, чăххисем какалатчĕç, кушакĕ мăрлататчĕ. Паян пĕрре те апла мар. Пурте хуйхăллă, пурте пуçĕсене уснă, пурте макăраççĕ, Юман пӳрте кĕрет те шалтах тĕлĕнет: пӳртре ниçта та Ука çук. Вырăн çинче кĕл çех купаланса выртать. Анчах купаварри шăтăк. Юман ним тăвайман енне хăй çӳçне хăй тăпăлтарать. Укана çунтарса вĕлернине туйса илет те вилес пекех макăрать. Çавăн хыççăн вăл чирлесе ӳкет: вырăнпа выртать вунă кун, тăрайми выртать тăхăр кун.

Çакăн хыççăн Юманăн пурнăçĕ япăхланнăçемĕн япăхланса, юхăнса пыма тапратать. Юлашкинчен вара Мăйпăран ун кил-çуртне пĕтĕмпех хăй аллине çавăрса илет. Юман хăй те Мăйпăрана пăхăнса тăракан пулать.

Икĕ пĕртăван, пĕри — Мăйпăран, тепри — Юман, çапла пурăннă вара: Мăйпăранĕ пуян, Юманĕ чухăн. Юманĕ Мăйпăран патĕнче тăранса пурăннăшăн, Мăйпăранĕ Юманран сунара çӳресе тытнă кайăксене йăлтах туртатурта илсе, хакла сутса, нимĕн ĕçлемесĕрех тулăх пурнăçпа пурăннă. Юманĕ вилес пекех ĕçленĕ, нихçан та çителĕклĕ пурнăç курайман. Çавăнпа Юман час-часах Ука çинчен аса илсе хуйхăрнă.

Пĕррехинче, каçхине çывăрнă чухне, Юман тĕлĕк тĕлленет. Тĕлĕкре вăл таçта аякра, пĕр пăнчă пек çеç курăнакан Укана курать. Ука ăна çапла калать:

— Санăн пиччӳ Мăйпăран мана çунтарса ярасшăн пулчĕ. Анчах манăн чуна кăвакарчăн çăлса хăварчĕ. Халĕ эпĕ сывах, анчах тамăкра, упакашкăрсен аллинче пурăнатăп. Эпĕ сана яланах аса илетĕп, юрататăп сана. Эсĕ те мана юрататăн пулсан, çăлма кил. Анчах санăн нумай йывăрлăхсемпе кĕрешес пулать вара. Кил, эпĕ каятăп,—тет.

Ука çухалсанах, Юман ыйхăран вăранать. Тумланать те вăл Ука патне кайма тухса утать.

Пĕр кун утать Юман, икĕ кун. Эрне утать, уйăх та. Юлашкинчен, каçкӳлĕм, пĕр мăн çул çине тухать. Пăртакран кашласа ларакан çатрака вăрман ăшнелле виçĕ çул юпленсе кĕнине курать. Çулсем юпленсе каякан тĕле, шăпах варрине, каçхине те çуталса тăракан илемлĕ саспаллисемпе: «Телей шыракана — телей, вилĕм шыракана — вилĕм, асап шыракана — асап»,— тесе çырса хунă. Юман ăна тинкерсе вулать, анчах хăш юппипе

каймаллине пĕлмест, аптăрать. Мĕн тăвас? Тĕттĕм те пулса килет, ниçта кайма çук. Çав вăхăтра тахăш юппипе паллă мар пĕр çын ури сасси илтĕнсе килет. Юман ăна пĕтĕм чĕререн кĕте пуçлать. Акă çул çинче хĕм сирпĕнни курăнса кайрĕ, нумаях та вăхăт иртмерĕ—Юман патне шап-шурă çăмламас старик пырса тăчĕ. Хăй вăл туяпа, туйи вĕçĕнчен хĕм сирпĕнсе тăрать.

— Ăçта каятăн, мĕне ĕмĕтленетĕн, кама шыратăн?—тесе ыйтать старик Юманран.

Юман çак старике хăй пурнăçĕ çинчен пĕтĕмпех каласа парать. Старик вара:

— Ука патне çитме çав тери йывăр, ачам. Унта каяс пулсан, санăн тĕнчери чи чаплă сунарçă пулмалла. Ме сана пăшал, килне таврăнса тĕл пеме вĕрен, кайран çак варринчи çулпа Ука патне кайăн,— тет.

Юман старикрен пăшала илет те килне, Мăйпăран патне, таврăнать. Çапла вара Юман тата тăрăшарах сунара çӳреме тытăнать, хăй куç умне курăннă кайăксене пĕрре те вĕçертмест. Кайран-кайран Юманран пĕтĕм тĕнче тĕлĕне пуçлать.

«Ну, халĕ тĕл пеме вĕрентĕм ĕнтĕ. Укана илме каяс пуль»,— тесе шухăшлать Юман. Тепĕр кунне вăл пăшалне çакать те вăрăм çула кайма тухать.

Çул юппине çитсенех, вăл нимĕн чарăнса тăмасăр шăп варринчи çулпа утать. Нумаях та каймасть — пĕр тилле курать. Юман хыпаланса тĕллесе пересшĕн пулать. Тилĕ чĕтресе ӳкет те:

— Эсĕ тĕл пенине пĕлетĕп эпĕ, Юман. Тархасшăн, ан вĕлер, кирлĕ чухне эпĕр сана ушкăнĕпе пулăшма хатĕр тăратпăр,— тет.

Ыр кăмăлпа пуплекен тилле Юман пемест, тилли çавăнтах тарса пытанать. Вара Юман малалла утать. Кайсан-кайсан, вăл кашкăра тĕл пулать. Каллех пăшалпа тĕллет Юман. Кашкăр чĕтресе ӳкет те çапла калать:

— Сана çул çинче мăйракаллă сурăхсем тапăнĕç. Сана тĕксе вĕлерме тăрĕç. Эпир вара, ушкăнпа пырса, çав сурăхсене пăва-пăва тухăпăр, сана çăлса хăварăпăр. Тархасшăн, ан вĕлер мана,— тет йăлăнса.

Юман ăна та пемесĕр хăварать, хăй малаллах утать.

Утсан-утсан, вăл пĕр çăмламас упа тĕл пулать. Ăна та пăшалпа тĕллет Юман. Упа шиклĕ сасăпа:

— Тархасшăн, ан вĕлер мана, Юман. Кирлĕ чухне сана пулăшăпăр. Малалла кайнăçемĕн сана пыл хурчĕсем тапăнĕç, сана сăхса вĕлерме тăрĕç. Эпĕр, ушкăнпа пырса, пыл хурчĕсен вĕллисене ишĕпĕр, тутлă пылне çуллăпăр. Вĕсем вара, санран пăрăнса, пире тапăнĕç, эсĕ вилĕмрен çăлăнса юлăн,—тет упа.

Юман куна та ĕненет. Упана пемесĕрех хăварать те хăй малаллах каять.

Пĕр-икĕ кун кайсан, вăл пĕр аслă шыв хĕррине пырса çитет. Шăп çавăн чухне ун патне пĕр кĕтӳ тилĕ чупса пырать. Аслă шыв урлă каçма ни кĕпер çук, ни кимĕ таврашĕ çук. «Ăхă, ку тилĕсем мана шыв урлă каçарма килеççĕ пуль-ха, пĕр тилли çапла каланăччĕ»,—тесе шухăшлать Юман. Тилĕсем кĕпĕрленсе çитеççĕ.

— А-а-а, эсĕ тĕл перетĕп тесе пире хăратма-и-ха!—теççĕ те тилĕсем, Юманăн сылтăм аллине пăрса ярасçĕ. Юман ним тума пĕлмест ĕнтĕ: пăшал перес — сылтăм алли ĕçлемест. Шыв урлă та ниепле те каçма çук. Аптăранă енне вăл шыв тăрăх каять. Акă пĕр сип-симĕс улăхра сурăхсем пур. «Кусем мăйракаллă сурăхсем ĕнтĕ, мана вĕлереççĕ. Ăçта-ши кашкăрсем?»—шухăшлать Юман. Сăмах çинех ун умне пĕр кĕтӳ кашкăр сиксе тухать.

— Э-э-э, тĕл перетĕп тесе мухтанса пире хăратма-и!—теççĕ те кашкăр-

сем, Юманăн икĕ аллине те татса чăмласа яраççĕ.

Юман мăйтăкланчĕ, аран-аран утакан пулчĕ. Суранĕ чĕпĕтсе, пĕçерсе ыратать. Çавах та малаллах утать вăл, мĕскĕн. Чылай кайсан, пĕр утара пырса кĕрет. Утарта пыл хурчĕсем урлă та пирлĕ нăрласа вĕçеççĕ. «Кусем мана сăхаççĕ пуль. Ăçта-ши упасем?»—тет Юман. Куç хупса иличченех ун тавра çăмламас упасем пырса сырăнаççĕ. Юмана пусса вĕлереççĕ.

— Вилчĕ,— теççĕ упасем,— атьăр каяр!— Çапла пĕтĕм тĕнчене кисретсе кулса яраççĕ вĕсем; Юман вилли çех тăлăххăн выртса юлать.

Аякри çĕршывра пурăнакан Юман аслашшĕ чӳрече çинче ларакан курка çине пăхать. Куркари шыв пĕтĕмпе юн пулса тăнă. Хыпаланать, хыпаланать Юман аслашшĕ, витерен урхамахне кăларса утланать те ши-ик шăхăрать. Пĕр куç хупса иличчен вĕсем Юман вилли патне çитсе те тăраççĕ. Юман аслашшĕ Юман айне кĕрсе выртать. Çӳлте, кăвак пĕлĕт çумĕнчех, хура çăхан явăнать. Виле тĕлне çитет те чул пек йывăррăн чуласа анать. Виле çине ларать те чакалама пуçлать. Юман аслашшĕ çăхана пĕр туххăмрах ярса тытать:

— Эсĕ мĕн тума килтĕн кунта, услап, сӳрĕк? Тавай пире вил шывĕпе чĕр шывĕ илсе килсе пар! Тупса килсе памасан, халех мăйна пăрса татăп!—тет Юман аслашшĕ.

Çăхан вĕçсе каять. Пилĕк минутран вил шывĕпе чĕр шывĕ илсе те килет.

Юман çине çав шыва сапаççĕ. Юман сиксе тăрать:

— Фу-у, нумай çывăрнă!—тет вăл анаслаcа.

— Çывăрман эсĕ, вилнĕ пулнă; эпĕр пулман пулсан, пĕтеттĕн,—тет аслашшĕ.

Юман ĕненет. Анчах унăн пăшалĕ çухалман, хăй çумĕнчех. Юмана аслашшĕ вĕрентет:

— Ука патне халех ан кай. Халĕ киле таврăнса, тепĕр хут тĕл пеме вĕрен. Мĕн тĕл пулать куçна — çап та салат,—тет.

Çул çинче Юман пăшал хуçине, шурă старике, тĕл пулать. Лешĕ ăна калать:

— Ухмах, тĕл пулнă тилле, кашкăра, упана вĕлермерĕн! Тепре каяс пулсан, вĕсене тĕл пулсанах, пĕр сăмахсăрах персе вĕлер. Унсăрăн эсĕ Ука патне çитейместĕн. Халĕ килне кай та тĕл пеме вĕрен,—тет.

Юман, иртнĕ вăхăтсем çинчен шутласа, малалла утать вара. Килне çитсен, вăл каллех сунара çӳреме пуçлать. Кашни кунах Мăйпăран тытма хушнă кайăксене тыта-тыта таврăнать.

Пĕрре, шăп кăнтăрла тĕлĕнче, Мăйпăран патне пĕр тарçи пырса кĕрет те юмах калама тытăнать:

— Çав-çав вăрманта пĕр кайăк пур. Çав кайăка никам та тытма пултараймасть. Çав кайăка тытса, чĕрине çатма çинче пĕçерсе çисен, макăракан çын куçĕнчен куççуль мар, тап-таса кĕмĕл тăканать. Çавна Юман тытма пултараймасть-ши?—тет.

Çав вăхăтра Юман хытă сак çинчех кăмăллă тĕлĕк тĕлленсе çывăрнă. Вăл тĕлĕкре çаксене курнă. Ука ăна пăшăрхануллăн çапла калать пек: «Эсĕ пĕлмерĕн, тĕл пулнă чи тискер тăшманусене вĕлермерĕн, çавăнпа та ман пата çитеймерĕн. Халĕ, ун хыççăн, мана пушшех те йывăрлăха пăчăртаса чиксе хучĕç. Эсĕ халĕ те ман пата килме пултаратăн, анчах халĕ санăн виçĕ тимĕр туя туяласа пĕтермелле, виçĕ чугун атă çĕтмелле, виçĕ хурçă йăва çисе ямалла пулать»,—тет пек. Çавăн хыççăнах Юмана Мăйпăран пырса вăратать.

— Вăрманта çăмха пек чăп-чăмăр çутă кайăк пулмалла, ăна тĕнчери чи чаплă сунарçăсем çеç алла лектерме пултараççĕ. Кайса пăх-ха çавăнта. Аллуна лектерсен, чи чаплă сунар-

ҫӑ шутне кӗрӗн,—тет вӑл, лӑх-лӑх-лӑх кулса.

Тепӗр кунхине Юман, чӑнах та, пӑшалне ҫакать те вӑрмана тухса каять. Вӑл кун нимӗнле кайӑк та тытаймасть. Килнелле май таврӑннӑ чух вӑрӑм чӑрӑш тӑрринче ҫӑмха пек ҫутӑ япала йӑлтӑртатса ларнине курать. Юман, вӑл мӗн япалине ӑнкараймасӑрах, пӑшалне кӗрӗслеттерсе ярать. Лапсака чӑрӑш тӑрринчи чӑмӑр ҫавӑнтах ҫӗре персе анать. Пырса пӑхать Юман — кайӑк. Чӑп-чӑмӑр кайӑк, леш, Мӑйпӑран тытма хушса яни.

Юман хӗпӗртесе таврӑнать киле. Кайӑка Мӑйпӑрана парать те хӑй каллех вӑрмана каять.

— Ну, арӑм, татах та пуйӑпӑр, ҫак кайӑкӑн чӗрине пӗҫерсе ҫисен, куҫҫуль вырӑнне таса кӗмӗл тӑкӑнӗ,— тет Мӑйпӑран.

Арӑмӗ, кайӑк чӗрине кӑларса илсе, ҫатма ҫине ӑшаласа хурать. Хӑйсем иккӗш те хӑнана тухса каяҫҫӗ.

Вӑл кунхине Юман хырӑмӗ выҫса ҫитнипе сунартан иртерех таврӑнать. Нимӗн те тытайман, кӑмпа ҫеҫ татнӑ. Килне ҫитнӗ чух килӗнче те никам та пулман. Ҫавах та вӑл пӳрте кӗнӗ. Ҫатма ҫинче пӑсланса ларакан ырӑ шӑршӑллӑ апата курсан, чӑтаймасть — сӗтел хушшине кӗрсе ларать те ҫиет. Калама ҫук тутлӑ апат пулнӑ ҫав кайӑк чӗри. Ҫатма ҫинчи апат вырӑнне Юман кӑмпа хурса хӑварать.

Апат ҫисе тӑрансанах, Юман пӑшалне илет те Ука патне тухса каять.

Ҫапла вара Юман утать-утать, пӗрмаях утать. Акӑ ҫитет вӑл пӗр яла. Малтанах тимӗрҫӗ патне пырать, виҫӗ тимӗр туя, виҫӗ чугун атӑ, виҫӗ хурҫӑ йӑва туса пама ыйтать. Лешӗ:

— Ҫӗр тенкӗ пар,—тет.

Анчах Юманӑн укҫа ҫук. Ҫавӑнпа та ирӗксӗрех малалла каять. Каллех тепӗр яла ҫитет, Ука сӑмахӗсене асран та кӑлармасть. Тимӗрҫӗ патне пырать, хӑйне кирлӗ япаласене туса пама ыйтать. Тимӗрҫӗ каллех ҫӗр тенкӗ ыйтать. Кун хыҫҫӑн вара Юман пӗтӗмпех хуйха ӳкет. Чунӗ кӳтсе ҫитнипе макӑрма пуҫлать. Куҫҫулӗ мар, таса кӗмӗл тӑкӑнать куҫран. Пӗр кӗсье укҫа пулать Юманӑн. Ҫапла вара Юман тепӗр яла пырса кӗрет. Тимӗрҫӗ патне пырса, ӑна ҫӗр тенкӗ кӗмӗл парса, виҫӗ тимӗр туя, виҫӗ мӑшӑр чугун атӑ, виҫӗ хурҫӑ йӑва тутарать те малалла, Ука патне, каять.

Ҫӗр ҫухрӑм ытла утать вӑл — ни тимӗр туйи якалман, ни атти тӗпӗ ҫуталман, ни йӑви катӑлман. Анчах унӑн вӗсене виҫҫӗшне те пӗтермелле вӗт-ха, вара тин Ука патне ҫитме пулать. Анчах мӗнле ҫитмелле?

Чылай кайсан-кайсан, Юман ҫав тиллех тӗл пулать. Юман ӑна тӗллет. Тилӗ: «Ан пер»,—тесе йӑлӑнать, Юман ун сӑмахне итлемест, тӗллесе перетех. Тилӗ вилет те — тимӗр туясем виҫҫӗшӗ те тӗпренсе пӗтеҫҫӗ.

Тата кайсан-кайсан, Юман кашкӑра персе ӳкерет. Кашкӑр вилсенех, виҫӗ мӑшӑр чугун та тӗпренет.

Юлашкинчен Юман ҫӑмламас та мӗшӗлти упана курать. Ӑна вӗлерет те — хурҫӑ йӑвасем тӗпренсе пӗтеҫҫӗ.

Нумай та каймасть вара Юман — пӗр чул ҫурта пырса ҫитет. Кунта Ука пурӑннӑ. Ука, Юмана курсан, ӑна ыталаса илсе чуптӑвать. Иккӗшӗ те хӗпӗртеҫҫӗ.

Нумаях та тӑман Юманпа Ука, чечек пек тумтирсем тӑхӑнса, хӑйсен килне таврӑннӑ. Ҫул ҫинче вӗсене пурте ырӑ сунса ӑсатнӑ, кайӑксем юрӑ юрланӑ.

Юман килне ҫитнӗ ҫӗре пысӑк улшӑну пулнӑ.—Мӑйпӑрана тарҫисем вӗлернӗ. Ҫӗрне — халӑх ҫӗрӗ, ҫурчӗсене — халӑх ҫурчӗсем тунӑ. Пӗтӗм халӑх, пӗртӑван пек килӗшсе, ӑшӑ, ҫемҫе кӑмӑлпа пурӑнать, пурте, тӑшмана ҫӗнтермелли пысӑк хӑватпа хавасланса, юрласа ӗҫлеҫҫӗ. Пӗтӗм хаваслӑ халӑха ертсе пыракан паттӑр Юман пулать, пӗтӗм халӑха савӑнта-

раканни—Ука. Куллен-кун чечеклен-се, илемленсе пырать вӗсен пурнӑҫӗ. Эпӗ вӗсем патӗнче нурӑнатӑп: вӗсен ырлӑхӗпе савӑнатӑп, юрлатӑп, телей куратӑп.

Юмах ятӑм — юптартӑм, пӗр сӑмах та суймарӑм.

## ТУЙ-ТУПАЛАК

Ёлӗк пӗр карчӑкпа пӗр старик пурӑнаҫҫӗ, тет. Вӗсен ача-пӑча пӗртте пулман, тет. Ҫавӑнпала ҫак ватӑсем питӗ кулянна. Вӗсен епле те пулсан ачаллӑ пуласси килнӗ.

Пӗрре, ыран тунти* пасар тенӗ чух, карчӑк пӑрҫа нимри пӗҫерчӗ те старикне тепӗр кунне ӑна сутма пасара ячӗ. Старик, тавлашсан-тавлашсан, нимӗре пилӗк пуса сутрӗ те киле таврӑнать. Ҫул ҫинче ӑна хирӗҫ пӗр ҫын качака ҫавӑтна та пасаралла пырать. Старик качака хуҫине калать:

— Сут мана ку качакана!—тет.

— Сутатӑп, мӗн чул паратӑн?—тет качака хуҫи.

— Пилӗк пус паратӑп,—тет старик.

Качака сутакан пилӗк пус укҫана илчӗ те качакана старике тыттарчӗ. Таврӑнать ку качака ҫавӑтса килелле.

Пырать, пырать, пырать. Ӑна хирӗҫ тепӗр ҫын ӗне ҫавӑтса пырать. Ӗне хуҫи старике калать:

— Тавай качакапа ӗне улӑштарар!—тет.

— Улӑштарар,—тет старик.

Улӑштарчӗҫ: ӗне хуҫи старике ӗне пачӗ, старик ӗне хуҫине качака пачӗ. Пырать ӗне ҫавӑтса старик килелле.

Пырсан-пырсан, каллех тепӗр ҫын тӗл пулать. Ку ҫын старике хирӗҫ ут ҫавӑтса пырать. Ут хуҫи калать:

— Тавай ӗнепе лаша улӑштарар!—тет.

— Улӑштарар!—тет старик.

Улӑштарчӗҫ. Пырать старик лаша ҫавӑтса килелле. Хӑйсен ялне ҫитерехпе тӑвайкки ҫинелле старике хирӗҫ икӗ туяллӑ суккӑр такӑлтатса хӑпарать. Старик лашапа хирӗҫ килнине сисрӗ те суккӑр калать:

— Тавай, старик, лашапа туя улӑштарар!—тет.

— Ма улӑштарас мар, улӑштарар!—тет.

Улӑштарчӗҫ. Суккӑр лаша ҫине утланчӗ те ту ҫинелле хӑпарса кайрӗ. Старик икӗ туяна икӗ хул хушшине хупрӗ те хӗпӗртесе ту айнелле такӑлтаттарса анать.

— Э-э-э, ку туясемпе ҫӳреме пит аван-иҫ!—тет старик.

Киле ҫитсен, старик туйисене пӳртум ҫумне тӑратрӗ те пӳрте кӗчӗ. Карчӑкӗ ыйтать:

— Старик, нимӗре мӗн чула сутрӑн?—тет.

Старикӗ:

— Пилӗк пуса сутрӑм!—тет.

— Укҫи ӑҫта?—тет карчӑкӗ.

— Качакапала улӑштартӑм!— тет старик.

— Качаки ӑҫта?—тет карчӑкӗ.

— Ӗнепеле улӑштартӑм,—тет старик.

— Ӗни ӑҫта?— тет карчӑк.

— Лашапала улӑштартӑм,— тет старик.

— Лаши ӑҫта?—тет карчӑк.

— Пӗр суккӑрпа туяпала улӑштартӑмӑр,—тет старик.

— Туйи ӑҫта?—тет карчӑкӗ каллех.

— Пӳртум ҫумне тӑратрӑм,—тет старик.

— Илсе кӗр-ха пӳрте туюна,—тет карчӑк.

Старик тухрӗ те туйисене пӳртум ҫумӗнчен пӳрте илсе кӗчӗ. Карчӑк туясене илчӗ те тапратрӗ старике хӗнеме.

— Ак сана туяпа лаша! Ак сана туяпа лаша!—тет.

* Тунтикун.

Хĕртрĕ-хĕртрĕ те — туясем татăкăн-татăкăн ванса пĕтрĕç. Макăра-макăра старик туя ванчăкĕсене пĕр миххе пухрĕ те кĕлете каштана кайса çакрĕ. Каç пулчĕ, ватăсем выртса çывăрчĕç.

Тепĕр кунне ирхине старик тула тухрĕ те ача сасси илтех кайрĕ. Старик итлет-итлет те, ача сасси тем кĕлетрен илтĕннĕ пек туйăнать. Старик кĕлет уçса кĕрет. Пăхать — ĕнер çакса хунă михĕ силленсе тăрать, ун ăшĕнче ача çарилеттерсе кăшкăрать. Çĕр каçиччен туя шанкисенчен ача пулса тăнă иккен.

— Карчăк, карчăк! Пирĕн кĕлетре ача пур! — кăшкăрать савăннипе старик.

Карчăкĕ те тухать те пăхать, чăнах та, кĕлетре ача пур. Ватăсем ачана михĕрен кăлараççĕ те пÿрте илсе кĕреççĕ. Ачи — ывăл. Савăннипе иккĕшĕ нимĕн тума пĕлмеççĕ. Карчăк старикне туясем тупса килнĕшĕн тав тăвать, старикки карчăкне хĕртсе туясене шанкăланăшăн тав тăвать. Ватăсем ачана туяран пулнăран Туй-Тупалак тесе ят пачĕç.

Туй-Тупалак мĕн ÿснĕçемĕн маттурланса пырать. Чупакан пула пуçласан, урама ачасемпе выляма çÿрет. Анчах пĕртте ытти ачасем еверлĕ мар вăл: Туй-Тупалак питĕ вăйлă, питĕ харсăр. Юлташĕсемпе хăйпе тантăшшисемпе, хăйĕнчен аслисемпе — пуринпе те кĕрешет, пуринпе те çапăçать: хăшĕнне урине ыраттарать, хăшĕнне аллине мăкăлтать, хăшĕнне янахне пăра-пăра лартать. Туй-Тупалакпа çыхланма пурте хăраççĕ. Çич-сакăр çулхи Туй-Тупалака вунçич-вунсакăр çулхи ачасем нимĕн ыраннe те мар. Туй-Тупалак кунĕн-çĕрĕн ÿссе паттăрланса пырать. Унпала вăйпа танлашма пултаракан, ăна çĕнекен ялта та çук, таврара та çук. Туй-Тупалак — тĕнчере çук паттăр.

Вăтăр çула çитсессĕн, Туй-Тупалак вăтăр пăт туртакан хĕç, вăтăр пăт туртакан пăшал, вăтăр пăт сухари илчĕ те кайăка тухса кайрĕ. Пырать, пырать, пырать. Çул çинче хĕвел ывăлĕ Хĕветке тĕл пулать.

— Ăçта каян, Туй-Тупалак пичче? — тет Хĕветке.

— Кайăка каятăп, — тет Туй-Тупалак.

— Мана та илсе кайччĕ, — тет Хĕветке.

— Çак сухарие йăт, вара илсе кайăп, — тет Туй-Тупалак.

Хĕветке сухарие йăтрĕ те пырать текмекленсе. Пырсан-пырсан, Хĕветке калать:

— Туй-Тупалак пичче, ывăнтăм, пăртак ларса канар-ха, — тет.

Туй-Тупалак:

— Ларса кантарăп сана! Хĕçпе касса пăрахăп! — тет.

Хĕвел ывăлĕ Хĕветкен хăранипе ывăнни те таçта кайса кĕчĕ. Пыраççĕ текмекленсе.

Кайсан-кайсан, вĕсене уйăх ывăлĕ Уйăп тĕл пулать.

— Ăçта каятăр капла эсир, Туй-Тупалак пичче? — тет Уйăп.

— Кайăка каятпăр, — тет Туй-Тупалак.

— Мана пĕрле илсе кайччĕ, Туй-Тупалак пичче, — тет Уйăп.

— Çак пăшала йăт, вара илсе кайăп, — тет Туй-Тупалак.

Уйăп пăшала йăтрĕ те текмекленсе пырать. Кайсан-кайсан:

— Туй-Тупалак пичче, ывăнтăм, пăртак ларса канар-ха, — тет вăл.

— Ан шарла: хĕçпе касса пăрахăп! — тет Туй-Тупалак.

Уйăх ывăлĕ Уйăп хăранипе шăпах пулчĕ. Пыраççĕ текмекленсе.

Пырсан-пырсан, кусене упа ывăлĕ Утаман тĕл пулать. Упа ывăлĕ Утаман калать:

— Ăçта каятăр, Туй-Тупалак пичче? — тет.

— Кайăка каятпăр, — тет Туй-Тупалак.

— Мана та илсе кайăрччĕ,—тет Утаман.

— Ак çак хĕçе йăт, вара илсе кайăп,—тет Туй-Тупалак.

Упа ывăлĕ хĕçе йăтрĕ те пырать текмекленсе. Пырсан-пырсан:

— Туй-Тупалак пичче, ывăнтăм, пăртак ларса канар-ха,—тет упа ывăлĕ Утаман.

— Ан шарла! Хĕçне туртса илсе, пĕрре çех касса пăрахăп,—тет Туй-Тупалак.

Упа ывăлĕ шăпах пулчĕ. Пыраççĕ текмекленсе.

Кайсан-кайсан, пĕр сĕм вăрмана çитсе кĕчĕç. Шутларĕç-шутларĕç те тытăнчĕç йывăç касса пӳрт пурама. Пуртă вырăнне вĕсем хĕçпе ĕçлеççĕ. Пĕр эрне хушшинче пӳрт хатĕр туса лартрĕç.

Пурнаççĕ çак пӳртре. Сухари пĕтсе çите пуçларĕ кусен. Канашларĕç те кайăка каймалла шут турĕç. Тавлашрĕç-тавлашрĕç те тепĕр кунне тухса каймалла калаçса татăлчĕç, хĕвел ывăлĕ Хĕветкене апат пĕçерме киле хăварма йышăнчĕç.

Ир çинче виççĕшĕ — Туй-Тупалак, уйăх ывăлĕ Уйăп, упа ывăлĕ Утаман — кайăка тухса кайрĕç. Хĕветке килте апат лакăртаттарма тапратрĕ. Апат пиçсе çитсе антарса лартас тенĕ чух килкарти алăкĕ умне чике тăршшĕ старик, шап-шурă лаша утланнă, килсе тăчĕ.

— Хуçи пур-и?—тет чике тăршшĕ старик.

— Пур!—тет хĕвел ывăлĕ Хĕветке.

— Йăтса антар, йăтса кĕрт!—тет чике тăршшĕ старик.

— Ху та кĕрĕн!—тет Хĕветке.

— Атту çисе ярап!—тет чике тăршшĕ старик.

Хĕветке хăпăл-хапăл чупса тухрĕ те чике тăршшĕ старике йăтса кĕртрĕ, тĕпелти сак çине лартрĕ. Чике тăршшĕ старик вучахра апат хуранĕ вĕресе тăнине курчĕ те ыйтать:

— Вучахра санăн мĕн лакăртатса тăрать вăл?—тет.

— Яшка,—тет Хĕветке.

— Антарса пар мана, атту çисе ярап!—тет чике тăршшĕ старик.

Хĕветке яшкана антарса пачĕ те, чике тăршшĕ старик ăна йăлт çисе ячĕ. Хĕветке чике тăршшĕ старике йăтса кăларса ярать те, хăпăл-хапăл хуран çуса, çĕнĕрен апат çакса ярать. Кĕç, вĕренĕ-вĕремен, Туй-Тупалаксем килсе çитрĕç. Туй-Тупалак ятлаçать:

— Мĕн туса пурăнтăн ку таранччен апат пĕçереймесĕр?!—тет. Ятларĕ-ятларĕ те, апат çисе каç пулсан, выртса çыврăчĕç. Хĕветке чике тăршшĕ старик çинчен шăп.

Тепĕр кунне ир тăчĕç те каллех кайăка тухса кайрĕç, киле уйăх ывăлĕ Уйăпа хăварчĕç. Апат пиçсе çитсен, хай чике тăршшĕ старик, шапшурă лаша çине утланнă, каллех килкарти алăкĕ умне килсе тăчĕ.

— Хуçи пур-и?—тет старик.

— Пур!—тет уйăх ывăлĕ Уйăп.

— Йăтса антар, йăтса кĕрт!—тет чике тăршшĕ старик.

— Ху та кĕрĕн!—тет Уйăп.

— Атту çисе ярап!—тет старик.

Уйăп хăпăл-хапăл чупса тухрĕ те чике тăршшĕ старике, йăтса антарса, йăтса кĕртсе, тĕпелти сак çине лартрĕ. Вучахра хуран вĕресе тăнине курчĕ те чике тăршшĕ старик ыйтать:

— Вучахра санăн мĕн вĕресе тăрать вăл?—тет.

— Яшка!—тет Уйăп.

— Антарса пар мана, атту çисе ярап!—тет старик.

Уйăп яшкана антарса пачĕ те, старик ăна йăлт çисе ячĕ. Чике тăршшĕ старике ăсатса ярать те Уйăп, хăпăл-хапăл хуран чӳхесе çĕнĕрен яшка çакса ярать. Яшка вĕренĕ-вĕремен Туй-Тупалаксем персе çитрĕç. Туй-Тупалак каллех ятлаçать.

— Ку таранччен, апат пĕçереймесĕр, мĕн туса пурăнтăн?!—тет.

Апат çирĕç те, каç пулсан, выртса çывăрчĕç. Уйăп чике тăршшĕ старик çинчен шăп.

Ир тăчĕç те каллех кайăка тухса кайрĕç, киле упа ывăлĕ Утамана хăварчĕç. Апат антарса лартас вăхăта килкарти алăкĕ умне шап-шурă лаша çине утланнă чике тăршшĕ старик килсе тăчĕ.

— Хуçи пур-и?—тет.

— Пур!—тет Утаман.

— Йăтса антар, йăтса кĕрт!—тет старик.

— Ху та кĕрĕн!—тет Утаман.

— Атту çисе ярап!—тет чике тăршшĕ старик.

Утаман тухрĕ те, йăтса антарса, пӳрте йăтса кĕртсе, малти сак çине лартрĕ. Вучахра апат вĕресе тăнине курчĕ те чике тăршшĕ старик ыйтать:

— Вучахра санăн мĕн вĕресе тăрать?—тет.

— Яшка!—тет Утаман.

— Антарса пар ăна мана, атту çисе ярап!—тет старик.

Утаман яшкана антарса пачĕ те, чике тăршшĕ старик йăлт çисе ячĕ. Старике ăсатса ярать те Утаман, хăпăл-хапăл хуран чӳхесе, яшка çакса ярать. Вĕренĕ-вĕремен Туй-Тупалаксем персе çитрĕç. Туй-Тупалак татах ятлаçать.

— Апат пĕçерейместĕр, ку таранччен мĕн туса пурăнтăн?!—тет.

Апат çирĕç те, каç пулсан, выртса çывăрчĕç. Утаман чике тăршшĕ старик çинчен шăп.

Тепĕр кунне Туй-Тупалак киле хăй юлчĕ. Лешсем кайăка хăйсем ăсĕнех тухса кайрĕç. Туй-Тупалак апат çакса ячĕ те пĕçерсе ларать. Вучахран антарса лартас вăхăтра килкарти алăкĕ умне чике тăршшĕ старик килсе тăчĕ, хăй шап-шурă лаша çине утланнă.

— Хуçи пур-и?—тет чике тăршшĕ старик.

— Пур!—тет Туй-Тупалак.

— Йăтса антар, йăтса кĕрт!—тет старик.

— Ху та кĕрĕн!— тет Туй-Тупалак.

— Атту çисе ярап!—тет старик.

— Ху та кĕрĕн!— тет Туй-Тупалак.

Эй, хай чике тăршшĕ старик çилленчĕ те Туй-Тупалак патне пӳрте çĕмĕрĕлсе чупса кĕчĕ. Туй-Тупалака тытрĕ те тапратрĕ унпа кĕрешме, ăна кăшлама. Туй-Тупалак чике тăршшĕ старике тытрĕ те çавăрчĕ çапрĕ, çавăрчĕ çапрĕ. Унтан тула илсе тухрĕ те, туратлă юмана варринчен çурса, старике сухаллинчен юман çурăкне хĕстерсе хучĕ.

Хĕветке, Уйăп, Утаман, кайăк тытса, часах киле таврăнчĕç.

— Паян эпĕ пĕр кайăк тытрăм! Акă сире кам вупкăнласа тăнă! Атьăр-ха сире кăтартам,—тет Туй-Тупалак хăй юлташĕсене.

Юман кутне çитрĕç. Пăхаççĕ—чике тăршшĕ старик çук. Юман çурăкĕнче пĕр юнлă сухал анчах çакăнса тăрать. Чике тăршшĕ старик сухалне янах тирĕпе сӳсе хăварса анса тарнă, хыçалтан юн юхса йĕр туса пынă. Çак йĕр тăрăх Туй-Тупалаксем кайрĕçĕ йĕрлесе.

Кайсан-кайсан, юнлă йĕр пĕр шăтăка пырса кĕнĕ. Туй-Тупалак шăтăка выртса пăхрĕ те — шăтăкăн тĕпĕ йĕрĕ те курăнмасть. Шăтăк аялти çанталăка анса каять. Халĕ ĕнтĕ кусем аялти çанталăка анма шут турĕç. Вĕрен яврĕç-яврĕç те шăтăка вĕрен тăрăх хĕвел ывăлĕ Хĕветкене антарса ячĕç.

— Вĕрен кĕске пулсан, кăрт-карт турт!—терĕ Туй-Тупалак Хĕветкене.

Хĕветке пĕр пӳртумне анса тăчĕ. Пӳртумĕнче сак çинче чике тăршшĕ старик чĕп-чĕр юн ахлатса выртать:

— Ах, ах, ку Туй-Тупалак пуçне хăçан та пулсан çийĕп-çийĕпех! Ах, ку Туй-Тупалак пуçне çийĕп-çийĕпех!—тет.

Хĕветкен хăранипе çӳçпуç пĕтĕмпе тăрса кайрĕ. Вĕрене кăрт-карт туртрĕ. Кĕç Хĕветкене туртса хăпартрĕç.

Вĕрен яврĕç-яврĕç те уйăх ывăлĕ Уйăпа антарса ячĕç.

— Вĕрен кĕске пулсан, кăрт-карт турт!—терĕ Туй-Тупалак.

Уйăх ывăлĕ Уйăп анса кайрĕ. Пӳртумĕнче чике тăршшĕ старик чĕп-чĕр юн ахлатса выртать:

— Ах, ах, ку Туй-Тупалак пуçне хăçан та пулсан çиййĕп-çиййĕпех! Ах, ку Туй-Тупалак пуçне çиййĕп-çиййĕпех!—тет.

Уйăп хăранипе вĕрене кăрт-карт туртрĕ. Ăна пĕр самантрах туртса хăпартрĕç.

Татах вĕрен яврĕç-яврĕç. Упа ывăлĕ Утамана антарса ярас — шăтăка кĕреймест. Вара Туй-Тупалак хăй анма шут турĕ.

— Ну,—терĕ юлташĕсене Туй-Тупалак,—мана çак шăтăк кутĕнче виçĕ çулччен кĕтĕр, виçĕ çултан та тухаймасассăн — ан кĕтĕр!—терĕ те, вĕрен вĕçĕнчен тытса, шăтăка анса кайрĕ.

Туй-Тупалак пĕр пӳртумне анса тăчĕ. Сак çинче чĕп-чĕр юн чике тăршшĕ старик ахлатса выртать:

— Ах, ах, ку Туй-Тупалак пуçне хăçан та пулсан çиййĕп-çиййĕпех! Ах, ку Туй-Тупалак пуçне çиййĕп-çиййĕпех!—тет.

— Э-э-э, эсĕ кунта-и!—терĕ Туй-Тупалак.

Чике тăршшĕ старик сикрĕ тăчĕ выранĕ çинчен:

— А-а-а, эсĕ-и?—тет.

Тапратрĕç кĕрешме, тапратрĕç вăрçма. Хăйăлтатса, çĕмĕрĕлсе пӳрте кĕрсе кайрĕç. Туй-Тупалак çĕнсе пăрахать. Чике тăршшĕ старик çĕнсе пăрахать. Туй-Тупалак çĕнсе пăрахать. Анчах Туй-Тупалак вăйлăрах: чике тăршшĕ старике ава-ава хашăлтататакан турĕ. Чике тăршшĕ старик ывăнса çите пуçларĕ. Вăл пӳртумне чупса тухать те темĕнскерле эмел ĕçсе вăйлăланса кĕрет. Каллех Туй-Тупалакпа вăрçма тытăнать. Туй-Тупалака паранми пула пуçлать. Татах чупса тухать те татах ĕçсе кĕрет. Кунта Туй-Тупалака аманта пуçлать. Мĕн тăвас?

Пӳртре чике тăршшĕ старикĕн виçĕ хĕрĕ ларассĕ. Туй-Тупалак хĕрсем енне çаврăнчĕ те хаяррăн каларĕ:

— Калатăр-тăк калăр! Сирĕн аçу мĕн ĕçсе вăйлăланса кĕрет? Каламастăр-тăк халех хĕçпе касса ваклатăп сире!—терĕ.

Хĕрсем хăрарĕç те каласçĕ:

— Пирĕн аттен пӳртумĕнче икĕ енче икĕ чăлан пур. Çав чăлансенче икĕ тулли пичке ларассĕ. Сылтăм енчи чăланти пичкере — чĕрĕ шыв, сулахай енчи чăланти пичкере — вилĕ шыв. Пирĕн атте сылтăм енчи пичкерен туха-туха ĕçет вăл. Эсĕ çав пичкесене тухса улăштарса ларт,—теççĕ.

Туй-Тупалак тухрĕ те пичкесене улăштарса лартрĕ: сылтăм енчине сулахай енне, сулахай енчине сылтăм енне. Халĕ чике тăршшĕ старик чупса тухать те сылтăм енчи пичкери шыва ĕçсе вăйсăрланса кĕрет. Туй-Тупалак чупса тухать те сулахай енчи пичкери шыва ĕçсе вăйлăланса кĕрет. Кĕрешме тапратаççĕ те — старик парăна пуçлать. Татах чупса тухаççĕ те — пĕри вăйне пĕтерсе, теппри вăй хывса кĕреççĕ. Юлашкинчен чике тăршшĕ старик лăчă-лăчă аманса çитрĕ. Вара ăна Туй-Тупалак çавăрчĕ çапрĕ, çавăрчĕ çапрĕ те вĕлерчĕ. Виллине вутпа çунтарса, кĕлне çилпе вĕçтерсе ячĕ.

Халĕ ĕнтĕ Туй-Тупалак çӳлти çанталăка хăпарас тет. Чике тăршшĕ старикĕн хĕрĕсем питĕ хитре пулнă. Туй-Тупалак çавăнпала ытараймарĕ: виççĕшне те хăйпеле пĕрле çӳлти çанталăка илсе хăпарма шутларĕ. Вĕсене вăл хăй умĕн пĕрерĕн-пĕрерĕн вĕренпеле хăпартса ячĕ. Хĕрсем хăпарса пĕтрĕçĕ, Туй-Тупалакăн анчах хăпармалли юлчĕ. Вĕрентен тытрĕ те хă-

парать. Кĕç, çур çул хăпарса çитсен, лешсем вĕрене касрĕç ячĕç. Туй-Тупалак вĕренпеле пĕрле каялла хантăртаттарса анса кайрĕ.

Çапла Туй-Тупалак аялти çанталăкрах тăрса юлчĕ. Каять, каять, каять аялти çанталăкпа. Вут çутине хирĕç кайса, Туй-Тупалак пĕр пӳрте çитсе кĕчĕ. Çакă пӳртре пĕр карчăк сурчăкпа чуста çăрать.

— Кинемей, ма капла чустана сурчăкпа çăратăн?—тесе ыйтать Туй-Тупалак.

— Эх, çыннăм!—тет карчăк, хуйхăрса,—пирĕн çăлта çĕлен. Этемсене ĕнтĕ хĕрĕх çул шыв памасăр пурăнать. Мĕн шыв ăсма пыракана çисе тăрать,—тет.

Туй-Тупалак карчăкăн витрине илчĕ те кайрĕ çăл кутне шыв ăсма. Çĕлен катаранах:

— Кам çав?—тет.

— Хăналăха!—тет Туй-Тупалак.

Çĕлен хăналăха ăсма чармарĕ. Туй-Тупалак пĕр витре шыв ăсрĕ те карчăк пӳртне тавăрăнчĕ. Витре шыв нимĕн тĕшне те пулмарĕ: çур витрипе кункăра чӳхерĕç, çур витрине карчăк, шыв курманскер, хăех ĕçсе ячĕ. Пашалу çăрма каллех шыв кирлĕ пулчĕ. Тепре кайрĕ Туй-Тупалак шыв ăсма. Çĕлен:

— Кам çав?—тет.

— Хăналăха!—тет Туй-Тупалак.

Çĕлен каллех хăналăха шыв парса ячĕ. Ку витре шыв чуста çăрма анчах çитрĕ. Яшка пĕçерме шыв кирлĕ пулчĕ. Туй-Тупалак татах кайрĕ çĕлен патне шыв ăсма. Çĕлен:

— Кам çав?—тет.

— Хăналăха!—тет Туй-Тупалак.

Çĕлен виççĕмĕш хут шыв парса ячĕ. Татах шыв çитмерĕ — пашалупа яшка çисен ĕçме кирлĕ. Тăваттăмĕш хут Туй-Тупалак шыв ăсма кайрĕ. Çĕлен:

— Кам çав?—тет.

— Хăналăха!—тет Туй-Тупалак.

— Хăналăха та хăналăха-а! Хăналăха та хăналăха-а!—тесе, çĕлен явăнса туха пуçларĕ.

Туй-Тупалак хĕçне туртса кăларчĕ те çĕлене касрĕ вакларĕ, касрĕ вакларĕ. Çĕлен ăшĕнчен темĕн чухлĕ халăх йăтăнса тухрĕ. Пурте Туй-Тупалака тавтапуç та тавтапуç, мĕн кирлĕ те мĕн кирлĕ теççĕ. Туй-Тупалак:

— Мана ытти нимĕн те кирлĕ мар, манăн çӳлти çанталăка анчах тем пек хăпарасчĕ!—тесе калать ку çынсене.

Вилĕмрен хăтăлнă çынсем калаççĕ:

— Пирĕн вăрманта пĕр юман хăвăлĕнче ăмăрткайăк пурăнать. Çав çӳлти çанталăка хăпартĕччĕ!—теççĕ.

Туй-Тупалак кайрĕ ăмăрткайăк патне. Юман хăвăлĕнче ăмăрткайăкăн виçĕ чĕпĕ пулнă. Çак чĕпĕсене çиме часах виçĕ çĕлен килмелле. Çавăнпа ăмăрткайăк чĕпписем пит хуйхăрса ларнă. Вĕсен амăшĕ çӳлте вĕçсе çӳренĕ.

Кĕç пĕр чĕппине çиме виçĕ пуçлă çĕлен кашласа килчĕ. Туй-Тупалак хĕçне туртса кăларчĕ те касрĕ вакларĕ, касрĕ вакларĕ çĕлене. Пĕр чĕппине вилĕмрен хăтарчĕ.

Унтан тепĕр чĕппине çиме улта пуçлă çĕлен кашласа килчĕ. Туй-Тупалак хĕçĕпе пĕрре касрĕ те çĕленĕн виçĕ пуçне касса татрĕ, тепре касрĕ те икĕ пуçне касса татрĕ тата тепре касрĕ те çĕлене тирпейлерĕ — иккĕмĕш чĕппине вилĕмрен хăтарчĕ.

Тата юлашки чĕппине хăтармалла. Куна çиме тăхăр пуçлă çĕлен килмелле. Тăхăр пуçлă çĕлен кĕс кашласа çитрĕ. Эй, çырлах! Туй-Тупалакпа çĕлен тапратрĕç вăрçма. Туй-Тупалак пĕрре касрĕ те çĕленĕн виçĕ пуçне касса татрĕ. Çĕлен çилленсе çитрĕ те Туй-Тупалака çапрĕ пĕрре хӳрипе — Туй-Тупалак чутах кайса ӳкмерĕ. Туй-Тупалак тепре хĕçне сулса ячĕ те татах виçĕ пуç касса татрĕ. Çĕлен аманчĕ. Туй-Тупалак тата касрĕ, тата касрĕ те, çĕлен тӳпех персе анчĕ. Туй-Тупалак ăмăрт-

кайӑкӑн виççӗмӗш чӗппине те вилӗмрен хӑтарчӗ.

Унтан ӑмӑрткайӑк чӗпписем Туй-Тупалака тав турӗç те амӑшӗ килсе пӗлмесӗр касса пӑрахасран каскасем хушшине пытарчӗç. Кӗç ӑмӑрткайӑк çӳлтен кашласа анчӗ.

— Тьху-у! Этем ывӑль-хӗр шӑрши кӗрет!—тет ӑмӑрткайӑк.

Чӗпписем калаççӗ:

— Анне, ӑна эсӗ нимӗн те усал ан ту: вӑл пире çӗленсенчен хӑтарчӗ!—теççӗ.

Амӑшӗ хӗпӗртесе:

— Ăçта вӑл, сире çӑлакан, ӑçта вӑл?—тет.

Туй-Тупалак, çак сӑмахсене илтсен, пытанса выртнӑ çӗртен тухрӗ. Ӑмӑрткайӑк савӑннипе ниçта кайса кӗреймест:

— Мӗн кирлӗ те, мӗн кирлӗ?—тесе ыйтать.

Туй-Тупалак калать:

— Мана ытти нимӗн те кирлӗ мар, çӳлти çанталӑка анчах тем пек хӑпарасчӗ!—тет.

Ӑмӑрткайӑк Туй-Тупалака çӳлти çанталӑка илсе хӑпарма тӳрех килӗшрӗ. Туй-Тупалака тав туса, çӳлти çанталӑка хӑпарма хӗрӗх ӗне ашӗ, хӗрӗх пичке шыв хатӗрлесе пачӗç. Çаксене пурне те ӑмӑрткайӑк çине тиерӗç. Вара Туй-Тупалак ӑмӑрткайӑк çине утланса ларчӗ те, çӳлти çанталӑка кашласа хӑпарса кайрӗç.

Çӳлти çанталӑка çитерехпе кусен аш пӗтсе çитрӗ. Туй-Тупалак хӗçне кӑларчӗ те ӑмӑрткайӑка хӑйӗн тачка пӗççинчен пӗр пайӑрка аш касса пачӗ. Ӑмӑрткайӑк шӑршласа пӑхрӗ те ыйтать:

— Епле аш тупса патӑн мана эсӗ?—тет.

Туй-Тупалак:

— Юлашки ӗне ашӗн татӑкне патӑм сана,—тет.

— Çук, ӗне ашне мар, хӑвӑн ӳтне касса патӑн мана эсӗ!—тет ӑмӑрткайӑк. Унтан:—Манӑн ачасем те шалккӑ та, эсӗ те шалккӑ,—терӗ те ӳт татӑкне Туй-Тупалак пӗççи çумне çунаттипе шӑлса çыпӑçтарса лартрӗ.

Часах çӳлти çанталӑка та çитсе тухрӗç. Туй-Тупалак ӑмӑрткайӑка тав турӗ те, ӑмӑрткайӑк каялла кашласа анса кайрӗ. Туй-Тупалак, савӑнса-хӗпӗртесе, хӑй тунӑ вӑрманти çурта таврӑнчӗ. Халӗ те пулсан Туй-Тупалак çавӑнта пурӑнать.

## КӖРНЕК КАЙӐК

Ӗлӗкех пӗр чӑвашпа арӑмӗ пурӑннӑ. Вӗсен виçӗ ывӑл пулнӑ. Виçӗ ывӑлтан чӑн кӗçӗнни кукша пулнӑ. Çав кукша Иван ятлӑ пулнӑ.

Çак чӑваш вилме патне çитнӗ. Вилес умӗн вӑл хӑйӗн ывӑлӗсене, хӑй вилсен, унӑн çине тӑварлӑ юпа лартма хушса хӑварнӑ. Ывӑлӗсем, чӑнах та, ашшӗ вилсен, унӑн тӑпри çине тӑварлӑ юпа лартаççӗ.

Ашшӗ вилсен, кулянкаларӗç вӗсем, анчах ним тума та çук. Вӑхӑт çапла шӑватех. Ашшӗ тӑприне кайкаласа пӑхаççӗ кусем. Теплерен кусем ашшӗ çинчи тӑварлӑ юпа пӗчӗклене пуçланине курнӑ. Мӗн тӑвас? Мӗн те пулин çиет пулмалла тӑварлӑ юпана. Тавай сыхлас, теççӗ. Кашни çӗр аслинчен пуçласа черетрен каяс, теççӗ.

Малтанхи çӗрле аслӑ ывӑлӗ каять. Ашшӗ тӑпри патне çитет те ларать ку, çӑлтӑрсем шутлакаласа. Çур çӗр иртсен, ыйхӑ киле пуçлать хайхин. Тул çути килеспе сисмест те — çыврах каять. Ку çывӑрса кайсанах, шурӑмпуç енчен пӗр кайӑк вӗççе килет те тӑварлӑ юпана тӑраниччен çуллать. Хай пирӗн хуралçӑ тӑрать — тӑварлӑ юпана çисе та кайнӑ, юпа каллех пӗчӗкленсе юлнӑ. Ним тума та çук—тытаймарӗ.

Пуçне чикет те, мӗскӗн, утать килелле.

— Ну, тытрӑн-и вӑрра?—теççӗ куна.

— Çу-ук,—тет пирĕн хуралçă.
— Эх, çавна та тытаймаççĕ,—тет кукша Иван.
— Санран пулать-и тата!—тесе, хăрр хăтăрса пăрахаççĕ кукшана.
Тепĕр çĕрĕнче вăталăххи каять. Хăйпе пĕрле пĕр чĕлĕ çăкăр чиксе каять. Ашшĕ тăпри патне çитет те выртать. Пăртак тăрсан, çăкăр кăшлакаласа юрлакалать, çăлтăрсем шутлать. Хăй те сисмест — тул çути палăраспа ку та çывăрах каять. Вăл çывăрнă вăхăтра хай кайăк каллех юпана пырса çулласа каять. Пирĕн хуралçă вăраннă çĕре тул ярах çутăлса кайнă. Нимсĕрех каймалла пулчĕ киле.
— Пичче, вăрра тытрăн-и?—тет кукша пиччĕшне.
— Ан кăшкăрса тăр, кукша-а! Хăв кай-ха, хăв тытайăн-и!—тесе хăтăрса пăрахать кукшана вăталăх пиччĕшĕ.
Тепĕр кунхине кукшан черет çитет. Ним шухăшламасăр-тумасăр тухать те утать ашшĕ тăпри патне пирĕн кукша.
— Эй, кукша,—тесе кулса юлчĕçĕ пиччĕшсем кукшаран.
Кукша ашшĕ вилтăпри патне çитет те выртса çыврать ним шухăшсăр. Çур çĕр çитсен, ыйхинчен тăранса та тăчĕ пирĕн кукша. Пуçне пĕр иккĕвиççĕ катăртаттарса илчĕ те ашшĕ вилтăпри хыçне йăпшăнса пытанса выртрĕ.
Шурăмпуçĕ палăра пуçласан, хĕвелтухăç енчен хайхи кайăк лапсăртаттарса вĕçсе çитет. Тăварлă юпа çине ларса пĕр хăрамасăр пуçларĕ юпана çуллама. Кукша вăрттăн йăпшăнса пырать те кап ярса тытать кайăка хӳринчен. Кайăк нимпе те вĕçерĕнсе каяймарĕ.
— А, эс-и-ха кашни кас тăварлă юпана çуллама килекенни!—тет кукша, кайăка хытă чăмăртаса.
— Эх, кукша тус, тархасшăн, яр мана ирĕке,—тет кайăк.—Эпĕ аякран, хĕвелтухăçĕ енчен, вĕçсе килетĕп кашни çĕр. Манăн унта юратнă чĕппĕмсем пур, çавсене вара кам пăхса ӳстерĕ, тархасшăн, яр мана, эпĕ сана уншăн ахаль тумастăп,—тет кайăк.— Эпĕ сана икĕ çунатран икшер тĕк, хӳререн икĕ тĕк çăлса парса хăваратăп. Сана хăçан мĕн кирлĕ пулать, пĕр тĕкне çунтаран, вара мĕн ыйтни пурте çав вăхăтрах ху умăнта пулĕ,—тет.
Кукша шухăшлать: «Эх,—тет,—мана та никам та хĕрхенекен çук, çапах çак кайăк хĕрхенет-ха,—тет,—ярасах пуль»,—тет.
Кайăк кукшана ултă тĕк çăлса парать. Вара кукша кайăка вĕçертсе ярать.
— Мана кĕрнĕк кайăк тесе калаççĕ,—тет те кайăк, хĕвелтухăçĕ еннелле çиçĕм çиçнĕ пек ялкăшса вĕçсе кайса, куçран çухалать. Кукша ун илемне пăхса савăнса юлать. Унтан кĕрнĕк кайăк çăлса панă тĕксене хĕвне пуçтарса чикет те вĕçтере парать килелле, нимĕскер те курман-илтмен пек. Пиччĕшсем кукша нимсĕр таврăннине кураççĕ те:
— Эх, айван кукша, санран пулать-и вара тытасси, эс те вăрă тытас пулсан, кукша та пулса ӳсместĕн, килтех пуçна кăтăртаттарса выртас пулатчĕ!—тесе вăрçса пăрахаççĕ.
Кукша, хăй ăшĕнче кула-кула, пăрçа ани çине пăрçа сыхлама уттарчĕ.
Пурнăç ерипенех шăвать. Пирĕн чăвашăн пумилккине ирттерме вăхăт çитет. Анчах кусем питĕ начар пурăннă. Пумилкке ирттерсе яма нимĕскер юр-вар та пулман. Çавăнпа, пумилкке тума вăхăт çите пуçласан, амăш ачисене калать:
— Ачасем,— тет,— пасартан пумилкке валли юр-вар тавраш, тĕрлĕ хатĕрсем кайса илетĕр пуль,—тет.
Аслă ывăлĕ пасара кайма пуçтарăнать. Кукшан та каяс килет пасара.
— Пичче, эп те пырам-и пасара?—тет пиччĕшне.
— Санпа намăс курса çӳремелле-и пасарта, сыхла хăвăн ануна,—тесе

хăтăрса пăрахать кукшана пиччĕшĕ.

Пиччĕшĕ пасара тухса кайрĕ. Кукша та пăрса ани çине пăрса сыхлама уттарчĕ. Пĕчĕк пўрт лартса панă ăна. Таканари кĕл çине пăрçа сапса параççĕ те — суйлать çав пăрçана.

Паян пиччĕшĕ пасара илсе кайманшăн пит çилленнĕ вăл. «Мĕн тăвас?—тет.— Кайса курайрасчĕ-çке пĕрре пасара!»—тет. Теплерен кĕрнĕк кайăк тĕкне аса илех каять. Вăрт-варт пĕр тĕкне кăларать те ĕнтет.

— Ман умра çак самантрах питĕ чаплă тăрантаслă тройка лаша пултăр, атă таврашĕсем йăлт пулччăр,— тет кукша.

Унччен те пулмасть —таçтан амакран пирĕн Иван умĕнче мĕн ыйтни пулса та тăрать. Кукша вăш-ваш тăрантас çине кĕрсе ларать те тĕрлеттерет пасара. Пасар урамне пĕтĕм аçа та çиçĕм пырса кĕрет. Лашисем çĕлен пек авкаланса, пуçĕсене каçăртса ухса анчах пыраççĕ. Пасарти халăх çăвар карса тĕлĕнсе пăхса анчах тăрать. Усламçăсем сутас таварне сутаймаççĕ, илекенсем илес таварне илеймеççĕ. Пирĕн кукша, пĕтĕм чаплăран та чаплă улпут пек, тăрантас çинче ларса, пасар урамĕ тăрăх лашасемпе сумлă чавтарса çўрет. Пĕр суту-илў тумасăрах, кукшана пăхса ирттерсех саланать пасар. Кукша пиччĕшĕ те ним илмесĕрех киле таврăнать. Киле çитсессĕн, амăшĕсене каласа кăтартать:

— Ах, тур, анне,—тет,—паян пасара пĕр çын килнĕ. Хум ывăлĕ Хумттер тесе калаççĕ хăйне,—тет,— лаши таврашсем, урាписем çав тери чаплă. Тумтирĕсене куçпа пăхма çук çунса тăраççĕ. Ун пеккине халиччен никам курман,—тет.—Пĕтĕм çын çавна пăхса анчах тăрать, илес тавара та илеймест, сутас тавара та сутаймасть,—тет.

Кукша та çав вăхăтра таврăнать киле, ним пĕлмен пек. Пиччĕшĕнчен ыйтать:

— Пичче, мĕн илсе килтĕн пасартан?—тет.

— Ан шарла-ха, ухмах, итле мĕн каланине,—тет кукшана амăшĕ.—Ним те илмен вĕт паян пасартан. Пасара çав тери чаплă çын пынипе сутас тавара та сутайман, илес тавара та илеймен, тет, паян,—тесе кулянать амăшĕ.

Кукша ăшĕнче вăрттăн кулать: «Кукша çапла çав вăл, айван кукша»,—тет.

Ку пасар нимсĕрех иртсе кайрĕ. Тепĕр пасара вăталăх ывăлĕ пуçтарăнать. Кукша каллех пиччĕшне тилмĕрет, анчах лешĕ яхăнне те ямасть. «Тăхта-ха, кăтартăп сана»,—тесе уттарать кукша пăрçа ани çине.

Хăвăртрах çитет те ĕнтет каллех кĕрнĕк кайăкăн тепĕр тĕкне. «Пĕркунхинчен вицĕ хут чаплă пултăр пурте»,—тет. Каласа пĕтернĕ-пĕтерменех мĕн ыйтни пулса та тăрать ун умĕнче — лаши-урាписем ĕлĕкхинчен вицĕ хут чаплă. Кукша тумланать те йăш çитсе те тăрать пасара.

Хальхинче пасарĕ те питĕ вăйлă пуçтарăннă. Пĕтĕм çын каллех, çăварĕсене карса, кукшана анчах пăхса тăрать. Кукша, лашисене тăратса тăрантасĕ çинчен анса, ярт-ярт каллĕмаллĕ уткаласа çўрет. Пĕтĕм çын, кун патне пыма вăтанса, аякран анчах пăхса тăрать. Паян та ним суту-илў пулмасăрах, сутас тавара сутаймасăрах, илес тавара илеймесĕрех пасар саланать. Хум ывăлĕ Хумттере пăхса, икĕ пасар ахалех иртсе кайрĕ.

Кукша пăрçа ани çине çитет те лашисене ярать. Ним курман-илтмен пек таврăнать киле.

— Пичче, мĕн илтĕн паян пасарта?—тет.

— Ах, ачам, ма пит айван-ши эс, куран вĕт ним те илменнине, мĕн ыйтмали пур унта?—тет амăшĕ.—Пумилккене нимскерсĕрех ирттерсе ярăпăр-и-ха. Çитес пасара хăвна ярăпăр, хăв илĕн-и,—тет амăшĕ йĕре-

йӗре.—Ара, мӗн кирлӗ-ши çав Хум ывăлӗ Хумттер текенскерне, мӗн илет-ши чăваш пасарӗнче?—тет вăрçа-вăрçа.

Кукша лăх-лăх кулать ăшӗнче.

Вăхăт иртетех. Тепӗр пасар та çитрӗ. Кукша ирех тăрать те уттарать пасара. Пасара кайнă хавaспа сисмест те — çитсе те тăрать. Малтан сӗтел илет, унтан какай, çу, тăвар тата çич-сакăр кашăк туянать. Юлашкинчен пасарта çӳрекелет-çӳрекелет ку, çынсем киле кая пуçласан, киле кайма тытăнать. Çынсем лашисем çине лараççӗ те чуптараççӗ килелле. Пирӗн кукшан çӗклемелли те чылай, киле çитме аякра. Шухăшлать ку: «Мӗн тăвас?—тет.—Çынсен лашисем тăват уралла та çыннисене лартаççӗ те чуптараççӗ,—тет,—ман сӗтел те тăват уралла-çке, тавай эп те ухса ларса пăхам-ха, чупать-и»,—тет. Сӗтелне хулпуççи çинчен антарать те вăш-ваш улăхса ларать. Ларать-ларать — сӗтелӗ сикмест те. «Ну, мӗскер утмастăн? Эс те тăват уралла вӗт!»—тет. Сӗтелӗ çаплах ларать.

Унтан кукша çӗртен патак анса илет те çапса пăхать сӗтеле. Сӗтелӗ хускалмасть вырăнтан. Пирӗн кукша çилленсе çитет. Аппаланать-аппаланать те çилленнипе сӗтелне йăлтах çапса салатса хăварать. Илнӗ япалисене кушелне чикет те, каçана çакса, çуранах уттарать килелле. Кушелри кашăкӗсем утнă майăн шăкăрт-шăкăрт, шăк-шак туса шакăртатса пыраççӗ. Кукшана кашăксем шăкăртатни «кукша, кукша, кукша» тенӗ пек туйăнать. Кашăксене шакăртатма тем чул чарасшăн çак — çаплах шăкăртатаççӗ кашăкӗсем. Юлашкинчен çилленсе çитет кукша. «Эсир мар, çынсем те пайтах мăшкăлласçӗ мана,—тет.—Хам илнӗ кашăксем те мăшкăлла пуçларӗç-çке»,—тет. Кăларать те кашăксене, çапса салатса хăварать.

Унтан пăртак лăпланса каять-каять, пӗр çăл патне çитет. Шыв ӗçес килнӗ кун — шывне ӗçсе пăхать. Çăлри шыв тутлă пек туйăнмасть. «Тăвар каламасть пуль, тăвар ярамха»,—тет. Пăртак ярать— каламасть, татах ярать — татах каламасть. Илнӗ тăварне шыва ярса пӗтерчӗ кукша — тăвар каланине пӗлмерӗ.

Унтан пăртак кансан, татах малалла утать. Çул хӗрринче пӗр мише юпи курах каять. Мише юпи пуçӗ йăлтах çуркаланса пӗтнӗ, тет. Кукша юпа патне пырать те шухăшласа тăрать: «Эй-яй-яй,—тет,—çакăн пуçӗ те манни пекех-çке, никам та хӗрхенсе çу тавраш сӗрмен-çке мӗскӗне, çу сӗрнӗ пулсан, кун пек çурăлса пӗтместчӗ,—тет.—Ман пуçа та çу сӗрнӗ пулсан, эпӗ те çакăн пек кукша пулас çукчӗ,—тет.—Çак мише юпи пуçне хам та пулин хӗрхенсе çу сӗрсе хăварам-ха»,—тет.

Çуне кăларать те йăлт сӗрсе пӗтерет пур пек çуне. Хăçан та пулин тӳрленӗ-ха»,—тесе пăхса тăчӗ-тăчӗ те малалла уттарчӗ.

Пырсан-пырсан, пӗр йытă тӗл пулать кукша. Йытти мӗскӗннӗн пăхса лӗпсӗртетсе пырать. Кукша каллех шухăшлать: «Çак йытă та ман пекех мӗскӗн-çке, никам та хӗрхенекен çукçке ăна,—тет.—Эх, мӗскӗн, çиех çак какая»,—тесе, илнӗ какайне йăлтах йытта пăрахса парса хăварать. Хăй ăшӗнче: «Ырă ӗç турăм-ха»,—тесе, çăмăлланса, хавассăн киле пырса кӗрет.

— Çынтан кулаттăнччӗ, хăв нумай япала илсе килтӗн-и?—теççӗ кукшана килтисем.

— Илтӗм,—тет кукша,— сирӗн пек пасара кайсан та ним илмесӗр таврăнман ӗнтӗ,—тет.

— Ăçта тата илнӗ япалусем, ачам?—тет амăшӗ.

— Сӗтел илнӗччӗ,—тет кукша,— сӗтел те тăват уралла, çынсен лашисем те тăват уралла. Çынсен лашисем хуçисене лартаç те чуптараç

килелле, ман сётел пур—вырӑнтан та сикмест. Ҫавӑнпа ҫапса салатса хӑвартӑм эп ӑна,—тет.— Кашӑксем илнеччӗ тата. Хӑйсем «кукша, кукша, кукша» тесе мӑшкӑлласа пыраҫ те хама—вӗсене ҫапса ывӑтса хӑвартӑм,—тет.

— Ах, айван,—теҫҫӗ пиччӗшӗсем. Кукша вӗсен сӑмахне итлемест те.

— Шыв ӗҫес килчӗ те ҫул ҫинче, шывин тӑвар каламасть, тӑвар илнӗччӗ те пасарта, тӑварне унта ярса пӗтертӗм,—тет кукша, тӗрӗссипех лаплаттарать.—Ҫу илнӗччӗ, ҫуне мише юпи пуҫне сӗрсе хӑвартӑм,—пуҫӗ манни пекех ҫуркаланса кайнӑ та. Какай илтӗм, какайне хам пекех мӗскӗн йытта, никам та хӗрхенекен пулмӗ тесе, парса хӑвартӑм,—тет.

— Эй-я-яй! Ара, ҫак ухмаха пасара яма юрать-и? Аҫу пумилккине мӗнпе ирттерӗпӗр ӗнтӗ? Мӗншӗн пурлӑ-сукла укҫана шыва юхтартӑн?!—тесе йӗре-йӗре вӑрҫать кукшана амӑшӗ.

Кукша ерипен тухса шӑвӑнать хӑйӗн пӑрҫа ани ҫине...

Ҫити-ҫитми пурнӑҫпа аран-аран ирттерсе яркаласҫӗ кукша тӑванӗсем ашшӗн пумилккине. Вӑхӑт ерипенех шӑвӑнать малалла.

Кукшасен амӑшӗ аслӑ ывӑлне калать:

— Ачам, аҫу та вилнӗ, ӗҫлекен катӑлнӑ вырӑнне сан валли мӑшӑр тупмалла мар-ши?—тет.

Паллах ӗнтӗ, ывӑлӗ килӗшет. Нумай тӑраҫҫи, сахал тӑраҫҫи —кун валли хӗр тупса та хураҫҫӗ пӗр ҫывӑх ялтан. Сӑмах татса ҫураҫнӑ, туя каймалла пирӗн тӑвансен. Туя пирӗн кукшан та каяс килет.

— Анне, эп те каям-и пичче туйне?—тесе йӑлӑнать кукша амӑшне.

— Ай, тур-тур! Сана ярса, ҫӗнӗ хӑтасен умӗнче санпа намӑс курмалла-и? Суйлах кӗл ҫинчи пӑрҫуна,—тесе хурать кукшана амӑшӗ.

Туй халӑхӗ пуҫтарӑнса тухса каять. Каять пирӗн кукша та пӑрҫа ани ҫине. Шухӑшлать: «Лартаймӑн кукшана пӑрҫа ани ҫинче кӗллӗ пӑрҫана ҫитерсе»,—тет. Вӑшт-вашт ӗнтет кӗрнӗк кайӑк тӗкне.

— Пултӑр ман умра тройка лаша тӑрантаспа, ҫие тӑхӑнма— чаплӑ тумтир!—тет.

Пӗр самантрах мӗн ыйтни пулса та тӑрать. Йӑш ухса ларать ку тӑрантас ҫине те вӗҫтерет туй кайнӑ яла. Ҫитрӗ ҫав яла. Ялти ҫынсенчен ыйтать:

— Ҫак ялта чӑваш туйӗ пур тесе калаҫ, тӗлне кӑтартса ярӑр-ха мана,—тет.—Халиччен чӑваш туйӗ курман эп. Туй таврашне пит тӗлӗнмелле ирттереҫ тенине илтнӗ эпӗ чӑвашсене,—тет.—Ҫавӑнпа питӗ курасшӑнччӗ эпӗ чӑваш туйне,—тет.

Хресченсем, питӗ хапӑл туса, туй тӑвакан килнех илсе каяҫҫӗ куна. Кукша кӗрет пӳрте.

— Ман килес!—тет.—Чӑваш туйне курма кӑмӑл пурччӗ ман. Ятламастӑр-и, ыр хуҫасем?—тет.

Хуҫисем, чаплӑ ҫын килчӗ тесе, пӗтсех каяҫҫӗ:

— Атя, килех, ыр ҫын! Атя, килех!—теҫҫӗ.—Тӗпелерех иртсем. Вырӑн парӑр ыр ҫынна!—теҫҫӗ.

Пирӗн ыр ҫын, кукша улпут, ӗҫсе ҫиет туй халӑхӗпе пӗрле. Туй халӑхӗн киле кайма вӑхӑт ҫитет. Хӗр илсе таврӑнмалла-ҫке-ха кусен. Картиш тулли туй ураписем ӗретленсе тӑраҫҫӗ. Чӑн малти лав ҫине кукшан пиччӗшӗпе ҫӗнӗ ҫынна лартаҫҫӗ. Кукша калать:

— Ыр ҫынсем,—тет,—ман лашасем те лайӑх, тӑрантасӗ те сирӗннинчен чаплӑрах,—тет.—Хӗре ман патӑма лартмастӑр-и, эп сире хӑвӑр яла ҫитичченех чаплӑн леҫсе хӑварӑп,—тет.

— Лартас, лартас!—тет туй халӑхӗ.

Хӗре кукша патне лартаҫҫӗ. Кукша чӑн мала лав пуҫне тӑрать. Ял-

тан ерипен те сумлăн тухса каяççĕ.

Ялтан тухсан, кукша чăлт-чалт пăхкалать, лашисене карт-карт туртать, айккинелле вăрт пăрăнать те çулсăр-мĕнсĕр тĕк пек вĕçтерет пăрça ани çине. Хыçĕнчен тусан çеç тухса юлать. Туй халăхĕ ним сисмесĕрех юлать. Унталла-кунталла пăхаççĕ — ним те курăнмасть. Çухатрĕç хĕре.

Пирĕн кукша кулса кăна ларать хăйĕн пўртĕнче пиччĕшĕн çĕнĕ арăмĕпе.

Туй халăхĕ каялла таврăнсан, киле каять хайхискер.

— Анне, инкене илсе килнĕ-и? — тет.

— Ан шарла-ха! Эс те пулин ăшачикке ан тултар. Каккуй инкўне илсе килме, çул çинче вăрласа кайнă вĕт ăна. Ах, тур-тур-ту-ур, — тесе кулянать амăшĕ.

Анчах ним тума та çук. Арăмсăрах юлчĕ кукша пиччĕшĕ.

— Капла пулмасть, — теççĕ хайхисем, — урăх тупас пулать пуль, — теççĕ.

Тепĕр ялтан унтан хитрине кайса çураçаççĕ кукша пиччĕшĕ валли. Туя кайнă чух кукша пирĕн татах туя каясшăн йăнкăртатать. Каллех вăрçайса хăвараççĕ куна. Анчах кукша Иван аптрамасть. Кĕрнĕк кайăкăн тепĕр тĕкне çунтарать те — тройка лашисем хатĕр те ун. Ларать те каллех вĕçтерет туй кайнă яла. Шыраса тупса кĕрет туй тунă çĕре чăваш туйĕ курма.

— Ман килес! — тет. — Чăваш туйĕ курманни нумай пулатчĕ. Иртсе кайнă чух тĕлех пултăм та кĕрсе курас тесе каларăм. Ятламастăр-и, хăтасем? — тет.

Эх, кил хуçисем пĕтсе каяççĕ! Аçта ятлама, тепле сак çине çĕклесе лартмаççĕ. Татах ыр курса çўрет пирĕн кукша. Пиччĕшсен ăш вĕркесе çех тарать те, анчах ним тума та çук.

Киле таврăннă чух кукша каллех хăйĕн тăрантасĕ çине хĕре хăйпе юнашар лартать. Кун чухне, хĕре вăрласа ан кайтăр тесе, туй халăхĕ кукшана мала ямасть, лавсем хушшине — варне — кĕртсе тăратаççĕ. Укăлчаран тухса пĕр-ик ана тăршшĕ кайсан, пирĕн кукша каллех лашисене палт аяккалла çаврать те пĕр самантра куçран-пуçран çухалать. Туй халăхĕ каллех вăрлаттарса ячĕ хĕре. Çаварĕсене карса анчах юлчĕçĕ. Пушали кар çăварна — киле пурпĕр хĕрсĕрех таврăнмалла пулчĕ.

Çĕмĕрттерет пирĕн кукшан пурăнăç. Пĕр пуссăрах икĕ арăм туянчĕ. Пăртак арăмĕсене лăплантарсан, килне каять. Ăшĕнче кула-кула, амăшĕнчен ыйтать:

— Анне, инке ăçта, çĕн инке? — тет. — Курасчĕ, — тет.

— Ах, çак кукша тертне-е! Тархасшăн, пуçа ан çавăр, кай пăрça хуралçине. Телейĕ çавăн пек пуль-çке пирĕн, каллех вăрласа кайнă вĕт инку пулассине, — тесе макăрать кукша амăшĕ.

Кукшан пăрça ани çинчен хăйĕн те таврăнас килмест-ха, шучĕшĕн анчах таврăнать.

Аслă ывăлне икĕ хутчен туя кайса та авлантараймарĕç пирĕн мĕскĕнсем. Вăхăт пире кĕтмест, çаплах шăвать. Ĕçе тухма та инçе юлмасть. Ĕçлеме çын кирлĕ.

— Пиччўн телей пулмарĕ, ачам, сан валли тупар пуль мăшăр, — тет кукша амăшĕ вăталăх ывăлне.

Лешĕ çавна кĕтнĕ те. Нумай вăхăт иртет-и, сахал-и — кун валли те пĕр яла хĕр кайса çураçаççĕ. Аякри ялтан çураçаççĕ. Çывăх ялтисем килĕшмен-çке-ха. Туя хĕр илме кайнă чух амăшĕ ятла-ятла ярать:

— Ун пек-кун пек çынпа ан çыхланăр, — тет. — Текех инкек-синкек ан тĕл пултăр, — тет.

— Пичче, туя эп те пырса курам-и? — тет кукша пиччĕшне.

— Çăварна уçнă ан пултăр! Сан

нирки ман намăс курас-и?—тет пиччĕшĕ.—Кам ачи, çавăн шăллĕ, тесе калĕç. Лар пăрçа ани çинче,—тет.

Кукша хăйне туя илсе кайманшăн хыпмасть. Вăш-ваш кĕрнĕк кайăк тĕкне çунтарать те — пурте хатĕр ун.

Хальхинче кукша каллех чаплăран та чаплă улпут пек пулать те тĕрлеттерет туя. Кашнинче ун лашисем, тумтирĕсем тĕслĕрен те тĕслĕрен пулаççĕ. Никам та ăна пĕр çын тесе шутламалла мар.

Туй тунă çĕре кĕрет те алăк патне тăрать.

— Эй, ыр çын, ара ма алăк патĕнче тăратăн? Тĕпелелле иртсем,—теççĕ кил хуçисем, хĕр ашшĕ-амăшĕсем.

— Юрать кунта та. Чăваш туйне халиччен курманччĕ те эп, çавăнпа пăртак кĕрсе курам тесе каларăм,—тет кукша.—Сирĕн чăвашăн туй таврашне пит тĕлĕнмелле иттереççĕ тесе каланине илтсеччĕ, çавăнпах кĕтĕм,—тет.—Ларса тăма вăхăт çукрах манăн,—тет.

Кил хуçисем куна çĕклесех кайса лартаççĕ тĕпеле.

— Тавтапуçах пире сума суса кĕрсе курнăшăн,—теççĕ.

Эх, куна пăхаççĕ: ĕçтереççĕ, çитереççĕ. Кукша киле каянçи пек тăвать те — нимпе те ямаççĕ.

Пирĕн мĕскĕн туй халăхĕн чĕрисем çурăлсах кайнă: ĕçес-çиес те килмест, чĕтресе анчах лараççĕ.

Туйран таврăнма вăхăт çитет. Пирĕн улпут йăпăлтата-йăпăлтата хĕре каллех хăйпе юнашар лартать. Туй халăхĕ тем чул унта лартасшăн мар, анчах хĕрĕ те, хĕр ашшĕсем те унтах лартасшăн: унта чаплă-çке-ха. Лешсен тăрантас тавраш çук. Кун чухне кукшана каллех, варне хупса, малтан та, кайран та лав пырать, ик айккинчен икĕ лав пыраççĕ, унталла-кунталла ан кайтăр тесе. Пирĕн кукша мăшт та тумастьуншăн. Çурма çула çитсессĕн, лашисене кăрт-карт турткалать те çумĕнчи лавсене вăнк ывтăнтарса хăварать. Эх, туй халăхĕн халĕ йĕрсе те куççуль тухмасть.

— Акă тамаша, виçĕ туя кайса та пĕр хĕр илсе таврăнаймарăмăр-çке,— теççĕ. Кулянкаларĕç-кулянкаларĕç те нимсĕрех киле шăкăртаттарса таврăнчĕç.

Кукшан виçĕ арăм пирĕн. Пĕринчен пĕри лайăхрах, чăн кайранхи тата хитререх. Анать пурнăç. Туй килнĕ çĕре çĕнĕ инкĕшне курма татах каять ку.

— Пичче, инкене илсе килтĕр-и?— тет.

Ашчик тулнă енне çил-тăвăл пек вăрçса тăкаççĕ куна. Ăна вăрçма вăл темшĕн айăплă вара? Утне çитейменнине туртине, теççĕ пирĕн чăвашсем, çавăн пек ĕнтĕ вăл. Анчах турти те ним те тăваяс çук.

Виç хĕр çураçса тăккаланчĕç пирĕн мĕскĕнсем — ним усси те пулмарĕ. Ĕçе те тухмалла пулать. Ĕçлекен кирлĕ, анчах ĕçлекен шырасан та ĕç ăнмарĕ те, тек ун çинчен шухăшлама та пăрахрĕç.

Кукшан виçĕ арăм. «Мĕн тăвас ман виç арăмпа?»—тет хайхи. Шухăшланă, пулнă. Кĕрнĕк кайăкăн юлашки тĕкне çунтарать. Тройка лаша, ярăнмалла тăрантассем хатĕр пулса та тăраççĕ. Аслă пиччĕшĕн икĕ арăмне тĕпе лартать, хăй вăталăх пиччĕшĕн арăмĕпе ларкăч çине ларать, эх, çĕмĕрттерсе пырса кĕрет киле! Аслă пиччĕшĕн малтанхи арăмне аслă пиччĕшнех парать:

— Акă сана арăм,—тет. Кайранхине вăталăх пиччĕшĕ çумне пырса тăратать:—Ку сан валли,—тет. Вăталăх пиччĕшĕ валли çураçнине:— Ку хамăн,—тет те ыталаса чуптăвать.— Акă çавăн пек ĕнтĕ сирĕн айван кукша, пăрçа ани çинче ним пĕлмесĕр кĕл çинчи пăрçана суйлаканскер,— тет кукша Иван тĕлĕнсе хытса кайнă тăванĕсене.

Ĕçе тухрĕçĕ. Пирĕн виçĕ мăшăр хай пăрçана çăлма каяççĕ. Кукшапа

арӑмӗ иккӗшӗ икшер карта ҫӑлаҫҫӗ, лешсем пӗрер карта та тухаймаҫҫӗ. Ҫапах та пӑрҫа ани пӗр самантрах ҫӑлӑнса пӗтрӗ. Ман юмах та пӗтрӗ.

## ИВАН

Пӗр карчӑкпа старик пурӑннӑ, тет. Вӗсен ватӑлас кунӗнче пӗр ывӑл ача ҫуралнӑ, тет. Ӑна Иван ятлӑ хунӑ, тет. Иван алӑра чухнех амӑшӗнчен тӑлӑха юлчӗ, тет. Ашшӗ тепре авланчӗ, тет. Тепӗр арӑмӗнчен кунӑн виҫӗ хӗр ҫуралнӑ, тет. Иван вӗренме те ҫӳрекен пулчӗ, тет, ӗнтӗ. Амаҫурийӗ ӑна питӗ кураймасть, тет, текех вӗлересшӗн шухӑшлать, тет.

Иванӑн тихипе йытти пулнӑ, тет. Вӗсене вӑл питӗ юратнӑ, тет. Кашни кун вӗренсе килмессерен Иван пӳрте кӗриччен тихи патне чупса каять, тет, унтан йыттипе выляса илет, тет.

Пӗрре амаҫури, Ивана вӗлерес тесе, ун валли, наркӑмӑшпа ҫӑрса, пашалу пӗҫерсе хунӑ, тет. Иван, вӗренсе таврӑнсан, пӳрте кӗмесӗрех тихи патне чупрӗ, тет. Тихи витере салху тӑрать, тет:

— Тиха, мӗншӗн эсӗ салху?—терӗ, тет, Иван.

— Мӗншӗн салху пулас мар: амаҫури сана вӗлерес, тет, наркӑмӑшпа ҫӑрса, пашалу пӗҫерчӗ,—терӗ, тет, тихи.

— Мӗн тӑвас вара манӑн?—терӗ, тет, Иван.

— Эсӗ пашалуне ил те, ҫием пек туса, тухса кай, унтан ӑна йытта пар,—терӗ, тет, тихи.

Иван пӳртне кӗрсе кайрӗ, тет.

— Ах, ачам, ачам, ҫиессӳ килчӗ пулӗ, пашалу пӗҫерсеттӗм, ме-ха, ҫикеле,— терӗ, тет, амаҫури.

Иван пашалуне илчӗ, тет те, ҫыртам пек туса, тула чупса тухрӗ, тет. Тухсанах, пашалӑва йыттине пачӗ, тет. Йытти, пашалӑвне ҫисен, хӑса пуҫларӗ, тет. Иван пӳрте кӑштах тӑрсан тин кӗчӗ, тет. Амаҫури шухӑшлать, тет: «Мӗнле-ха ку вилмест?»— тесе калать, тет.

Тепӗр кунне ку Ивана урӑхла вӗлерме шухӑшларӗ, тет: «Чим-ха, эпӗ ӑна вӗренсе килнӗ ҫӗре алӑк ҫине пуртӑ хурам та, вӑл алӑка шартлаттарса хупсанах, пуртӑ ӳкӗ те пуҫне касса татӗ».

Хӑй ҫапла хатӗрлесе хучӗ, тет. Иван вӗренсе килчӗ, тет те, тихи патне чупса кайрӗ, тет. Тихи салху тӑрать, тет.

— Мӗншӗн эсӗ салху тӑратӑн?—терӗ, тет, Иван.

— Мӗншӗн салху пулас мар: амаҫури сана вӗлересшӗн, пӳрт алӑкӗ ҫине пуртӑ хучӗ, пуртти, алӑка хупсанах, ӳксе сан пуҫна касмалла,—тет тихи.

— Мӗн тӑвас вара манӑн?—терӗ, тет, Иван.

— Эсӗ хӑвпа пӗрле пӳрте йыттуна илсе кӗр, алӑка уҫ та йыттуна малтан кӗртсе яр, вӑл кӗрсенех, алӑкне хытӑ шартлаттарса хуп, ху тул енне юл,—терӗ, тет, тихи.

Иван йыттине йыхӑрчӗ, тет те, пӳрте илсе кайрӗ, тет. Йытти кӗрсенех, алӑкне хытӑ хупрӗ, тет, пуртӑ персе ӳкрӗ, тет те, йытӑ пуҫне касса пӑрахрӗ, тет, унтан тин Иван пӳрте кӗчӗ, тет. Амаҫури пӗтӗмпе аптӑрарӗ, тет. «Мӗнле ку ача виле пӗлмест?»,— тесе шухӑшлать, тет.

Шухӑшласан-шухӑшласан, кайрӗ, тет, юмӑҫа.

— Ҫапла-ҫапла, упӑшкан леш арӑмӗнчен пӗр ӑнман ача пур, эпӗ ӑна тӗрлӗ майпа вӗлерме пикентӗм, ниепле те вӗлерейместӗп,— тесе калать, тет.

— Унӑн тихи ӑрӑм пӗлет. Малтан тихине вӗлерттер, вара хӑйне те час вӗлерӗн,—терӗ, тет, юмӑҫ.

Таврӑнчӗ, тет, амаҫури килне. Ҫӗрле ҫӗр хута упӑшкине:

— Тихуна вӗлер, тихуна вӗлер,— тесе тарӑхтарчӗ, тет.

Ирхине Иван вĕренме кайрĕ, тет, ашшĕ тихине çакма вĕрен ява пуçларĕ, тет. Амаçури тин кăшт лăпланчĕ, тет. Каç енне кайсан, хай Иван таврăнчĕ, тет, хапхаран кĕчĕ, тет те, часрах тихи патне чупрĕ, тет. Тихи салху тăрать, тет, куççулĕ шăпăр-шăпăр юхать, тет.

— Мĕншĕн эсĕ пит салху?—терĕ, тет, Иван.

— Мĕншĕн салху пулас мар: амаçури юмăça кайрĕ, юмăç ăна сана эпĕ вилĕмрен хăтарнине каласа пачĕ, мана вĕлерме хушрĕ, сана та вĕлерессĕ вара. Халĕ аçу пӳртре мана çакма вĕрен явать,—терĕ, тет, тихи.

— Мĕн тăвас ĕнтĕ манăн?— тесе йĕрсе ячĕ, тет, Иван.

— Эсĕ ак çапла ту, пӳрте кĕр те аçуна: «Атте, ĕнтĕ хам пăхса ӳстернĕ тихана юлашкинчен йĕнерлесе картиш тавра пĕрре утланса çаврăнма парччĕ»,—тесе кала. Утлансан, мана хытă кăна çап,—терĕ, тет, тихи.

Иван пӳрте кĕрсе кайрĕ, тет. Ашшĕ вĕрен явать, тет.

— Мĕн тăван ку вĕренпе, атте?— терĕ, тет, Иван.

— Ак, тихана çакса вĕлерес тетпĕр-ха, ачам,—терĕ, тет, ашшĕ.

Иван йĕрсе ячĕ, тет.

— Эх, атте, хам пăхса ӳстернĕ тихана юлашкинчен йĕнерлесе картиш тавра пĕрре утланса çаврăнма парччĕ,—терĕ, тет.

— Çаврăн, ачам,—терĕ, тет, ашшĕ.

Иван тухрĕ, тет те, тихине тытса йĕнерлерĕ, тет, унтан сиксе утланчĕ, тет те, шарт çапрĕ, тет. Тихи тем вăхăтра хапха урлă вĕлт турĕ, тет те, вĕçтере пачĕ, тет, çеçенхир тăрăх. Хай амаçури часрах кусене тытма ячĕ, тет. Хăвалакансем таçта аякка юлчĕç, тет, нимсĕрех каялла таврăнчĕç, тет.

Пырсан-пырсан, Ивансене пĕр сысна кĕтĕвĕ тĕл пулчĕ, тет. Тихи чарăнчĕ, тет:

— Эсĕ кĕтӳçĕ патне кайса пĕр сыснине пустар, ашне хăйне пар, ху нĕрĕ хăмпине анчах илсе кил, эпĕ кунта кĕтсе тăрăп,—терĕ, тет.

Иван кайрĕ, тет те, сысна пустарса, хăмпине илсе пычĕ, тет. Унтан ăна пуçне тăхăнчĕ, тет, тихи çине утланса ларчĕ, тет, кайрĕç, тет, малалла.

Пырсан-пырсан, çитрĕç, тет, пĕр пысăк хула патне. Вăл хулара патша пурăнать, тет. Тиха хула тулашне чарăнчĕ, тет те:

— Ну, Иван, эсĕ патша патне кай та улма пахчи хураллама кĕрĕш, эпĕ кунта юлам. Эпĕ кирлĕ пулсан, эсĕ мана шик шăхăр, эпĕ çитĕп,—терĕ, тет.

Иван патша патне кайрĕ, тет те, улма пахчи хураллама кĕрĕшрĕ, тет. Пахчинче хӳшĕ пур, тет. Иван çĕрле пахча тăрăх çӳрет, тет, кăнтăрла кунĕпе хӳшĕре çывăрать, тет. Кам та кам мĕн те пулин ыйтсан, шавах: «Пĕлместĕп»,—тесе калать, тет.

Патшан виçĕ хĕр пулнă, тет. Пĕрре патшана çыру ӳкет, тет: «Çапла-çапла кун санăн аслă хĕрне виçĕ пуçлă хура çĕлен çимелле»,—тесе çырнă, тет. Пĕтĕм килйышĕ, хурăнташ-ăрăвĕ хуйха ӳкет, тет. Патша хăй патшалăхĕнчи пур паттăрсене те хĕрне хăтарма чĕнет, тет. «Кам хăтарать, çавна хăйнех качча паратăп»,—тесе калать, тет.

Хай хĕрĕн вилĕм кунĕ çитрĕ, тет. Кайрĕç, тет, пурте кӳлĕ патне, паттăрсем малта пыраççĕ, тет. Кӳлĕрен чăшăлтатса тухрĕ, тет, виçĕ пуçлă хура çĕлен. Паттăрсем хăраса ӳкрĕç, тет.

Иван хӳшшинчен сиксе тухрĕ, тет те, шик шăхăрчĕ, тет. Тихи вĕçсе çитрĕ, тет, йĕнерĕ çумĕнче хĕç çакăнса пырать, тет. Иван çавăнтах хăмпине хывса ывăтрĕ, тет, пуçне сап-сарă ылтăн çӳç тухнă, тет. Унтан тихи çине утланчĕ, тет те, хĕçне тытса, кӳлĕ патне кустарса кайрĕ, тет. Иван хĕçĕпе пĕрре кăна сулчĕ, тет, çĕленĕн

виçĕ пуçне те касса татрĕ, тет. Хăй часрах каялла таврăнчĕ, тет те, хăмпине тăхăнса, хӳшше кĕрсе выртрĕ, тет, тихине хире ячĕ, тет. Хӳшĕ патĕнчен патша хĕрĕсем иртсе пыраççĕ.

— И-и, ухмах Иван, кунĕпе çывăратăн, çĕлене вĕлернине те пырса курмарăн,—терĕç, тет.

— Пĕлместĕп,—терĕ, тет, Иван.

Пурăнсан-пурăнсан, хай патшана каллех çыру ӳкет, тет: «Сан иккĕмĕш хĕрне çичĕ пуçлă çĕлен çимелле»,— тесе çырнă, тет. Патшан пĕтĕм килçуртĕнче йĕреççĕ, тет. Паттăрсем те каллех пухăнчĕç, тет, пĕр-пĕринпе тавлашса калаçаççĕ, тет. Кайрĕç, тет, кӳлĕ патне. Кӳлĕрен çичĕ пуçлă хура çĕлен чăшăлтатса тухрĕ, тет. Пурте хăраса ӳкрĕç, тет.

Иван хӳшшинчен тухрĕ, тет те, шик шăхăрчĕ, тет. Тихи вĕçсе те çитрĕ, тет. Иван хăмпине хывса пăрахрĕ, тет, тихи çине сиксе ларчĕ, тет, хĕçне йатса, кӳлĕ патне кустарса кайрĕ, тет. Çитрĕ кăна, тет, хĕçĕпе сулчĕ, тет те, пилĕк пуçне касса татрĕ, тет. Çĕлен Ивана хӳрипе çапрĕ, тет те, ятсăр пӳрнине хуçса пăрахрĕ, тет. Патша хĕрĕ Иван пӳрнине хăй тутăрĕпе çыхса ячĕ, тет. Иван татах çĕлен патне пычĕ, тет, татах хĕçĕпе сулчĕ, тет, юлашки икĕ пуçне касса татрĕ, тет. Пурте тĕлĕнсе кайрĕç, тет. Иван тихине çапрĕ, тет те, хӳшше кайса выртрĕ, тет, хăмпине те тăхăнса ячĕ, тет, тихи хире кайрĕ, тет. Патша хĕрĕсем хӳшĕ патĕнчен иртсе пыраççĕ, тет. Иван ывăннă çинчен харăлтаттарса çывăрать, тет.

— Эх, ухмах Иван, çывăрать нимĕн пĕлмесĕр,—тесе иртеççĕ, тет.

Вăталăххи Иван пӳрнинче хăй тутăрне курах кайрĕ, тет, тата хăмпине те Иван лайăхах тăхăнман, тет, ылтăн çӳçĕ вĕл-вĕл курăнса тăрать, тет. Патша хĕрĕ хăраса ӳкрĕ, тет: «Çак ухмаха качча каймалла пулĕ-ши-мĕн манăн?»— тесе шухăшлать, тет.

Хай паттăрсенчен иккĕшĕ: «Çĕлене эпĕ вĕлертĕм те эпĕ вĕлертĕм»,— теççĕ, тет. Патша вĕсене аслă хĕрĕпе вăталăххине качча пачĕ, тет.

Пурăнсан-пурăнсан, каллех патшана çыру ӳкет, тет: «Сан кĕçĕн хĕрне вуникĕ пуçлă хура çĕлен çимелле»,— тесе çырнă, тет. Патша килйышĕ улаçа йĕрет, тет. Патша пĕтĕм патшалăхĕнчи паттăрсене пуçтарчĕ, тет.

— Кам ман хĕре çăлать, çавна хăйнех качча паратăп,—терĕ, тет.

Хĕрĕ ытарма çук илемлĕ, тет. Паттăрсем: «Тăрăшăпăр та тăрăшăпăр»,—тесе калаççĕ, тет. Пурте пуçтарăнса кӳлĕ патне кайрĕç, тет. Кӳлĕрен вуникĕ пуçлă хура çĕлен чашкăрса тухрĕ, тет. Паттăрсем хăранипе каялла чакрĕç, тет.

Иван хӳшшинчен тухрĕ, тет те, шик шăхăрчĕ, тет. Тиха вĕçсе те çитрĕ, тет. Иван хăмпине хывса пăрахрĕ, тет, тихи çине сиксе ларчĕ, тет, унтан хĕçне ярса илчĕ, тет те, кӳлĕ патне кустарса кайрĕ, тет. Çӳçĕ хăйĕн çара ылтăн, тет. Иван çитрĕ, тет те, хĕçĕпе сулчĕ, тет те, çĕленĕн пилĕк пуçне харăс касса татрĕ, тет. Çĕлен куна хӳрипе çавăрса çапрĕ, тет те, пылчăк ăшне мăй таран путарса лартрĕ, тет. Пăхса тăракансем часрах Ивана кăларма тытăнчĕç, тет. Кăларсанах, Иван тепре сулчĕ, тет те, тата пилĕк пуçне касса татрĕ, тет. Çĕлен хӳрипе çапрĕ, тет те, Ивана ăнсăр туса ячĕ, тет. Тытăнчĕç, тет, Ивана суллама. Сулласан-сулласан, ăн кĕчĕ, тет. Иван тата хĕçпе сулчĕ, тет те, çĕленĕн юлашки икĕ пуçне сирпĕтсе ячĕ, тет. Халăх чĕркуççи çине тăрса, Ивана тав тăва пуçларĕ, тет. Иван лашине çавăрчĕ, тет те, каллех хăмпине тăхăнса, хӳшше кайса выртрĕ, тет. Патша хĕрĕсем хӳшĕ патĕнчен иртсе пыраççĕ, тет.

— Эх, Иван, Иван, выртать ухмах, хӳшĕре,—тесе калаççĕ, тет.

Патша савăннипе пĕтĕм хурăнташăрăвне хăнана пуçтарчĕ, тет. Паттăрсенчен пĕри:

— Эп хӑтартӑм хӗрне,—тесе калать, тет.

Патша ӑна хӗрӗн ҫӗррине тӑхӑнтарса ячӗ, тет.

Пӑртак ӗҫкелесе ҫисен, патша Ивана асне илет.

— Кайӑр-ха, ҫав хӳшӗрен ухмах Ивана чӗнсе килӗр, вӑл та пирӗнпе пӗрле савӑнтӑр,— терӗ, тет.

Ивана кайса чӗнчӗ, тет, пымасть, тет, Иван. «Пӗлместӗп»,— тесе калать, тет. Патша каллех чӗнтерет, тет. Иван каллех: «Пӗлместӗп»,— тесе калать, тет. Патша виҫҫӗмӗш хут чӗнтерчӗ, тет. Иван хӳшшинчен сиксе тухрӗ, тет те, тихине чӗнсе утланчӗ, тет, хӑмпине хывса ҫӗре ҫӗклесе ҫапрӗ, тет, хӑмпи ҫурӑлсах кайрӗ, тет. Пуҫӗнче сап-сарӑ ылтӑн ҫӳҫ, тет. Патша патне кайрӗ, тет. Малтан патша картишӗ тавра виҫӗ хутчен кустарса ҫаврӑнчӗ, тет. Ылтӑн ҫӳҫӗ хулпуҫҫийӗ ҫине тӑсӑлса аннӑ, тет. Пурте палларӗҫ ,тет, хӗрсене ҫӑлакана. Унтан Иван лашине кӑкарса хучӗ, тет те, патша патне кӗрсе кайрӗ, тет. Патшан кӗҫӗн хӗрӗ Ивана курсанах:

— Акӑ мана ҫӑлакан! — тесе чупса пырса чуптурӗ, тет.

Патша ҫавӑнтах улталакан паттӑрртан хӗр ҫӗррине илчӗ, тет те, Иван аллине тӑхӑнтарчӗ, тет, паттӑрне ҫакса вӗлерме хушрӗ, тет. Патшан аслӑ хӗрӗсем те Ивана палларӗҫ, тет, хӑйсен упӑшкисем ҫинчен ашшӗне каласа пачӗҫ, тет. Патша вӗсене те вӗлерме хушрӗ, тет, хӗрӗсене хӑй патне хӑварчӗ, тет.

## САРА КУН ҪЕРШЫВЕНЧЕ

Пӗр ҫын пурӑннӑ, тет. Унӑн виҫӗ ывӑл пулнӑ. Пурӑна киле ку ҫын ватӑлса ҫитет. Ачисем те ӳссе ҫитеҫҫӗ.

Пӗрре ашшӗ ачисене пухать те ҫапла калать:

— Ну, ачамсем, пурӑнатӑр-пурӑнатӑр эсир, ниҫта та тухса ҫӳреместӗр. Эпӗ вӑт таҫта та ҫитсе курнӑ. Эпӗ ҫитнӗ ҫӗре эсир нихӑшӗ те нихӑҫан та ҫитеес ҫук,— тет.

Ывӑлӗсем итлесе тӑраҫҫӗ-тӑраҫҫӗ те ҫапла калаҫҫӗ:

— Атте, ниушлӗ эсӗ ҫитнӗ ҫӗре эпир нихӑҫан та ҫитме пултараймӑпӑр? — теҫҫӗ.

Ҫапла калаҫҫӗ те ашшӗ пулнӑ ҫӗрсене ҫитсе килме пулаҫҫӗ.

Малтан аслӑ ывӑлӗ хатӗрленет. Ӗҫсе ҫиет те, алӑ парса, килӗнчен тухса утать. Ҫулпа ку икӗ эрне каять. Кайсан-кайсан, пӗр вӑрмана ҫитсе тухать. Ку вӑрман урлӑшӗ те, тӑршшӗ те — вунӑ ҫухрӑм. Вӑрманпа пынӑ чухне ку ача пӗр пысӑк ватӑ юман тӗл пулать. Ӑна ултӑ ылтӑн кӑшӑлпа кӑшӑлланӑ пулнӑ. Юмана ку хӑлаҫпа йӗри-тавра хӑлаҫласа пӑхать те — ултӑ хӑлаҫ пулать.

— Акӑ эпӗ атте ҫитнӗ вырӑна ҫитсе те куртӑм, халӗ ӗнтӗ киле таврӑнас,— тет те старикӗн аслӑ ывӑлӗ, килне каять.

Килне ҫитсенех, ашшӗ ыйтать:

— Ну, ывӑлӑм, ӑҫта ҫитсе килтӗн? — тет.

— Эсӗ ҫитнӗ ҫӗрех ҫитрӗм, атте! Икӗ эрне кайрӑм, ҫул ҫинче пӗр тӑваткӑл вӑрмана ҫитсе тухрӑм. Ҫав вӑрман варринче ултӑ ылтӑн кӑшӑлпа кӑшӑлланӑ юман куртӑм,— тесе хуравлать ывӑлӗ.

— Э-э, ывӑлӑм! Вӑл, ачам, эпӗ ҫитнӗ ҫӗре ҫитмелли ҫул ҫинчи пӗрмӗш вырӑн анчах пулать-ха,— тет ашшӗ.

Вӑталӑх ывӑлӗ итлесе тӑрать-тӑрать те ҫапла калать:

— Ну, атте, эсӗ ҫитнӗ ҫӗре пичче ҫитеймен пулсан та, эпӗ ҫитетӗпех,— тет.

— Кайса пӑх-ха, ачам, ҫитӗн-и,— тет ашшӗ.

Вӑталӑх ывӑлӗ хатӗрленет те, ӗҫсе-ҫисе, ҫула тухса каять. Уйӑх ҫурӑ утать пӗр ҫулпала. Пиччӗшӗ малтан ҫитсе курнӑ вӑрман урлӑ та каҫса ка-

ять. Пырсан-пырсан, тата пысăкрах вăрмана çитсе кĕрет. Ку вăрманăн тăршшĕ те, урлăшĕ те — сакăрвунă çухрăм. Вăрман варрине çитсен, пĕр пысăк юман ларнине курать. Юманне вуникĕ ылтăн кăшăлпа кăшăлланă пулнă. Хăлаçласа пăхать те — йĕри-тавра вуникĕ хăлаç пулать.

— Ну,— тет вăталăх ывăлĕ,— атте çитнĕ вырăна çитрĕм-çитрĕмех, халĕ ĕнтĕ киле таврăнас,— тет.

Пĕр тапхăр ларса канать те тăрса килнелле утать. Уйăх çурă утсан, килне аран-аран çитет.

— Ăçта çитсе куртăн, ывăлăм? — тесе ыйтать ашшĕ.

— Уйăх çурă кайрăм, атте! Урлăшĕ те, тăршшĕ те сакăрвунă çухрăм вăрмана çитрĕм. Вăрман варринче вуникĕ ылтăн кăшăлпа кăшăлланă юман куртăм,— тесе тавăрать ывăлĕ.

— Э-э, ывăлăм! — тет ашшĕ,— эсĕ, ачам, эпĕ çитмелли çĕре каякан çул çинчи иккĕмĕш вырăна анчах çитнĕ-ха. Санăн унтан та инçе каймалла пулнă,— тет.

Кĕçĕн ывăлĕ, Йăван ятли, итлесе тăрсан-тăрсан, тухать те ашшĕне çапла калать:

— Ну, атте, эпĕ пурĕпĕр эсĕ çӳренĕ çĕрсене çитетĕпех! — тет.

— Кайса пăх-ха, ачам, кайса пăх! Çитейĕн-и,— тет ашшĕ.

Йăван пиччĕшĕсем пекех хатĕрленет те, лашине утланса, çула тухса каять. Виçĕ уйăх каять çулпала. Пиччĕшĕсем çитнĕ икĕ вăрмана та çитсе иртет. Юлашки вăрман урлă каçсан, Йăван пушă хире тухать. Ку хирĕн вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть. Ăçта ан пăх, унта хăйăр анчах сарăлса выртать.

Кайсан-кайсан, Йăван çул хĕрринче пĕр ватă старик ларнине курать. Старик ытла та ватăлса çитнĕ, сĕлехине çех юхтарса ларать.

Старикрен йĕрĕннипе Йăван унпа пĕр сăмах та каласса-туса тăмасть, лач сурса çеç иртсе каять. Анчах нумай та каймасть, тем шухăшласа, чарăнса тăрать. «Çук, эпĕ ку старикрен сурса иртни лайăх пулмĕ,— тет вăл.— Вăл ватăлса çитнĕ вĕт, ман унран ăс ыйтас пулать»,— тесе, старик патне калле таврăнать.

— Эй, мучи, эпĕ санран йĕрĕнсе сурса иртрĕм те, эсĕ каçар мана уншăн, йăнăшрăм эпĕ. Эсĕ мана çул çӳренĕ чухне кирлĕ ăстăн вĕрентсе ярсамччĕ! — тет.

— Каçарасси каçарăп та, эсĕ ăçта каятăн-ха, ывăлăм? — тесе ыйтать старик Йăванран.

— Эпĕ пĕтĕм тĕнче тăрăх çӳресе çаврăнма тухрăм. Манăн атте çитнĕ çĕре çитсе курмалла,— тет Йăван.

— Апла пулсан, итле, ачам,— тет старик.— Эпĕ кунта темиçе çул ларатăп ĕнтĕ, ниепле те вилейместĕп: çĕр йышăнмасть мана,— тет.— Эсĕ, çӳресен-çӳресен, калле таврăннă чухне Сарă кун çĕршывĕнчен мана валли шурă алшăллипе пĕр кĕленче тăрă шыв илсе кил, вара эпĕ ырă вилĕмпех вилĕттĕм,— тет.— Халĕ ĕнтĕ сана çул çуреме ăс вĕрентсе ярам. Эсĕ, кайсан-кайсан, пĕр ылтăн шăтăк тĕлне çитсе тăрăн. Çав шăтăка эсĕ ним хăрамасăр анса кай. Унта арча çакăнса тăнине курăн. Çав арчана уç та, унтан тĕрлĕ тĕслĕ апат-çимĕç тухĕ. Апатланса тăрансан вара, эсĕ вăл арчана хăвăнпа пĕрлех илсе кай. Тата кайсан-кайсан, эсĕ çĕр айĕнчи Сарă кун çĕршывне тухăн. Çав çĕршывра лаша кĕтĕвĕ çӳрет. Çавăнтан санăн пĕр лашине сутăн илес пулать. Лашасем унта нумай. Эсĕ çавсенчен çӳреннине, йĕнерчĕк вырăнĕнче шурă паллă пуррине суйласа ил. Вăл ĕлĕк аçу паттăрта çӳренĕ лаша пулĕ. Санăн çав лашашăн кĕтӳ хуçине çĕр тенкĕ укçа тӳлемелле пулать. Кайса тӳлетĕн те, кĕтӳ хуçи сана хут çырса парĕ, вара çав хутпа кĕтӳ пăхакан старик патне пырăн. Вăл старик сана кирек хăш лашине те суйласа илме ирĕк парĕ. Эсĕ вара çав çӳрен лашанах

тытма тăрăш. Вăл сана тапма та, ҫыртма та тăрĕ, анчах эсĕ ан хăра, мĕн пулсан та тытса утлан,—тет.

Старик каласа пĕтерсен, Йăван тата малалла утать. Кайсан-кайсан, пĕр ылтăн шăтăк тĕлне ҫитет те ҫав шăтăка аяла анса каять. Ҫакăнса тăракан арчана шыраса тупать те, арчине уҫса, тем тери ырă апат-ҫимĕҫ ҫисе тăранать. Унтан малалла кайса, часах Сарă кун ҫĕршывне тухать. Кунта, чăн та, ҫанталăк сап-сарă-мĕн, тĕлĕнмелле илемлĕ. Улăхра ут кĕтĕвĕ ҫӳрет.

— Ку лашасене сутаççĕ-и? — тесе ыйтать Йăван, ут кĕтĕвĕ хуралҫи патне пырса.

— Сутать хуҫа. Ҫĕр тенкĕ кайса тӳле те хăш лашине илес тетĕн, ҫавна илсе кай,— тет куна хирĕҫ старик.

Йăван хуҫине кайса укҫа тӳлет те лаша илме пырать. Вăл тӳрех ҫӳрен лашана тытма тăрать. Анчах ҫӳрен лаши тыттарасшăн мар: хăмсарать, тапать. Йăван ҫапах та, тăрмаша-тăрмаша, лашана ҫилхинчен ҫавăрса тытать те утланса та ларать. Лаша, урисене ҫĕре тĕкмесĕр, Йăвана ҫил пек вĕҫтерсе илсе каять.

Акă, кайсан-кайсан, вĕсем пĕр кӳлĕ хĕррине ҫитсе тухаççĕ. Йăван лашине ĕшнене ярать те хăй пĕр йывăҫ тĕмĕ айне канма выртать. Нумай пулчĕ-и, сахал пулчĕ-и — кӳлĕ хĕррине икĕ хуракăш вĕҫсе килсе ларaççĕ. Ҫунаттисемпе лăпăс-лăпăс тутарса, ҫĕр ҫине выртса йăванаççĕ те калама ҫук чипер хĕрсем пулса тăраççĕ. Хĕрсем ҫавăнтах кĕписене хывса пăрахаççĕ те шыва кĕрсе каяççĕ. Унччен те пулмасть — виççĕмĕш акăш вĕҫсе ҫитет. Ку хăйĕн кĕпине Йăван выртакан тĕм ҫумнех хурса хăварать.

Икĕ хĕрĕ, маларах килнĕскерсем, виççĕмĕшне кĕтмесĕрех шывран тухаççĕ те каллех акăшсем пулса вĕҫсе каяççĕ. Виççĕмĕш хĕрĕ пĕчченех шыва кĕрет. Ҫак вăхăтра Йăван тĕм хушшинчен йăпшăнса тухать те хĕр кĕпине пытарса та хурать. Хĕр, шывран тухсан, пăхать — кĕпи ҫук. Тытăнать хурланса йĕмешкĕн:

— Кам пытарса хунă-ши ман кĕпене? Вăл ҫынна, хамран кĕҫĕн пулсан — шăллăм тăвăттăм, аслă пулсан—пичче тăвăттăм, хампа тантăш пулсан — мăшăр тăвăттăм! — тесе макăрать.

Йăван хĕр хурланса тăнине илтет те ун умне тухса тăрать.

— Эй, ырă ҫыннăм, тавах сана хаяр вилĕмрен ҫăлнăшăн, ҫавăнпа эпĕ сана хам мăшăрăм тăвăп. Анчах пирĕн мăшăрланасси ҫăмăлах пулмĕ. Пирĕн килте ҫав-ҫав кун вăйлă ĕҫкĕ-ҫикĕ пулмалла. Ҫав ĕҫкĕ вăхăтĕнче хăнасем таҫти ҫĕртен те пухăнмалла. Вĕсем пире качча илме килмелле. Эпир кама юрататпăр, ҫавна пырса алă паратпăр. Ҫавăнпа та эсĕ унта пыма тăрăш. Унччен эсĕ атте патне кĕтӳҫе кĕрсе ĕҫлесе пурăн,— тет хĕр. Унтан каллех хуракăш пулать те вĕҫсе каять.

Ку хĕр Сарă кун ҫĕршыв патшин кĕҫĕн хĕрĕ пулнă-мĕн.

Йăван, хĕр сăмахне итлесе, ҫавăнтах патша патне кĕтӳҫе кĕме каять. Анчах патша тарҫисем ăна, ҫĕтĕк-ҫатăкскере, кураççĕ кăна, тӳрех тытаççĕ те патша патне вĕлерттерме илсе каяççĕ.

— Ма тытса килтĕр ку ҫынна? — тесе ыйтать Сарă кун патши хăй тарҫисенчен.

— Сан патна кĕме тăнăшăн,—теҫҫĕ лешсем.

— Эпĕ, ырă патшам, сан патна хаяр шухăшпа мар, кĕтӳҫе кĕме килсеттĕм,— тет Йăван Сарă кун патшине.

— Кĕтӳҫе кĕме килнĕ пулсан, юрĕ, тивес мар. Ан тив, ĕҫлесе пурăнтăр,— тет Сарă кун патши.

Ҫапла вара Йăван, патша патне ĕҫе вырнаҫса, кĕтӳсем пăхса пурăнма тытăнать.

Акă хĕр каланă вăхăт ҫитсен, Сарă

кун патшин вӑйлӑ ёҫкӗ тапранать. Ёҫке хӑнасем таҫтан та пухӑнаҫҫӗ. Ёҫкелесен-ҫикелесен, хӗрӗсене ҫакӑнтах хӑйсене валли упӑшка суйлама хушаҫҫӗ. Аслӑ хӗрӗпе вӑталӑххи чи лайӑх тумланнӑ генералсене суйласа илеҫҫӗ. Юлашкинчен кӗҫӗн хӗрне черет ҫитет. Ку пӑхкаласа ҫаврӑнать те, хӑйне юрӑхлӑ мӑшӑр тупаймасӑр:

— Ман упӑшка пуласси кунта ҫук. Чӗнсе килӗр-ха кӗтӳ пӑхакан Йӑвана,— тет.

Йӑвана туххӑмах чӗнсе килеҫҫӗ. Патшан кӗҫӗн хӗрӗ мӗнпур халӑх умӗнче кӗтӳ пӑхакан Йӑвана алӑ пырса парать те:

— Акӑ ҫак манӑн упӑшка пуласси! — тет.

Аппӑшӗсем йӑмӑкӗ ҫавнашкал ҫӗтӗк-ҫатӑка упӑшка тума йышӑннишӗн ахӑлтатсах кулса яраҫҫӗ. Сарӑ кун патши хӑй те питӗ хытӑ ҫилленсе ӳкет. Тепӗр куннех кӗҫӗн хӗрӗпе Йӑвана пурӑнма кивӗ мунчана хӑваласа кӑларать.

Мунчара хур курса пурӑннӑ чухне Йӑван ҫак ҫӗршыва кӗмелли шӑтӑкра кӗмӗл арча ҫакӑнса тӑни ҫинчен аса илет. Аса илет те ҫак арчана хӑйсен килне илсе таврӑнать. Шак шаккать те арчана — тем тӗрлӗ ёҫме-ҫиме тухса та тулать. Йӑвансен апат-ҫимӗҫӗ Сарӑ кун патшинниНчен те темиҫе хут лайӑхрах пулса тӑрать.

Пурӑна киле Йӑван мунча ӑшчиккине те пӗтӗмпех ылтӑнласа-кӗмӗллесе пӗтерет, мунча ҫуталса анчах лара пуҫлать.

Пӗрре, ир тӑрсан, Йӑван арӑмне калать:

— Эпӗ кӗҫӗр пӗр путиш тӗлӗк куртӑм. Сан аҫу маҫакӑшӗн тӗлӗнмелле сысна пур пек. Вӑл ҫӳренӗ чухне пӗрмай сӑмсипе сухаласа, урисемпе тырӑ акса, хӳрипе сӳрелесе пырать пек. Мӗне пӗлтерет-ши ҫак тӗлӗк?—тесе ыйтать.

Арӑмӗ ҫавӑнтах Йӑван тӗлӗкне ашшӗне каласа кӑтартать. Лешсем тытӑнаҫҫӗ архивсенче шыраттарма. Пӗр пысӑк кӗнеке тупса вуласа нӑхаҫҫӗ те ӗлӗк чӑн та ун пек сысна пулни курӑнать. Анчах халӗ вӑл ӑҫтине никам та пӗлмест. Сарӑ кун патши пурне те ҫав сыснана тупма хушать, унщӑн тем чухлӗ мул пама пулать.

Икӗ кӗрӳшӗ, мула хапсӑнса, хӑпӑл-хапӑл сыснана шырама тухса каяҫҫӗ. Йӑван арӑмӗ кун ҫинчен упӑшкине каласа парать.

— Эй,— тет Йӑван,— вӗсем мар ӑна шыраса тупмалли!— тет.

Тӗлӗнмелле сыснана курса пӗлессӗн пулса, Йӑван хӑй те лашине чӗнсе илет те сыснана шырама тухса каять. Питӗ инҫе-инҫе каяҫҫӗ. Кайсан-кайсан, хай сыснана тупаҫҫӗ. Тытаҫҫӗ те килнелле таврӑнма тухаҫҫӗ. Килне ҫитеспе, ывӑннӑ май, пӗр хӑртнӑра вут чӗртсе, канма лараҫҫӗ. Ҫак хушӑра Сарӑ кун патшин аслӑ кӗрӳшӗсем сиксе те тухаҫҫӗ.

— Акӑ хайхи сыснана тупрӑмӑр. Ну, илсе кайса, пурне те тӗлӗнтеретпӗр!— теҫҫӗ.

— Ӑҫта илсе каятӑр?— тет Йӑван.

— Ай, хуҫи пур-ҫке кун!— теҫҫӗ лешсем.

— Эпӗ ун хуҫи,— тет Йӑван.

— Сут сыснуна. Мӗн чул ыйтатӑн?— теҫҫӗ лешсем.

— Мӗн мӗн чухлӗ... Эсир мана асӑнмалӑх урӑрти кача пӳрнӗрсене татса парӑр та — ҫитет,— тет Йӑван.

Лешсем ирӗксӗрех килӗшеҫҫӗ те пӳрнисене татса параҫҫӗ. Йӑван пӳрнисене тутӑрпа чӗркесе кӗсйине чикет те сыснине парса ярать. Хӑй ахалех килне таврӑнать.

Пурӑнсан-пурӑнсан, Йӑван тата тӗлӗк тӗлленет. Ӑна та арӑмне каласа парать:

— Эпӗ кӗҫӗр каллех тӗлӗк куртӑм. Аҫу маҫакӑшӗн сӗтлӗн-ҫӑмахӑн авӑр-

са ларакан арман пур пек. Мĕне пĕлтерет-ши тата ку тĕлĕк?— тет.

Арăмĕ Йăван курнă тĕлĕке ашшĕне кайса калать. Лешсем архивсенче шыраттарса пăхтараççĕ те ĕлĕк чăн та ун пек арман пулнине пĕлеççĕ.

— Кам çав армана шыраса тупма пултарать?— тесе ыйтать патша хăйĕн çывăх çыннисенчен.

— Эпир шыраса тупма мар, илсе те килетпĕр,— теççĕ кĕрӳшĕсем. Тепĕр кунне шырама тухса та каяççĕ.

Арăмĕ, килне пырсан, Йăвана калать:

— Эсĕ тĕлĕкӳнте курнă арман чăнахах пулнă иккен. Äна йыснасем шырама та тухса кайрĕç,— тет.

— Эй, вĕсем мар вăл армана тупмалли,— тет Йăван.

Унтан лашине чĕнсе илет те армана шырама тухса каять. Питĕ инçе каяççĕ вĕсем. Кайсан-кайсан, хай армана чăнахах та тупаççĕ. Килне таврăннă чухне пĕр хăртнăна канма лараççĕ. Кун патне пашта кĕрӳшĕсем пырса та тухаççĕ.

— Акă хай арман!— тесе хĕпĕртесе каяççĕ, армана курсанах.

— Мĕн кирлĕ сире?— тет Йăван.

— Ай, хуçи пур-çке кун,— теççĕ лешсем.

— Хуçи эпĕ,— тет Йăван.

— Сут арманна! Миçе пин илетĕн?— теççĕ патша кĕрӳшĕсем.

— Мĕн мĕн чухлĕ илесси. Хăвăр аллăрти кача пӳрнĕрсене касса парăр та — çитет,— тет Йăван.

Лешсен ирĕксĕрех кача пӳрнисене касса памалла пулать. Йăван кусен пӳрнисене кĕсъене чĕркесе чикет те арманне парса ярать. Хăй килне пушă алăпах таврăнать.

Пурăнсан-пурăнсан, Йăван татах тĕлĕк тĕлленет. Тĕлĕкĕ çинчен арăмне каласа кăтартать:

— Кĕçĕр эпĕ тата тепĕр тĕлĕк куртăм. Сан аçу маçакăшĕн ĕлĕк пĕр сехетре сывлăшра вĕççе çĕр йĕри-таврa çаврăнакан виçĕ хура ăйăр пулнă пек. Мĕне пĕлтерет-ши тата ку тĕлĕк?— тет.

Арăмĕ Йăван курнă тĕлĕке ашшĕне каласа кăтартать. Лешсем тапратаççĕ шыраттарма. Архивсенче шырасан-шырасан, ĕлĕк чăн та виçĕ ăйăр пулнине пĕлеççĕ.

— Кам шыраса тупма пултарать çав виçĕ ăйăра?— тет Сарă кун патши.

— Эпир шыраса тупма мар, тытсах килетпĕр,— теççĕ куна кĕрӳшĕсем. Чăнах та шырама тухса каяççĕ.

Йăван арăмĕ кун çинчен Йăвана парать.

— Вĕсенчен мар вăл ăйăрсене тупса килесси,— тет Йăван арăмĕ каланине хирĕç. Унтан витине тухать те лашине чĕнет.

— Äçта каймалла?— тет лаши.

— Пирĕн Сарă кун патши маçакăшĕн пулнă виçĕ хура ăйăра шыраса тупса килмелле, —тет Йăван.

— Кайма ӳркенместĕп, анчах вĕсене тупса килес çĕрте йывăрлăх пумай пулать. Çапах та эпир вĕсене епле те пулин тытса килме тăрăшăпăр. Вăл ăйăрсем тинĕс тĕпĕнче пурăнаççĕ. Çав тинĕс хĕррине çитсен, эпĕ шыва кĕрсе кайăп, эсĕ çыран хĕррине юлса кĕтсе тăрăн. Малтанхи ăйăрне çăмăллăнах илсе тухма пулĕ, анчах ыттисене илсе тухма йывăр, манăн такансем ураран тухса ыткăнса кайĕç. Вара ун чух мана кĕтнипе кĕтменни пĕр пулĕ,— тет ăйăрĕ Йăвана.

Анчах, тăвас ĕç мĕнле хăрушă пулин те, вĕсем пурĕпĕр çула тухаççĕ те çил пек малалла вĕçтереççĕ. Кайсан-кайсан, тинĕс хĕррине çитеççĕ.

— Ну, Йăван, эсĕ çакăнта тăрса юл. Эпĕ ăйрсене пĕрерĕн-пĕрерĕн хăваласа тухатăп. Сĕтĕрсе тухсанах, эсĕ вĕсене йĕплĕ туяпа икĕ хăлха хушшинчен мĕн ураран ӳкиччenex хĕне,— тет лаша, унтан хăй чашкăрса шыва кĕрсе каять.

Тинĕс йĕркесĕр хумханма тытăнать. Хумхансан-хумхансан, Йăван

лаши пĕр йăйăрне сĕтĕрсе те кăларать. Кăларнă-кăларманах, Йăван йĕплĕ туя илет те йăйăра çамкаран пĕр лăш кăтартмасăр хĕнеме пуçлать.

— Ытла ан пĕтерсем хĕнесе, эпĕ санăн пулатăп,— тет йăйăр Йăвана.

Вара тин Йăван йăйăра хĕнеме пăрахать.

Йăван лаши каллех тинĕсе кĕрсе каять. Тем вăхăт иртсен, иккĕмĕшне те сĕтĕрсе тухать. Йăван куна та хĕне-хĕне хăйне парăнтарать. Юлашкинчен лаша виççĕмĕшне илме тинĕсе кĕрсе каять. Пĕр çур сехет вăрçса, тинĕсе тем пек хумхатса тăраççĕ, Йăван лашин пĕр уринчи таканĕ, ывтăнса кайса, çыран хĕррине пырса çапăнать. Йăван çакна курсанах хăраса чĕтресе каять. Хăй ăшĕнче: «Тухаймасть иккен»,— тесе шухăшласа илет. Анчах лаши çав самантрах йăйăра шывран сĕтĕрсе те тухать. Тухсанах хăй те вăй-халтан кайнипе çерем çине тăсăлса выртать. Йăван йăйăра хĕнетхĕнет те, йăйăр:

— Санăн пулатăп, урăх ан хĕнесем,— тесен тин чарăнать, виçĕ йăйăрне те юпасенчен кăкарса хурать.

Кăшт тăрсан, Йăван йăйăрсене вĕçерет те утланса вĕçтере парать килнелле. Кайсан-кайсан, пĕр вăрман хăртнине канма чарăнать. Йăйăрĕсене курăк çине вĕренлет. Çак хăртнăна каллех хайхи генералсем сиксе тухаççĕ.

— Акă эпир ширанă йăйăрсем ăçта çӳреççĕ!— теççĕ вĕсем савăнса.

— Мĕн кирлĕ сире?— тесе ыйтать Йăван.

— Сут пире йăйăрусене! Мĕн чул ыйтатăн?— теççĕ кусем.

— Мĕн мĕн чухлĕ ыйтасси. Эсир мана уншăн хăвăр çурăмăр çинчи тирĕрсене пĕрер шит тăршшĕ сӳсе парăр,— тет Йăван.

Лешсен ирĕксĕрех килĕшмелле пулать. Йăван çĕççине кăларать те, иккĕшĕнне те пĕрер хăю пек çурăм тирĕсене сӳсе илсе, йăйăрĕсене парса ярать. Хăй, лаши çине утланса, килне таврăнать.

Халĕ ĕнтĕ Сарă кун патши хĕпĕртенипе çав тери вăйлă ĕçкĕ-çикĕ тума тытăнать. Ку ĕçке темлерен Йăван кĕтӳç те пырса кĕрет. Сарă кун патшин аслă кĕрӳшĕсем, вĕçĕ-хĕррисĕр ырă пулса, патша умĕнче мухтанса анчах лараççĕ. Патши те питĕ савăннă.

Йăван тăрать те, патша кĕрӳшĕсем патне пырса, аллисенчен перчеткисене карт туртса хывать.

— Пăх-ха, Сарă кун патши, çаксен аллисене!— тет Йăван патшана.

— Ара, мĕн пулнă сирĕн пӳрнĕрсене?— тесе ыйтать патша, тĕлĕнсе кайса.

— Пуртăпа касрăмăр,—теççĕ лешсем.

Йăван кусен пӳрнисене кĕсйинчен кăларса кăтартать те:

— Эсир, пӳрнĕрсене мана хăвăрах касса парса, ман армана илсе кайрăрçке, халĕ кунта ырă ятлă пулса мухтанса ларатăр тата!— тет. Унтан çавăнтах ури пӳрнисене кăларса кăтартать те юлашкинчен çурăм тирĕсене сĕтел çине сарса хурать.

— Урăр пӳрнисене касса парса, манран сысна илтĕр, çурăм тирне сӳсе парса, йăйăр илтĕр!—тет.

Лешсем, ним калама аптăраса, кĕл пек кăвакарса каяççĕ. Патша, кĕрӳшĕсем хăйне улталанине пĕлсенех, кусене виçĕ хутлă çуртран чӳрече витĕрех кăларса ывăттарать.

— Мĕнпе тав тăвас ĕнтĕ сана, Йăван?— тесе ыйтать патша хăйĕн кĕçĕн кĕрӳшĕнчен.

— Мана нимĕн те кирлĕ мар. Эсĕ, Сарă кун патши, мана ним вырăнне те хумарăн. Халĕ ĕнтĕ атьăр хăвăр пирĕн пата хăнана. Эпир епле пурăннине пырса курăр!—тет ăна хирĕç Йăван.

Патша хăйĕн кĕçĕн хĕрĕпе кĕрӳшĕ мунчара епле пурăннине курма каять. Мунча алăкĕнчен кĕрсенех,

кунӑн кусӗ-пусӗ пӗтӗмпе ҫуталса каять. Йӑван сӗтел ҫине темӗн тӗрлӗ ӗҫмеҫиме кӑларса тултарать. Пурте тӗлӗнсе каяҫҫӗ. Ҫапла ӗҫеҫҫӗ-ҫиеҫҫӗ те килӗсене саланаҫҫӗ.

Тепӗр кунне Йӑван виҫӗ ӑйӑрне те кӳлет те, лашине хыҫалтан кӑкарса, арӑмне ылтӑн урапа ҫине лартса, хӑйӗн тӑван ҫӗршывне курма тухса каять. Хӑйпе пӗрле пӗр кӗленче тӑрӑ шыв, супӑнь тата шурӑ алшӑлли илсе чикет. Акӑ кайнӑ чухне ҫул ҫинче ларакан старик патне ҫитеҫҫӗ. Йӑван старике супӑньпе ҫуса, алшӑллипе шӑлса тасатать.

— Ну, тавтапуҫах сире, ачамсем. Халӗ ӗнтӗ мана та, ватӑскере, ҫӗр ыррӑнах йышӑнӗ, эсир вара ӗмӗр-ӗмӗрех телейлӗ пулӑр! — тесе пиллесе ярать старик Йӑвана.

Йӑван ашшӗ патне ҫитет.

— Атте, эпӗ эсӗ пулнӑ ҫӗрсене пур ҫӗре те ҫитсе тухрӑм-тухрӑмах,— тет вӑл ашшӗне.

— Пушӑ хир варринче кама куртӑн? — тесе ыйтать ашшӗ.

— Эпӗ унта пӗр кӗмӗл сухаллӑ ватӑ ҫынна куртӑм, унран пиллӗх илсе килтӗм! — тет Йӑван.

— Аслӑ турӑн эсӗ, ывӑлӑм! Вӑл сана пӗтӗм халӑх ӑсне пиллесе панӑ. Ӗмӗр упраса усра вӑл пиллӗхе хӑвӑн ӑспуҫупа чӗрӳнте! — тесе пӗлтерет куна ашшӗ.

Ҫак кунтан пуҫласа Йӑван чӑнах та хӑйӗн ӗмӗрне чи телейлӗ пурнӑҫпа пурӑнса ирттерет.

## КЕХЕРМЕН-КЕТИЛ

Карчӑкпа старикӗн икӗ ывӑлӗ пулнӑ: асли, Кехитран,— вуниккӗре; кӗҫӗнни, Кехермен-Кетил,—ҫулталӑк ҫурӑра.

Пӗрре Кехитран Кехермен-Кетиле урама выляма ҫавӑтса тухнӑ, тет. Кӗтмен ҫӗртен таҫтан ҫавраҫил килсе тухнӑ та, Кехермен-Кетиле вӗҫтерсе кайса, пери патшине кайса панӑ, тет.

Кехермен-Кетил ҫав пери вӑйлӑ, хӑвӑрт ӳснӗ, тет. Унӑн ҫамки пӗр аршӑн, ал туни хулӑнӑшӗ аршӑн та чӗрӗк, пӗвӗ ҫӳллӗшӗ тӑхӑр аршӑнтан та иртнӗ, тет. Ҫавӑнпа пери ачисем ӑна, вӑйӗнчен хӑраса, хӑйсемпе пӗрле вӑййа хутшӑнтарман, тет.

— Эсӗ, этем ачи, ан ҫӳре пирӗнпе,— тенӗ, тет, ӑна лешсем.

Кехермен-Кетил ҫилленнипе пери ачисене тыта-тыта хӗне пуҫланӑ, тет. Перисем ҫакӑн пирки пери патшине:

— Сан усрав ывӑлу, вӑйӗпе мухтанса, пирӗн ачасене куҫ уҫтармасть, ӑҫта курнӑ унта хӗнет,— тесе элек панӑ, тет.

Пери патши вара Кехермен-Кетиле, вӗлерттерес шутпа, ҫирӗм пилӗк ҫулхи ҫирӗм перипелен шарла выляма хушрӗ, тет. Кехермен-Кетил шарла выляма кӑмӑлласах килӗшрӗ, тет. Вӑл вӑрмана кайрӗ, тет те, ӗмӗр ӳссе ларнӑ икӗ элес-мелес пысӑк юмана тӗпрен тӑпӑлтарса кӑларса, пӗринчен чукмар, теприн тӗпӗнчен чутласа шар турӗ, тет. Вара перисемпе шарла выляма тухрӗ, тет. Вылясан-вылясан, Кехермен-Кетил йӑлӑхрӗ, тет те:

— Тавай тупӑшса пӑхар,— терӗ, тет, перисене:— эпӗ шара кустарса ярам, эсир ҫирӗмӗн ӑна чарма пултарайӑр-и? — терӗ, тет.

Лешсем килӗшрӗҫ, тет. Кехермен-Кетил шарне меллӗрех вырнаҫтарса хучӗ, тет те, чукмарӗпе пӗтӗм вӑйӗпе ҫавӑрса ҫапрӗ, тет. Шар, тупӑ етри пек шилесе, шӑхӑрса ыткӑнчӗ, тет. Чарма тӑнӑ перисенне хӑшӗн аллине, хӑшӗн урине, хӑшӗнне пуҫне тата-тата иртсе кайрӗ, тет.

— Эх, пулатӑр та иккен, ҫакна та тытса чараймарӑр! — тесе кулать, тет, Кехермен-Кетил перисенчен.

Ҫакна курса, пери патши пычӗ, тет те:

— Ма ҫапӑҫатӑн? — тесе ятлаҫма пикенчӗ, тет.

— Ҫапӑҫман вӗт эпир, килӗшсех

вылятпăр. Çапăçас пулсан, эпĕ сан çĕрне ӳпне-питне çавăрса лартатăп,— терĕ, тет, Кехермен-Кетил пери патшине.

Пери патши вара: «Ку пире нĕтерсе пăрахĕ»,— тесе хăраса ӳкрĕ, тет те, Кехермен-Кетиле хăйсен патĕнчен хăваласа ярасшăн пулчĕ, тет.

— Ав çав çутă курăнакан çĕрте паттăрсен кĕрешĕвĕ пулать. Эсĕ çавăнта кай,—терĕ, тет, вăл Кехермен-Кетиле.

Кехермен-Кетил вара чукмарне йăтать те çутă еннелле тухса утать. Çутă çӳлти шăтăкран курăннă-мĕн. Шăтăкĕ пĕчĕккĕ пулнă. Кехермен-Кетил йăраланса хăпарса тухма тăнă, анчах, пысăкскер, хĕсĕнкелесе те тухайман. Вара вăл шăтăка аллипе тăрмаласа пысăклатнă та çутă тĕнчене тухса тăнă.

Пери çĕршывĕнче сывлăш пăчă та сывлама йывăр пулнă. Шăтăкран тухсассăнах, Кехермен-Кетиле уççăн туйăнса кайнă. Вăл йĕри-тавра çаврăнса пăхнă та шыв хĕррипе сукмак явăнса выртнине курнă. Урăх нихăш еннелле те çул пулман. Сукмакăн тепĕр енче улăх сарăлса выртнă. Кехермен-Кетил çав сукмакпа утнă. Кайсан-кайсан, унăн хырăмĕ выçнă та, вăл: «Çимелли мĕн те пулин тупăнмĕ-ши?— тесе, шыв хĕрринчи хăмăшсем хушшине кĕрсе ларнă. Часах ун умне шыв вăкри пырса тухнă. Вăл ăна чукмарĕпе персе вĕлернĕ те, тирне туртса çурса, какайне чĕрĕллех çисе янă. Хырăмне тăрантарсан, сукмакпа малалла утнă. Кайсан-кайсан, вăл мал енче хăй çути курнă та, сукмакран пăрăнса, çав çутта тĕллесе утнă. Нумай та кайман вăл — пĕр пӳрт патне çитнĕ те чӳрече витĕр пăхнă. Пӳртре кăмака çинче пĕр старик выртнă.

— Уç-ха, асатте!—тесе кăшкăрнă Кехермен-Кетил.

— Кам унта çĕр варринче ăшталанса çӳрекен?— тесе ыйтнă старик.

— Эп, Кехермен-Кетил,—тенĕ ку.

— Э, эсĕ-им вăл, ывăлăм!— тесе, кăмăллăнах уçса кĕртнĕ старик.— Юрать ман патăма килсе тухрăн-халĕ, атту пĕтеттĕн вĕт эсĕ,— тенĕ вăл, Кехермен-Кетиле тĕпелелле ирттерсе.— Кунтан инçех мар шыв хĕрринчи шăтăкра çĕр патши пурăнать. Вăл вуникĕ алăллă, кашни аллинчех хĕрĕхшер пӳрне. Аллине шăтăкран кăларса, вăл хĕрĕх пӳрнине хĕрĕх еннелле тăсса выртать. Пӳрнисене мĕнле çын пырса лекет, çав çынсене вăл лекнине-пĕрне хăй патне туртса илсе çăтса ярать. Çапла майпа вăл вуникĕ аллипе вуникĕ çĕршыв тытса тăрать,— тенĕ те старик каллех кăмака çине хăпарса выртнă.

Старик çывăрса кайсассăнах, Кехермен-Кетил хай шыв хĕрринчи шăтăк патне тухса утнă. Çĕр патши ăна шăтăк тĕлне çитичченех тытнă та хăй патне сĕтĕре пуçланă. Кехермен-Кетил ним тума аптăранă. Анчах шăтăк тĕлне сĕтĕрĕнсе çитсессĕнех, вăл урисемпе шăтăкăн тăвата хĕррине тĕреленнĕ те пĕтĕм вăйпа каялла туртăнма тытăннă. Туртăнсан-туртăнсан, çĕр патшин çăмлă алли татăлса кайса тăпăлса тухнă. Тинех вара Кехермен-Кетил ывăннăскер, çĕр патши аллине йĕрĕнсе аяккалла ывăтса янă та старик патне таврăнса çывăрма выртнă. Ирхине вăл, çĕрле хăйĕнпе нимĕн те пулман пек:

— Эпĕ çав çĕр патшине кайса курса килем-ха,—тенĕ старике.

— Ан кай ун патне, ывăлăм,— тесе чарать ăна старик.— Курсан пĕтерет вăл сана,— тет.

— Пĕтереймест, асатте!— тет Кехермен-Кетил.— Унăн пĕр аллине эпĕ çĕрле тăпăлтарса пăрахрăм. Халĕ хăйне пĕтерме каятăп,—тет.

— Ну, юрĕ, ачам, каясах тетĕн пулсан кайăн. Эп сана пĕр ăс анчах вĕрентсе ярам,— тет старик Кехермен-Кетиле.—Вăл курсассăнах сана: «Кĕр çăвара, çăтса яратăп!»—тейĕ. Эсĕ

ăна: «Çийиччен малтан мунча хутса çăвăнтар. Эпĕ хура халĕ, çуралнăранпа та çăвăнман. Вара çисессĕн те юрĕ»,—тесе кала. Вăл вара мунча хуттарĕ те сана: «Мунча кĕме кай»,— тейĕ. Эсĕ: «Пирĕн патшалăхра хуçа малтан кĕрет»,—те. Вăл мунча кĕме кайсан, эсĕ вара çапла ту: ун шкапĕнче икĕ эмел кĕленчи пур: пĕри вăй кĕртекенни, тепри вăй чакараканни. Эсĕ çавсене ылмаштарса ларт. Ытти мĕн тумаллине хăвах курăн,— тет.

Кехермен-Кетил старике тав тăвать те кайма шут тунă çĕре тухса каять. Çĕр патши патне çитсессĕнех, лешĕ ăна:

— Э, хăвах килтĕн-и!— тет мăшкăлласа.— Мана пĕр алла тăпăлтарнипе: «Пĕтрĕ ĕнтĕ ку»,— терĕн пуль. Анчах манăн пĕтме мар, тата вунпĕр аллă пур. Халĕ эсĕ каçару ыйтма килтĕн пулĕ те, каçармастăп. Кĕр çăвара, хыпса çăтатăп,— тет.

— Çук, санран каçару ыйтма килмен эпĕ, курма килсеттĕм,— тет Кехермен-Кетил çĕр патшине.—Çиетĕн пулсан — çиййĕн, анчах малтан мунча кĕртсе çăвăнтар, атту хура эпĕ халь, çуралнăранпа та çăвăнман,— тет.

— Юрĕ, çăвăнса тасал, эппин, тутлăрах пулăн,— тесе, çĕр патши стрепкине мунча хутма ярать. Мунча пулса çитсен:—Кайса кĕрех, эппин!— тесе хăвглать вăл Кехермен-Кетиле мунчана.

— Пирĕн патшалăхра хуçа малтан кĕрекенччĕ,— тет Кехермен-Кетил.

Çĕр патши мунчана кайсан, Кехермен-Кетил çĕр патшин шкапĕнчи эмел кĕленчисене ылмаштарса лартать. Çĕр патши таврăнсан, мунчана Кехермен-Кетил кайса кĕрсе килет.

— Ну, çăвăнса тасалтăн, кĕр çăвара — çиетĕп,—тет çĕр патши.

— Çиме кирек хăçан та ĕлкĕрĕн, малтан кĕрешсе пăхар-ха, унтан куç курĕ мĕн тăвассине,—тет Кехермен-Кетил.

— Апла пулсан, кĕрешиччен малтан кăштах сыпас пулать,— тесе, çĕр патши шкапран пĕр кĕленчине Кехермен-Кетиле илсе парать, тепĕрне хăй ĕçсе ярать. Анчах вăйĕ чакнине туйса илет те: — Чим-ха, чим, мана валли кăштах хăвар!— тесе, Кехермен-Кетиле ĕçме чарать.

Анчах Кехермен-Кетил эмелне шăпах ĕçсе ярать те:

— Хама та çитмерĕ!— тесе, кĕленчине çĕре çĕклесе çапать.

Унтан вăл çĕр патшине тула сĕтĕрсе тухса, чукмарĕпе çапса пăрахать те хырăмне туртса çурать. Çĕр патши хырăмĕнчен вĕçĕ-хĕрри çук хура халăх çĕкленсе тухать. Тухнипĕри Кехермен-Кетиле тав туса аллă парăççĕ, тет.

Çав çĕр патши хырăмĕнчен тухакан халăх хушшинче Кехермен-Кетилĕн ашшĕпе пиччĕшĕ Кехитран та тухрĕç, тет. Вĕсем Кехермен-Кетиле çавраçил вĕçтерсе кайсан, ăна шырама тухнă пулнă, тет те, вĕсене те çĕр патши хыпса çăтнă, тет-мĕн.

Çапла майпа ĕнтĕ Кехермен-Кетил çĕр патши тытса тăнă вуникĕ çĕршыври халăхсене пурне те ирĕке кăларчĕ, тет. Çавăнпа Кехермен-Кетилĕн мухтавлă ятне халăх ĕмĕр-ĕмĕр асăнать.

## ТЕЛЕЙ УÇÇИ

Ĕлĕкех-ĕлĕкех, сĕм авалах пулнă, теççĕ, ку ĕç.

Пĕр чăваш ялĕнче питĕ чухăн çын пурăннă. Унăн кашни çул пĕрер хĕр çуралса пынă. Старикĕн çав тери хăй ятĕнчен пĕр ывăл та пулин ӳстересси килнĕ. Анчах унăн арăмĕ шавах хĕр хыççăн хĕр çуратнă.

Арăмĕ çиччĕмĕш хут йывăр çӳренĕ чухне старик юмăça каять. Юмăç карчăк калать куна:

— Çитмĕл те çичĕ тинĕсĕн леш енче сĕтлĕ кӳлĕ пур, çав сĕтлĕ кӳлĕ варринче çавра утрав пур, çавра утрав çинче çиçĕм чулĕ выртать, çав çиçĕм чулĕ айĕнче, кĕмĕл мăйăр хуппи ăшĕнче телей уççи выртать. Çиччĕмĕш хĕрне çав телей уççине кайса илтерсен, санăн мăшăру ывăл ача çуратса парĕ,— тет.

Старик пуçне усса килне таврăнать те мĕн илтнине арăмне каласа парать. Лешĕ, нимĕн сăмах чĕнмесĕрех, тĕпсакайне анса, тата тепĕр хĕрача çуратса тухать. Çиччĕмĕш хĕрĕн пичĕ пĕр енĕ уйăх, тепĕр енĕ хĕвел, тет.

Хĕр кунпа мар, сехетпе ӳсет. Çичĕ уйăх иртсенех, вăл çав тери хитре юрăсем юрлама вĕренет. Çав юрă-кĕвĕсемпе пĕтĕм çутçанталăк ӳсĕрĕлсе кайнă пек пулать, кайăк-кĕшĕксем, тискер кайăксем — пурте ташша ярaççĕ.

Ӳсет хĕр, пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерсе. Анчах пăхать вăл ашшĕ-амăшĕ çине — ашшĕ-амăшĕ вăл ӳссе çитĕннишĕн пĕртте хавас мар.

— Анне, мĕншĕн эсĕ яланах салхуллă? Мĕншĕн санăн куçусем куççуллĕ?—тет хĕр.

— Эх, пепкем! Ывăл çуралас çĕртен хĕр çуралтăн. Çавă тĕксĕмлетет пирĕн телее,— тавăрать амăшĕ, хаш та хаш сывласа.

— Эпĕ мĕнпе пулăшам сире, ырă аннеçĕм?—ыйтать хĕр.

Амăшĕ ăна юмăç канашĕ çинчен каласа парать. Хĕр çавăнтах амăшĕн кăкăр сĕчĕпе çăрса тунă пашалу пĕçерттерет те инçе çула тухса каять.

Çитнĕ-и, çитмен-и сарă хĕр сĕтлĕ кӳлĕ варринчи утрав çине, тупнă-и, тупман-и вăл çиçĕм чулĕ айĕнчи телей уççине — ун çинчен юмах пĕлмест. Анчах хĕр кайса çухалсассăнах арăм каллех йывăр çын пулать те тăхăр уйăхран сап-сарă çӳçлĕ ывăл ача çуратса парать.

Çичĕ çул та çичĕ уйăх иртет, ывăл ача кунран-кунах ӳсет, çывăхри вăрмансене сунара тухса çӳрекен пулать, унтан инçетри-инçетри çĕршывсене кайса курса çӳреме кăмăл тăвать.

Иртет пĕр кун, иртет ик кун, иртет виçĕ кун. Виçĕ кун мар иртетмĕн çĕр çинче, виçĕ çул та иртет, анчах карчăкпа старикĕн ывăлĕ çаплах таврăнмасть. Çилсем те вĕреççĕ çичĕ тинĕс леш енчен, карапсем те ишеççĕ хумсем урлă, купсасем те таврăнаççĕ ют патшалăх çĕрĕсенчен — карчăкпа старикĕн ывăлĕ çаплах таврăнмасть. Ĕнтĕ ашшĕпе амăшĕн çӳçĕсем юр пек шуралса кайрĕç. Вăхăт мар шуратать ват пуçа, йывăр хуйхăпа вĕри куççуль шуратать.

Пĕрре çапла çак ватăсем патне иртен-çӳренсем хваттере çĕр выртма чарăнаççĕ.

— Ну, куртăм-тăк куртăм тĕлĕнмелле мыскара! Çав-çав çĕрте çав-çав хуçан сад пахчи пур: çулçисем çупаççĕ, улмисем ташлаççĕ,— тет пĕри.

— Вăл-и мыскара! Вăт эп куртăм-тăк куртăм: çав-çав çĕрте çав-çав купсан пĕр çил арманĕ пур; çилсĕрмĕнсĕр аватать, сĕтлĕ çăмах калаpать,— тет тепри.

— Эсир эпĕ курнине ĕмĕрне те курас çук,— пӳлет икĕ юлташне виççĕмĕш старик.— Çав-çав çĕрте, çав çĕрте, çичĕ тинĕс леш енче, сĕтлĕ кӳлĕ варринче çĕлĕк пек утрав пур. Çав утравра пĕр хĕр-пике патша пулса пурăнать. Хăйĕн пичĕ пĕр енĕ уйăх, тепĕр енĕ хĕвел. Унăн тăван шăллĕ пур, çĕн уйăхпа çĕнелет, кив уйăхпа кивелет. Çак пике-патшана пĕтĕм чĕрчунсем, выльăх-чĕрлĕхсем, кайăк-кĕшĕксем пăхăнса пурăнаççĕ. Унăн кĕвви-юррисемпе пĕтĕм çутçанталăк чарăна пĕлмесĕр юрласа, ташласа тăрать. Çак хĕр-пике аллинче — телей уççи. Кам ăна шанать, ĕненет, вăл çав уçăпа унăн телейне уçса парать. Ку вăл чăн та чăн тĕлĕнмелле мыскара!

Çил вĕрет те тамалать, çын вилет

те ăсанать, йĕр пулать те çухалать, анчах пĕр каланă хыпар нихçан та çухалмасть. Çак патшалăхри çынсем телей патшине хăйсем патне килсе пуçпулса пурăнма тилмĕрме пуçлаççĕ. Пĕрре çитереççĕ хыпар — пике килмест, иккĕ çитереççĕ — пике килмест, виççĕмĕшĕнче, пĕтĕм халăх кăмăл тумламĕнчен кучченеççем хатĕрлесе, çичĕ хĕрпе пĕр ывăл ашшĕне, шап-шурă çӳçлĕ старике, аслă йыхрава кăларса яраççĕ.

Çитет старик асамлă çĕршыва, курать мухтавлă патшапа унăн тăванне. Курать те — вĕсем иккĕшĕ те хăйĕн юнĕнчен ӳтленсе пулнă хĕрпеле ывăлĕ иккенне уйăрса илет. Вара вăл çавăнтах, чĕркуçленсе ларса, халăх кăмăлĕн кучченеçне вĕсем умне пырса хурать.

Юмах суять пулĕ те, анчах эпĕ хам суймастăп. Çав хĕр халĕ те пулин телей уççипе халăх ĕмĕтне уçауça парать, теççĕ.



# ХАВ ТАВАНУ — ВУТ УРЛА!

## ПИКЕПЕ ХАРХАМ

Пĕр тăлăх арăмăн ҫичĕ ывăл пулнă, тет. Хĕр чунĕ пĕрре те пулман, тет. Ывăлĕсем вăрман ĕҫлесе пурăнаҫҫĕ, тет.

Пурăнсан-пурăнсан, амăшĕ йывăр ҫын пулать, тет. Пĕрре вăрмана тухса кайнă чухне ывăлĕсем амăшне калаҫҫĕ, тет:

— Анне, эпир киличчен ҫуратсан, ывăл пулсан, пирĕн ҫул ҫине шĕшлĕ пăрах; хĕр пулсан, йĕке пăрах,— тесе калаҫҫĕ, тет.

Ку арăмăн хĕр ҫуралать, тет те, вăл ывăлĕсен ҫулĕ ҫине йĕке кайса пăрахать, тет. Кӳршисем, кураймасăр, йĕке вырăнне шĕшлĕ кайса пăрахаҫҫĕ, тет.

Пиччĕшĕсем таврăннă чухне хай шĕшлĕ кураҫҫĕ, тет те, хурланнипе килĕнчен таҫтах, ҫичĕ тинĕс урлах пăрахса тараҫҫĕ, тет.

Хĕр Пике ятлă пулчĕ, тет. Ӳссе ҫитсен, Пике ытти ачасемпе пĕрле урама выляса ҫӳреме тухма тытăнчĕ, тет.

Пĕрре ҫапла, урама тухсан, ачасем Пикерен мăшкăллаҫҫĕ, тет:

— Ҫичĕ пиччӳ пусне ҫиекен! Ҫичĕ пиччӳ пуҫне ҫиекен!— теҫҫĕ, тет.

Пики пӳртне макăрса кĕрет, тет те, амăшĕнчен:

— Анне, манăн ҫичĕ пичче пулнă-им? Урамра мĕншĕн манран ҫапла мăшкăллаҫҫĕ?—тесе ыйтать, тет.

— Ҫук, ачам, ҫук! Ара, урамра мĕн тесе витлемĕҫĕ унта,— тесе калать, тет, амăшĕ.

Тепĕр кунне Пике каллех урама тухать, тет. Ачасем ăна татах ҫапла мăшкăллаҫҫĕ, тет. Пике каллех амăшĕ патне чупса кĕрет те:

— Анне, манăн ҫичĕ пичче пурим? Ăҫта вĕсем?— тесе ыйтать.

— Ҫук, ҫук, ачам, мĕн аташатăн?— терĕ, тет, каллех амăшĕ.

Виҫҫĕмĕш кунне тухсан, ачасем каллех Пикене:

— Ҫичĕ пиччӳ пуҫне ҫиекен! Ҫичĕ пиччӳ пуҫне ҫиекен!— тесе мăшкăллаҫҫĕ, тет.

Пике вара, амăшĕ пурпĕр каламасть тесе, килне кĕмесĕрех юмăҫ патне кайрĕ, тет.

— Кинемей, манăн пиччесем пулнă-и, ҫук-и, кала-ха,—терĕ,тет, юмăҫ карчăкне.— Эпĕ урама тухатăп та, ачасем манран шавах: «Ҫичĕ пиччӳ пуҫне ҫиекен! Ҫичĕ пиччӳ пуҫне ҫиекен!»—тесе мăшкăллаҫҫĕ, тет.—Аннерен ыйтатăп та — каламасть,— тет.

Юмăç карчăк ăна çапла ăс парать:

— Эсĕ, хĕрĕм, тепĕр чухне урама тухсан, аннӳне кăшкăр. Аннӳ тухсан вара: «Анне, мана карта витĕр чĕчĕ пар-ха!»— те. Чĕчĕ парсан, эс ун çине вĕрлĕк яр, вара вăл хăех калĕ,— тет.

Пике килне таврăнать те чăн та çапла тăвать. Урама выляма тухать те амăшне:

— Анне, тух-ха!— тесе кăшкăрать.

Амăшĕ сиксе те тухать.

— Карта витĕр чĕчĕ пар-ха, анне!— тет Пике.

Амăшĕ парать те, Пике ун çине вĕрлĕк ярать.

— Ай, тур-тур, хĕрĕм, мĕн тăван эс?— тет амăшĕ.

— Пиччесем ăçта кайнине кала, вара яратăп,—тет Пики.—Ман вĕсене курас килет,—тет.

Амăшĕ калать:

— Эй, ачам, çичĕ пиччӳ тинĕс урлах кайнă. Ăçтан çитĕн эс унта?— тет.

Апла каласан, хĕрĕ вĕрлĕке илет те:

— Пурпĕр каятăп, анне! Пиччесене курас килет,— тет.

Амăшĕ ӳкĕте кĕртсех ярасшăн мар. Хĕрĕ итлемест амăшне, каймах хатĕрленет. Амăшĕ те вара нимĕн те тăваймасть, хĕрне çула хатĕрлеме пуçлать. Хĕрлĕ кĕпе тăхăнтарать Пикене, хĕрлĕ тутăр çыхтарать, макăрамакăра икĕ тумлам сĕтне парать те вăрăм çула кăларса ярать. Пиччĕшсем патне çитес тесен, Пикен çичĕ тинĕс урлă каçмалла.

Акă, утсан-утсан, Пике тинĕс хĕррине çитрĕ, тет.

Вупăр карчăк хĕрĕ, Хăрхăм, кĕпе çăвать, тет.

— Ăçта каятăн, Пике?—тесе ыйтать, тет, çак Хăрхăм.

— Çичĕ пичче патне каятăп,— тесе калать, тет, Пике.

— Мана та илсе каятăн-и?— тет, Хăрхăм.

Пике шухăшласа тăрать те:

— Атя, ара,— тесе тавăрать.

Икĕ витрине çапса салатрĕç, тет те, кусем, кимĕ турĕç, тет. Кимĕ çине ларсçĕ те тинĕселле ишеççĕ, тет. Пике:

Юх, юх, киммĕм, юх, киммĕм!
Авăс, авăс, таканам!
Вĕр, вĕр, йыттăм, вĕр йыттăм,
Авăт, авăт, автанăм! —

тесе юрлать, тет. Кимми юхать, тет, такани авăсать, тет, йытти вĕрет, тет, автанĕ авăтать, тет. Каяççĕ, тет, кусем. Пĕр тинĕс урлă каçсан Хăрхăм шыва кĕресшĕн, тет.

— Атя, Пике, шыва кĕрер,—тесе каларĕ, тет.

— Атя, ара,—терĕ, тет, Пике.

Хайхисем шыва кĕреççĕ, тет. Шывра кăшт чăмпăлтатсан, Хăрхăмĕ кăшт маларах тухать, тет те, Пике кĕпине тăхăнать ярать, тет. Пике çарамасах тăрса юлать, тет.

— Пар кĕпене, Хăрхăм, мĕншĕн памастăн?—тесе ыйтать, тет, Пике макăра-макăра.

Хăрхăм пурпĕр памасть, тет. Вара Пике тӳсеймесĕр:

— Анне, анне, пăх-халĕ: Хăрхăм кĕпе тăхăнчĕ!—тесе кăшкăрчĕ, тет.

Унччен те пулмасть, амăшĕ суса панă пĕр тумлам сĕчĕ çын чĕлхипе:

— Çитеп, хĕрĕм, çитеп!—тесе йăпатать, тет, Пикене.—Час хыв, Хăрхăм, кĕпене!—тесе кăшкăрать, тет.

Хайхи Хăрхăмĕ хăраса наччасах хывса пачĕ, тет те, Пике кĕпине, хăй кĕпине тăхăнчĕ, тет. Иккĕшĕ те малалла каяççĕ, тет, Тепĕр тинĕс урлă каçрĕç, тет.

— Атя, Пике, шыва кĕрер!—тесе аптратать, тет, Хăрхăм каллех.

Пике ирĕксĕрех килĕшрĕ, тет. Хăрхăм, шывран каллех Пикерен малтан тухса, унăн кĕпине тăхăнса ячĕ, тет.

— Анне, анне, Хăрхăм кĕпене

памасть!—тесе макăрать, тет, Пике.

— Çитеп, хĕрĕм, çитеп! Час хыв, Хăрхăм, Пике кĕпине! — тесе юнать, тет, амăшĕ.

Хăрхăм кĕпине вăр-вар хывса пачĕ, тет. Каллех иккĕш каяççĕ, тет.

Юлашки тинĕс урлă каçсан, Хăрхăм каллех Пикене шыва кĕме аптăратать, тет. Пике кĕресшĕн мар, тет. Хăрхăм, ирĕксĕрех кĕртрĕ, тет те, Пике кĕпине каллех улăштарса тăхăнчĕ, тет.

— Анне, анне!—тесе макăрать, тет, Пике.

Амăшĕ сăмах та чĕнмест, тет. Аптăранипе Пике кимĕ ăшне кĕрсе ларчĕ, тет те:

Юх, юх, киммĕм, юх, киммĕм,
Авăс, авăс, таканам!
Вĕр, вĕр, йыттăм, вĕр йыттăм!
Авăт, авăт, автанăм!—

тесе юрлать, тет, макăра-макăра.

Кимми юхмасть, тет, такани авăсмасть, тет, йытти вĕрмест, тет, автанĕ авăтмасть, тет. Хум çинче çапкаланса çӳре-çӳре хайхи киммипе пĕр хăмăшлăха кĕрсе тăрăнчĕç, тет. Çӳлелле пăхать, тет те, Пике, пĕр курак вĕçсе пынине курать, тет.

— Курак тус, курак тус! Ме-ха ман хăлха алкине,—тет Пике курака.—Пиччесем патне кайса, хĕрсем тинĕсе путнă тесе кала!—тет.

— Вилĕр-ха, вилĕр,—тет курак.— Вилсен, куçăра чавса кăларăп!—тет.

Макăрса юлать Пике. Татах пăхать те çӳлелле чакак вĕçсе пынине курать.

— Чакак тус, чакак тус!—тет Пике.—Ме-ха хăлха алкине, пиччесене кайса пар, хĕрсем тинĕсе путнă тесе кала,—тет.

— Вилĕр-ха, вилĕр! Вилсен, куçăрсене чавса кайăп-ха!—тет чакак.

Пике татах макăрса юлать. Кăшт тăрсан, вăл куккук явăнса çӳренине курать.

— Куккук тус, куккук тус!—тет каллех Пике.—Ме-ха ман кĕмĕл хăлха алкине, пиччесем патне кайса пар. Хĕрсем тинĕсе путнă тесе кала,—тет.

Куккукĕ пăрр вĕçсе анать те кимĕ çине, хăлха алкине çăварĕпе çаклатса та каять. Пиччĕшĕсем патне çитет те, чӳрече умĕнчи карлăк çине ларса:

Куккук шепер, куккук шепер,
Хĕрлĕ шура хĕрсем путнă,
Шурне калать, шур ут ыйтать.
Пăчăх тăвар, пасман кĕрпе,—

тесе юрлать, тет.

Юрласа пĕтерет, тет те, куккук, Пике хăлха алкине чӳрече çине ывăтса хăварать. Пиччĕшĕсем хăлха алкине кураççĕ те:

— Ара, ку пирĕн йăмăкăн хăлха алккийĕ вĕт, кайса илес ăна!—теççĕ.

Шурă лаша кӳлеççĕ, кĕрпе-тăвар илеççĕ те каяççĕ. Тинĕс хĕрне çитсен, Пикесем макăрса лараççĕ, тет. Вара кусем хĕрсене чӳклесе кăлараççĕ, тет.

Пике Хăрхăм пулнă ĕнтĕ, Хăрхăм Пике пулнă. Пиччĕшĕсем кусене килне илсе таврăнаççĕ. Килне таврăнсан, Хăрхăм пулнă Пикене кушаксемпе пĕрле çитерме тытăнаççĕ, тет.

Пурăнсан-пурăнсан, пиччĕшĕсем пикене лашисене шăварма яраççĕ, тет. Пике тинĕс хĕррине чăн малтан аслă пиччĕшĕн лашине шăварма каять, тет. Лаши ĕçмест, тет, пуçне сĕнксе тăрать, тет. Пике макăра-макăра шăварать, тет:

Тăпăр-тăпăр ут ури,
Чăнкăр-чăнкăр чĕн йĕвен!
Ĕç, ĕç, лашам, ĕç, лашам,
Аслă пичче лаши, ĕç
Тинĕс шывĕн тăррине,
Ешĕл курăк сывлăмне!—

тесе юрлать, тет. Лаши çаплах ĕçмест, тет. Пике килне пырса ячĕ, тет те, лашине, лаши килне çитсенех ĕçесшĕн кĕçенет, тет.

Пике вăталăх пиччĕшĕн лашине шăварма кайрĕ, тет. Каллех юрлаюрла:

Тăпăр-тăпăр ут ури,
Чăнкăр-чăнкăр чĕн йĕвен!
Ĕç, ĕç, лашам, ĕç, лашам,
Вăталăх пичче лаши, ĕç
Тинĕс шывĕн тăррине,
Ешĕл курăк сывлăмне,—

тесе шăварать, тет. Ку лаши те ĕçмест, тет, пуçне сĕнксе тăрать, тет. Пике ăна килне илсе кайрĕ, тет. Лаши килне пырсанах шыв ĕçесшĕн кĕçенет, тет. Пиччĕшĕсем:

— Ку, мур, ĕçтермест-тĕр лашасене!—тесе калаççĕ, тет.

Кĕçĕн пиччĕшĕ:

— Хам вăрттăн кайса пăхам-ха: ĕçтерет-и, çук-и?—тесе калать, тет. Тинĕс хĕррине кайса шăтăка пытанса выртрĕ, тет, ку.

Пике кĕçĕн пиччĕш лашине çавăтса пырса шăварать, тет. Лаши ĕçмест, тет, пуçне сĕнксе тăрать, тет. Пике макăра-макăра:

Тăпăр-тăпăр ут ури,
Чăнкăр-чăнкăр чĕн йĕвен!
Ĕç, ĕç, лашам, ĕç, лашам,
Кĕçĕн пичче лаши, ĕç
Тинĕс шывĕн тăррине,
Ешĕл курăк сывлăмне,—

тесе шăварать, тет.

Пиччĕш шăтăкран тухать те, хĕр юрланине илтеймен пек пулса:

— Мĕскер калатăн эс?—тесе ыйтать.

— Лаша ĕçмест те, юрласа шăваратăп,—тет Пике.

— Мĕншĕн тата макăратăн?—тет пиччĕшĕ.

— Çук, макăрмастăп эп. Тинĕс урлă сивĕ çил вĕрет те, куççуль тухать,—тет Пике.

Килне таврăнсан, кĕçĕн пиччĕшĕ аслисене хăй тинĕс хĕрринче мĕн курни-илтнисене каласа кăтартать.

— Çав тери хурланса юрланипе хам та макăрса яраттăм,—тет.

— Мĕн тăвас вара?—теççĕ пиччĕшĕсем.—Улталамасть-ши вăл пире?—теççĕ те чăнне пĕлме юмăç карчăк патне каймалла тăваççĕ.

— Кинемей, эпир хамăр йăмăка уйăраймастпăр. Мĕн тăвас, кала-ха,—теççĕ.

Юмăç калать:

— Эсир акă мĕн тăвăр: çичĕ çуна çапă тийĕр те, пĕр çĕре купаласа, вут тивертсе ярăр, вара хĕрĕрсене вут урлă сикме хушăр. Урлă каçаканни сирĕн тăванăр пулĕ,—тет.

Килне таврăнсанах, кусем çапла тăваççĕ. Çичĕ çуна çапă тиеççĕ те хутăштарса вут тĕртсе яраççĕ. Хĕрĕсене, чĕнсе кăларса, вут урлă каçма хушаççĕ.

Пике тухать те ялтах сиксе каçать. Хăрхăмĕ лапах вут çине персе ӳкет. Ӳкет те çавăнтах çунса каять.

Çавăнтан вара пиччĕшĕсем тăван йăмăкне палласçĕ те, ăна хăйсем патне илсе, питĕ хытă пăхма тытăнаççĕ. Çипуçне тăхăнма ĕлккен кĕпесем, тутăрсем, сулăсем, çĕрĕсем иле-иле параççĕ.

Çичĕ пиччĕшĕн çичĕ арăм пулнă. Упăшкисем йăмăкне хăйсенчен хытă пăхма тытăннине кура аслă инкĕшĕсем Пикене курайми пулса каяççĕ.

— Пирĕн упăшкасем епле: йăмăкне çеç тумлантарасшăн,— тесе калаççĕ пĕр-пĕрин хушшинче.—Пĕр йăмăкĕ пулнă та, уншăн вилсех кайнă! Йăтса çӳреççĕ-ха тата улпут пек! Атьăр ăна вăрмана илĕртсе илсе каятпăр та аташтарса хăваратпăр. Ан пултăр унăн чунĕ кунта,—теççĕ.

Шăпах çак вăхăтра пиччĕшĕсем арăмĕсене Пикене хăйсен çĕршывĕпе паллаштарса çӳреме хушаççĕ.

— Пикене вăрмана илсе кайăр-ха, пирĕн çĕршыва кăтартса çӳрĕр,—теççĕ.

Арăмсем питĕ хĕпĕртеççĕ.

— Атя, хĕрсем, пултăрана,— теççĕ.

— Атьăр, ара,—тет Пики.

Тухса каяççĕ кусем, тăвату инкĕшĕ Пикепе пĕрле. Вăрмана çитсен, аслă инкĕшĕ Пикене калать:

— Хĕрсем, атьăр сулă ывăтмалла выляр,—тет.

— Выляр, ара,—тет Пике.
— Ут эсĕ малтан,—тет инкĕшĕ.

Пики суллине ту çинчен ыватса ярать те, сулли хуран тӑрри çине ӳксе çакланать. Инкĕшĕсем Пикене:

— Хӑпарса ил суллуна, хĕрсем,— теççĕ.

Пики хуран çине йӑпӑр-япӑр хӑпарса каять те, çак вӑхӑтра аслӑ инкĕшĕ Пикене сар ука пек çивĕт тунинчен турат çумне çыхса та хурать. Хӑйсем вара килне кайрĕç, тет.

Пĕр-ик кунтан, апат çисе ларнӑ чухне, пиччĕшĕсем арӑмĕсенчен:

— Пирĕн Пике ӑçта ара?—тесе ыйтаççĕ, тет.

— Таçта вӑл,—тесе калаççĕ, тет, лешсем.—Вӑрмана кайсан, таçта шала кĕрсе кайрĕ те, кӑшкӑртӑмӑр-кӑшкӑртӑмӑр — хирĕç ним те чĕнмерĕ. Вара эпир, тухĕ-ха хӑех тесе, киле таврӑнтӑмӑр,—теççĕ.

Пиччĕшĕсем çавӑнтах вара çиччĕшĕ çичĕ лаша çине утланаççĕ те Пикене шырама вӑрмана тухса каяççĕ. Вӑрмана çитсен, йӑмӑкне:

— Пике! Пике! Ӑçта эс?!—тесе кӑшкӑрма тытӑнаççĕ.

Пике илтет те кусене хирĕç:

Ах, пиччеçĕм, пиччеçĕм,
Кĕпӳ те сан кирлĕ мар,
Нимĕскер те кирлĕ мар.
Хӑмӑш пекех пĕвĕм ман
Улӑм ури пулайрĕ,
Сар ука пек çӳçĕме
Хуран шурри çапайрĕ,
Панулми пек питĕме
Хура куççуль хуратрĕ!—

тесе юрлать, тет, хӑйĕн кайӑк сассипе, пысӑк хуран кутне йĕпетет, тет, хӑйĕн ӑшӑ куççулĕпе.

Таçтан инçетрен илтеççĕ, тет, пиччĕшĕсем йӑмӑкĕн хурлӑхлӑ сассине, анчах ӑçтан илтнине чиперех чухлаймаççĕ, тет. Ыткӑнчĕ, тет, вара йытти вӑрман ӑшнелле. Пикене курсан, йытӑ йынӑшса вĕрме тапратрĕ, тет. Пиччĕшĕсем, йытӑ вĕрнине илтсен, кĕреççĕ, тет те, чӑтлӑха, Пикене тупса, хуран çинчен антарса тухаççĕ.

— Кам çакрĕ сана капла?—тесе ыйтаççĕ пиччĕшĕсем.

Пике вара тĕпĕ-йĕрĕпе каласа кӑтартать:

— Инкесем сулӑ ыватса выляс терĕç те мана малтан ываттарчĕç. Эпĕ ыватрӑм та, суллӑм хуран тӑррине çакланчĕ. Сулӑ илме хуран тӑррине хӑпарса кайрӑм та, аслӑ инке хуран турачĕ çумне çыхса лартрĕ. Кӑшкӑртӑм-кӑшкӑртӑм — итлемерĕç, мана пӑрахсах таврӑнчĕç,—терĕ, тет.

Вара пиччĕшсем килне таврӑнаççĕ те аслӑ арӑмĕсенчен:

— Сире мĕн кирлĕ: акар йытти кирлĕ-и, юпах тиха кирлĕ-и? — тесе ыйтаççĕ, тет.

Лешсем:

— Акар йыттипе мĕн тӑватпӑр! Юпах тиха пулинччĕ,—тесе калаççĕ, тет.

Вара арӑмĕсене тӑваттӑшне те тӑватӑ лаша хӳринчен кӑкараççĕ, тет те, таптаттарса вĕлереççĕ, тет. Юлашкинчен вĕсем çапла юрларĕç, тет:

Пуçӑм тени шӑпӑр пултӑр,
Аллӑм тени кĕрепле пултӑр,
Ура тени сенĕк пултӑр!
Лерттĕм, лерт!—

терĕç, тет.

Пикене вара пиччĕшсем вӑрман патши ывӑлне качча пачĕç, тет. Çав тери ĕлккен, пысӑк туй туса ирттерчĕç, тет. Йӑмӑкĕн туйне курма амӑшне те кайса илчĕç, тет. Халĕ те пулин лайӑх пурӑнаççĕ, тет, вĕсем.

Туйне кайрӑм эпĕ те,
Пылпа ĕçрĕм эрех те.
Халап хапха тӑрринче,
Юмах юпа тӑрринче.

## УЛЬТИЛЕТ

Пĕр арӑмӑн пĕр хĕр, тет. Ĕлĕкхи арӑмĕн тепĕр хĕр, тет. Ку арӑмĕн хĕрĕ Ультилет ятлӑ, тет. Хӑй хĕрне ку юратать, тет, ĕлĕкхи арӑмĕн хĕрне юратмасть, тет.

Пĕрре ку икĕ хĕр кĕпе çума каяççĕ, тет. Кĕпине çуса пĕтерсен, аслă хĕрĕ:

— Питне çу, Ультилет, эп çурăм,— тесе калать, тет.

Ультилечĕ питне çума тытăнать, тет те, ку ăна шыва тĕртет ярать, тет. Килне таврăнсан, амăшĕ:

— Ăçта Ультилет?—тесе ыйтать, тет.

— Çырма хĕрне юлчĕ-ха,—тесе калать, тет, аслă хĕрĕ.

Хай кĕтет-кĕтет, тет, амăшĕ, ку Ультилете — çук, тет. Çырма хĕрне шыва каять, тет, унта та çук, тет. «Шыва кайнă пуль ку»,—тесе калать, тет.

Тух, Ультилет, тух, тух,
Пĕр хуран пăтă пĕçертĕм,
Куçне сар çу хыврăм!—

тесе калать, тет.

Тухаймăп, анне, тухаймăп,—
Мăйăма вреçлен явăннă,
Пилĕкме арман чуль çакнă!—

тесе калать, тет, Ультилет. Амăш килне каять, тет, ĕнтĕ — ним тума та çук.

Чăтаймасть, тет, амăшĕ, каллех каять, тет, çырма хĕрне. Хăй ачи вĕт! Ашшĕ-амăш ачишĕн пит çунать ĕнтĕ.

Тух, Ультилет, тух, тух,
Сăрка парăп, Ультилет!—

тесе калать, тет.

Тухаймăп, анне, тухаймăп,—
Мăйăма вреçлен явăннă,
Пилĕкме арман чуль çакнă!—

тесе калать, тет, Ультилет.

Амăшĕ каллех килне каять, тет:

— Упа килсен, ан чĕн,—тесе хăварать, тет.

Амăш кайсан, упа пырать, тет.

Тух, Ультилет, тух, тух,
Сăрка парăп, Ультилет!—

тесе калать, тет, упа. Чĕнмест, тет, Ультилечĕ. Кайрĕ, тет, упи те. Кăшт тăрсан, каллех амăшĕ пырать, тет:

Тух, Ультилет, тух, тух,
Алка парăп, Ультилет!—

тесе калать, тет.

Тухаймăп, анне, тухаймăп,—
Мăйăма вреçлен явăннă,
Пилĕкме арман чуль çакнă!—

тесе калать, тет, хĕрĕ.

Ах, амăшĕ чупкалать, тет, ним тума та çук, тет.

— Упа килсен, ан чĕн, ун сасси хулăн пулĕ,—тесе калать, тет. Каллех хăй килне каять, тет.

Кăшт тăрсан, упи пырать, тет те, çинçе саспа:

Тух, Ультилет, тух, тух,
Алка парăп, Ультилет!—

тесе калать, тет.

Ультилечĕ, амăшĕ пуль тесе:

Тухаймăп, анне, тухаймăп,—
Мăйăма вреçлен явăннă,
Пилĕкме арман чуль çакнă!—

тесе калать, тет.

Упи аллине шампăрр чиксе ярать, тет те, тупаймасть тет. Татах шăмпăрр чиксе ярать, тет те, Ультилете туртать кăларать, тет.

Хай упа хĕре хăй йăвине илсе каять, тет. Йăви умне каскасем йăта-йăта купалать, тет, никам та ан кĕтĕр тесе шутлать, тет. Лутки-луткине пыл йăтса пырать, тет. Утарсем, нӳхрепсем çĕмĕрет, тет. Пыл та çу анчах çитерет, тет. Çӳпçесем çаратса, укçаллă мăй çыххисем, хушпусем илсе пырать, тет. Пĕтĕм укçа анчах çӳрет, тет, Ультилет.

Пĕр çул иртет, тет. Пурăнсан-пурăнсан, амăшсем патне курма каяççĕ, тет. Ультилечĕ амăшсем патне хушпу çаптарма юлать, тет, упи килне каять, тет.

Ультилете илме пынă çĕре кун амăшĕсем хĕрĕх пичетни* пусă алт-

---

* Хăлаç.

тараççĕ, тет, тĕпне юман кăвар тултарчĕç, тет, çине хура кĕççе сарчĕç, тет. Упана епле те пулин пĕтерессшĕн, тет, Ультилечĕ пĕтересшĕн мар, тет.

Пырать, тет, упи.

Кил, кил, упа, кил, упа,
Хура кĕççе çине лар, упа!—

тесе калаççĕ, тет.

Ан кил, упи, ан кил!
Хĕрĕх пичетни пус алтнă,
Юман кăвар янă,
Хура кĕççе витнĕ!—

тесе калать, тет, Ультилечĕ.

Кил, кил, упа, кил, упа,
Хура кĕççе çине лар, упа!—

тесе калаççĕ, тет, лешсем.

Ан кил, упи, ан кил!
Хĕрĕх пичетни пус алтнă,
Юман кăвар янă,
Хура кĕççе витнĕ!—

тесе калать Ультилечĕ. Лешсем каллех:

Кил, кил, упа, кил, упа,
Хура кĕççе çине лар, упа!—

тесе калаççĕ, тет.

Упи хай пырать, тет те, хура кĕççе çине лŷ-ŷп ларать, тет. Унтан хыçаларах кашă-ăрт туртăнать, тет те, хĕрĕх пичетни пусса анать каять, тет, юман кăвар çине. Ах, мĕкĕрет, тет, упи! Ультилечĕ макăрать, тет.

Вилчĕ, тет, упи пусăра.

## ВУПĂР

Карчăкпа старик пурăнаççĕ, тет. Кусен пĕр ывăл пур, тет. Ывăлĕн амăшĕ амаçури пулнă, тет. Амаçури вупăр, тет, ку.

Ывăлне авлантарнă, тет. Ачи те пулнă, тет. Пĕрре кĕркунне ку амаçури картишне тухнă, тет те, курах кайнă, тет: уйăх çути çап-çутă, тет. Пŷртне кĕрсен, кинне калать, тет, амаçури:

— Уйăх çути çап-çутă, çатма çулĕ тап-такăр, пашалу пĕçер те хăнана кай,—тесе калать, тет.

Кинĕ пашалу çăрать, тет. Пиççе тухсан, лаша кŷлсе, ачине илсе, хăнана тухса каять, тет, хăйĕн тăван ашшĕ-амăшĕ патне.

Ялтан тухсан, инçе те каяймасть, тет, амаçури пăянамăшĕ (хунямăшĕ) тылă çине утланнă, тет те, куна хăваласа пырать, тет, тыллине шак-шак тутарать, тет:

Шак-шак тыллăм, шак тыллăм,
Çак кинĕме çит, тыллăм!
Ачуна та çиййĕп, хăвна та çиййĕп,—

тесе калать, тет. Кинĕ пашалăвĕсене пăрахса хăварать, тет. Ку вупăр пашалусене çисе пĕтерет, тет те, тата хăвалать, тет, кинне, шак-шак тутарать, тет, тыллине:

Шак-шак тыллăм, шак тыллăм,
Çак кинĕме çит, тыллăм!
Ачуна та çиййĕп, хăвна та çиййĕп,—

тесе калать, тет. Кинĕ, ачине илсе, лаши çинчен анса тарать, тет. Лешĕ лашине çисе юлать, тет. Лашине çисе пĕтерет, тет те, татах хăвалать, тет, шак-шак-шак тутарать, тет, тыллине:

Шак-шак тыллăм, шак тыллăм,
Çак кинĕме çит, тыллăм!
Ачуна та çиййĕп, хăвна та çиййĕп,—

тесе калать, тет. Кинĕ ачине пăрахса тарать, тет. Леш ачине çисе юлать, тет. Ачине çисе пĕтериччен кинĕ ашшĕ килне çитнĕ, тет.

— Уç, атте, алăка!—тесе чĕнет, тет.

Ашшĕ калать, тет:

— Манăн çĕрле килес хăнам çук,—тесе калать, тет.

Ку aслă пиччĕшне чĕнет, тет:

— Аслă пичче, алăкна уç!—тесе калать, тет.

Аслă пиччĕшĕ калать, тет:

— Манăн çĕрле килес йăмăк çук,— тесе калать, тет.

Ку кĕçĕн пиччĕшĕ патне пырса тархаслать, тет:

— Кĕçĕн пичче, алăка уç!— тесе калать, тет.

Леш калать, тет:

— Манăн çĕрле килес йăмăкăм çук,—тесе калать, тет.

Ку аслă инкĕшне чĕнет, тет. Аслă инкĕшĕ:

— Манăн çĕрле килес пултăрăм çук,—тесе калать, тет.

Вăталăх инкĕшне чĕнет, тет. Вăталăх инкĕшĕ те:

— Манăн çĕрле килес пултăрăм çук,—тесе калать, тет.

Ку кĕçĕн инкĕшне чĕнет, тет. Кĕçĕн инкĕшĕ те:

— Манăн çĕрле килес пултăрăм çук,—тесе калать, тет.

Уçмаççĕ, тет, куна. Вара ку картана каять, тет те, сурăхсем хушшине пытанать, тет. Амаçури, хунямăшĕ, çитет, тет те, куна тупать, тет, хăйне çисе ярать, тет, пыршине картана урлă-пирлĕ каркаласа хăварать, тет.

Ирхине тăрсан, пиччĕшĕсем картана кайса пăхаççĕ, тет те, кун пыршисене кураççĕ, тет. Пĕтĕмпе кума-кума хунă, тет.

— Пĕтерне кашкăр сурăхсене, пыршисене кума-кума хăварнă,—тесе калаççĕ, тет. Кун пыршисене илсе кĕреççĕ, тет те, сăрнай тăваççĕ, тет. Сăрнайне малтан ашшĕ каласа пăхать, тет. Сăрнайĕ калать, тет:

Пусса-пусса ан кала:
Пуç ыратать, аттеçĕм.
Варрăн-варрăн ан кала:
Вар ыратать, аттеçĕм,
Пуçăма çирĕ пăянам,—

тесе калать, тет.

— Ай-яй, мĕн калать ку, калăрха, калăр-ха тата,— тесе калаççĕ, тет, ывăлĕсем.

Аслă ывăлĕ каласа пăхать, тет.

Пусса-пусса ан кала:
Пуç ыратать, пиччеçĕм.
Варрăн-варрăн ан кала:
Вар ыратать, пиччеçĕм,
Пуçăма çирĕ пăянам,—

тесе калать, тет, сăрнай.

— Ай-яй, мĕн калать ку калăр-ха, калăр-ха тата,— тесе калаççĕ, тет, итлекенсем.

Вăталăх пиччĕшĕ каласа пăхать, тет. Сăрнайĕ каллех:

Пусса-пусса ан кала:
Пуç ыратать, пиччеçĕм,
Варрăн-варрăн ан кала:
Вар ыратать, пиччеçĕм,
Пуçăма çирĕ пăянам,—

тесе калать, тет.

— Ай-яй, мĕн калать ку, тата калăр-ха,—тесе калаççĕ, тет.

Шăллĕ каласа пăхать, тет. Сăрнай каллех:

Пусса-пусса ан кала:
Пуç ыратать, шăллăмçăм.
Варрăн-варрăн ан кала:
Вар ыратать, шăллăмçăм,
Пуçăма çирĕ пăянам,—

тесе калать, тет.

Инкĕшĕсем каласа пăхаççĕ, тет. Пурне те çапла кала-кала парать, тет.

Леш хунямăшĕсен уяв çитнĕ, тет, ĕçкĕ ĕçмелле, тет. Хĕрĕсен ашшĕсем патне йыхрава килеççĕ, тет.

— Пурсăр та пырăр сăра ĕçме,— тесе калать, тет, леш амаçури тăхлачăшĕ.

Каяççĕ, тет, хайхисем хăнана, сăрнайне те илсе пыраççĕ, тет. Пăятамăшне калаттарса пăхтараççĕ, тет, малтан.

Пусса-пусса ан кала:
Пуç ыратать, пăятам.
Варрăн-варрăн ан кала:
Вар ыратать, пăятам,
Пуçăма çирĕ пăянам,—

тесе калать, тет, сăрнай.

— Ай-яй, мĕн калать ку. Кĕреве калаттарса пăхăр-ха,—тесе калаççĕ, тет.

Кĕрӳшĕ каласа пăхать, тет.

Пусса-пусса ан кала:
Пуç ыратать, ăстарик.
Варрăн-варрăн ан кала:
Вар ыратать, ăстарик,
Пуçăма çирĕ пăянам,—

тесе калать, тет.

Пăянамăшне калаттарса пăхтараç-çĕ, тет.

Пусса-пусса ан кала:
Пуç ыратать, пăянам.
Варрăн-варрăн ан кала:
Вар ыратать, пăянам,
Çирĕн пуçăма, пăянам,—

тесе калать, тет.

Пăянамăшĕ:

— Темскер калать ку,—тесе, сăрная кăмакана вăр ывăтса ячĕ, тет. Çунса тĕтĕм пулчĕ, тет те, кăмакаран хуп-хура арăм пулса тухрĕ, тет.

Пăянамăшне сĕлĕ пĕрчи пек тураса тăкрĕç, тет те, хăйсем халĕ те пулин аван пурăнаççĕ, тет.

## АЛЬТУК

Пĕр карчăкпа старик пурăннă, тет. Вĕсен Иван ятлă, вунçичче çитнĕ ачи пулнă, тет. Карчăкпа старик кил хушшинче ĕçлеççĕ, тет. Иван шавах сунара çӳрет, тет. Карчăкĕ яланах:

— Старик, Ивана авлантарасчĕ, мана пулăшакан çук. Виличчен ачипăчисене курса юласчĕ,—тесе калать, тет.

Пĕрре çапла Иван сунара кайма пуçтарăнчĕ, тет. Ашшĕ калать, тет, куна:

— Ачам, эсĕ çамрăк мар ĕнтĕ, анӳ авлантарасшăн сана. Сунара çӳренĕ чухне ху валли арăм тума пĕр-пĕр хуркайăк тытса килместĕн-и?—тесе каларĕ, тет.

Иван тухса кайрĕ, тет, хире. Пĕр карта хуркайăк вĕçсе пырать, тет. Иван пĕрне персе ӳкерчĕ, тет те, килне илсе таврăнчĕ, тет. Амăшĕ вут чĕртсе ячĕ, тет, унтан хуркайăка тытрĕ, тет те, çунаттисене çунтарса ячĕ, тет. Хай хуркайăк хуп-хура арăм пулса тăчĕ, тет.

Ирхине çĕнĕ çын икĕ витрепе çырмана шыв ăсма кайрĕ, тет. Пĕр карта хуркайăк вĕçсе пырать, тет. Альтука курчĕç, тет те:

Атя, Альтук, киле,
Аçу килчĕ пасартан,
Кулачă-пĕремĕк илсе,—

тесе чĕнеççĕ, тет.

Пырăттăм та—пыраймăп:
Хурăн вутти хучĕç те
Хур-çунатма çунтарчĕç,
Вĕрене вутти хучĕç те
Вĕр-çунатма çунтарчĕç,—

тесе йĕрет, тет, Альтук.

Хуркайăксем Альтука пурте пĕрер тĕк татса пачĕç, тет. Альтук тĕкĕсене хул хушшине, кĕпи айне, хĕстерчĕ, тет те, витрисене йăтса, килне таврăнчĕ, тет. Хунямăшĕ:

— Мĕнле вăрах çӳрерĕн?—тесе калать, тет.

— Çăл патĕнче çын нумайччĕ,—терĕ, тет, кинĕ.

Иккĕмĕш кун Альтук каллех шыв ăсма кайрĕ, тет. Каллех пĕр карта хуркайăк вĕçсе пырать, тет.

Атя, Альтук, киле,
Аçу килчĕ пасартан,
Кулачă-пĕремĕк илсе,—

тесе юрласа чĕнеççĕ, тет, Альтука хăйсемпе пĕрле.

Пырăттăм та—пыраймăп:
Хурăн вутти хучĕç те
Хур-çунатма çунтарчĕç,
Вĕрене вутти хучĕç те
Вĕр-çунатма çунтарчĕç,—

тесе хурланса йĕрет, тет, Альтук.

Хуркайăксем каллех пĕрер тĕк татса пăрахрĕç, тет. Альтук кусене те хул хушшине, кĕпи айне, хĕстерчĕ, тет те, витрисене йăтса, килне таврăнчĕ, тет.

— Епле вăрах ҫӳретĕн?—тесе калать, тет, хунямăшĕ.

— Ҫăл патĕнче ҫын нумайччĕ, часах ăсаймарăм,—тесе калать, тет, кинĕ.

Ентĕ пĕр ик-виҫ ҫул та иртрĕ, тет. Иванпа Альтукăн ача та ҫуралнă, тет. Ҫапах та Альтук хăй килне манаймасть, тет.

Пĕрре ҫапла Альтук татах шыв ăсма каять, тет. Каллех пĕр карта хуркайăк вĕҫсе пырать, тет. Альтука курчĕҫ, тет те, каллех:

Атя, Альтук, киле,
Аҫу килчĕ пасартан,
Кулачă-пĕремĕк илсе,—

тесе юрлаҫҫĕ, тет.

Пырăттăм та—пыраймăп:
Хурăн вутти хучĕҫ те
Хур-ҫунатма ҫунтарчĕҫ,
Вĕрене вутти хучĕҫ те
Вĕр-ҫунатма ҫунтарчĕҫ,—

тесе юрласа йĕрет, тет, Альтук.

Каллех пурте пĕрер тĕк татса пăрахрĕҫ, тет. Альтук мĕнпур тĕкĕсене пĕр ҫĕре пухрĕ, тет те, ҫунатсем туса, хулпуҫҫийĕсем ҫумне ҫыпăҫтарчĕ, тет. Унтан сикрĕ, тет те, юлташĕсемпе вĕҫрĕ кайрĕ, тет.

Килĕнче кĕтеҫҫĕ-кĕтеҫҫĕ, тет, шыва кайнă ҫынна — ҫук, тет. Тӳсеймесĕр хунямăшĕ ҫырмана анса пăхать, тет: каҫма патĕнче витрисем анчах ларасҫĕ, тет, кинĕ ҫук, тет. Чĕнет-чĕнет, тет, кинне — ниҫта та ҫук, тет. Тупаймасăрах таврăнчĕ, тет, вара килне. Килĕнче ачи макăрать, тет. Шухăшласан-шухăшласан, хуйхăрсан-хуйхăрсан, кайрĕҫ, тет, каллех кинне шырама: старикки те шырать, тет, карчăкĕ те шырать, тет. Кашни тĕл пулан ҫынран:

— Пирĕн кине курмарăр-и?—тесе ыйтаҫҫĕ, тет.

Иван та тухса кайрĕ, тет, арăмне шырама. Шырарĕҫ-шырарĕҫ, тет, ҫук, тупаймарĕҫ, тет. Аптăранă енне вара шырама та пăрахрĕҫ, тет.

Нумай пурнаҫҫи, сахал пурнаҫҫи—пĕр ир хай Ивансен пӳрчĕ тăррине хуркайăк пырса ларнă, тет. Ачи сăпкара йĕрмĕшсе выртать, тет.

Санăн куҫу хупăнинччĕ,
Манăн куҫҫуль тăкăнминччĕ!—

тесе юрласа ячĕ, тет, хуркайăк. Карчăкĕ тухрĕ, тет те:

— Кшуй, кшуй! Мĕнле кайăк юрлать кунта?—тесе хăвала пуҫларĕ, тет.

Хуркайăк кăшт аяккалла вĕҫсе ларчĕ, тет. Карчăк кĕрсен, каллех пӳрт тăррине пырса ларчĕ, тет. Хуркайăк каллех юрласа ячĕ, тет:

Санăн куҫу хупăнинччĕ,
Манăн куҫҫуль тăкăнминччĕ!—

тесе калать, тет.

Старикки тухрĕ, тет.

— Кшуй, кшуй! Мĕнле кайăк юрлать кунта?—тесе калать, тет.

Хуркайăк кăшт аяккинелле вĕҫсе ларчĕ, тет. Старик кĕрсен, каллех пӳрт тăррине пырса ларчĕ, тет. Каллех юрлать, тет:

Санăн куҫу хупăнинччĕ,
Манăн куҫҫуль тăкăнминччĕ!—

тесе калать, тет.

Ачи шав макăрать, тет. Хуркайăкăн чунĕ тӳсеймерĕ, тет, пусма ҫине вĕҫсе ларчĕ, тет, унтан пăлтăра кĕчĕ, тет. Пӳрт алăкĕ уҫă, тет. Вĕҫрĕ кĕчĕ, тет, хуркайăк пӳрте, сăпка пĕкечи ҫине пырса ларчĕ, тет.

Иван ҫăпата туса ларать, тет. Хуркайăка курсанах, часрах ҫăпатине ывăтса ячĕ, тет те, пӳрт алăкне хупса хучĕ, тет. Каллех вут чĕртсе ячĕҫ, тет. Хуркайăка тытса ҫунаттисене ҫунтарса ячĕҫ, тет, хуп-хура арăм пулса тăчĕ, тет.

Иванпа арăмĕ халиччен савăнса пурăнаҫҫĕ-ха. Альтук ниҫта та тарма шухăшламасть ĕнтĕ.

# АМАÇУРИ

Аппăшĕпе шăллĕ пурăнаççĕ, тет. Вĕсен ашшĕ тăван, тет, амăшĕ тăван мар, амаçури, тет. Ку амаçури питĕ кураймасть, тет, çура хĕрĕпе çура ывăлне. Ывăлне тата ытларах кураймасть, тет. Епле те пулсан пĕтерессшĕн, тет, кусене, пуринчен ытла — çак ывăлне. Акă хай карчăк чире хывса выртать, тет.

— Старик, юмăça кай!—тесе калать, тет.

Старикки лаша кӳлет, тет те, каять, тет, юмăça.

— Старик,—тесе калать, тет, ку карчăкĕ,—эсĕ тавра кай,—тесе калать, тет.—Тӳррĕн çӳрен аван мар хыпнă, тавра çӳрен пыл хыпнă, тесе калаççĕ,—тесе калать, тет.

Старикки таçтан-таçтан çаврăнăç каять, тет. Карчăкĕ шурă кĕпе тăхăнать, тет те, тӳррĕн кайса, старик пырас çул çине ларать, тет. Старикки çитет, тет те, кун тĕлне, паллаймасть, тет, куна. Карчăкĕ калать, тет:

— Ăçта каян эсĕ?—тесе калать, тет.

Старикки чарăнса тăрать, тет.

— Карчăк чирленĕ те-ха, юмăça каяс терĕм,—тесе калать, тет.

— Хам пулам-и юмăçĕ?—тесе калать, тет, карчăкĕ.

— Халунтан килсен, пул,—тесе калать, тет, старикки.

Лаши çинчен анать, тет те, пăхтарать, тет, старикки. Юмăçĕ (карчăкĕ) калать, тет:

— Ку санăн карчăку ытла хăрушă чирленĕ; сирĕн амаçури ывăл пур, çавна пусса çитермесен, чĕрĕлеймĕ вăл,—тесе калать, тет.

Старикки килне таврăнма тухать, тет. Юмăç карчăкĕ калать, тет:

— Тӳррĕн çӳрен аван мар хыпать, тавра çӳрен пыл хыпать, теççĕ, тавраран кай килне,—тесе калать, тет.

Хăй тӳррĕн таврăнать, тет, каллех. Килне таврăннă чухне çул çинче шăлан-палан çисе таврăнать, тет те, килне, старикки пынă çĕре хĕпхĕрлĕ хăсса выртать, тет.

Старикки таврăнать, тет, юмăçран.

— Мĕн каларĕ, старик? Мĕн каларĕ, старик?—тесе ыйтать, тет, карчăкĕ.

— Нимĕн те каламарĕ,—тесе калать, тет, старикки.

Пурăнсан-пурăнсан, карчăкĕ каллех:

— Старик, юмăça кай! Старик, юмăça кай!—тесе аптратать, тет, каллех карчăкĕ.—Ку юмăçĕ нимĕн те каламарĕ пулсан, тепри мĕн те пулин калĕ,—тесе калать, тет. Хăй тавра кайма хушать, тет, стариккине:—Тавра каян пыл хыпнă, тӳрĕ каян каяш хыпнă, тесе калаççĕ,—тесе калать, тет.

Старикки каять, тет, таврараран. Ку карчăкĕ çăвăнать, тет, тасалать, тет те, каллех старикки пырас çул çине пырса ларать, тет, старикки палламалла мар тумланса. Акă старикки карчăкĕ тĕлне çитет, тет, карчăкĕ ыйтать, тет:

— Ăçталла каян капла?—тесе калать, тет.

Ку старикки калать, тет:

— Карчăкăм чирлĕ выртать те-ха, юмăça кайса пăхас терĕм ĕнтĕ,—тесе калать, тет.

— Хам пулам-и юмăçĕ?—тесе калать, тет, куна карчăкĕ.

— Халунтан килсен, пул,—тесе калать, тет, старикки.

Акă карчăк юмăç пăхать, тет:

— Санăн карчăку ытла хăрушă чирленĕ, сирĕн амаçури ывăл пур иккен, çавна пусса çитермесен, чĕрĕлеймĕ ку санăн карчăку,—тесе калать, тет. Унтан ку старике каллех таврараран кайма хушать, тет, килне:

— Тавра каян пыл хыпнă, тӳрĕ каян каяш хыпнă тесе калаççĕ,—тесе калать, тет.

Каять, тет, старикки килне тавра-

ран çаврăна-çаврăна. Ку хăй тӳррĕн каллех çул тăрăх шăлан та палан çисе таврăнать, тет те, старикки пынă çĕре хĕп-хĕрлĕ хăсса выртать, тет.

Старикки çитет, тет, килне:

— Мĕн каларĕ, старик, юмăç? Мĕн каларĕ, старик, юмăç? — тесе выртать, тет, ку карчăкĕ.

— Нимĕн те каламарĕ,—тесе калать, тет, старикки.

Кăштах пурăнсан, ку стариккине каллех юмăça хăвалать, тет:

— Юмăça кай, старик!—тесе калать, тет.—Тавра çулпа кай, старик: тавра каян пыл хыпнă, тӳрĕ каян каяш хыпнă, тесе калаççĕ,—тесе калать, тет.

Старикки каллех каять, тет, юмăça тавра çулпа. Ку карчăкĕ каллех тӳррĕн тухать, тет те, çак старик пырас çул çине ларать, тет.

— Аçта каян?—тесе калать, тет, куна.

— Карчăк чирлерĕ те, юмăça каятăп-ха,—тесе калать, тет, ку.

— Хам пулам-и юмăçĕ?—тесе калать, тет, лешĕ.

— Халунтан килсен, пул,—тесе калать, тет, старикки.

Хай карчăк юмăç пăхать, тет:

— Карчăку ытла хăрушă чирленĕ, санăн амаçури ывăл пур иккен, çав ывăлна пусса çитермесен, карчăку чĕрĕлеймĕ,—тесе калать, тет. Тавра кайма хушса ярать, тет, куна килне: —Тавра каян пыл хыпнă, тӳрĕ каян каяш хыпнă, тесе калаççĕ,—тесе калать, тет.

Леш килне таçтан-таçтан çаврăна-çаврăна таврăнать, тет. Карчăкĕ каллех тӳррĕн шăлан та палан çисе таврăнать, тет те, ку пынă çĕре каллех хĕп-хĕрлĕ хăсса выртать, тет.

— Старик, юмăç мĕн каларĕ, юмăç мĕн каларĕ?—тесе выртать, тет.

Хĕрĕпе ывăлĕ таçта тухса кайнă тĕл пулать, тет. Хай старик карчăкне:

— Карчăк, юмăç, ывăлăмăра пусса çитермесен, чĕрĕлеймĕ, тесе каларĕ,—тесе калать, тет.

— Эппин, часрах пус, часрах пус!—тесе аптратать, тет, хайхи стариккине.

Старикки ывăлне пусмашкăн çыхса пăрахма пăяв явать, тет. Ачи куна курать, тет те:

— Мĕн тума яван куна, атте, мĕн валли яван?—тесе калать, тет.

Ашшĕ калать, тет:

— Ав картара хура така пур, çавна пусма,—тесе калать, тет.

Ачи картана кайса пăхать, тет те, картара нимĕн те çук, тет.

— Атте, унта нимĕн те çук-çке,—тесе калать, тет.

— Ав пахчара хĕрлĕ тына пур, çавна пусмашкăн,—тесе калать, тет.

Ачи кайса пăхать, тет те, унта нимĕн те çук, тет.

— Атте, унта тына çук-çке,—тесе калать, тет.

— Сана пусма, ачам,—тесе калать, тет, ашшĕ.

Ачине тытса çыхса выртарать, тет те, пусать, тет. Хай карчăкне çакăн ашне пĕçерсе параççĕ, тет. Чĕрĕлет, тет, хайхи.

Аппăшĕ шăллĕн шăммисене пĕтĕмпе пуçтарать, тет те, шурă тутăрпа чĕркесе, хăмăш тĕпне кайса хурать, тет. Пурăнсан-пурăнсан, кайса пăхать, тет те, шăллĕн шăммисем пурте пĕр тĕле пуçтараннă, тет, пĕр-пĕринпе çыпçăна-çыпçăна ларнă, тет. Тепре кайса пăхать, тет те, чунĕ кĕре пуçланă, тет, вĕçен кайăк пулать, тет. Тепре кайса пăхать, тет те, çук, тет, хайхи: вĕçен кайăк пулса вĕçсе кайнă, тет.

Ку кайăк вĕçсе каять, тет те, армантан арман чулĕ илсе килет, тет. Унтан каять, тет, йĕп тăвакансем патне, пĕр ала йĕп илсе килет, тет. Арман чулне тата пĕр ала йĕпне илет, тет те, ашшĕ çурчĕ çине вĕçсе кайса ларать, тет. Вĕçсе пырса ла-



рать, тет те, чӳрече тăррине ларса юрлать, тет:

Тăван атте пусрĕ,
Амаçури çирĕ,
Тăван аппа пуçтарчĕ,
Шур тутăрпа чĕркерĕ,
Хăмăш тĕпне варчĕ,—

тесе юрлать, тет. Амаçури çатма аври илсе куна хăвалама тухать, тет те: «Кша, кша, мур, мĕнле кайăк килсе юрлать?»—тесе калать, тет. Леш кайăкĕ кун çине пĕр ала йĕп яра парать, тет те, леш вилет, тет. Кайăкĕ тата:

Тăван атте пусрĕ,
Амаçури çирĕ,
Тăван аппа пуçтарчĕ,
Шур тутăрпа чĕркерĕ,
Хăмăш тĕпне варчĕ,—

тесе юрлать, тет. Ашшĕ куна хăвалама тухать, тет: «Кша, кша, мур, мĕнле кайăк килсе юрлать?—тесе калать, тет. Леш арман чулне яра парать пуçĕ çине, ку та вилет, тет.

Унтан ку кайăк татах пырса юрлать, тет. Аппăшĕ пир тĕртсе ларать, тет.

— Ман шăллăм пулсан, чӳрече çине ларса юрла,—тесе калать, тет, ку кайăка.

Кайăкĕ чӳрече çине ларса юрлать, тет:

Тăван атте пусрĕ,
Амаçури çирĕ,
Тăван аппа пуçтарчĕ,
Шур тутăрпа чĕркерĕ,
Хăмăш тĕпне варчĕ,—

тесе юрлать, тет. Ку калать, тет:

— Манăн шăллăм пулсан, çывăхарах кил,—тесе калать, тет.

Леш кайӑкӗ пир хӳри ҫине килсе юрлать, тет. Ку тата калать, тет:

— Манӑн шӑллӑм пулсан, ҫывӑхарах кил,—тесе калать, тет.

Кайӑкӗ хай умнех пырса юрлать, тет. Ку кайӑка кап ярса тытать, тет, аппӑшӗ. Хай кайӑк хӑй шӑллӗ пулать тӑрать, тет. Халӗ те пулин пурӑнаҫҫӗ, тет, иккӗшӗ.

## ЫЛТАН ШАЛЛА ХЕР

Пурӑннӑ, тет, пӗр карчӑкпа старик, вӗсен пулнӑ, тет, пӗр карта лаша, пӗр карта ӗне, тепӗр карта сурӑх тата виҫӗ хӗр. Чӑн кӗҫӗн хӗрӗ ылтӑн шӑллӑ, кӗмӗл ҫӳҫлӗ пулнӑ, тет.

Пӗр ирхине старик каять, тет, лашисене шӑварма. Хӑйӗн те шыв ӗҫесси килнӗ пулнӑ. Кӳлле выртнӑ шыв ӗҫме. Ҫав самантрах ун сухалӗнчен шыври шуйттансем ҫавӑрса тытнӑ, тет. Старик ыйтать вӗсенчен: «Яр, яр, ачамсем», —тет.

Лешсем ямаҫ:

— Ху савнине пар,—теҫҫӗ.

— Пӗр карта лашам пур, пехил,—тет старик.

Анчах шуйттансем каллех:

— Ху савнине пар,—теҫҫӗ.

Старик каллех:

— Яр, яр, ачамсем,—тет.— Пӗр карта ӗне пур, ҫав пехил,—тет.

Шуйттансем калаҫ, тет:

— Ху савнине пар,—теҫ.

— Пӗр карта сурӑх пур, ҫав пехил,—тет старик.

Шуйттансем:

— Ху савнине пар,—тесе калаҫҫӗ, тет.

— Аслӑ хӗре пил сире.

— Ху савнине пар,—тесе калаҫ, тет, шуйттансем.

— Вӑталӑх хӗре пил сире...

— Ху савнине пар,— тесе калаҫ, тет, шуйттансем.

— Яр, яр, ачамсем, яр, кӗҫӗн хӗре пехил сире...

Лаш яраҫ, тет, шуйттансем старик сухалне. Старик хуйхӑрса килне таврӑнать, тет. Карчӑккин килте сӑмаварӗ тухнӑ, тет. Аслӑ хӗрӗ ашшӗне йыхӑрма тухать — ашшӗ кӗмест, тет. Вӑталӑххи йыхӑрма тухать — каллех кӗмест, тет. Кӗҫӗнни тухать, тет, йыхӑрма:

— Атте, кӗр чей ӗҫме,—тесе чӗнет ашшӗне.

Ашшӗ калать:

— Мӗн кӗмелли чей ӗҫме, сана сутрӑм вӗт,—тет.

— Атя, кӗр чей ӗҫме, эс сутнӑ ҫӗре каятӑп,—тет хӗрӗ.

Майлашрӗҫ, тет, кайма: ашшӗ кӳлет лашине, хӗрӗ майлать япалине, илет пӗр хӑйра, илет тепӗр йӗке тата тура, ҫур литр сӗт. Кайрӗҫ, тет, тухса.

Ҫул ҫинче шуйттансене тӗл пулаҫ, тет; малтан пынӑ, тет, ваттисем, унтан — арӑмӗсем, чи кайран — ачисем.

Ашшӗ ыйтать, тет, ваттисенчен:

— Ӑҫта каятӑр?—тет.

Ваттисем калаҫ:

— Ылтӑн шӑллӑ, кӗмӗл ҫӳҫлӗ хӗр шырама.

Арӑмӗсенчен ыйтать, тет:

— Ӑҫта каятӑр?—тет.

Арӑмӗсем калаҫ, тет:

— Ылтӑн шӑллӑ, кӗмӗл ҫӳҫлӗ хӗр шырама.

Ачисенчен ыйтать, тет (ачисем селӗпрех пулнӑ), вӗсем калаҫҫӗ, тет:

— Ыльтӑн сӑльлӑ, кӗмӗл ҫӳҫлӗ хӗй сыяма.

Хӗрӗ чӑтаймасӑр кулса ярать, тет те, ылтӑн шӑлӗ курӑнать, тет. Тытӑнаҫ, тет, шуйттансем кусене хӑвалама. Хӗрӗпе ашшӗ тараҫ, тет, ҫитсеҫитсе пынӑ чух пӑрахать, тет, хӗр хӑйрине:

— Ҫӳллӗрен те ҫӳллӗ сӑрт пул!— тесе калать, тет те, сӑрт пулать, тет те, ларать. Хӗрӗпе ашшӗ тараҫ, тет, тата малалла. Шуйттансем ҫитсе-ҫитсе пынӑ чух хӗр лартать турине:

— Чӑтлӑхран та чӑтлӑх вӑрман

пул!—тесе калать, тет, сĕм-тĕттĕм чăтлăх пулса тăрать.

Шуйттансем чăтлăхран тухиччен хĕрĕпе ашшĕ тата инçе тараççĕ. Шуйттансем чăтлăхран тухаç те тытăнаç хытăрах хăвалама. Ашшĕ, çавна курса, хĕрне ярать те хăварать çеçенхир варне, хăй килне каять.

Хĕр çеçенхир варрине йĕкине лартать те — авăн юпи пулать тăрать, тет, сĕт кĕленчине пăрахать те — сĕт кӳлли пулать тăрать. Хĕр юпа тăрне ларать те ак çапла каласа юрлать:

Хĕвеле панă аккам пурччĕ,
Курать-ши мана, курмасть-ши?

Курап, курап, сӳсне тĕвеп...—

тени илтĕнет.

Шуйттансем сĕт кӳлли хĕрне çитеççĕ те сĕтне ĕçме тапратаççĕ:

Тайăл, тайăл, авăн юпи,
Тип, тип, сĕт кӳлли,—

тесе юрласа ĕçеççĕ.

Хĕр каллех юрлать юррине:

Ан тип, ан тип, сĕт кӳлли,
Ан тайăл, ан тайăл, авăн юпи.
Хĕвеле панă аккам пурччĕ,
Курать-ши мана, курмасть-ши?

Аккăшĕ юрлать:

— Халех, халех яратăп,—

тет.

Çип сĕвемĕ те анса çитрĕ, хĕр те ларса хăпарчĕ, юпа та йăванса кайрĕ, сĕт кӳлли те типсе ларчĕ, шуйттансем те шăлĕсене шаккаса юлчĕç, халап та пĕтрĕ.

## ХАВ ТĂВАНУ — ВУТ УРЛĂ!

Ĕлĕк-авал икĕ пĕртăван пулнă. Асли пуян пурънна, кĕçĕнни çук пулнă. Аслин ача-пăча пулман, арăмĕпе иккĕшех пурънна, кĕçĕннин ача-пăча нумай пулнă. Пуянни пуян çынсемпе анчах ĕçсе çиnĕ, хăйĕн тăванне хутăштарман, мĕншĕн тесен шăллĕ унăн начар пуръннă.

Пĕрре çак пуян çапла шухăш тытнă: «Эпĕ капла пуян тусăмсемпе ĕçсе çиетĕп, хамăн тăвана нихçан та хăнана чĕнместĕп. Манăн сăнаса пăхас: хăшĕ вĕсенчен çывăхрах çын маншăн»,—тенĕ. Çапла хăйĕн арăмĕпе канашланă та арăмне каланă:

— Эсĕ пĕр пичĕке пыллă сăра ту, эпĕ çав праçник каç хăнасем чĕнес тетĕп,—тенĕ.

Арăмĕ:

— Юрĕ, тăвăп,—тенĕ.

Сăрине тусан, тĕпсакайне антарса лартнă. Пыллă сăри йӳççе çитсен, çак пуян çын малтан чи лайăх юлташĕ патне чĕнме каять. Каясса каçхине, çур çĕр тĕлĕнче, каять. Ку пынă чухне унăн юратнă юлташĕ çывăрнă пулнă. Ку ăна, çывăраканскере, вăратса кĕнĕ. Пӳрте кĕрсен, юлташĕ кăна:

— Лар,—тенĕ.

Ку:

— Ларса тăма вăхăтăм çук, мана пĕр инкек килсе çакланчĕ-ха: хамăр килте çук чухне пирĕн тĕпсакайне пĕр çын виллине пырса пăрахнă. Çавна кăларма эсĕ пыраймăн-ши?—тенĕ.

Пуян юлташĕ ăна хирĕç каланă:

— Çук, эпĕ пыраймастăп, эпĕ ун пек çĕре халиччен те çӳремен, вăл пит хăрушă япала,—тенĕ.

Ку юлташĕ пымарĕ ĕнтĕ, çавăнпа тепĕр юратнă юлташĕ патне кайрĕ. Вăл та çывăрнă пулнă, ăна çаплах, çывăраканскере, вăратса кĕнĕ. Малтанхи юлташне каланă пек, куна çав сăмахсенех каланă. Ку юлташĕ те:

— Пыраймастăп,—тенĕ.

Унтан виççĕмĕш юлташĕ патне кайнă, вăл та:

— Эпĕ халиччен те ун пек çĕре çӳремен, вăл ĕçе çынсем пĕлес пулсан, иксĕмĕр те тĕрмене лекĕпĕр,—тенĕ.

Чи юлашкинчен вара хăйĕн кĕçĕн тăванĕ патне кайнă. Тăванне уçтарса кĕнĕ. Пӳрте кĕрсен, тăванĕ:

— Лар,—тенĕ.
Пиччĕшĕ ăна:
— Ларса тăма манăн халĕ вăхат çук, мана пит пысăк хуйхă çитрĕ-ха, çавна мĕнле ирттерсе ямалла-ши?—тенĕ.
Шăллĕ ăна:
— Мĕнле хуйхă тата?—тенĕ.
Пуян пиччĕшĕ:
— Ак мĕнле хуйхă: хамăр килте çук чухне пирĕн тĕпсакайне тахши пĕр вилнĕ çын пырса янă, çавна мĕн тумалла-ши, çавăнпа сан пата канаша килтĕм,—тенĕ.
Шăллĕ ăна:
— Вăл ĕç пит начар, ăна унтан илсе пытармасан, сана начар пулĕ, пўртне те пĕтĕмпе виле шăрши тулĕ, вара ăна пĕлĕç,—тенĕ.
Пиччĕшĕ каланă:
— Эсĕ пырăн-и пытарма?—тенĕ.
Шăллĕ каланă:
— Епле пырас мар манăн, эсĕ манăн пичче пулатăн, манăн тăванăм пулатăн, пирĕн атте те пĕрре, анне те пĕрре, çавăнпа пĕрне-пĕри пăрахма кирлĕ мар, сана начар ан пултăр,—тенĕ.
Иккĕшĕ вара пуян пиччĕшĕ патне каяççĕ. Пуянăн арăмĕ кусем пынă çĕре пит лайăх апатсем пĕçерсе кĕтсе тăнă. Пуян пиччĕшĕ тултан тилхепе илсех кĕнĕ. Шăллĕне тĕпсакайне кĕртсе янă та каланă:
— Акă сана тилхепе, вилнĕ çынна çавăнпа çыхса пар,—тенĕ.
Кунăн шăллĕ тĕпсакайĕнче шырать, анчах тупаймасть те калать:
— Кунта ун пек япала çук-çке,—тет.
Пиччĕшĕ ăна:
— Кĕтессе пăх,—тет.
Шăллĕ каллех:
— Кунта нимĕскер те çук,—тет.—Пĕр пичĕке ларать, урăх нимĕн те çук,—тет.
Пиччĕшĕ ăна:
— Вилнĕ çын çавă ĕнтĕ, тилхепўне çыхса пар,—тет.
Шăллĕ тилхепепе пичĕкене çыхать те, туртса кăлараççĕ тĕпсакайĕнчен пыллă сăрана. Пуян пиччĕшĕ шăллĕне мĕншĕн чĕннине тин каласа кăтартать. Хăй хайхи пуян юлташĕсем патне чĕнме кайнине те, вĕсем хăйне мĕн-мĕн каланине те тĕпĕйĕрĕпе каласа кăтартать. Иккĕшĕ вара, пыллă сăра ĕçсе, лайăх пĕçернĕ апатсене çиеççĕ. Леш пуян туссем, кун патне пырса, чўречинчен пăхса тăраççĕ. Кусем вилнĕ çын пытармаççĕ, савăнса ĕçкĕ-çикĕ тăваççĕ.
Çав пуян вара çав кунтан хăйĕн ĕлĕкхи юлташĕсемпе ĕçкĕ-çикĕ тума пăрахать, вĕсем патне кайса та кĕмест:
— Вĕсем ĕçсе çинĕ чухне анчах лайăх, начар чухне ман еннелле çаврăнса та пăхас çук,—тенĕ.—Ху тăвану епле пулсан та пăрахмасть иккен. Малалла ĕнтĕ хамăн тăванăмпа ĕçсе çийĕп,—тенĕ.
Ваттисен сăмахĕ чăн иккен. Вĕсем каланă: ют çын — хир урлă, хăв тăвану — вут урлă, тенĕ.

## ШАНЧĂКСĂР ÇЫН ЙЫТĂРАН НАЧАР

Пĕр çыннăн питĕ ăслă йытă пулнă. Вăл, хуçи ăçта кайсассăн та, унтан юлман, яланах унпа пĕрле ерсе пынă.
Пĕрре çак йытă хуçи вутă татма вăрмана каять. Йытă хальхинче те унпа пĕрле ерсе пырать. Вăрмана пырса çитсессĕн, хай çын пĕр пысăках мар йывăçа касма тесе пурттине çĕклет кăна — йывăç кутĕнче çĕлĕк пысăкăш ылтăн муклашки выртнине курах каять. Çын калама çук савăнса ўкет. «Акă пысăк мул тупрăм, ку ылтăна киле илсе таврăнатăп та унпа çĕнĕ пўрт, лаша тата ытти выльăх-чĕрлĕх туянатăп»,—тесе шухăшлать. Анчах, ылтăн муклашкине илме тесе, аллине тăсать кăна — юман

хыҫӗнчен пӗр шурӑ сухаллӑ старик сиксе тухать те:

— Ан ил ман ылтӑна!—тесе кӑшкӑрать ӑна.

— Мӗнле санӑн пултӑр вӑл? Эп тупрӑм-ҫке-ха ӑна,—тет ку ҫын.

— Ну, юрӗ, парӑп, эппин, ӑна сана, анчах эс хӑвӑн шанчӑклӑ ҫыннуна чӗнсе кил кунта,—тет старик.

Хай ҫын пурттине ылтӑн муклашки патне хурса хӑварать те яла шанчӑклӑ ҫын чӗнсе килме чупать. Вӑрмантан тухиччене ӑна ҫул ҫинче пӗр палламан ҫын тӗл пулать.

— Ӑҫта васкаса чупатӑн?—тесе ыйтать унтан хирӗҫ пулнӑ палламан ҫын.

— Вӑрманта ылтӑн тупрӑм та, пӗр старик ӑна памарӗ: «Шанчӑклӑ ҫыннуна чӗнсе кил, вара парӑп»,—терӗ,—тет.—Халӗ ҫавӑнпа яла чупаттӑм,—тет хай ҫын, чупма чарӑнса.

— Эпӗ пулам-и шанчӑклӑ ҫынну?—тесе калать ӑна палламан ҫын.

Ку уйлать-уйлать* те:

— Пул ара, атя каяр,—тет.

Пырса ҫитеҫҫӗ юман патне. Анчах хай старик ҫук та. Ылтӑн муклашкипе пуртӑ ҫав вырӑнтах выртаҫҫӗ. Старик килессе кӗтсен-кӗтсен, хай вутӑ касма пынӑ ҫыннӑн ҫывӑрасси киле пуҫлать.

— Манӑн ыйхӑ килет, выртса ҫывӑрам-ха эпӗ. Старик килсен, эс вӑрат вара мана,—тет те, ҫывӑрма выртать вӑл.

Йытти вӗсенчен тӑват-пилӗк утӑм пек айккинерех палламан ҫын ҫине пӑхсаларать.

Вутӑ касма килнӗ ҫын ҫывӑрса кайсассӑнах, палламан ҫын юман кутӗнче выртакан пуртта ярса тытать те ҫывӑракан ҫын пуҫне касма тӑрать. Анчах аллине ҫӗклеме те ӗлкӗреймест — айккинче пӑхса ларакан йытӑ кун ҫине хӑрр туса сиксе ӳкет те пуртӑ тытнӑ аллине кап хыпса илет.

Йытӑ хӑрӑлтатнӑ сасӑпа ҫывӑракан ҫын вӑранса каять. Йытӑ палламан ҫынна тапӑннине курсан, вӑл сиксе тӑрать те йыттине вӑрҫса тӑкать — чарӑнма хушать. Йытти, хуҫине итлесе, малтанхи вырӑнне кайса ларать.

Унччен те пулмасть — хай ватӑ старик каллех юман хыҫӗнчен тухса тӑрать. Хай палламан ҫын, ӑна курсанах, пӑрахса тарать. Вӑл хаяр вӑрӑ-хурах пулнӑ-мӗн — вӑрман касакан ҫын ӑна пӗлмен те.

Шур сухаллӑ старик ку вутӑ касакана калать вара:

— Ку санӑн шанчӑклӑ ҫынну пулчӗ пулать ӗнтӗ. Йытту пулман пулсан, пуҫна та ҫухататтӑн вӗт!—терӗ, тет те, ылтӑн муклашкине йӑтса, хӑй ҫулӗпе малалла утрӗ, тет.

* Шухӑшлать.



# ЯЛАН АСПА ҪӐРЕСЕН, ЯЛТИ ВАТӐ ЯТЛАМАН

## ҪĔР ҪИНЧЕ МĔН ВӐЙЛӐ?

Ĕлĕк пĕр патшан ҫĕр ҫинче мĕн пуринчен вӑйлине пĕлес килнĕ. Кам тĕрĕс калать, ҫавна вӑл ҫур патшалӑх пама пулнӑ. Патша сӑмахне халӑха пĕлтернĕ. Вара патша патне тӑхӑр ҫын пуҫтараннӑ: мелник, пĕр ҫунса кайнӑ ҫын, пулӑҫӑ, тимĕрҫĕ, ҫар пуҫлӑхĕ, пĕр каччӑ, усламҫӑ, евчĕ тата Кукша. Патша ҫаксене пĕрле лартнӑ та ыйтнӑ:

— Мĕн пуринчен вӑйлӑ? Тĕрĕс калӑр!—тенĕ.

— Ҫил нимрен вӑйлӑ, вӑл арман чулĕсене ҫавӑрать. Ҫил асса кайсан, арман ҫунатне хуҫать!—тенĕ мелник.

Ҫунса кайнӑ ҫын мелникпе килĕшмен. Вӑл каланӑ:

— Ҫил часах ывӑнать те чарӑнать. Арман ҫуначĕ хуҫӑлни пит пысӑк сиен мар, ӑна тӳрлетме пулать. Вут нимрен вӑйлӑ. Ман кил-ҫурта ҫунтарса ячĕ, ҫӳпĕ те юлмарĕ,—тенĕ хуйхӑрса.

Пулӑҫӑ ҫак ҫын каланине юратман.

— Вут, ҫунса пĕтсен, хӑех сӳнет. Вутран вӑйли шыв пур. Эсир курман-и ҫуркунне шыв мĕнле сарӑлса кайнине, арман пĕвисене ишнине тата кӳлĕрен шӑтарса тухса тарнине?—тенĕ пулӑҫӑ.

Пулӑҫа хирĕҫ тимĕрҫĕ каланӑ:

— Шыв ҫуркунне анчах вӑйлӑ. Ҫуллахи вĕри ҫанталӑкра вӑл типсе ларать, хĕлле сивĕ чух шӑнса ларать. Тимĕр нимрен вӑйлӑ. Тимĕр пуртӑ юмана касать, хурҫӑ ҫулу вут кӑларать, тимĕр тупӑ инҫете перет, тимĕр хĕҫ улпутсен пуҫне те касать,—тенĕ.

Ҫар пуҫлӑхĕ сиксе тӑнӑ та каланӑ:

— Тимĕр тутӑхать-ҫке. Паттӑр никамран та вӑйлӑ! Манӑн паттӑрсем тӑшман ҫарĕсене хиреҫҫĕ. Паттӑрсем ҫук пулсан, кам сыхлатӑр патшалӑха!—тенĕ вӑл мухтанса.

Каччӑ ӑна хирĕҫ каланӑ:

— Паттӑр тем чул вӑйлӑ пулсан та, ӑна хитре хĕр илентерет. Хитре хĕр ҫине никам та алӑ хураймасть. Хитре хĕр пĕрре пӑхнипе патшана ҫавӑрма пултарать,—тенĕ.

Усламҫӑ кулса янӑ:

— Хитре хĕрсене укҫа парса илеҫҫĕ. Укҫа нимрен вӑйлӑ тĕнчере! Укҫа пулсан, ухмах та улпута тухать, укҫасӑр улпут та ухмаха ерет. Укҫашӑн пуп икĕ хут венчет тӑвать. Укҫапа тĕрме алӑкĕ уҫӑлать, шуҫи хурах

та рая кĕрсе каять. Укçасăр патша та пурăнаймасть,—тенĕ, укçа хутаçне силлесе.

— Чăнах та, укçапа тем те илме пулать. Анчах укçа пурин те çук-çке, ăна тупма пĕлес пулать. Нимрен вăйли вăл шăмăсăр чĕлхе пулать! Шăмăсăр чĕлхе паттăра та, хитре хĕрсене те илĕртет. Усламçа усламçă улталать, йăпăлтисем пуçлăхсене ырă пулаççĕ, пуçлăхсем халăха пăхăнтараççĕ — пурне те шăмăсăр чĕлхе тăвать çавна. Шăмăсăр чĕлхе калаçнипе патшалăхсем тытăнса тăраççĕ,—тенĕ евчĕ.

Çапла нумай тавлашнă пухăннă çынсем. Кукша ним те шарламан. Вара патша Кукшаран ыйтнă:

— Сан шутупа, кам тĕрĕс каларĕ? Пуринчен вăйли мĕскер пулать? Каласа пар!—тенĕ.

Кукша çапла каланă:

— Ман шутпа, нимрен вăйли чăн сăмах пулать! Чăн сăмах çил пек çивĕчĕ, вут пек вĕри, çурхи шыв пек сарăлать, витĕр шăтарса тухать. Чăн сăмах тимĕртен те вичкĕн, вăл паттăра вăй парать, имшерккисене аталанма хал парать, хитре хĕрсене ăс парать. Чăн сăмаха пĕтересшĕн усламçăсем пĕтĕм усламне параççĕ. Чăн сăмах суеçĕсен суйине палăртать, кам ĕнентĕр вара евчĕ сăмахне? Чăн сăмах тутăхмасть, кивелмест, шывра та путмасть, çĕрте те çĕрмест, ĕмĕрне те ватăлмасть. Чăн сăмахсăр халăх саланса каять. Ман сăмах тĕрĕс! Патша, сан сăмаху тĕрĕс пулсан, çур патшалăхна мана пар.

Анчах патшан чĕлхи евчĕнни пек шăмăсăр пулнă иккен. Кукшана вăл нимĕн те паман, хăваласа кăларса яма хушнă.

Хура халăх Кукшан чăн сăмахне илтнĕ те суеçĕ патшан пĕтĕм çĕрне туртса илнĕ. Ăна хăйне тинĕс утравĕ çине кайса янă.

Тĕрĕс, чăн сăмахран вăйли ним те çук!

## ЫЛТĂН ПАНУЛМИ

Тахçан авал пурăннă, тет, пĕр патша. Пĕррехинче вăл йăпанма шут тытать те, халăха пĕлтерме тесе тарçисене мĕнпур таврана кăларса ярать.

— Эй, халăх! Кам та кам патшана ĕненме пултарайман мыскара шухăшласа тупать, çавна патша ылтăн панулми парать!

Кĕçех мĕнпур таврараи патша ывăлĕсемпе княсем, купсасемпе тĕрлĕрен çынсем пыра-пыра каяççĕ, анчах нихăшĕ те патшана юраймаççĕ.

Юлашкинчен патша патне кăкшăм йăтнă пĕр чухăн çитсе кĕрет.

— Мĕр кирлĕ сана?—ыйтать унран патша.

— Сывă-и, патша?—тет кăна чухăн.—Эпĕ хамăн укçана илме килтĕм: сан мана пĕр кăкшăм укçа памалла вĕт?

— Суятăн эс, ман сана нимĕнле парăм та çук,—тет чухăна патша.

— Суятăп тетĕн-и? Апла пулсан, тавай ылтăн панулмине!

Патша чухăн чееленнине сисет те сăмаха юриех аяккалла пăрма тăрăшса:

— Çук, эс суймастăн иккен,—тесе хурать.

— Суймастăп пулсан, кивçен илнине халех парса тат.

Çапла вара, патшан ирĕксĕрех ăсла чухăна ылтăн панулми пама лекет.

## ĂСЛĂ ХĔР

Вуник салтак ним пĕлмен, тет те, патша вĕсене чул тирне сӳме янă, тет.

Хай салтаксем çĕçĕсем, пуртăсем тăратса пыраççĕ. Пырсан-пырсан, вĕсем пĕр вуник çулхи хĕре тĕл пулаççĕ. Хĕр вĕсенчен:

— Ăçта каятăр?—тесе ыйтать.

Кусем:

— Вĕрентнине пĕлменшĕн патша пире чул тирне сӳме ячĕ,—тесе калаҫҫĕ.

Хĕрĕ:

— Вăл патша чула хăй пусса патăр. «Вара эпир кайса сĕвĕпĕр», тесе калăр эсир,—тет.

Хай салтаксем патша патне каяҫҫĕ те:

— Эсĕ пире чула пусса пар, вара эпир сĕвĕпĕр,—тесе калаҫҫĕ.

Патши:

— Куна сире кам каларĕ?—тет.

— Эпир ҫул ҫинче пĕр вуник ҫулхи хĕре тĕл пултăмăр та, ҫав каласа пачĕ,—теҫҫĕ салтаксем.

— Вăл хĕр питĕ ăслă пулсан, чултан ҫăпата тутăр,—тесе ярать патши.

Хайхи вуник салтак хай хĕр патне каяҫҫĕ те калаҫҫĕ:

— Вăл сана чултан ҫăпата туса патăр терĕ,—теҫҫĕ.

Хĕр пĕр хутаҫ илет те хăйăр тултарса килсе калать:

— Патша ҫакăнтан кантра явса патăр,—тет.

Салтаксем ҫĕклесе каяҫҫĕ те патшана калаҫҫĕ:

— Вăл хĕр сана ҫак хăйăртан кантра явса пама каларĕ,—теҫҫĕ.

— Ку хăйăртан епле кантра явмалла?—тет патша.

— Чултан епле ҫăпата тумалла?—теҫҫĕ.

Патша калать:

— Вăл питĕ ăслă пулсан, ыран ман патăма ҫапла килтĕр: ни ҫарамас мар, ни кĕпепе мар, хапхаран ни кĕтĕр, ни ан кĕтĕр,—тесе ярать.

Хай хĕр атма пĕркеннĕ, качака утланă, мăйракинчен тытнă, тет, сиктерсе пырать. Хапхаран икĕ урине кĕртнĕ, икĕ урине кĕртмен, тет. Патша тухать те тĕлĕнсе икĕ пĕҫҫине шарт! ҫапать, тет.

Унтан патша вуник салтака ҫав хĕр патне хăтана ячĕ, тет. Салтаксем ҫитсен:

— Мĕн чухлĕ хулăм ыйтатăн? — теҫҫĕ.

Хĕрĕ:

— Хулăм кирлĕ мар, утмăл упа, вуник куян тытса килĕр,—тет.

Патша салтаксене тытма ячĕ. Утмăл упа, вуник куян хăваласа пыраҫҫĕ те:

— Ну, тытса килтĕмĕр,—теҫҫĕ.

— Ну, вĕсене пĕр картана хупма юрать-и?—тет хĕрĕ.

— Юрамасть,— теҫҫĕ салтаксем. Юрамасть тесе алă пусаҫҫĕ.

— Акă утмăл ҫулхи старикпе вуник ҫулхи хĕре те ҫапла венчет тума юрамасть,—тет хай хĕр.

Вара хай салтаксем пуҫĕсене лăштах усса таврăнаҫҫĕ, тет, патша патне.

## АСАМҪА ВĔРЕННИ

Ĕлĕк пĕр ача пасар кунĕ ирхине ирех тăнă та пасара кайнă. Пасар пуҫтарăнман, тет-ха, сутакансем те ҫук, тет. Ачан пĕр пус укҫи те пулман. Пасар пуҫтарăнса ҫитсен, вăл унăн-кунăн пăхкаласа курса ҫӳрет, тет.

Акă пасара кӳмепе улпутсем пырса кĕчĕҫ, тет. Виҫĕ лаша кӳлнĕ, тет. Ача пăхкаласа ҫӳрет-ҫӳрет, тет те, кӳме хыҫне пырса ларать, тет. Куна кӳме ҫинче ларса ҫӳрессине питĕ аван пек туйăнать, тет. Ача хăй ăҫта ларнине пĕтĕмпех манса кайнă.

Улпутсем пасартан тухаҫҫĕ те урнă пек килнелле чуптара параҫҫĕ. Ача анаймасть те кӳме хыҫĕнчех ларса каять. Килне ҫитсен, улпутсем ачана кураҫҫĕ, ăна вĕсем ĕҫтерсе ҫитереҫҫĕ. Ача вара кусем патĕнчех пурăнма пуҫлать.

Ҫак улпутсем шуйттансем пулнă. Вĕсем шывра пурăннă. Анчах ачана шывра пурăннă пек туйăнман.

Шуйттансем ачана тĕслĕрен япалана вĕрентме тытăнаҫҫĕ. Ачи питĕ

ăслă пулнă. Вĕрентнине-пĕрне ăнланса пынă. Акă шуйттансем:

— Атьăр тата вунпĕр ача пуçтарса килер, вуниккĕшпех пултăр,— тесе каларĕç, тет. Унтан кӳме кӳлсе тухса каяççĕ. Чăнах та, кусем тата вунпĕр ача илсе килеççĕ те вĕсене те малтан килнĕ ачапа пĕрле вĕрентме тытăнаççĕ.

Нумай пурăнаççĕ-и, сахал пурăнаççĕ-и — пĕрре шуйттансем ачасене сăра пĕçерме хушаççĕ. Сăра йӳсе çитсен, ачасем сăрине сĕреççĕ. Кăштах пичĕкене кĕмесĕр юлать. Çав сăрана ачасене хăйсенех ĕçтерсе ӳсĕртеççĕ.

Тепĕр ирхине çак ачасене шуйттансем ашшĕ-амăшĕсене хăнана чĕнме янă. Хай пирĕн ача ашшĕсем патне каять те калать:

— Атте, пире ыран улпут йĕпкĕн хура пурсуй йытăсем тăвĕ, унтан сире паллама хушĕ. Манăн ăмăр çинче пĕр шурă çăм пулĕ, мана çавăнтан паллăр,—тет.

Чăнах та, ачасен ашшĕ-амăшĕсем тепĕр кун улпут патне хăнана пуçтарăнаççĕ. Ĕçеççĕ, çиеççĕ; ӳсĕрĕлсе çитсен, улпут хăнасене калать:

— Атьăр халĕ ачăрсене тухса паллăр. Палласан, ачăрсене киле парса ярăп,—тет.

Хăнасем карташне тухаççĕ. Ачисем вĕсен йĕпкĕн хура пурсуй йытăсем пулнă. Пурте:

— Ак ку манăн! Ак ку манăн!— тесе калаççĕ, тет.

Пирĕн ачанăн ашшĕпе амăшĕваскамаççĕ шурă çăмлă йытта шыраса çӳреççĕ. Курах кайрĕç, тет:

— Ак ку пирĕн пулĕ,—тесе каларĕç, тет.

Ӳлпут кусене калать:

— Халех парса ямастăп-ха: тата икĕ хутчен палласан, парса ярăп,— тет.

Ӳсĕрĕлнĕ хăнасем шавласа, юрласа киле таврăнаççĕ.

Кăштах пурăнсан, шуйттан, татах сăра пĕçерттерсе, ачасене хăйсен ашшĕ-амăшĕсене хăнана чĕнме ярать. Сăрине сĕрнĕ чух каллех кăштах пичĕкене кĕмесĕр юлать. Ачасем сăрана ĕçсе ӳсĕрĕлсе выртса çывăраççĕ. Ирхине тăрсан, ачасем ашшĕ-амăшĕсене чĕнме каяççĕ. Пирĕн ача татах ашшĕсене калать:

— Атте, кунчехинче улпут пире йĕпкĕн хура хурчăкасем тăвĕ. Манăн пĕсехе çинче пĕр шурă тĕк пулĕ, мана çавăнтан паллăр вара,—тет.

Ачанăн ашшĕ-амăшĕсем татах хăнана пырса ĕçсе ӳсĕрĕлеççĕ. Пирĕн ачанăн ашшĕпе амăшĕ ытлашши ĕçмеççĕ. Улпут татах хăнасене ачисене паллама хушать. Ачисем йĕпкĕн хура хурчăка пулнă. Вунпĕрĕшĕн ашшĕ-амăшĕсем татах ачисене паллайман, пирĕн ачана ашшĕпе амăшĕ палланă.

Пурăнсан-пурăнсан, улпут ачасене татах сăра тума хушать. Ачасем сăра тăваççĕ, пичĕкерен ытлашши юлнине ĕçсе ӳсĕрĕлеççĕ. Тепĕр ирхине улпут хушнипе ашшĕ-амăшĕсене чĕнме каяççĕ. Пирĕн ача ашшĕ-амăшĕсем патне каять те калать:

— Пире кунчехинче йĕпкĕн хура ăйăрсем тăвĕ, манăн çамка çине пĕр шурă çăм пулĕ. Чипер astăвăр. Палласан, улпут парса ярĕ; паллаймасан, парса ямĕ,—тет.

Хăнасем виççĕмĕш хут улпут патне пуçтарăнаççĕ. Ĕçеççĕ, çиеççĕ, шавлаççĕ, юрлаççĕ. Пурте ӳсĕрĕлсе çитеççĕ. Пирĕн ачанăн ашшĕпе амăшĕ анчах урă лараççĕ. Улпут, хăнасем ӳсĕрĕлсе çитсен, вĕсене, карташне илсе тухса, ачисене паллама хушнă. Ачисем пурин те йĕпкĕн хура ăйăрсем пулнă, тет. Вĕсем пурте тимĕр сăнчăрсемпе кăкарăнса тăнă. Хăнасем кунчехинче те:

— Ак ку манăн! Ак ку манăн!— тесе калаççĕ, тет.

Пирĕн ачанăн ашшĕпе амăшĕ пĕр васкамасăр çамка çинче шурă çăмлă ăйăра пăхса çӳреççĕ. Курах кайрĕç, тет те:

— Ак ку пирĕн!—тесе каларĕç, тет.

Ачана улпут ашшĕпе амăшне парса ярать. Анчах ачана йăйăр халлĕнех кăкарса ярать.

Акă кусене çул çинче тилĕ тĕл пулать. Хай йăйăр ашшĕне чарăнма хушать. Хăй пурсуй пулать те, тилле тытса, ашшĕ патне илсе пырать.

Татах кайсан-кайсан, кусене пĕр ушкăн кайăк хурсем тĕл пулаççĕ. Ача каллех ашшĕне чарăнма хушать. Хăй хурчăка пулать те, çӳлелле вĕçсе улăхса, кайăк хурĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн пăвать те пăрахать. Пĕр лав кайăк хур тиеççĕ те малалла каяççĕ. Акă кусене хирĕç çулпала улпутсем килеççĕ. Ача хурчăкаллах лав çинче ларса пырать. Старик тĕлне çитсен:

— Мĕнле тытрăн ку кайăк хурсене?—тесе ыйтаççĕ.

Старик калать:

— Ак çак хурчăкапа тытрăм,—тет.

Лешсем:

— Сут пире!—теççĕ.

Ачи вăрттăн:

— Атте, сут, сут!—тет.

Старик вара хурчăкана пин тенке сутса ярать. Улпутсем хурчăкана лартаççĕ те малалла чуптараççĕ. Акă вĕсене хирĕç кайăк хур ушкăнĕ килет. Улпутсем хурчăкана яраççĕ. Хурчăка улăхса каять те пĕрерĕн-пĕрерĕн кайăк хурсене пăва-пăва пăрахать. Пĕр кайăк хурĕ анчах юлать. Хурчăка ăна тыти-тытми пек явăнса каять. Улпутсем пăхса тăраççĕ. Хурчăка курăнмиех пулать. Старик тĕлне çитсен, хурчăка хура пусса ӳкерет те хăй те анса ача пулать.

Улпутсем хурчăкана ниçта шырама кайма пĕлмеççĕ. Кайăк хурĕсене кӳме çине тиеççĕ те килелле чуптараççĕ. Ача та ашшĕ-амăшĕпе киле таврăнать.

Пурăнсан-пурăнсан, ярмарка çитет. Ача ашшĕне калать:

— Атте, эпĕ йăйăр пулăп. Эсĕ мана ярмаркăна тухса сут. Анчах йĕвене нимĕнпе те ан пар,—тет.

Старик ярмаркăна йăйăра кăкарса тухать. Йăйăр ытарма çук аван, тет. пĕтĕм пасар пăхса анчах тăраççĕ, тет. Шуйттансем те ярмаркăна пыраççĕ. Йăйăр, шуйттансем пынине сиссе, шаршар кĕçенсе ярать. Шуйттансем тӳрех йăйăр патне пыраççĕ те ăна хаклашма тытăнаççĕ. Старик кусене икĕ пин тенке сутма килĕшет. Анчах старик ку улпутсем шуйттансем иккенне пĕлмест.

Шуйттансем йăйăра йĕвенпех илсе каясшăн, тет, старик йĕвенĕпех парса ярасшăн мар, тет. Тавлашсан-тавлашсан, старик йăйăра йĕвенĕ-мĕнĕпех парса ярать.

Шуйттансем, йăйăра илсенех, тимĕр туяпа çурăм çинчен виççĕ-тăваттă хураççĕ, тет. Йăйăр ниçта пуçне чикеймест. Унтан шуйттансем кăкарса киле илсе каяççĕ. Вара йăйăра, юпа çумне кăкарса, ыйăниччен хĕнеççĕ те пӳрте апат тума кĕреççĕ. Лешсем кĕрсен, йăйăр чĕлпĕрне татать те, çăрттан пулă пулса, шывпа тарать. Шуйттан та пулă пулса хăвалать, тет. Шуйттанран таракан пулă вакран тухать те çын пулса тăрать.

Пĕр хĕр шыв ăсма пынă. Ача хĕре калать:

— Эпĕ çĕрĕ пулăп. Эсĕ çĕрре ил те пӳрнӳне тăхăн. Санран ăна пĕр çын: «Çĕррӳне пар мана, вăл ман çĕрĕ!»—тесе ыйтĕ. Темĕн тĕрлĕ ыйтсан та — ан пар,—тет.

Чăнах та ача çĕрĕ пулать; хĕр ăна илсе тăхăнать. Шуйттан, çын пулса, хĕр патне пырать те:

— Эсĕ ман çĕрре тупнă. Пар!—тесе аптăратать.

Хĕр памасть, килне каять. Çын та унпа пĕрле ерсе каять. Хĕр, аптăратсан-аптăратсан:

— Ме эппин!—тесе, çĕрре çĕре перет. Çĕрĕ пĕр пăтавкка вир пулса тăрать. Шуйттан автан пулса çиме тытăнать. Пĕтĕмпе çисе ярсан, автан

ки-ки-ре-ку! тесе авӑтса ярать. «Ҫӗнтертӗм!» тет пулмалла.

Анчах пӗр пӗрчӗ вир автанӑн ура тупанӗ ҫумне ҫыпҫӑнса юлнӑ иккен. Ҫав вир пӗрчинчен хурчӑка пулать те автана таткаласа та пӑрахать. Унтан хурчӑка ача пулать.

Ҫапла ӗнтӗ ача шуйттана ҫӗнтерет. Вӑл шуйттанран пӗр сӑмах ытларах пӗлнӗ.

Ача вара, хӗрпе мӑшӑрлӑ пулса, халӗ те пулин ырӑ курса пурӑнать, тет.

## ЧЕЕ КӖРУ

Ӗлӗк-авал пӗр ялта питӗ чее ҫамрӑк каччӑ пурӑннӑ, тет. Тӗсрен-питрен хӑй илемсӗртерех пулсан та, чӗлхи-ҫӑварӗнчен вара ӑна ҫитекен никам та пулман, тет. Кампа та пулин хирӗҫсен-тусан, ӑна пӗр сӑмахпах касатчӗ те пӑрахатчӗ, тет.

Пурӑнсан-пурӑнсан, ҫак каччӑ авланса ярать. Арӑмӗпе кусем питӗ лайӑх килӗштерсе пурӑнаҫҫӗ, тет. Анчах хунямӑшӗ ҫак кӗрӗве чӗлхишӗн пӗртте юратми пулчӗ, тет. Вӑл килӗнче те, кӳрши-аршисемпе те кӗрӗвӗ ҫинчен:

— Эх-хе-хе, пирӗн кӗрӳ пӗртте кӑмӑллӑ пулмарӗ: тӗсӗ-пичӗ ҫук, чӗлхиҫӑварӗ — калама та намӑс,— тесе тек кулянса калаҫать, тет.

Кӗрӳшӗ, хунямӑш юратманнине пӗлсен, шухӑша кайрӗ, тет. «Ку мана капла арӑмпа та хирӗҫтерсе ярӗ! Мӗнле ҫавӑрас куна?»—тесе шутлать, тет.

Акӑ пӗрре пысӑк праҫник ҫитсен, кӗрӳшӗ хунямӑш патне хӑнана пуҫтарӑнса кайрӗ, тет. Хунямӑшӗ, ют ҫын хӑнисене кӗтсе, сӑра та пичкипех туса лартнӑ, тет, тӗрлӗрен аш-пӑш, икерчӗ-масарӗ те пӗҫерсе тултарнӑ, тет. Анчах кӗрӳшӗ пырсан, ун валли чей вӗреткелесе, сӗтел ҫине типӗ ҫӑкӑр кӑна касса хучӗ, тет.

Кӗрӳшӗ, куна сиссе, пушшех майлӑн ҫаптара пуҫларӗ, тет.

— Ну, ҫӗркаҫ тӗлӗнмелле тӗлӗк курнӑ та эпӗ! Каласа парам-и?—тет.

— Кала-ха, кала, кӗрӳ. Мӗнле тӗлӗк?—терӗ, тет, ку кӗрӳшне.

Кӗрӳшӗ тӗлӗк калама тытӑнчӗ, тет.

— Тӗлӗкре эпӗ сирӗн пата хӑнана килме тухрӑм пек,—тет.—Уткаласа пыратӑп ӗнтӗ хӗпӗртесе. Ҫул ҫинче мана хирӗҫ сирӗн сакайӗнче ларакан пичке пек тем пысӑкӑш ҫӗлен чашкӑрса пыра парать пек,—тет.—Хӑранипе манӑн пӗтӗм ҫӳҫпуҫӑм вирелле тӑрса кайрӗ. Эх, тетӗп, савнӑ хунямасем патне те ҫитсе курасси пулмасть вӗт!—тетӗп,—тет. Мӗн ӗҫлес? Тытрӑм та ҫапрӑм ҫӗлене кӑмакӑр умӗнче ларакан така пуҫ пек чулпала. Ҫӗлен пуҫӗ ҫавӑнтах шкапӑрти ҫуллӑ капӑртма пек лапчӑнса ларчӗ!—тет.—Тин вара сирӗн патӑра ҫитсе ӳкрӗм пек,—тесе пӗтерет, тет, кӗрӳшӗ тӗлӗкне.

Хунямӑшӗ пӗр хурланса, пӗр савӑнса кайрӗ, тет.

— Эх, кӗрӳ, мӗн тери юрататӑп сана!.. Ҫепӗҫ чӗлхӳ-ҫӑварупа тин кӑмӑлӑма тупса ҫавӑртӑн!—терӗ, тет, хайхи.

Вара хунямӑшӗ кӗрӳшӗ умне кӑмака умӗнчи така пуҫне те, шкапӗнчи ҫуллӑ капӑртмине те илсе пырса лартрӗ, тет, пичкинчи сӑрине те ӑсса тухса ӳсӗртмеллех ӗҫтерсе ячӗ, тет.

Тин хунямӑшӗ ял ҫинче:

— Ну, кӗрӳ-тӗк кӗрӳ манӑн! Чӗлхи-ҫӑварӗ ҫу пек ҫемҫе. Тӗсӗ-пичӗ те ҫынсеннинчен пӗртте кая мар!—тесе мухтама тытӑнчӗ, тет, кӗрӳшне.

## ЯЛАМПИ

Пӗр карчӑкпа пӗр старик пурӑннӑ. Арӑмӗ ҫамрӑкрах пулнӑ. Ҫапла пурӑннӑ вӑхӑтра ҫак арӑм Тимук ялӑ

çынпа туслашнă. Ăна старикки сисмен.

Утă çулмалли вăхăт çитсен, арăмĕ юри халсăр пуланçи пулса выртать. «Ах»,—тесе вырăн çинчен те тăмасть.

— Старик,—тет,—эсĕ утă çулма каятăн, мана пăхакан çын çук пулать. Кил-çурт пуçтаракан пĕр-пĕр çынна тупса кил-ха.

Старик арăмĕн сăмахне итлет те шырама тухса каять. Çулпа пырсан-пырсан, пĕр ачана тĕл пулать.

— Ăçта каян, мучи?—тет ача.

— Мана утă çинче пĕр çын кирлĕ пулать. Арăм халсăр выртать,—терĕ старик.

— Эппин, мана ил,—терĕ ача.

— Сан яту мĕнле?

— Манăн ят Ялампи,—терĕ.

— Уй, ун пек ятлă çын мана кирлĕ мар,—терĕ старик.

— Пирĕн ялта пурте çав ятлă. Урăх ятлине тупаймастăн,—терĕ ача.

Старик малаллах утрĕ. Ача аякран чупса, старик пынă çул çине тухса ларчĕ.

— Ăçта каян, мучи?—терĕ, çитсен.

— Мана утă çинче вăхăтлăх ĕçлеме çын кирлĕ, çавна шыратăп,—терĕ старик.

— Эпĕ ĕçлеме пултаратăп.

— Яту мĕнле?

— Ялампи.

— Чăнах та, урăх ятлă çын тупаймастăп пулĕ. Атя, эппин, манпа пĕрле,—терĕ старик.

Ачапа старик килелле утрĕç.

Килте, хатĕрленкелсе, старикпе ача утă çине тухса кайрĕç. Арăмĕ выртса юлчĕ. Анчах ачи стариккин арăмĕ пăлахая персе выртнине пĕлчĕ. Çул çинче ача урапа çинчен старик сисиччен кĕреплине пăрахса хăварчĕ. Вырăна çитсен, старик кĕрепле çуккине курать:

— Нивушлĕ кĕрепле хураймарăмăр?—тет.

— Манса юлчĕ киле,—тет ачи.

— Кайса илес пулĕ,—тет старик.

— Мĕн утса çӳрен, эсĕ ватă вĕт, хам наччас кайса килетĕп,—терĕ те ача, чупрĕ.

Ача киле çитрĕ. Киле çитсен, арăма сыхлама пусма айне кĕрсе ларчĕ. Чăнах та, кӳршĕ Тимук çитрĕ. Арăмпа пӳрт умĕнче улаххăн калаçса лараççĕ.

—Эсĕр ăçта утă пуçтаратăр-ха?—тет арăмĕ.

— Эпир сан старикрен инçе мар ĕçлетпĕр,— тет Тимук.

— Эпĕ, эппин, сан пата шăрттан пĕçерсе пыратăп. Анчах мĕнле пыма пĕлмелле-ха?

— Эпĕ турпас пăрахса каятăп. Çав турпас йĕрĕпе пыр. Пирĕн патах çитетĕн.

— Юрĕ, эппин.

Ача Тимукĕ тухса кайсан кайран тин кайрĕ. Турпас тăкса пынă çул тепĕр еннелле пăрăнать. Ача унталла каякан турпасне пуçтарса илчĕ те хăйсем утă пуçтарнă çĕре пăрахса тухрĕ.

Арăм шăрттансем-мĕнсем пĕçерсе хатĕрлерĕ те, Тимук патне йĕрлесе, турпас йĕрĕпе кайрĕ. Кайсан-кайсан, ăçта каяс тенĕ çĕре мар, старикки патне çитсе тухрĕ. Хăй питĕ капăр тумланнă.

— Усăлтăн-и-ха?—терĕ старик.

— Кăшт усăлтăм пек-ха,—терĕ арăмĕ, йынăшнă пек.

Çиме лариччен ача Тимук капан хунă çĕре кайрĕ те каларĕ:

— Тимук, эсĕ ĕнер инке патне пытăн. Сана хĕнеме мучи сенĕкпе килет,—терĕ. Çапла каларĕ те мучăш патне чупса таврăнчĕ. Мучăшне калать:

— Мучи, сана Тимук капан тăрламашкăн пулăшма чĕнчĕ,—терĕ.

— Каяс,—терĕ те старик, сенĕкне йăтса утрĕ.

Старик кайсан, ача арăма калать:

— Сана эпĕ калама маннă. Тимук-



па эсĕр калаçнине пĕлнĕ те мучи, халĕ çавăншăн ăна хĕнеме кайрĕ. Киллсен, сана лекет!—терĕ.

Арăм çакна илтет те — килелле. Старик сенĕкне йăтса таврăнать:

— Тимук таçта кайнă,—тет ачана.—Тата карчăк ăçта кайрĕ-ха?—тет.

— Вăл киле чупрĕ. Ара, вĕри кăмакари кĕле милĕк йĕпетмесĕрех шăлнă та, милĕк тивсе кайса çунма тытăннă. Ав пырать чупса килелле!—тет ача.

Старик сенĕкне пăрахать те часрах киле чупать. Старик хăй хыççăн чупнине курсан, арăмĕ хăранипе тата хытăрах чупать.

Арăмĕ çитсенех, старикки хашкаса çитрĕ. Старик ним çуннине курмасть. Старикки сăмах хушиччен арăмĕ хăранипе чĕркуçленсе тархаслама тытăнчĕ:

— Тархасшăн, ан тив. Тимукпа урăх нихçан та çыхăнмастăп. Киле те кĕртместĕп,—терĕ.

— А-а-а,—терĕ,—эсĕ унпа, çынпа, пурăнатăн?!—тытăнчĕ ку паркаласа илме.

Ача вара старик утă çулнă çĕртен хăйĕн çулĕпе уттара пачĕ.

## ЭСРЕЛ

Пĕр çын вилĕмрен питĕ хăранă. Епле те пулсан вилĕмрен хăтăласшăн пулнă. Шухăшласан-шухăшласан, вăл пĕр пыйтă тытнă та: «Ăна ўстерсе, тирне сўсе эсреле кăтартатăп та, çак мĕн тирне пĕл, вара тин ман чуна ил»,—тейĕп, тенĕ.

Чăнахах та хайхи пыйтăна ўстере пуçланă. Лайăх çитернĕ, пăхнă ăна тем пекех.

Пĕр тăватă-пилĕк çултан пыйтă кăвакал пек пулнă. Вара çав çын ăна пусса тирне сўсе илнĕ.

Нумаях та вăхăт иртмен — эсрел пырса та çитнĕ. Çавине хулпуççи çине тăратнă, старике:

— Вĕлеретĕп!—тет.

Старик пыйтă тирне туртса кăларать те:

— Тăхта-ха, çак мĕн тирне пĕл, вара вĕлер,—тет.

Эсрел тире çавăркаласа пăхкаларĕ те паллаймарĕ. Вара çавине усса ярса тухса кайрĕ, тет.

Пурăнсан-пурăнсан, çав кӳршĕрех тепĕр çыннăн вилĕмĕ çитнĕ пулнă. Эсрел часрах çавине тăратса пынă, тет. Ку çын эсреле:

— Мĕншĕн-ха эсĕ мана вĕлерессшĕн, манран ваттисем те пурăнассĕ халĕ,—тенĕ.

Эсрел:

— Эпĕ пĕр старик патне пытăм та, вăл мана темĕскер тирĕ кăтартрĕ. «Çак мĕн тирне пĕл, вара вĕлер»,—терĕ. Эпĕ пĕлеймерĕм те вĕлереймерĕм,—тет.

Çынни:

— Çав пыйтă тирне те паллаймарăн-и?—тет.

Эсрел хайхи хыпаланса старике вĕлерме тухса каять. Çын тире кăларсанах:

— Ку пыйтă тирĕ вĕт!—терĕ те çынна вĕлерсе тухса кайрĕ. Унтан кӳршĕ çыннине те кайса вĕлерчĕ, тет.

## ХАЯР КАРЧĂК

Карчăкпа старик пурăннă. Урăх вĕсен никам та пулман. Карчăкĕ питĕ кутăн пулнă, стариккине пĕрре те картман, сăмах калама та паман. Çавах та старик чăтса пурăннă, вăй çитнĕ таран кăштăртатса çӳресе ĕçленĕ.

Пĕрре çапла килте хутма вутă пĕтсе çитсен, вăл, начар лашине кӳлсе, хăрăк шанкă пуçтарма вăрмана кайрĕ.

Çӳрерĕ ку çапла вăрманта, хăрăк шанкă пуçтарса. Çӳренĕ çĕрте çĕре анса каякан шăтăк курах кайрĕ. Шăтăкĕ те мар тĕлĕнтерчĕ старике, шăтăк тавра хурăн çырли хĕп-хĕрлĕ пиçсе ларнă.

Старик çырлана курса ытараймарĕ, калпакне хыврĕ те пуçĕнчен çырла татма тытăнчĕ. Пĕр калпак туллиех татса тултарчĕ те, лашине çавăрса, шанкă çине хăпарса килнелле кайрĕ.

Çитрĕ килне. Ку çара пуçăн килнине карчăкĕ курчĕ те тӳрех тем-тем сăмах каласа ятлама тытăнчĕ.

— Карчăк, ытла тӳрех ан ятла-ха, эпĕ çырла татса килтĕм. Ним ăшне татма та май килмерĕ, вара калпак ăшне татрăм. Çырли питĕ нумай, нихçан та татса пĕтереес çук,—терĕ старик.

Карчăк тин лăпланчĕ. Старикки аллинчен çырла тултарнă калпакне илчĕ те тӳрех çиме тытăнчĕ. Ывçиывçипе ывăçласа çисе ларать пусма картлашки çинче карчăк. Старик, утне тăварса, урапа çинчен шанкине пушатрĕ.

— Ну, старик, ыран мана вăрмана çырла пуçтарма илсе кай. Эпĕ çырла çиме питĕ юрататăп,—терĕ карчăк, старикки татса килнĕ çырлана çисе ярсан.

— Юрать, илсе каятăп, ăна никам та пуçтарса пĕтерес çук,—терĕ старик.

Тепĕр кунне старик карчăкне вăрмана çырла пуçтарма илсе кайрĕ. Вăл хăй ĕнер çырла татнă çĕре илсе çитерчĕ. Карчăк шăтăк тавра ларакан çырлана çăткăн пекех пуçтарма тытăнчĕ — ниçталла пăхмасăр çырла татать. Старик унтан инçе мар урапи патĕнче тăрать. Тăрать те шухăшлать: «Çак ман карчăк çавах мана картмасть, унпа ыррине сахал куртăм, манăн ăна тавай тĕпĕпех туса хăварас»,—тет хăй ăшĕнче.

Унтан çаврăнса, карчăкĕ хыçне вăраххăн, систермелле мар пычĕ те тӳрех шăтăка тĕксе ячĕ. Карчăк шăтăка анса ка-айрĕ. Старик пĕчченех киле вĕçтерчĕ. Килте вăл пĕчченех пурна пуçларĕ.

Карчăк анса кайнă шăтăкра усал ларнă.

— Аха, ман пата карчăк килчĕ,— терĕ усал.

— Эсĕ тата мĕнлескер? Эпĕ ку таранччен хам старикрен хăраман та санран хăратăп-и!—кăшкăрса пăрахрĕ карчăк усала.

Унччен те пулмарĕ — карчăк усал çине утланса ларчĕ. Вĕлерет карчăк усала муритлесе.

Усалăн сехри хăпса тухрĕ. Ним тума та пĕлмест. Тухса тарас — тухаймасть; малтан та çак шăтăкран тухаймасăр ларнă усал. Халĕ карчăк утланса çӳресе тăна янипе пушшех вăйĕ пĕтрĕ кун. Çавнашкал аппаланса пурăнаççĕ карчăкпа усал.

Килте пĕчченех пурăнсан-пурăнсан, старике карчăкĕ аса килчĕ, унăн ăна шеллес килчĕ. «Мĕнле пурнатьши?»—тесе, кайса пăхмалла шут турĕ. Вĕрен илчĕ те кайрĕ шăтăк патне. Шăтăка вĕрен ячĕ.

Усал, вĕрен ярсанах, вĕрентен çакăнчĕ. Старик, вĕрентен карчăкĕ тытрĕ тесе, туртса кăларчĕ. Шăтăкран карчăк мар, усал тухрĕ тăчĕ.

— Ну, старик, тавах сана, юратьха кăлартăн. Карчăку тăна илчĕ вĕт. Халь ĕнтĕ санран уйăрăлмастăп,— терĕ.

Старик, карчăкĕ çинчен çапла каланине илтсен: «Ку усалтан та хăрамасть те, ăна мĕн шеллес?—тесе, карчăкне кăларма та шутламарĕ, кайрĕ килне шанкă тиесе. Унран усал та юлмарĕ, вăл шанкă пухма пулăшрĕ.

Киле çитрĕç. Старик усала çитерчĕ, ĕçтерчĕ. Усалпа старик пĕрле пурăнса кайрĕç. Усал старике ĕçпе нумай пулăшать: вутă татса парать, ытти ĕçе те тăвать. Аптрамасть, пурăнаççĕ. Усал старике калать:

— Итле-ха, старик: пурнасса аптрамалла мар пурăнатпăр, анчах пирĕн укçа çук, пирĕн укçа тупмалла,— тет.

— Тупма кирлине пĕлетĕп те, ăçтан тупăпăр-ха ăна?—терĕ старик.

— Итле мана: эпĕ улпутăнне вăйлă йăрне кайса чирлеттерĕп. Эсĕ чĕртекен пулса пыр та, йăйăра шăлкаласа тĕх-тях тукала. Вара эпĕ ун хыççăн уйрăлса каятăп. Йăйăр чĕрĕлет те, сана улпут пилĕкçĕр тенкĕ укçа парать,—терĕ усал.

— Юрĕ,—терĕ старик.

Усал çакăн хыççăн улпут патне кайса йăйăрне чирлеттерчĕ. Йăйăр урнă пекех пулса тăчĕ. Çак вăхăтра улпут тĕлне старик те çитнĕ. Улпут старике курчĕ те:

— Манăн йăйăра тем пулчĕ. Эсĕ усăма пултараймастăн-и?—терĕ.

— Пултаратăп,—терĕ ку. Сыватма тытăнчĕ. Шăлкаларĕ, тĕх-тях тукаларĕ. Унччен те пулмарĕ — усал тухса кайрĕ. Йăйăр малтанхи пекех пулса тăчĕ. Улпут, старике хăй патне илсе кĕртсе, тăраниччен ĕçтерсе çитерчĕ. Унтан пилĕкçĕр тенкĕ укçа парса ăсатса кăларса ячĕ. Старик укçаллă пулса килне таврăнчĕ.

— Ну, старик, куртăн-и мĕнле укça тупнине?—терĕ усал.

— Куртăм, пултаратăн эсĕ, чăнах та,—терĕ старик савăнăçлăн.

Усал усалах тăвасшăн:

— Старик,—тет усал,—эпĕ тата тепĕр улпутăн хĕрне чирлеттерсе вĕлеретĕп. Эсĕ унта ан пыр. Эпĕ каятăп та урăх сан пата килместĕп. Сывă пул!—терĕ те тухса кайрĕ усал.

Усал, кĕçех улпут хĕрĕ патне çитсе, ăна чирлеттернĕ-чирлеттернех. Улпут хĕрĕ чирленĕшĕн хыпаланса ӳкнĕ. Тухтăрсене чĕнтерет, нихăшĕ те нимпе те пулăшаймаççĕ.

Унтан улпут старик патне çитет.

— Старик,—тет улпут,— манăн хĕр чирлерĕ. Эсĕ сыватма пултаран, теççĕ,—тет.

— Çук, пултараймастăп, пымастăп та,—терĕ старик.

— Суятăн! Пымасан, сана хулапа кастаратăп!—тесе, çирĕппĕн каласа тухса кайрĕ улпут.

Усал хӑй патне пыма каламарӗ пулин те, каймаллах пулчӗ старикӗн.

Старик нумаях та шухӑшласа тӑмарӗ, хӑйне валли ӑс тупрӗ-тупрех: «Аха,—терӗ вӑл,—усал ман карчӑкран питӗ хӑратчӗ-ха. Тавай манӑн ун патне хам карчӑк пулса каяс»,—терӗ.

Старик карчӑкӗн тумтирне тӑхӑнчӗ, ҫӳҫпуҫне кӑларса ячӗ те усал патне тухса утрӗ. Ҫитсе кӗчӗ хайхи улпут хӗрӗ выртнӑ пӳлӗме.

— Аха, шӑтӑкра манпа пурӑннӑскер, халӗ эс кунта килтӗн-и-ха? Кӑтартам-ха сана эп камне!—тесе аллине саркаласа, усал патнелле утса пырать. Усалӑн, карчӑка курсанах, пӗтӗм сехри хӑпса тухрӗ те, вӑл хӑранипе ҫил пек мӑкӑрланса тухса тарчӗ. Хыҫҫӑнах улпут хӗрӗ те сываласа тӑчӗ. Улпут старике пин тенкӗ парса ӑсатса ячӗ. Старик килне у-утрӗ.

Усал, карчӑк хӑйне ҫавах ҫул парас ҫук тесе, хӑй пурӑннӑ шӑтӑках кайса пурӑнмалла турӗ. Кайрӗ те сикрӗ шӑтӑка. Карчӑк та ҫавӑнтах пулнӑ-мӗн. Вара хаяр карчӑкпа усал, вӑрҫкаласа пурӑнса, иккӗшӗ те ҫав шӑтӑкрах вилнӗ.

## КАНТӐР КӖПИ

Пӗр ҫамрӑк арӑмӑн упӑшки вилнӗ пулнӑ. Ун патне усал пыма вӗреннӗ. Ҫак хӗрарӑм унран ниепле те тасалаймасть.

Пӗри ӑна:

— Эсӗ кантӑр кӗпи ҫак алӑк ҫине, усал ан кӗрейтӗр,—тесе калать, тет.

Хӗрарӑм кантӑр пир кӗпи ҫӗлерӗ, тет те, алӑкӗ ҫине ҫакса ячӗ, тет. Усалӗ пычӗ, тет. Кантӑр кӗпи:

— Чим-ха, ан кӗр-ха,—тет,—хам ӗмӗрте мӗн курнине каласа кӑтартам,—тет.

Усалӗ:

— Кала, эппин,—тет.

— Эпӗ хам ӗмӗрте пит нумай курнӑ,—тет кӗпи.—Мана акиччен ҫӗре сухаласҫӗ, сӳреҫҫӗ, вара мана акаҫҫӗ. Ик-виҫ кунтан сӳрепе тавӑраҫҫӗ. Эпӗ шӑтса тухатӑп, ӳсетӗп. Ман ҫинче пуса пулать.

— Кӗрт ӗнтӗ!—тет усал.

— Чим-ха, каласа пӗтерем-ха,—тет кӗпи.—Пусине ман ҫинчен уйӑрса илеҫҫӗ, вара эпӗ пулса ҫитетӗп те, мана тӗппе вӑяҫҫӗ — татаҫҫӗ-тӑпӑлтараҫҫӗ, унтан кута татаҫҫӗ.

— Ну, кӗрт ӗнтӗ!—тет усалӗ.

— Чим-ха, каласа пӗтерем-ха,—тет кӗпи.— Унтан мана ҫапаҫҫӗ, ман вӑрра пухса илеҫҫӗ.

— Ну, кӗрт ӗнтӗ!—тет усал.

— Чим-ха, каласа пӗтерем-ха,—тет кӗпи.

Кӗпи каласа пӗтереймест — автан авӑтса ярать. Усал вӑл каҫ арӑм патне кӗреймесӗрех пӑрахса каять.

Тепӗр каҫ хайхискер татах пычӗ. тет. Кӗпи калать, тет.

— Ман вӑрра ҫапса тӗшӗклеҫҫӗ, кӑвӑраҫҫӗ, пухса хураҫҫӗ, кантӑрне уйӑрм купалаҫҫӗ те шыва кайса хутаҫҫӗ. Ҫапла мана виҫ эрне шывра вырттараҫҫӗ.

— Ну, кӗрт ӗнтӗ!—тет усал.

— Чим-ха, каласа пӗтерем-ха,—тет кӗпи.—Виҫ эрнерен мана шывран кӑлараҫҫӗ те типӗтме тӑратаҫҫӗ.

— Ну, кӗрт ӗнтӗ!—тесе калать. тет, усалӗ.

— Чим-ха, каласа пӗтерем-ха, хамӑнне шӑмма-шакка мӗнле ҫӗмӗрнине каласа кӑтартам,—тет кӗпе.—Манне пӗтӗм шӑмма-шакка ҫӗмӗрсе силлеҫҫӗ, ӳте шӑмӑ-шакран тасатаҫҫӗ. Унтан мана, килӗ ҫине хурса, ниме ярса тӑваттӑн-пиллӗкӗн тӗвеҫҫӗ,—тет.

— Кӗрт ӗнтӗ!—тет усал.

— Манран мӗнпур тусана тӳсе кӑлараҫҫӗ, таса ӳт анчах хӑвараҫҫӗ.—тет кӗпи.—Турахуп ҫине ҫакса, пӗрчӗн-пӗрчӗн уйӑрса, арласа манран

çип тăваççĕ. Çиппине хутăр йывăç-çи çине хутăрса, унтан илсе шыв çи-не чиксе, çăра кĕлпеле чĕркесе ху-раççĕ, пур куçа-пуçа хупăрлаççĕ, пур куçа кĕл тултараççĕ, нимĕн те кур-мастăп.

— Кĕрт ĕнтĕ!—тет усал.

— Чим-ха, хам ĕмĕрте мĕн-мĕн курнине каласа пĕтерем-ха,—тет кĕ-пи.

Татах кĕртмест кĕпи усала. Татах автан авăтса ярать.

Виççĕмĕш каç усал каллех пы-рать.

— Мана вара çуса тасатаççĕ, ти-пĕтеççĕ, çăмхалаççĕ те кĕр витĕр, хĕç витĕр кăлараççĕ. Пĕрчĕн-пĕрчĕн ывăтса. манран пир тăваççĕ.

— Ну, кĕрт ĕнтĕ!

— Нумай мар ĕнтĕ, каласах пĕте-рем,—тет кĕпи.

— Кайран вара пирне, шыва чик-се кĕл çинче вĕретсе, урама шурă юр çине сарса шуратаççĕ, тăрă шывпа куçа тулнă кĕле тасатаççĕ. Татах ма-на тăваттăн тăрса тĕвеççĕ, çапаççĕ. Чĕркесе хураççĕ те унтан касса кĕ-пе çĕлеççĕ,—тет кăна кĕпи — автан авăтса та ярать.

Вара усал каллех кĕреймен, тарăх-са пачах пăрахса кайнă. Çавăнтан вара арăм усалтан тасалнă, тет.

## ВАТĂ ÇЫНПА ВИЛĔМ

Елĕк пĕр ватă çын пурăнать, тет. Çавăн патне пĕрре Вилĕм пычĕ, тет те, калать, тет:

— Халĕ ĕнтĕ санăн вилес вăхăт çитнĕ, вĕлеретĕп эпĕ сана халĕ!— терĕ, тет.

Çак çын хăраса каларĕ, тет:

— Чим-ха, ывăлăмсене авланта-рам, вара ун чух килсе вĕлерех,— терĕ, тет.

Вилĕм кайсан, çак çын ывăлĕсене авлантарчĕ, тет те, тупăкне турĕ, тет. Тупăкне питĕрмелле турĕ, тет. Вара Вилĕм пычĕ, тет те, ват çын калать, тет:

— Халĕ ĕнтĕ вĕлер мана,—терĕ тет те, тупăкне хăяккăн кĕрсе вырт-рĕ, тет.

Вилĕмĕ:

— Апла выртмаççĕ,—терĕ, тет.

Ватă çын ӳпне çаврăнса выртрĕ, тет.

— Апла та мар!—терĕ, тет, Ви-лĕм.

— Мĕнле-ха тата? Апла, ху вырт-са кăтарт-ха мана,—терĕ, тет, ватă çын.

Вара мĕнле выртмаллине кăтар-тасшăн Вилĕм хăй выртрĕ, тет те, ватă çын тупăкне питĕрчĕ илчĕ, тет. Унтан çакна шывпала юхтарса ячĕ, тет.

Çавăнтан вара Вилĕм çынна ку-рăнми пулнă, теççĕ ваттисем.

## ШУЙТТАНПА ЧУХĂН АЧА

Йăван ятлă чухăн ача пурăннă. Пӳрчĕ вите пек анчах ларнă. Хăйĕн çийĕнче çĕтĕк-çатăк кăна. Сутăн ил-ме пĕр виçĕ пус та пулман. Йăван урама тухса çӳреме те вăтаннă. Унпа тантăшсем, урам хушшине тухса, са-вăнса кулса анчах вылянă. Хуйхă-рать Йăван япăх пурăннăшăн, хăйĕн хăр улмаран ытла ним те çуккишĕн.

Пĕрре ир тăрсан, Йăван пусĕпе йĕ-ри-тавра шухăшласа пăхрĕ те хăйне хăй çапла каларĕ: «Ма эпĕ капла пурнатăп-ха, тавай манăн аяккалла тухса каяс, ăçта та пулин мана вал-ли ĕç пулĕ»,— терĕ. Килĕнчен тухрĕ те, пӳрт алакне тултан питĕрсе, ан-картипе уялла тухса утрĕ.

Нумай та каймарĕ — Йăвана пĕр старик тĕл пулчĕ. Вăл усал пулнă. старик пек пулса курăннă.

— Ăçта каян? — терĕ Йăвана.

— Ăçта куç курать, çавăнта. Кил-те пурнăç япăх, çипуç илме те пĕр пус çук,— терĕ Йăван.

— Хам парӑп, эппин, укҫа, ма хуйхӑран уншӑн,— терӗ старик.

Апла каласан, Йӑван хӗпӗртесе кайрӗ.

— Анчах ҫапла паратӑп: виҫӗ ҫул иртсен, ҫав укҫашӑн ӗҫлесе татма ман пата пымалла,— терӗ.

— Сан патра мӗн чухлӗ ӗҫлесе татмалла?— ыйтрӗ Йӑван.

— Мӗнле ӗҫлен, ҫавӑнтан килет,— терӗ старик.

— Юрӗ, эппин,—килӗшрӗ Йӑван.

Килешу туса ала пусреҫ. Усал хутаҫҫипех Йӑвана укҫа пачӗ, виҫ ҫултан ӑҫта пымаллине хут ҫине ҫырса хӑварчӗ, унтан уйрӑлса кайрӗ. Йӑван, укҫаллӑ пулса, килне каялла таврӑнчӗ.

Йӑванӑн халь укҫа нумай, пуян. Ҫипуҫне илсе тумланчӗ, ҫӗнӗрен йӑттарса пӳрт лартрӗ, калама ҫук лайӑх пурӑнма тытӑнчӗ.

Йӑван тӗллипе ялти пӗр старик яланах иртсе ҫӳренӗ. Вӑл лайӑх пӳрт ларнине курать те тӗлӗнет. «Анчах пит чухӑн пурӑнатчӗ, ав, ӑна пӑх-ха халӗ, ҫӗнӗ пӳрт лартнӑ»,—тет хӑй ӑшӗнче. Чӑтаймарӗ: «Кӗрсе пӑхас-ха кун патне калаҫкаласа ларма»,—терӗ те кӗчӗ.

Йӑван килтех пулнӑ.

— Килех, килех, мучи,—терӗ Йӑван, тӗпелелле туртса лартрӗ. Кӑларчӗ апат, ӗҫмелли. Тӑраниччненех ӗҫтерсе-ҫитерсе кӑларса ячӗ. Старик татах тӗлӗнсе, ӑна юратса кайрӗ. Ҫул ҫинчех хӑйӗн хӗрне Йӑвана качча парасси ҫинчен шухӑшлама тытӑнчӗ.

Килне ҫитсен, Йӑван лайӑх пурӑнни ҫинчен, ӑна хӑйӗн хӗрне качча парасси ҫинчен арӑмне каласа кӑтартрӗ. Арӑмӗ хӗрне ҫакӑн ҫинчен каларӗ.

— Йӑвана качча каятни?—ыйтрӗ амӑшӗ.

— Каятӑп, — терӗ хӗрӗ.

Хӗрӗ хӑй сӑмахне каласанах, евчӗ ярса, Йӑвана чӗнтерчӗҫ. Йӑван та тиркемерӗ хӗре. Ашшӗ-амӑшӗсемпе килӗшсе татӑлчӗҫ те ӗҫсе-ҫисе туй турӗҫ. Йӑван авланчӗ. Пурӑнаҫҫӗ арӑмӗпе иккӗшӗ.

Усалтан укҫа илнӗрен вара виҫӗ ҫул ҫитесси те нумаях юлмарӗ. Йӑван ун ҫинчен лайӑх пӗлсе тӑрать. Питӗ хуйхӑрма тӑтӑнчӗ Йӑван. Сисрӗ: усал патне кайсан, таврӑнмаллине шанмаллиех ҫук. Лешӗ усал вӗт, усал усалах тӑвать. Йӑван куляннипе апат та ҫиеймест. Арӑмӗ сисрӗ ҫакна. Ыйтать:

— Йӑван, ку хушӑра сана мӗн пулчӗ? Пӗрмай хуйхӑллӑ ҫӳрен, апат та ҫиместӗн,— тет.

— Акӑ мӗншӗн кулянатӑп: виҫӗ ҫул каялла пӗр старикрен укҫа илтӗм виҫӗ ҫуллӑха. Вӑл усал пулнӑ. Халӗ ҫав укҫашӑн ун патне ӗҫлеме каймалла. Унта кайсан, таврӑнасса пӗлместӗп. Каймалли кун нумай юлмарӗ,—терӗ Йӑван.

— Ытлах ан хуйхӑр-ха, тен, каймасӑр ҫӑлӑнса юлма та май пулӗ. Мамак патне кайса пӑх-ха, вӑл сана мӗнле ҫӑлӑнса юлмалли ҫинчен ӑс парӗ. Ун ҫинчен, кун ҫинчен вӑл чухлаканскер пулмалла-ха,—терӗ.

Арӑмӗ ҫапла каласан, Йӑванӑн чӗри лӑш пулчӗ. Ӑс ыйтма ҫавӑн хыҫҫӑнах арӑмӗн мамакӑшӗ патне кайрӗ. Ҫитсен, мӗншӗн килнине, мӗнле-мӗнле пулнине кинемее каласа пачӗ.

— Ытла ан хӑра. Ил йӗтӗн вӑрри. Ӑна пӳртре кӗтесе хур. Шуйттан килсен, кала: «Хам кайиччен арӑма ҫак укҫана шутласа парса хӑвармалла-ха,—те,—шутласа купаласанах пыратӑп»,—те,—терӗ кинемей.

Йӑван, вӑл каланине лайӑх хӑлхана чиксе, килне кайрӗ. Шуйттан килнӗ ҫӗре мӗн тумаллине хатӗрлерӗ. Хай шуйттан ҫитсе кӗрсе кайрӗ.

— Ну, вӑхӑт ҫитсе пӗр кун иртрӗ. Ма пымастӑн?—тесе, кӗнӗ-кӗменех ыйтрӗ шуйттан.

— Ара, сан патна пыриччен ҫак укҫана арӑма шутласа парса хӑварасха, терӗм. Эппин, часрах пулма эсӗ те шутлама пулӑш-ха мана,—терӗ

Йаван, шуйттана йетĕн вăрри çине кăтартса.

— Ну, юрĕ, пулăшса парам, эппин,—килĕшрĕ шуйттан. Ларчĕ шутласа купалама. Эх шутлать шуйттан, купалать — купи каяллах йăтăнса анать. Шуйттан ывăнчĕ—ниçтан та шутласа çитерме çук. Шутран та çĕтсе каякан пулчĕ. Унтан çилленчĕ те:

— Эп урăх шутламастăп, хăвах шутла, тепĕр виçĕ кунтан каллех килетĕп. Унччен хăть шутласа пĕтер, хăть ан пĕтер, манăн унпа ĕç çук!— терĕ те алăка шарт! хупса тухса кайрĕ.

Ку шуйттан тата килетĕп тенĕрен, кунтан каплипе çăлăнмалли çук тесе, Йаван кинемей патне кайрĕ. Кинемей ăна шуйттан килнĕ çĕре чултан вĕрен явма хатĕрлененçи пулса тăма вĕрентсе ячĕ.

Виçĕ кунтан хай шуйттан çитрĕ персе.

— Ну, халĕ атя,—терĕ.

— Чим-ха, карчăка валли вĕрен явса хăварам,—терĕ Йаван.

— Ну, часрах яв, эппин.

— Эсĕ явма пулăш-ха, эп час яваймастăп,—терĕ Йаван.

Шуйттан майлаштарса чултан вĕрен явма тытăнчĕ. Анчах пĕр аршăн тăршшĕ явсан, чул вĕрен хуçăлса анса арканса кайрĕ. Çапла вĕрен явма хăтланчĕ-хăтланчĕ — ним те пулмарĕ. Каллех çилленчĕ те тухса кайрĕ. Кайнă чух виçĕ кунтан хăй килессине пĕлтерчĕ, хатĕрленсе тăма каласа хăварчĕ.

Йаван шуйттан тухса кайсанах кинемей патне чупрĕ, татах шуйттан килесси çинчен каласа пачĕ.

— Апла пулсан, çапла ту: вăл килнĕ çĕре арăму çӳçне-пуçне малалла усса ятăр та, ху утса тух, вăл упаленсе тухтăр. Эсĕ тухсан, шуйттантан ыйт: «Çакна эсĕ паллатни, эпĕ сан патна унпа пыратăп», те,—терĕ.

Йаван килне таврăнчĕ. Шуйттан килессе кĕтсе пурăнать. Виçĕ кун иртсен, каланă вăхăтах çитрĕ. Халĕ пӳрте те кĕмерĕ, тӳрех тултан кăшкăрать хăй патне тухма.

— Халĕ тухатăп, сан патна пыратăп ĕнтĕ,—терĕ Йаван шалтан.

Йаван тухрĕ, унпа пĕрле çӳçнепуçне малалла усса янă арăмĕ те упаленсе тухса тăчĕ.

— Эсĕ çакна паллатăн-и? Эпĕ çакăнпа сан патна пыратăп,—тет Йаван.

— Çук, курман. Вăл мана çисе те ярĕ!—тесе, шуйттан куçне-пуçне улма пек чарса пăрахрĕ, ăна курнипе хăраса.

— Чăнах та, вăл ниме те шеллесе тăмасть! Çĕр çинче пуринчен ытла шуйттансене кураймасть, мана анчах итлет,— терĕ Йаван.

«Шуйттансене питĕ кураймасть» тесен, лешĕ татах хăраса чĕтресе ӳкрĕ. Çӳçĕсем чăшăлах вирелле тăчĕç. «Мĕнле кунтан ыррăн уйрăлса каяс?»—тесе, ăшăнче хыпаланма тытăнчĕ.

— Ну, Йаван, юлах, эппин, мана ним те кирлĕ мар. Урăх эпĕ те килместĕп, эсĕ те ан пыр!—терĕ юлашкинчен шуйттан.

— Апла пулсан, килĕшӳ тунине мана кăларса пар,—терĕ ку.

— Э, чăнах, ăна сана парас пулать-ха,—тесе, хута кăшăрт тыттарчĕ шуйттан Йавана. Унтан васкасах уйрăлса çухалчĕ.

Çавăнтан вара Йаван патне шуйттан килесси-тăвасси çавă пулчĕ.

Халĕ те пулин пурăнаççĕ, тет, Йаванпа арăмĕ.

## ШУЙТТАНА ХĂРАТНИ

Пĕр старик кашни каçах вăрмана хурт хуралне кайнă, тет. Унта ун выртса тăма пĕр пӳрт пулнă, тет. Çав пӳрте кашни каç шуйттан пăтă пĕçерме пынă, тет.

Пĕр каç старик çапла хурт хуралне каять. Кайсан-кайсан, чукмар хирĕç пулать.

— Атя манпа,—тет старик.

Чукмар килĕшет. Кайрĕç пĕрле. Пăшатан хирĕç пулчĕ.

— Атя манпа,—тет старик.

Кайрĕç виççĕн. Нумай каяçи, сахали (юмахра час пулать), кусене рак тĕл пулать.

— Атя манпа, — тет старик.

Рак килĕшет. Кайсан-кайсан, йĕкелпе çĕпре тĕл пулаççĕ, вĕсем те старикпе пĕрле пыраççĕ. Çитрĕç, тет, хайхисем хурт хуралне. Ракĕ лаххана кĕрет, чукмарĕ алăк патне сак айне выртать. Йĕкел вучаха, çĕпри алăк умне, пăшатан пукан çине вырнаçаççĕ. Çĕрле хайхи шуйттан пырса кĕрет, ун алли шăннă, часах пăтă пĕçерме тапратать, хăй аллине ăшăтма вучах патне тăсать. Çав вăхăтра йĕкел шарт! çурăлса каять, шуйттан аллине пĕçертет ярать· Аллине шыва чикет — рак хаччипе хĕстерсе тытать, хăранипе шуйттан пукан çине кайса ларать, пăшатан çине тăрăнать. Тухса тарма тытăнать — çĕпре çине шуса ӳкет. Çав вăхăтра старик:

— Чыш, чукмар!—тет те, хайхи чукмар сиксе тухса шуйттана вĕтелентерме тытăнать.

Шуйттан аран-аран тухса шăвăнать. Çавăнтан вара вăл хурал пӳртне пăтă пĕçерме пыма пăрахрĕ, тет.

## ИВАН КУКĂЛЕ

Пĕррехинче Иванăн кукăлĕ çухалнă. Вăл вара çул çине шырама тухса кайнă. Çул çинче ăна тислĕк катăкĕ тĕл пулнă:

— Ăçта каятăн, Иван?.

Иван хăй хуйхине йăлт каласа панă.

— Манăн санпа пыма юрать-и?— ыйтнă тислĕк катăкĕ.

Иван ăна илсе кайма килĕшнĕ. Çул çинче вĕсене йĕп тĕл пулнă.

— Ăçта каятăн, Иван?—тенĕ йĕп.

Иван каллех хăй хуйхине пĕлтернĕ. Вара йĕп те пĕрле пыма тархасласа ыйтнă. Иван ăна та пĕрле илнĕ. Вара вĕсем виççĕн шăкăлтатса калаçса пынă·

Унччен те пулман—вĕсене хирĕç çĕçĕ тĕл пулнă.

— Ăçта каятăр, Иван тус?—ыйтнă çĕçĕ.

Иван кукăль шырама кайни çинчен пĕлтернĕ.

— Мана та пĕрле илсе кай-ха,— тенĕ çĕçĕ.

Иван килĕшнĕ. Пырсан-пырсан, вĕсене пĕр пӳрт курнах кайнă. Вĕсем пурте пӳрте кĕнĕ. Анчах пӳртре никам та пулман. Тислĕк катăкĕ кăмака умне шыв патне выртнă. Йĕппи сак çине тăрăнса ларнă. Çĕçси кăмака хыçне Иванпа пытаннă.

Çапла вырнаçса пĕтнĕ-пĕтменех вупăр карчăкĕ çитсе те кĕнĕ, алăкăнтĕпелĕн утнă. Кăмака умне те шăлĕсене шăтăртаттарса пынă. Тислĕк катăкĕ шыв витрине кăтах тĕкнĕ. Шыв тăкăннă та, вупăр карчăк урайне шеплетнĕ. Аран-аран тăрса, сак çине ларнă. Йĕппи чак тăрăннă. Вупăр карчăк шари кăшкăрса янă. Çĕçси кăмака хыçăнчен чалт! сикнĕ те вупăр карчăк чĕри тĕлнех тăрăннă. Вупăр карчăк вилсех кайнă.

Иван кăмакана пăхнă та—сар кукăль курăнсах кайнă. Туртса кăларнă та кукăле, илсе, килне васкасах утнă.

# ТĔПСĔРЕ ТĔМЕН ÇИТМЕН

## УЛТĂ ХĔРЕ ÇИЕКЕН

Карчăкпа старик пурăнаççĕ. Çавсен çичĕ хĕр. Çичĕ хĕр пĕр каçрах сӳс тылласçĕ, арлаççĕ, пир тăваççĕ, чӳхеççĕ.

Çавсем пĕрре пир чӳхеме шыв хĕрне кайрĕç. Вупăр карчăкĕ шыв хĕрне анчĕ, таканапа шывра вишĕ хутчен йăр-яр ярăнчĕ. Хĕрсем карчăка калаççĕ:

— Кинеми, ма пирĕн пата ларма пымастăн?—теççĕ.

Вупăр карчăк калать:

— Йыттăра чарăр, — тет.

Çав хĕрсен йытă пулнă. Хĕрсем киле таврăнчĕç те йыттăн пĕр урине çапса хуçрĕç. Карчăк хĕрсем патне ларма пырать. Пычĕ те юрлать:

> Карттин-карттин карта урлă,
> Карта урлă каçма пар,
> Çак çичĕ хĕр пуçне çиме пар,—

тет. Йытă юрлать:

> Ляв-ляв, çитермĕп! —

тет. Карчăк хӳрине тăратса тарать.

Хĕрсем каллех пир чӳхеме кайрĕç. Карчăк каллех, такана çине ларса, виçĕ хут шывра чăмрĕ. Хĕрсем калаççĕ:

— Кинеми, ма пирĕн пата ларма пымастăн?—теççĕ.

— Йыттăра чарăр,— тет карчăк.

Хĕрсем киле кайрĕç, йыттăн тата тепĕр урине çапса хуçрĕç. Карчăк пычĕ те юрлать:

> Карттин-карттин карта урлă,
> Карта урлă каçма пар,
> Çак çичĕ хĕр пуçне çиме пар.

Йытă юрлать:

> Ляв-ляв, çитермĕп!

Карчăк хӳрине тăратса тарать.

Хĕрсем каллех пир чӳхеме кайрĕç, каллех карчăка курчĕç те калаççĕ:

— Кинеми, ма пирĕн пата ларма пымастăн?— теççĕ.

Вупăр карчăк каллех:

— Йыттăра чарăр!—тет.

Хĕрсем каллех киле кайрĕç те йыттăн пур урине те çапса хуçрĕç. Карчăк пычĕ те юрлать:

> Карттин-карттин карта урлă,
> Карта урлă каçма пар,
> Çак çичĕ хĕр пуçне çиме пар,—

тет. Йытă вилсех каяйман:

> Ляв-ляв, çитермĕп! —

тет. Карчăк татах тарчĕ.

Хĕрсем пир чӳхеме анчĕç, карчăка

ларма чĕнчĕç. Карчăк йытта чарма хушать. Хĕрсем йытта çапса пăрахрĕç те кĕлеткине пĕр кӳлĕ хĕрне ыватрĕç.

Хĕрсем киле кайса çывăрчĕç: пĕри кăмака çине, ултташĕ сентре çине. Карчăк пычĕ те юрлать. Йытă сасси илтĕнмест. Карчăк пӳрте кĕчĕ, сентре çине хăпарчĕ, пĕр хĕре çиет. Кăмака çинчи калать:

— Мĕн çиетĕн, кинеми?
— Кантăр вăрри çиетĕп.
— Мĕн пăрахатăн, кинеми?
— Пушмак пăрахатăп.

Хăй хĕр шăммисене пăрахать. Хĕрсене ултташне те çавăн пек çирĕ. Кăмака çинчи çавна сисрĕ те анкарти хыçне тарчĕ.

Карчăк та, кăштах тăрсан, анкарти хыçне тухрĕ те вăкăр пулчĕ, йытта пăрахнă кӳлĕ хĕрне шыв ĕçме анчĕ. Кăмака çинчен анса тарнă хĕр çав кӳлĕ хĕрне пырса тăнă. Вăкăр шыв хĕрне анчĕ те, хĕр юрлать:

Карчăк хырăмĕ çурăлтăр,
Карчăк хырăмĕ çурăлтăр!

Вăкăр хырăмĕ çурăлчĕ кайрĕ, тет. Ултă хĕр сикрĕç тухрĕç, тет. Йытă та кӳлĕрен тухрĕ те вăкăра çиме тапратрĕ, тет.

## ÇИЛ АЧИСЕМ

Пĕр тăлăх арăм пурăннă, тет. Унăн вунă çула çитнĕ ывăлĕ пулнă. Ăна Иван тесе чĕннĕ.

Пĕрре амăшĕ Ивана армана ыраш авартма янă, тет. Вĕсен лаша пулман. Çавăнпа Иван миххе çурăм çине çавăрса хунă та арманалла çуранах танклаттарнă. Çул çинче ывăннă пирки миххе çĕр çине лартма хăтланнă та такăннă ӳкнĕ. Миххи лĕрр çурăлса аннă та, ырашĕ юхнă тухнă. Çавăнтах çил ачи вĕççе пырса тăкăннă ыраша пĕтĕм çеçенхир тăрăх салатса янă. Иван аптранипе, миххе пушшăнах илсе, килне таврăннă. Амăшне çул çинчи инкек çинчен каласа панă. Амăшĕ ăна хирĕç:

— Ачам, çил ачисен амăшĕ патне кай та каласа кăтарт ăна хамăр хуйхă çинчен, ыраша каялла тавăрмашкăн ыйт,—тет.

Иван, амăшĕн сăмахне итлесе, çил ачисен амăшĕ патне пырать те:

— Санăн чăрсăр ачусем пирĕн юлашки ыраша çеçенхир тăрăх сапаласа ячĕç, тавăр ăна пире каялла!—тет.

— Юрĕ,—тет çил амăшĕ,—ачасем таврăниччен кĕт-ха,—тет.

Акă ĕнтĕ аслă ывăлĕ киле таврăнать. Амăшĕ, Иван çине кăтартса, ывăлĕнчен çапла ыйтать:

— Ачам, эсĕ мар-и çак ачан ырашне салатса тăкаканĕ?—тет.

— Эпĕ вăрманти пысăк йывăççене тымарĕ-мĕнĕпе кăкла-кăкла пăрахатăп та, çав вĕтĕр-шакăр çумне çулăхатăп-и!—тет.

Унтан вăталăх ывăлĕ таврăнать.

— Ывăлăм, эсĕ мар-и çак ачан тыррине салатса тăкаканĕ?—тесе ыйтать амăшĕ вăталăх ывăлĕнчен.

— Эпĕ сарай çивиттисене вистетĕп, çил арманĕн çунаттисене çĕмĕрсе антаратăп та, ун пек вĕтĕр-шакăр ĕçсемпе аппаланса намăс куратăп-и!—тет кăмăлсăр пулса вăталăх ывăлĕ те.

Кĕçĕн ывăлĕ таврăнать те хăй айăпне хăех каласа парать. Вара амăшĕ ывăлĕсенчен:

— Ку ачана ыраш вырăнне мĕн парас?—тесе ыйтать.

— Акă çак кукăле парса яр,—теççĕ çил ачисем.

Çил ачисен амăшĕ Ивана вара кукăль парса ярать, киле çитмесĕр те пуçлама хушмасть.

— Юрĕ,—тет те Иван васкаса килнелле вĕçтерет.

Çул çинче каç пулса килнипе вăл хăй аппăшĕ патне çывăрма кĕрет.

— Эсĕ, аппа, çак кукăле ан пуçла.

ăна киле çитмесĕр те пуçлама хушман,—тет Иван аппăшне.

— Юрĕ, юрĕ! Эсĕ ывăннă пулĕ, выртса çывăрах,—тесе йăпатать аппăшĕ Ивана.

Хăй, Иван çывăрса кайсанах, кукăле çурмаран хуçать те, ун ăшĕнчен купи-купипе ылтăн-кĕмĕл чăнкăртатса тухать. Аппăшĕ часрах ку кукăле пуçтарса хурать те Ивана хăй пĕçернĕ кукăле тыттарса ярать. Иван ăна амăшне кайса парать.

— Эх, ачам, ачам!—тет амăшĕ хуйхăрса.—Ара, пирĕн ыраш ран пĕр кукăль анчах пулатчĕ-и? Кайса пар куклине каялла!—тет вăл Ивана.

Вара Иван кукăле çил ачисен амăшĕ патне леçме каять. Çил амăшĕ ывăлĕсенчен ыйтать:

— Ывăлăмсем, мĕн парăпăр-ха ку ачана ыраш вырăнне?—тет.

— Акă çак качакана парса ярас,—теççĕ ачисем.

Вара Ивана качака çавăттарса яраççĕ. Иванĕ каллех çĕр каçма хăйĕн аппăшĕ патне кĕрет те калать:

— Аппа, эсĕ çак качакана: «Кач, качака, кач!»—тесе ан кала. Киле çитиччен те мана ун пек калама хушман,—тет.

— Юрĕ, шăллăм, юрĕ. Эсĕ ывăннă пулĕ-ха, акă вырт та çывăр,—тет аппăшĕ Ивана.

Хăй, Иван харлаттарма тытăнсанах, качака патне тухать те:

— Кач, качака, кач!—тет.

Качаки çавăнтах, чăнкăр-чанкăр тутарса, ылтăн-кĕмĕл тăкса парать. Иван аппăшĕ ку качакана хăвăртрах пытарса хурать те ун вырăнне хăй качакине тыттарса ярать. Иван килне качака çавăтса çитсенех, амăшĕ хуйхăрса:

— Эх, ачам, хамăрăн çиме çитмест, ăçтан тата качака тăрантарса усрамалла? Çавăтса кайса пар каялла!—тет.

Вара Иван качакана та çил ачисен амăшĕ патне илсе кайса парать.

— Анне ятлаçать, качака тăрантарма мар, хамăра валли те çăкăр çук тесе хăтăрать,—тет.

— Мĕн парас ĕнтĕ куна?—тесе ыйтать çил ачисен амăшĕ.

— Парса ярас çав чукмара!—тет аслă ывăлĕ. Хăй Ивана ăс парать:—Илессе илсе кай та, анчах киле çитмесĕр: «Чыш, чукмар, чыш!»—тесе ан кала,—тет.

Иван чукмара çĕклет те килне тухса утать. Çул çинче каллех хăйĕн аппăшĕ патне çĕр каçма кĕрет.

— Эсĕ асту, аппа, çак чукмара: «Чыш, чукмар, чыш!»—тесе ан кала. Киле çитиччен апла калама хушман мана,—тет.

— Юрĕ, шăллăм,—тет аппăшĕ.—Эсĕ ывăннă пулĕ, выртса çывăр тӳшек çине,—тет.

Хăй шăллĕ çывăрса кайнă-кайман чукмар патне пырать те:

— Чыш, чукмар, чыш!—тет.

Чукмар çавăнтах сиксе тăрать те тытăнать Иван аппăшне çурăм тăрăх ăшалама. Лешĕ ниçта кайса кĕреймесĕр кăшкăрать:

— Чар, Иван, чукмарна! Йăлтах каялла парса яратăп: ылтăн-кĕмĕл тăкакан качакуна та, ылтăн-кĕмĕл ăшлă кукăльне те!—тет.

Иван:

— Чарăн, чукмар, кӳпкеме!—тет те, чукмар, шăпах лăпланса, хăй вырăнне кайса выртать.

Аппăшĕ вара Ивана, кукăльне те, качакине те каялла тавăрса парса, килтен ăсатсах кăларса ярать. Киле таврăнсан, Иван ку япаласене йăлтах амăшне парать.

— Эх, ачам, каллех çав качаканах çавăтса килтĕн-и?—тет амăшĕ пăшăрханса.

— Çук, анне, ку качака ылтăн-кĕмĕл тăваканни,—тесе калать Иван амăшне.

Амăшĕ тем тĕрлĕ савăнса каять. Халĕ те пулин лайăх пурăнаççĕ, тет, çаксем.

## ПУЙМА КАЯКАН ВИЛСЕ КИЛНЕ

Елĕк пĕр ял хĕрринчи пĕчĕк пӳртре карчăкпа старик пурăннă. Вĕсен икĕ хĕр пулнă: пĕри хальхи пурăнакан арăмĕнчен, тепри вилнĕ арăмĕнчен пулнă. Анчах çак ĕлĕкхи арăмĕнчен юлнă хĕрне хальхи арăмĕ питĕ юратман, пĕрмаях хĕртсе-хĕнесе çеç усранă. Ашшĕ ĕç патĕнчен таврăнсан та, ăна тем тĕрлĕ элек парса, санăн хĕрӳ çапла усал тесе хĕнеттернĕ. Тата анат çитермесĕр е кĕпе-йĕм тăхăнтармасăр та питĕ асаплантарнă.

Килтисем çавăн пек юратман пулсан та, ялйышсем çак хĕре питĕ юратнă. Вăл питĕ селĕм, питĕ лайăх пулнă. Кирек ăçта пулсан та, çынсене пулăшма ӳркенмен: кĕпе çунă çĕрте те, шыв кӳнĕ çĕрте те. Çак карчăкăн хăйĕн хĕрĕ çакăн пек селĕм, хитре пулман, ĕç патĕнче те питĕ начар пулнă, çапах вăл ăна юратса уйрăм çимĕçсем пĕçерсе çитернĕ, шукăль тумтир тăхăнтарнă. Çакна курсан, хайхи тăлăх хĕр пушшех пит кулянса, макăрса пурăннă. Ăна амăшĕ темиçе хут та вĕлерме шухăшланă, анчах ку таранччен стариккине хăйса калайман.

Пĕрре, темшĕн питĕ çилленнĕ чухне, çак карчăк стариккине каларĕ, тет:

— Эпĕ санăн хĕрӳпе пурăнаймастăп, ăна эсĕ кирек ăçта кайса яр. Ытла хĕрхенетĕн пулсан, мана хама вĕлерсе пăрах,—терĕ, тет.

Вара старикки ун çинелле мăль çаврăнса пăхрĕ те каларĕ, тет:

— Кирек мĕн ту, эпĕ пĕлейместĕп.

Çакна илтсен, карчăкки старике мĕн тумаллине вĕрентме пуçланă:

— Эсĕ ăна ыран, кăмпа татма тесе, аякри вăрмана кайса яр. Унта вăл хăех вилет, ăна тискер кайăксем çисе яраççĕ. Ху, çавăнталла кайса вутă татам-ха тесе, кай та йывăç тăрне кантрапа пуленке çакса хăвар. Вара Санюк, пирĕн атте унта вутă тататьпуль тесе, сан патна пырса пăхмасть. Эсĕ ху килелле вĕçтер,—тенĕ.

Тепĕр кун старик чăнах карчăк каланă пекех тунă. Санюкне пысăк пĕрне панă та хăй, пуртă илсе, вăрманалла уттарнă. Унта Санюкне кăмпаллă вырăн тупса парса:

— Эсĕ кунта кăмпа тат, эпĕ çавăнталла кайса вутă çурам-ха,—тесе хăварнă. Хăйĕн куççулĕсем шăпăршăпăр юхнă.

Пăртак шаларах кайсан, карчăкки каланă пек, вутă пуленкине йывăç тăрне çакнă та килелле уттарнă. Вутă пуленки, чăнах çилпе сулланнипе йывăçа перĕнсе, шалт-шалт! туса тăнă. Каç пулса кайнă, хĕр, пĕрне тултарасчĕ тесе, кăмпа татнă: «Атте те вутă çурса пĕтерейменрĕ пулас-ха»,—тесе шухăшланă. Вара, куç курми пула пуçласан, Санюк ашшĕ патнелле кайнă. Шырать-шырать, тет, ашшĕ çук, вутă çурни кунтах илтĕнет пулин те. Вара пуçланă кăшкăрма, ашшĕ çанах сас паман. Ашшĕне шыракаласа çӳренĕ чухне Санюк çӳлелле пăхнă та вутă пуленки шалтлаттарнине курнă. Вара вăл, ашшĕ улталаса хăварнине пĕлсе, киле кайма çул шырама пуçланă.

Çӳрерĕ-çӳрерĕ, тет те, тухрĕ, тет, пĕр çаран çине. Унта утă капанĕсем тăл пулчĕ, тет. «Çак утă капанĕ çинчен çул курайрăп-и-ха»,—тесе, Санюк, капан тăрне улăхса кайса, йĕритавра пăхрĕ, тет. Анчах ниçта та пĕр çул та курăнмасть, тет. Капантан аякрах мар çаран çинче качакасем çӳренине курчĕ, тет, пуçларĕ, тет, юрлама:

Вуник качака килет,
Пĕр майраки ылтăн,
Пĕр майраки кĕмĕл,—

тесе юрлать, тет.

Вара качакисем, капан патне пырса, ылтăнпа кĕмĕл пăрахса хăварчĕç, тет.

Хĕр тата юрлать, тет:



Вунпĕр качака килет,
Пĕр майраки ылтăн,
Пĕр майраки кĕмĕл.

Качакасем каллех ылтăнпа кĕмĕл пырса йăвантарчĕç, тет. Хĕр çаван пек пĕр качакана çитиччен юрларĕ, тет. Качакисем пĕрмаях ылтăнпа кĕмĕл йăвантарнă. Вара, ирпе тăрсан, Санюк укçасене пуçтарнă та киле таврăннă.

Амăшĕн, çакăн чухлĕ укçа курсан, куçĕсем чарăлса кайнă: унăн тата ытларах тупас килнĕ. Вара карчăк старикkине Санюк епле укçа тупса пуйса килнине каласа кăтартнă, Лисука та, хăйĕн хĕрне, çавăн пекех кайса пуйтарасчĕ, тенĕ. Вара вăл, Санюка ачашласа:

— Епле тупрăн, ачам?—тесе ыйта пуçланă. Санюкĕ пĕтĕмпех тĕрĕссине каласа панă. Анчах капан тăрринче юрланă юрра юриех йăнăш каланă, ăна çапла юрларăм, тесе суйнă:

Вуник качака килет,
Пĕр майраки пăхлă,
Пĕр майраки шăклă.

Ирпе старик Лисука вăрмана кайса çĕтерсе хăварнă. Лисук, Санюк пекех çĕтсе çӳресе, çаран çине пырса тухнă. Унта амăш вĕрентнипе капан çине улăхса ларса:

Вуник качака килет,
Пĕр майраки пăхлă,
Пĕр майраки шăклă,—

тесе юрласа ларнă. Çакна илтсен, качакасем тăрăс çеç капана пырса сĕкрĕç, тет. Хĕр пĕрмаях юрлать, тет. Качакасем пĕрмаях пыра-пыра сĕкеççĕ, тет. Вара кайранхи пĕр качаки, капана сĕксе йăвантарса, Лисукне те сĕксе вĕлерсе пăрахрĕ, тет.

Çапла ĕнтĕ вилме каякан пуйса килнĕ, пуйма каякан вилсе килнĕ.

## УЛТАВÇА ПУЯН

Пуръннъ пулнъ ёлёк-авал пĕр пуян. Çак пуянăн пулнă виçĕ ывăл та пĕр тарçă. Ку пуян тимĕр пăрçа пек хытă пулнă.

Пĕрре çаксем тарçипе пĕрер ана сар тулă акма шутланă. Акă çуркунне те çитрĕ, вĕсем сарă тулă акрĕç. Тулă пулса çитрĕ. Пуянăн ани хупхура выртать, тарçăн сап-сарă тулă тинĕс пек хумханса ларать.

Пуян, хытăскер, тарçă туллине те хăйне илесшĕн. Тарçă парасшăн мар. Çапла вара пĕрре вăл сисмен вăхăтра хăйĕн виçĕ ывăлне тарçă ани çине илсе каять те виçĕ кĕтессине шăтăк алтма хушать, вара çав шăтăка хăйсене кĕрсе ларма калать. Вăл ачисене: «Камăн ани?»—тесен, «пуянăн» теме хушать.

Ачисем кĕрсе лараççĕ.

Вăл вăхăтра пуян, килне кайса, тарçине илсе те пырать.

— Çĕр амăшĕ кама калать, ана çавăн пулать,—тет тарçăна.

Вĕсем çитрĕç те кашни кĕтессинчен пыра-пыра ыйтаççĕ:

— Ку кам ани?—теççĕ.

Пурте:

— Хуçанăн!—Пуянăн!—тесе пĕр сăмах çеç калаççĕ.

Тарçи ним тума аптăраса йĕрсе ярать. Пуян:

— Çĕр амăшĕ çапла хушнă та — мĕн тăвăн,—тет.

Çапла пуян тарçăна улталанă.

## ЁМĔТСĔР ПУЯН

Ёлĕк-авал пĕр ялта икĕ пуян пурăннă, тет. Иккĕшĕ те çав тери нĕпĕссĕр-ĕмĕтсĕр пулнă, тет. Анисем хирте иккĕшĕн юнашар пулнă, тет те, çуркунне ака-суха тунă чухне вĕсем яланах пĕр-пĕринпе тавлашнă, тет, хăшпĕр чухне çапăçса та кайнă, тет. Пĕр пуянĕ:

— Эсĕ йăрана кĕререх сухаланă,—тенĕ.

Тепри:

— Эпĕ мар, эсĕ ху кĕререх сухаланă,—тенĕ.

Çавăн пиркиех тарăхса ĕнтĕ, пĕр пуянĕ çĕрĕсене те, пĕтĕм пурлăхне те сутса пĕтернĕ те Пушкăрта çĕр илме тухса кайнă, тет.

Пушкăртсен ёлĕк çĕр нумай пулнă. Пушкăртра пурăнакансем пурте пĕлеççĕ ăна. Çапла хай пуян пушкăртсен аулне пырса çитнĕ те старшина патне калаçма кĕнĕ.

— Эпĕ сирĕн пата çĕр илме килтĕм. Çĕр сутатăр-и мана?—тесе ыйтнă вăл старшинаран.

Старшина часах аулĕнчи ятлăрах çынсене тата карма çăварсене пуçтарнă та хай пуяна çавсене ĕçтерме хушнă. Ку çын вĕсене виçĕ талăк сăйласа пурăннă, юлашкинчен мĕнпур укçине çĕршĕн кăларса тӳленĕ. Тăваттăмĕш кунĕнче вара пушкăртсем ăна çĕр кăтартма тухса кайнă. Вĕсем пурте пĕрле çӳллĕ ту тăррине хăпарса тăнă та, старшина аллипе хăлаçлanса:

— Эпир çĕре виçсе сутмастпăр,—тенĕ.—Çак вырăнтан тытăнса, хĕвел аниччен мĕн чухлĕ чупса çаврăнатăн, çав çĕр пĕтĕмпех санăн пулать,—тенĕ.

Хай пуян хаваслансах кайнă. «Э-эх, кусенчен капла мĕн чухлĕ çĕр илме пулать!»—тесе савăннă вăл хăй ăшĕнче. Вăхăта кăлăхах ирттерсе тăрас мар тесе, вăл çавăнтах чупма тытăннă. Пушкăртсем ту тăрринче вăл çаврăнса килессе кĕтсе тăнă.

Пуян ну чупать, ну чупать вĕçĕхĕррисĕр сарăлса выртакан хирсем тăрăх. Кăнтăрла та çывхарса килет; вăл, çĕр ытларах çавăрса илесчĕ тесе, пĕрехмай малалла чупать. Чупсан-чупсан, пуян ывăна пуçлать. Акă вăл малта çырма шăнкăртатса юхса выртнине курать. Вăл ăна та çавăрса илесчĕ тесе чупать. Çырмаран ана-

тарах вăл ем-ешĕл улăх сарăлса выртнине курать. Вăл улăха та çавăрса илесчĕ тесе чупать. Шыв леш енче вăл вăрман кашласа ларнине курать. Вăл вăрмана та хăварасшăн мар.

Акă Энтри апачĕ те çывхарса килет. Хай пуян хашкакан пулса çитет те тин вара каялла çаврăнма шут тытать. Анчах часах ывăннипе чупайми пулса çитет. Халтан кайнипе вара вăл çиййĕнчи тумтирне хывса пăрахса хăварать те тем пекех васкаса ута пуçлать. Кайсан-кайсан, утайми те пулса çитет. Йăванса каять те вăл, хĕвел аниччен пушкăртсем патне çитесчĕ тесе, тăват уран упаленсе те пулин ту еннелле васкать. Ту патне çитеспе вăл упаленсе те каяйми пулать те çĕре лапах персе анать. Пушкăртсем патне вара вăл хĕвел аниччен йăвалана-йăвалана та пулин çитрĕ, тет те, вилсе те кайрĕ, тет.

## УКÇА

Пурлаксем ялтан-ялтан пухăннă, тет, çул çине. Каяççĕ, тет, çулпа. Кайсан-кайсан, каллех пĕр çын тухать, кайсан-кайсан, тата тепĕр çын тухать. Вĕсем вуник çын таран пухăнчĕç, тет. Вара виçĕ-тăватă кун утсассăн, тепĕр çынна хирĕç пулчĕç, тет.

— Ăçта каятăр, ачасем?—тесе ыйтать, тет, лешĕ.

— Эпир, ырă çын, пурлака каятпăр хулана. Ялтан-ялтан çакăн чулĕн пухăнтăмăр. Пирĕн хăш çулпа кайсан, тӳрĕ пулать?

— Сирĕн çак çулпа кайсан, тӳрĕ пулать те, унта пысăк çĕлен выртать, çакăнпа кайсан — нимĕн те çук, пăртак тавра пулать ĕнтĕ.

— Ма унтан каймалла мар?

— Тӳрĕ пуласси тӳрĕ те, вăл çĕлен сире çисе ярĕ.

Пурлаксем ăна хирĕç калаççĕ:

— Мĕн тăвăпăр?

Пĕр пурлакĕ калать:

— Хуйхăллă çынна никам та çиместl—тет.—Атьăр кунтанах, тӳрех,—тет.

Кайрĕç çĕлен патĕнченех. Çитесçĕ — вăрманта çĕлен курăнмасть, пĕр юман кайса ӳкнĕ те, юман хăвăлĕ туллиех ылтăн сарăлса выртать.

— Э, ку çын пире улталатчĕ-иç!—теççĕ.—Ак хайхи укçа тупрăмăр. Вăл пĕчченех илме шутланă. Тавай куна уйăрăпăр!—теççĕ çакă вуник çын.

Хай укçана уйăрма пуçларĕç. Вуниккĕш вуник купа турĕç.

— Ну, ĕнтĕ куна мĕнле йăтса çитерес? Йăтса çитерес çук!—теççĕ.— Тавай ярăпăр улт çын киле, улт çын кунта юлăпăр!

Çапла шут турĕç. Улттăш килелле утрĕç, улттăш юлчĕç. Улттăш килелле утнă чухне шут туса пыраççĕ:

— Эпир киле пырăпăр та пĕрер пашалу тутарăпăр, наркăмăш ярса. Вĕсене илсе пырса парăпăр та, улттăшĕн тӳпи те пире пулать, вĕсем пашалу çисенех вилеççĕ. Укçи хамăра пулать!—тесе шут туса пыраççĕ.

Лешĕсем, вĕсем кайсанах, ларса шут турĕç:

— Килччĕр-ха лашисемпе. Эпир улттăн улт патак касса хатĕрлер унччен. Укçине тиесе лартсанах, çав патакпа çапса пăрахар! Укçи ултсăмăра пулĕ!—теççĕ.

Çаксем те шут турĕç вĕсене вĕлерме, лешĕсем те шут турĕç вĕсене вĕлерме. Çаксем лаша кӳлсе килчĕç, пĕрер пашалу кăларса пачĕç улттăшне, укçи патне юлакансене:

— Çийĕр çак пашалăва, сирĕн хырăм выçă пулĕ!

Лешсем:

— Чимĕр-ха, халь çиместпĕр, укçине тиер-ха!—теççĕ.

Укçине тиесе лартрĕç, пашалусене тунката çине хучĕç. Патаксене çăлса илчĕç те тапратрĕç çапма. Улттăшне те çапа-çапа пăрахрĕç.

— Ну, ĕнтĕ пытарăпăр,—теççĕ.— кусене, укçи хамăра пулать!

Пытарса килчĕç те:

— Ну, ĕнтĕ ларса çиер,—теççĕ.

Çирĕç те тата ултташ те вилчĕç. Никам та юлмарĕ— хайхи çĕлен çисе ячĕ.

## ИКĔ ЫВĂЛ

Пĕр пуян çыннăн икĕ ывăл пулнă. Ашшĕ вилсен, вĕсем суту-илӳ тума тытăннă. Асли суту-илӳ тунипе пуйса кайнă, кĕçĕнни çука юлнă. Кĕçĕн ывăлĕ асли çинчен суда панă. Каяççĕ кусем суда. Çул çинче вĕсене пĕр ватă, шурă сухаллă çын тĕл пулать те ыйтать:

— Ăçта каятăр эсир?—тет.

Кĕçĕн тăванĕ калать:

— Эпир, атте вилсен, иксĕмĕр те суту-илӳ тума тытăнтăмăр; вăл пуйса кайрĕ, эпĕ çука юлтăм, çавăнпа суда каятпăр,—тет.

Ватă çын ăна калать:

— Эсĕ суда кайсан, унта нимĕн те илеймĕн, халех эс унăн икĕ куçне чиксе шăтар, вара унăн мĕнпур пурлăхĕ сана пулĕ,—тет.

Кĕçĕнни аслин икĕ куçне те çавăнтах чикет шăтарать, хăй вара килне таврăнать те пиччĕшин пурлăхĕпе суту-илӳ тăва пуçлать. Леш каять çулпала, икĕ аллипе хыпалакаласа.

Пырсан-пырсан, пĕр вăрмана çитсе кĕрет ку. Вăрмана кĕрсен, унта аллипе хыпашласа çӳрет. Çапла пайтах хыпаласа çӳресен-çӳресен, пĕр пушă пӳрт тĕл пулать, алăк тĕлне хыпаласа тупать те кĕрет çав пӳрте. Кĕрсен, унăн аллине пулатти хăми лекех каять, çав пулатти çине улăхса выртать.

Каç пулсан, çав пушă пӳрте пĕтĕм усал сывлăш кĕрсе тулчĕ, тет. Пурте хăйсем мĕнле-мĕнле усал ĕç тунипе мухтанса ларнă. Çапла калаçса ларсан-ларсан, пĕри:

— Эпĕ паян пĕр çын куçне чиксе шăтарттартăм,—терĕ, тет.

Унăн хыçĕнчен тепри:

— Эпĕ паян пĕр патшан хĕрне аскăнлă тутартăм,—тесе каларĕ, тет.

Унтан пĕр усалĕ куç чиксе шăтарттараканнине каларĕ, тет:

— Эсĕ чиксе шăтарттарасса шăтатарттартăн, ху епле тӳрлетмеллине пĕлетĕн-и?—терĕ, тет.

Лешĕ:

— Пĕлетĕп,— терĕ, тет те, епле тӳрлетмеллине каласа кăтартрĕ, тет:

— Ак çак пӳртрен инçех мар пĕр тунката пур, çав тунката хăвăлĕнче хурт пур; çав хуртăн пылне илсе сĕрсен, унăн куçĕсем куракан пулĕç, анчах ăна тупасси час мар-халь,—терĕ, тет.

Патша хĕрне аскăнлă тутараканни каланă:

— Пĕр хуçанăн килĕнче кĕмĕл çĕрĕ пур, çав çĕрре ун аллине тăхăнтарсан, вăл сывалĕччĕ, анчах ăна кам тумалла?— тенĕ.

Çапла шавласа ларсан-ларсан, тул çутăлчĕ, тет те, усалсем пурте тухса кайрĕç, тет.

Ку пулатти çинче усалсем мĕн-мĕн калаçнине пурне те итлесе выртнă. Усалсем пӳртрен тухса кайсанах, тухать те каять пĕр çулсăрах. Пырсан-пырсан, пĕр тункатана пырса лекет. лексенех вĕлле хурчĕ сĕрлесе те тухать; çав хурт пылне илсе куçне сĕрет те çавăнтах куракан пулать.

Халь ĕнтĕ хăй куракан пулчĕ, тата унăн патша хĕрне тӳрлетесси килет. Çавăнпа вăл кĕмĕл çĕрĕ пур тенĕ яла каfive. Унта пырсан, вăл тӳрех хуçа патне кĕнĕ те калать:

— Сана тарçă кирлĕ мар-и, эпĕ кĕрĕшес тетĕп сан патна,—тет.

Хуçа ăна калать:

— Тарçă кирлине кирлĕ мана, анчах манăн халь укçа çук, эс халех укса ыйтăн, — тенĕ.

Ку калать:

— Мана укçа кирлĕ мар, эс мана хăвăн пĕр кивĕ çĕррӳне пар, эп сан патăнта уншăн икĕ çул ĕçлетĕп,—тет.

Хуçа ăна:

— Юрĕ, парăп,—тет.

Çапла ку сын, пачăшкă патĕнче икĕ çул ĕçлесе, çав çĕрре илет те каять патша хĕрне тӳрлетме. Патша пурăнакан хулана çитсен, çав аскăнлă пулнă хĕр çинчен ыйтса пĕлет ку. Хулари çынсем ăна калаççĕ:

— Вăл пит усалланса çитнĕ,— тенĕ,— çынна епле курнă, çапла хыпса çăтать,— тенĕ.

Ку çапах патша хĕрне хупнă çурт патне пырать. Пӳрт патне çитсен, курать ку шалта уласа, мĕкĕрсе çӳренине. Хурал тăракансем пĕр-пĕрне калаççĕ:

— Атьăр ку çынна шала тĕртсе кĕртсе ярăр, çитĕр ăна,—теççĕ те пӳрте патша хĕрĕ патне кĕртсе яраççĕ.

Ку çынна курсанах, патша хĕрĕ ун патнелле çиес тесе чупса та пырать; ку часрах кĕмĕл çĕрĕ илет те унăн пӳрнине тăхăнтарса ярать. Çĕрĕ тăхăнтарсанах, хĕр ăнсăр пулса, çĕре кайса ӳкет; выртсан-выртсан, ăн килсе кĕрет те, сиксе тăрса ларать. Унтан иккĕшĕ те хăйсемпе мĕн пулни çинчен йĕре-йĕре каласса лараççĕ.

Хурал тăракансем, куна халиччен çисе ячĕ пуль ĕнтĕ тесе, чӳречерен пăхаççĕ. Кусем иккĕшĕ те чипер ăнпуçпа каласса ларнине курсан, часрах патша патне чупса кайса, мĕн пулни çинчен ăна каласа кăтартаççĕ. Патша хăйĕн хĕрĕ чипер ăн-пуçпа калаçать тенине илтсессĕнех, виç лаша кӳлнĕ павускăпа çав пӳрт патне пырать. Пырсан, чăнахах çапла иккенне курсан, вара вĕсене иккĕшне павускă çине лартса, хăй çуртне илсе каять. Пăртакçă пурăнсанах, çак çынна хăй хĕрне качча парать те хăйĕн çыннисем умĕнче:

— Хам вилсен, патшана манăн кĕрӳ кĕтĕр,— тесе хушса хăварать.

Чылай пурăнсан, ку патша вилнĕ, ун вырăнне патшана кĕрӳшĕ лармалла пулнă. Çав патша вырăна ларнă куна патшалăхри мĕнпур çын пымалла пулнă, çавăнпа хайхи кун кусне чиксе шăтаракан тăванĕ те пынă. Ку ăна паллана, леш кăна паллайман. Çĕнĕ патша çӳллĕ вырăна хăпарса тăнă та хăйне тăванĕ суккăр тунине тата хăйĕн кусне епле тӳрлетнине пĕтĕмпе каласа кăтартнă.

Тăванĕ мĕн-мĕн каланине пурне те итлесе тăнă та каланă: «Акă мĕн тĕрлĕ ырă вырăна кĕчĕ ĕнтĕ вăл, вилме те кирлĕ мар çав ăна: манăн та çапла тăвас, халех куçа чиксе шăтарас та çав вăрманти пушă пӳрте кайса выртас»,—тенĕ.

Çапла шухăшласан, хайхи хăйĕн икĕ кусне те чиксе шăтарать. каять вара çав вăрмана аллисемпе хыпаласа, пушă пӳрте тупать те кĕрсе пулатти çине улăхса выртать.

Каç пулсан, усалсем каллех килчĕç, тет, çав пӳрте, пурте хуйхăрса калаçса лараççĕ, тет. Çапла калаçса ларнă çĕртех пĕр усалĕ каларĕ, тет:

— Пăхăр-ха пулатти çине, татах итлесе выртакан çук-и?—терĕ, тет.

Хайхисем пулатти çине пăхрĕç, тет те, ку çынна курах кайрĕç, тет. Вара ăна, пулатти çинчен сĕтĕрсе антарса, сĕлĕ пек вакласа тăкрĕç, тет.

Халап хапха тăрринче, хам урхамах тăрринче. Пĕтрĕ.

## ВАРАПА АМĂШĔ

Ĕлĕк пĕр хĕрарăм пурăннă. Унăн ачи пĕчĕклех çын япалине хĕстерме юратнă.

Пĕрре вăл çапла кӳршĕрен çăмарта вăрласа килнĕ те амăшне панă. Амăшĕ савăнса кулкаланă, çăмартине ăшаласа çитернĕ.

Тепрехинче хайхи ача пĕчĕк пуртă вăрласа килнĕ. Ăна каллех амăшне панă. Амăшĕ нимĕн те шарламан.

Ӳснĕçемĕн ача ытларах вăрлама тытăннă. Юлашкинчен лашасем те вăрласа сутнă. Пĕрре тытăнман, тепре тытăнман вăрă. Виççĕмĕшĕнче

тытăннă. Халăх вăрра хытă хěненě. Хăй çине лаша хӳри çакса, ăна урам тăрăх уттарнă, тăван амăшě патне илсе пынă. Вăрă хăйне амăшě пěчěк чухне вăрлама чарманшăн, хăй çавăнпа пăсăлса кайнăшăн питě тарăхнă. Вăл халăхран хăйне амăшě патне яма ыйтнă. Халăх ăна амăшě патне янă. Вăрă ача мěнле амăшě патне пынă, çапла унăн кăкăрне çыртнă та татнă.

— Эсě мана пěчěклех ăс памарăн, вăрлама чармарăн. Эпě çапла та пулас çукчě,— тенě вăл.

Амăшě кăкăрě ыратнипе вилсе кайнă. Вăррине хăйне халăх хытă хěнесе вěлернě.

## ÇУЛЛĂ ПĂТА

Пěр карчăкпа старик пурăннă, тет. Вěсен ывăлě пулнă, тет. Вăхăт çитсен, кусем ывăлне авлантарчěç, тет. Ашшěпе ывăлě яланах уя ěçлеме каяççě, тет, хěрарăмсем кил таврашěнче ěçлеççě, тет.

Çěртме çитрě, тет. Ашшěпе ывăлě уя çěртме сухине кайрěç, тет, кăнтăрлахи апат уя илсе пыма хушрěç, тет.

Кăнтăрла çитет, тет. Хунямăшě арçынсем валли кинне апат-çимěç хатěрлеме хушать, тет. Кинě пăтă пěçерчě, тет, уйран, çăкăр-тăвар хатěрлерě, тет. Çěнě çыннăн хăйěн те çиесси килнě, тет, анчах хунямăшěнчен вăтаннипе çимесěрех чăтрě, тет. «Уйра та çиййěп-ха,— тесе шухăшларě, тет. Хунямăшě васкатать, тет.

— Кин, вăхăт çитрě, лашисене те тăварчěç пуль, часрах кай,— тесе калать, тет.

Кинě çăкăр-тăварне пештěре чикрě, тет. Пăттине чěресе хуриччен чěрес тěпне малтан услам çу хучě, тет, çу çине пăттине ярса лартрě, тет. Хăй: «Çуне ытларах хурас-ха. Çусăр пăттине арçынсем çисе пěтереççě те, çулли вара мана юлать. Çиетěп пěрре тăраниччен!»—тесе шухăшлать, тет.

Пештěрне çакрě, тет, пăтă чěресне илчě, тет, тепěр чěреспе уйран илчě, тет те кайрě, тет, уя арçынсене апат çитерме. Çитрě, тет те:

— Ларăр, çиййěр, уйран та пур, пăтă та пур,— тесе калать, тет.

Арçыннисем ларчěç, тет, чěресěсене уçрěç, тет те, çиме тытăнчěç, тет. Хăйхи çу вěри пăтă айěнчен пěтěмпех çиеле ирěлсе тухса ларнă, тет. Арçыннисем çуллă пăтта çавăраççě анчах, тет, çинěçемěн ашшě кинне мухтать, тет:

— Пăтта питě тутлă пěçернě, çиме лайăх,— тесе калать, тет.

Çамрăк арăмăн упăшки те кăмăлласах çирě, тет. Арçынсем, çисе тăрансан, канма выртрěç, тет. Çамрăк арăм, хайхискер: «Ну, çиетěп ěнтě тăраниччен!»— тесе, пăтта пăтратма тытăнчě, тет, анчах чěрес тěпěнче нимěнле çу та юлман, тет. Çамрăк кинěн çуллă пăтă çиесси пулмарě, тет.

## МĚКĚТЕ ВĂРĂ

Ěлěк пурăннă, тет, карчăкпа старик, вěсен пулнă тет, виç ывăл. Аслă ывăлě Мирун, вăталăххи Макар, кěçěнни Мěкěте. Пурнăç енчен вěсем ытла япăх пулнă: пěр лапчăнса аннă хура пӳртсěр вěсен урăх нимěн те пулман. Çимелли тавраш çителěкли çинчен калаçмалли те çук. Мěн тăвас? Кун пек чухăнни ку çемье çех мар-ха, ак пěтěм ăраттипех.

Пурнăç çитмен майпа вěсен куккăшě вăрра вěренсе кайнă. Халě вěсен куккăшě чăн-чăн шулик теççě, ун пекки тавралли ялсенче ниçта та çук вара.

Çемьере вара яланах: «Эх, мěнле пурнăпăр-ха, малалла мěн çиййěпěр, паян юлашки улма пашалăвě çиетпěр»,—тесе сӳтсе явнă. Мирунпа Макар кулленех ěçленě, Мěкěте ним ěçлеме те пěлмен. Мěкěтене яланах «кахал» тесе чěннě, ятлаçнă.

Пĕр кунхине кусем, пухăнса, вăрра вĕренесси çинчен канашларĕç, тет те, аслă ывăлне Мирун куккăш патне вăрра вĕренме яма сĕнчĕç, тет. Вăл вăрра вĕренсен, вăталăххине Макара, унтан Мĕкĕтене вăрă ĕçне вĕрентмелле, тет.

— Ну, вăрра вĕренетĕп, пуятăп,— тесе, Мирун куккăш патне хыпăнсах кайрĕ, тет. Куккăш патне çитсен, хăйсен пурнăçне тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пачĕ, тет.

— Халь эп сан пата вăрра вĕренме килтĕм, вĕрент мана, кукки. Хăвах пĕлен пирĕн пурнăç çинчен,— тет Мирун.

— Вĕрентме пулатăп, ачам. Хам та ĕлĕк нуша нумай курнă. А халь ытла ун пекех мар. Каяп пĕр кас — пулать ман лаша, ашĕ-пăшĕ, тумтирĕ-мĕнĕ — пурте.

— Ах, вĕренесехчĕ, тем пекех савнăттăм,—тет Мирун.

— Юрĕ, кĕçĕр кайăпăр. Вăрра вĕренес-тĕк, эсĕ çынна ан хĕрхен, ан шелле. Е санпа вăл хирĕçет-тĕк, эс ăна çавăнтах пуçтарса хур. Сана вăл пăхăнтăр.

Каçала енне сулăнчĕ. Мирунпа куккăш лаша кӳлсе ларчĕç те тухса кайрĕç вăрра. Эх пыраççĕ кусем çулпа карлаттарса! Кусен çулĕ çинче пĕр хресченĕн ыраш урапи тӳнсе кайнă, ирĕксĕрех лашана чармалла пулчĕ.

— Эх, ыр юлташсем, тăратса парăр мана çак урапана. Сире эп тем чул спаççипă калăп,— тет урапа хуçи.

— Кукки, тавай çав урапана тăратса паратпăр, хĕрхенес пулать вĕт ăна, пĕччен мĕн тума пултартăр-ха ĕнтĕ. хам та курнă кун пеккине,— терĕ Мирун.

— Ну, тăратăпăр.

Хресчене урапа тăратса пачĕç те, куккăшĕ лашана каялла çавăрчĕ те, карлаттарчĕç килелле.

— Кукки, ма киле каятпăр?— тет Мирун.

— Чарăн, санпа вăрра кайиччен кайманни! Кайсан та, санпа тытăнас пулать çех. Кай та киле, вырт, урăх ан кил!— терĕ çилленсе куккăшĕ.

Мирун куккăш патĕнчен тухрĕ те хурланса килелле утрĕ.

— Ну, эп вĕренеймерĕм, кай эс, Макар. Эс вĕренме пултаратни? — терĕ Мирун.

Макар хыпăнсах уттарчĕ куккăшĕ патне.

— Ну, кукки, вĕрент эс мана вăрра!— тет Макар.

— Вĕрентес, анчах çынна ан хĕрхен, ан шелле, вара вăрра вĕренме пулать. Ак каçхине кайăпăр.

Каçала енне сулăнса кайрĕ, кĕтӳсем яла кĕчĕç. Кусем лаша кӳлчĕç те тухса кайрĕç. Эх пыраççĕ кусем çулпа ывтăнтарса! Кусен çулĕ çинче пĕр çыннăн лаши чăхăмланă. Кусен ирĕксĕрех лашана чармалла пулчĕ.

— Эх, тăвансемĕр, пулăшăр мана! Леçсе парăр-ха мана çак пĕренене,— терĕ лав хуçи.

— Кукки, тавай кăна пулăшас! Тепĕр чух хамăра та пулăшакансем пулĕç,— тет Макар.

— Пулăш,— терĕ те, лашана кар çавăрса, килелле карлаттарчĕ.

— Кукки, ма капла каялла, вăрлама каймастпăр-им?!

— Çук, санпа вăрра кайсан, ĕç тухмасть. Пурпĕрех тытăнма çех каяс пулать. Кай киле,— терĕ куккăш Макара.

Макар вара хурланса килелле уттарчĕ.

— Эх, ку вăрра мĕнле вĕренес?— теççĕ Макарпа Мирун та.

— Эй, усалсем, вăрра вĕренейместĕр, вăл чи çăмăл япала вĕт, эп каяп та вĕренеп!— тет Мĕкĕте.

— Э-хе-хе! Сантан пулать-и вĕренесси? Выртах эс кăмака тăрринче!— теççĕ пиччĕшĕсем.

— Мана черет, каятăп,— терĕ те тухса утрĕ Мĕкĕте куккăшĕ патне.

— Кукки, вĕрент мана вăрра, пĕрре эп чаплă вăрă пуçлăхĕ пулам, са-

на та ун чух пулăшăп,—тет Мĕкĕте.

— Юрĕ, анчах çынна ан хĕрхен, ан шелле.

— Ăна мана ан вĕрент, эп хамах аван пĕлетĕп,— тет Мĕкĕте.

Ак халь Мĕкĕтепе куккăшĕ çуранах тухса утрĕç вăрра. Вĕсен çулĕ çинче пĕр вăрман хĕрринче икĕ вăкăрпа суха тунине кураççĕ.

— Ну, кукки, çав çыннăнне пĕр вăкрине вăрлар-и?— тет Мĕкĕте.

— Мĕнле вăрлас тен, ачам, хăй унта вĕт?

— Ак мĕнле: эп вăрмана çитĕп те юман тăррине хăпаратăп, вара эп: «Вăкăр вăкăра çирĕ! Вăкăр вăкăра çирĕ!»— тесе кăшкăрăп. Суха тăвакансем ман пата чупса пырĕç. Эс çав вăхăтра пĕр вăкăрăн хўрине кас та, тепĕр вăкăр тутине çав хўрине чик, пĕр вăкăрне çавăтса, вăрман хĕррине тар, эпĕ унта пулатăп.

— Вăт маттур! Эпĕр кун пек тусан, питĕ тĕлĕнмеллеччĕ,— тет куккăшĕ.

Çитрĕç вăрмана, Мĕкĕте хăпарчĕ юман тăррине, тапратрĕ кăшкăрма:

— Вăкăр вăкăра çирĕ! Вăкăр вăкăра çирĕ!

Çынсем, куна илтсен, пусăнчĕç чупма, вăкăр вăкăра çинине курма. Çынсем чупса çитнĕ çĕре пĕр çыннăнне Мĕкĕте куккăшĕ малтан каланă пек турĕ те пĕр вăкрине çавăтса утрĕ.

Çынсем кайран таврăнчĕç те питĕ тĕлĕнсе кайрĕç: хăйсен пĕр вăкри çук, ун хўри тепĕр вăкăр çăварĕнче тăра парать.

Мĕкĕте вара куккăшĕнчен те вунвуникĕ хут чаплă вără пулса тăчĕ.

# ÇЫН ВАЛЛИ ШĂТĂК АН АЛТ, ХĂВАХ КĔРСЕ ӲКĔН

## ЙĂВАНПА ПУП

Пĕр ялта виççĕн пĕртăван пурăннă, тет. Пурнăçĕсем вĕсен начар пулнă.

Пĕрре асли кутамкка çакать те ĕç шырама тухса каять, тет. Пасарта куна пуп тĕл пулать.

— Мана тарçă кирлĕ. Кĕрĕшетни?— тесе ыйтать кунран пуп.

— Мĕн ĕçлемелли пур вара санăн?— тесе ыйтать кĕрĕшекен ача.

— Кĕсре пăхмалла та утă-шанкă кӳмелле,— тет пуп.

— Хакне мĕн чул хуратăн?— ыйтать ача.

— Кĕсре тислĕкне кунсерен тасатса пырайсан, кашнинчех сана çĕршер тенкĕ тӳлесе тăрăп. Тасатса пырай-масан, хăвăн çурăму тирне çапуççи чĕнлĕх сӳсе илетĕп,— тет пуп.

«Кĕсре тислĕкне мĕн тасатса çитерейменни пур»,—шухăшлать ача.

— Атя, кĕрĕшетĕп,—тет.

Çапла калаçса татăлаççĕ те каяççĕ пуп патне. Пуп хăй килне кĕрсе каять, тарçине çитнĕ-çитменех витене ĕçлеме ярать.

Тарçă кĕрет те витене çаннине тавăрсах ĕçе тытăнать. Анчах ĕçлет-ĕçлет — кĕсре тислĕкне ниепле те тасатса çитерейместь. Тарçă тĕлĕнсе хытсах каять: пуп кĕсри вĕçĕмсĕр çиет те пĕрмай тислĕкне кăларса тăрать.

Ир те пулать. Тарçă тислĕке такки тасатса пĕтерейместь. Кун ĕçне пуп пăхма тухать.

— Ну, епле, тасатса пĕтеретĕн-и?— ыйтать пуп.

— Эй, эпĕ кун пек кĕсре ĕмĕрне курман. Тислĕкне ниçта тасатса çитермелли çук,— тет тарçă.

Малтан килĕшнĕ тăрăх, пуп кулакулах тарçăн çурăмĕ тирне сӳсе илет те хăйне ĕçрен кăларса ярать. Ку хуйхăрса килне таврăнать.

— Мĕн час таврăнтăн тата?— ыйтаççĕ килте юлнă тăванĕсем.

Асли хăйпе мĕн пулнине тĕпĕ-йĕрĕпех каласа кăтартать:

— Пĕр пуп патне тарçа кĕтĕм те, кĕсрин тислĕкне тасатса çитерейменшĕн пĕтĕм çурăм тирне сӳсе илчĕ,— тет.

— Ну, эпĕ кайса пăхам тата. Эпĕ майлаштараймăп-и?— тет те вăталăххи, вăл та ĕç шырама тухса каять.

Ку та тарçа çав пуп патнех пырса çакланать. Анчах кĕсре тислĕкне тасатса çитереймен пирки куна та пуп, аслине мăшкăл тунă пекех, асаплантарса кăларса ярать.

Юлашкинчен Йăван ятлă кĕçĕн тăванĕ пуп патне тарçа кайса кĕрет. Йăван та пуп каланипе пĕтĕмпех килĕшет.

— Юрать,—тет вăл пупа. «Эсĕ сӳсе илĕн-и ман тире, эпĕ тăн кĕртсе хăварăп-и сана, курăпăр»,—тесе шухăшлать хăй ăшĕнче.

Каç пулсан, Йăван кĕсре пăхма, вите тасатма тухса каять. Кĕсре малтанхи пекех пĕр лăшсăр тислĕк кăларса тăрать.

— Ай-яй, мĕн тăвас ку кĕсрепе?— тет те Йăван, юман чукмартан пĕр тĕреклĕ пăкă касса илсе, кĕсрен тислĕк кăларакан вырăнне пăкăлать лартать. Пуп кĕсри тин, хырăмĕ кӳпсе кайнипе, çиме те, тислĕк кăларма та пăрахать. Вара Йăван витене хăпăлхапăл тасатса тăкать.

Тул çутăлсан, пуп каллех пăхма тухать. Шалт тĕлĕнсе каять: витере пĕр пĕрчĕ тислĕк çук, тап-таса.

— Ну, тавай, çĕр тенкӳне!— тет Йăван.

— Чим, ытла час. Тепĕр ĕç хушмалла пулать сана,— тет те пуп арăмĕпе канашлама кĕрсе каять.

— Мĕн тăвас? Пĕтерет ку пире,— тет пуп арăмне, тарăхса.

— Эсĕ ăна вăрмана вутта яр. Лашана ĕшентерсе килсен, укçине памалла мар ту,— тет арăмĕ.

Тепĕр кунне пуп тухать те Йăвана калать:

— Пирĕн вутă пĕтнĕ. Атя, вăрмана кайса вутă тиесе кил тата. Чиперех таврăнсан, сана тата тепĕр çĕр тенкĕ парăп. Лашана айăп-мĕн тусан, çурăму тирне сӳсе илетĕп,—тет.

Йăван ирĕксĕрех килĕшет те, кĕсрене кӳлсе, вăрмана тухса каять.

Вăрманта Йăван вутта кĕсре купарчи çӳллĕш тиет те килелле тухать. Пуп кĕсри, хуçи пекех чăхăмçăскер, пынă çĕртех ӳксе виленçи пулса выртать.

«Мĕн тăвас?— шухăшлать Йăван.— Вилнĕ-вилнех, тирне те пулин сӳсе каяс»,—тет те, çĕçĕ кăларса, кĕрсе патне пырать. Кĕсри çавăнтах, Йăван шухăшне сиссе, йăпăр-япăр сиксе тăрать. Йăван хăпарса ларать те лав çине, кĕсрене хĕне-хĕне, килне тĕрлеттерсе анчах пырса çитет.

— Ну, кăларса пар укçуна!—тет Йăван пупа.

Пуп хăранипе ăшăрхаса каять. Çавах та Йăвана мĕнле те пулин авас шухăшне пăрахмасть.

— Чим, ытла ан васка. Тепĕр ĕç пур сан валли!—тет пуп.—Шыв арманне кай та çăнăх илсе кил-ха. Тиесе килсен, сана тата икçĕр тенкĕ парап,— тесе ӳстерет пуп ĕç хакне, хăй укçине пĕр пус та ярасшăн мар пулса.— Илсе килеймесен, тирне сĕветĕп,— тет.

— Юрĕ, пĕрех хут çăнăх та илсе килĕп,— тет те Йăван каçалапа шыв арманне çăнăх илме тухса каять.

Армана çитсен, Йăван патне темĕн чухлĕ усал ачисем сиксе тухаççĕ. Ну, Йăвана пĕтересшĕн тапăнаççĕ. Ку нихăшинчен те хăрамасть. Вăйлăскер, пĕрин хыççăн пĕрне тытать те çулать, тытать те çулать. Усал ачисем хăрасах ӳкеççĕ.

— Мĕнпе килĕштеретĕн, Йăван? Урăх çыхăнмастпăр,— тесе йăлăна пуçлаççĕ Йăвана.

— Йăтса кайăр çак арман чулне ман патăма, вара тивместĕп,—тет Йăван.

Усал ачисем арман чулне йăпăряпăр йăтаççĕ те пуп килне илсе каяççĕ. Пуп çаксене курать те пушшех хăраса ӳкет. Укçине хăйĕн Йăвана çапах та парасси килмест.

— Тавай тарар кунран, матăшкă. Пĕтерет ку пире!—тет пуп хăй арăмне.

Пĕр михĕ сухари типĕтеççĕ те Йăванран куçпуç курми тарма хатĕрленеççĕ. Йăван çийĕнчех сисет çакна. Тарас умĕнхи каç вăл сухари миххине кĕрсе ларать.

Хĕвел тухнă-тухман пуппа арăмĕ су-

хари миххине йӑтаҫҫӗ те килӗнчен тухса вӗҫтере параҫҫӗ. Кайсан-кайсан, пӗр шыв хӗррине канма лараҫҫӗ.

— Хырӑм выҫрӗ ман. Ҫикелер мар-и пӑртак?—тет матӑшкӑ.

Пуп сухари миххине салтать те— хай Йӑван кусен умне ялт! сиксе тухать. Пуппа арӑмӗн куҫӗсем улма пек чармакланса каяҫҫӗ. Пӑрахса тарасси те пӗтсе ларать.

Каҫ пулсан, Йӑванпа пӗрле выртса ҫывӑрас умӗн, пуппа матӑшкӑ Йӑвана ҫӗрле шыва тӗртсе яма калаҫса татӑлаҫҫӗ. Йӑвана шыв хӗррине выртталаҫҫӗ, пачӑшкӑ варрине выртать. Анчах пурте ҫывӑрса кайсан, Йӑван пуп вырӑнне кӗрет те выртать.

Ҫӗрле матӑшкӑ вӑранать те, хӑй ҫумӗнче упӑшки выртать тесе, Йӑвана аллипе кӑшт тӗртсе вӑратать.

— Тӗртсе яр ҫавна шыва. Усалтан хӑтӑласси ҫавӑ пулӗ,—тет.

Йӑван ҫавӑнтах пупа авӑр тӗпне шампӑр! тӗртсе ярать. Пӗтрӗ ҫӑткӑн пуп.

Ирхине вӑрансан, матӑшкӑ пӑхать—хӑй ҫумӗнче Йӑван выртса парать.

— Ан вӗлерсем мана, Йӑван! Ме пӗтӗм ҫумри укҫана,—тесе йӑлӑна пуҫлать матӑшкӑ Йӑвана.

Йӑван илет те хӑйне тивӗҫ укҫана хавасланса килне таврӑнать.

Йӑвана курсан, икӗ пиччӗшӗ те аллисене шарт! ҫапса тӗлӗнеҫҫӗ.

## ХУҪАПА ТАРҪӐ

Пӗр пуян пурӑннӑ, тет, ӑна яланах вӑрӑсем тапӑннӑ, тет. Пурлӑхне сыхлама тесе пуян пӗр хаяр йытӑ илсе кӑкарчӗ, тет. Пуян патӗнче пӗр тарҫӑ ӗҫленӗ, тет. Йытта шанса, ҫыннисем пӳртрех ҫывӑрма тытӑннӑ, тет. Тарҫи те ҫенӗкре ҫывӑрать, тет.

Пӗр каҫхине вӑрӑсем каллех пуяна ҫаратма пычӗҫ, тет. Йытти, кӑкарнӑскер, хаяррӑн хӑрлатса вӗрет, тет. Вӑрӑсем йытта ҫапрӗҫ те вӗлерчӗҫ, тет. Йытӑ йынӑшнине илтсе хуҫи тухрӗ, тет: йытти вилнӗ, тет, вӑррисем тарчӗҫ, тет. Хуҫа ҫенӗкре ҫывӑракан тарҫине вӑратрӗ, тет те, ятлать, тет:

— Мӗн ыйха лӗшкетӗн! Вӑрӑсем тапӑннӑ, йытта вӗлерчӗҫ, мӗншӗн тухса пӑхмарӑн!—тесе кӑшкӑрать, тет.— Ак йытӑ вырӑнне хӑвна кӑкарса лартатӑп, ху сыхла,—тесе калать, тет.

Хуҫа тухрӗ, тет те, вилнӗ йыттин мӑйкӑчне вӗҫертсе илсе тарҫине мӑйкӑчласа кӑкарса лартрӗ, тет.

Тарҫӑ йытӑ вырӑнне хураллама тытӑнчӗ, тет. Кӑнтӑрла ӗҫлет, тет, каҫхине ӑна каллех кӑкарса лартать, тет. Тарҫи хам-хам! тесе вӗркелесе илет, тет те, ҫӗрех выртса ҫывӑрать, тет.

Пӗр каҫхине вӑрӑсем каллех ҫаратма пычӗҫ, тет. Тарҫи хытах вӗрме тытӑнчӗ, тет, анчах хуҫи тухмасть, тет. Вӑррисем пӑхаҫҫӗ, тет, этем вӗрсе тӑрать, тет. Вӑррисем тарҫӑ вӗрнине пӑхмасӑрах, хуҫа ампарне уҫрӗҫ, тет те, темӗн чухлӗ тырӑ илсе кайрӗҫ, тет.

Ирхине хуҫа тухрӗ, тет те, ампара кӗрсе пӑхрӗ, тет — тырри ҫук, тет.

— Ма вӑрлаттарса ятӑн?!—тесе ятлать, тет.

— Эпӗ темӗн пекех хӑрлатса вӗртӗм — ху илтмерӗн, тухмарӑн, ҫавӑнпа вӑрласа кайрӗҫ,—тесе калать, тет, тарҫи.

Ҫавӑнтан вара хуҫа тарҫине йытӑ вырӑнне кӑкарма пӑрахрӗ, тет.

## ПУЯНА УЛТАЛАНИ

Ӗлӗк-авал пӗр пуян ҫын пурӑннӑ, тет. Ҫав пуян ҫын каланӑ, тет:

— Тӑвансем! Итлӗр-ха, эпӗ сире мӗн калам: пуҫтарӑнӑр пӗр ҫӗре ялти мӗнпур ҫын. Вара, хӑшӗ мана сӑмахпа улталӗ, ҫавна пӗр хутаҫ укҫа паратӑп,—тенӗ, тет.

Ҫынсем часах пуҫтарӑннӑ та пуяна улталама пуҫланӑ. Ӗретпе улталаса

пыраççĕ — пĕри те улталаймасть, тет.

Хай пĕр çамрăк ача улталама пуçларĕ, тет. Ача каларĕ, тет:

— Эпир ĕлĕк асаттепе иккĕн пурăнаттăмăрччĕ. Пирĕн çĕр пуç вĕлле хурт пурччĕ. Çăва тухсан, хуртсене улăха лартаттăмăрччĕ. Пĕрре асаттепе хуртсем патне кайрăмăр та пăхатпăр — пирĕн икĕ хурт çук. Хай эпир, асаттепе иксĕмĕр, икĕ лаша утлантăмăр та хуртсене шырама кайрăмăр. Çӳресен-çӳресен, пĕр хуртне тупрăмăр, тепри çук. Тепĕр кун хам çеç кайрăм. Эх çӳреп, эх çӳреп! Пырса тухрăм пĕр варлăха. Пирĕн хурт варта кашкăрпа çапăçса вырта парать,— тесе каларĕ, тет.

Леш пуянĕ калать, тет:

— Çук, улталатăн, хурт нихăçан та кашкăрпа çапăçмасть,—терĕ, тет.

Ачи ăна хирĕç:

— Э-э, улталарăм-и?—терĕ, тет те, укçа хутаççине йăтса тухса кайрĕ, тет.

## ПУППА ТАРÇИ

Пурăннă пулнă пĕр пуп. Пĕрре пуп тарçă тытнă та килне илсе пынă.

— Ну, тарçă, лайăх ĕçле. Лайăх ĕçлесен, ахаль тумастăп,—тенĕ пуп.

Тарçă пĕр эрне пурăнсан, утă çулмалли вăхăт çитнĕ.

— Ачам,— тет пуп тарçине,—турă пулăшнипе чипер выртса çывăрар та ыран ирех утă çулма кайăпăр,—тет.

— Юрать,—тет тарçă пупне.

Хай кусем ирхине ирех тăчĕç. Ирех тăчĕç те, пупĕ матăшкине калать:

— Матăшкă, пире ирех апат çитер-ха, эпир улăха утă çулма каятпăр,—тет.

Майри сĕтел çине апат илсе пырса лартрĕ. Пупĕпе тарçи çирĕç те, пупĕ тарçине калать:

— Ларнă-ларнах, кăнтăрлахи апат та çиер, вара канмасăр каçаллаччен çулар,—тет.

Тарçи:

— Юрать,—тет.

Майри кăнтăрлахи апат та илсе пырса лартрĕ. Пупĕпе тарçи пĕрер кашăк сыпрĕç те тăранчĕç. Пупĕ тарçине калать:

— Ларнă-ларнах, каçалла апачĕ те çиер, вара каçхи апатченех çулăпăр,—тет.

— Юрать,—тет тарçи.

Пуп майри каçаллахи апат та пырса лартрĕ. Вĕсем каллех пĕрер кашăк сыпрĕç те тăранчĕç. Пупĕ:

— Ларнă-ларнах, каçхи апат та çиер,—тет.

— Юрать,—тет тарçи.

Пуп майри каçхи апат та илсе пырса лартрĕ. Пĕрер кашăк сыпрĕç те тăранчĕç. Тарçи хăй чаппанне илчĕ те тухса кайма хатĕрленчĕ.

— Ăçта каятăн эсĕ?—тет пупĕ.

— Мĕнле ăçта? Хăвăрах пĕлетĕр, пуп атте, каçхи апат çисен, кам ĕçлет. Каçхи апат çисен, çывăрма выртаççĕ,—тет.

Лупасайне кайрĕ те тарçи тепĕр тул çутăличчен çывăрчĕ. Çавăнтан кайран вара пупĕ тарçине нихçан та пĕрре ларсан ирхи, кăнтăрлахи, каçаллахи тата каçхи апат çитермерĕ, тет.

## ЧЕЕ ХРЕСЧЕН

Пĕр пуян вырсарникун пасара каясшăн пулнă. Ун пин вăкăр, пин ĕне, пин лаша, пин сысна, пин хур, пин кăвакал, пин чăхă пулнă. Пуян шухăшлать: «Çул çинче çиме пĕр хура пусас — тăхăрçĕр тăхăрвун тăхăр хур кăна юлать»,—тет.

Çав пуян кӳршинчех пуп пурăннă. Пупăн та выльăх-чĕрлĕх пуянăнни чухлех пулнă. Вăл та шухăша каять: «Пĕр кăвакала пусас — тăхăрçĕр тăхăрвун тăхăр кăвакал çеç юлать». Шухăшласан-шухăшласан, аптранипе пуп кӳршĕ пуян патне каять.

— Кум, эпĕ вырсарникун пасара каясшăн,—тет пуп.

Куна илтсен, пуян калать:

— Эпĕ те çавăн çинченех шухăшларăм. Пĕр чăхă пусас — тăхăрçĕр тăхăрвун тăхăр чăхă кăна юлать.

Вара килĕшеççĕ:

— Атя Мĕтри хресчен патне кайса пăхар. Унăн пĕр хурĕ пур. Мĕтрине эпĕр пасара илсе каятпăр тетпĕр. Тен, вăл уншăн хурне пусĕ,—теççĕ.

Вара Мĕтрие кайса калаççĕ:

— Хурна пус, ун чухне пасара илсе каятпăр, теççĕ.

Хресчен пĕртен-пĕр хурне ирĕксĕрех пусать те, пасара тухса каяççĕ. Пасара çитеççĕ, япаласем илеççĕ те киле килме тухаççĕ. Пĕр-ик сехетренех каç пулса ларать. Вара вĕсем çĕр выртма чарăнаççĕ. Хура вĕсем каçхинех пĕçерсе хураççĕ те, çиме вăхăт пулманнипе, выртса çывăраççĕ. Çывăрма выртиччен çапла калаççĕ:

— Кам лайăх тĕлĕк курать, çав хура пĕчченех çисе ярать; кам начар тĕлĕк курать, çав выçах юлать.

Ирхине çывăрса тăраççĕ те, пуп калать:

— Ну, хитре-е тĕлĕк куртăм. Эпĕ пасара кайнă пек те çав пасартан ылтăн йĕвен илнĕ пек, çав йĕвене лаша пуçне тăхăнтарсанах, лаша, ылтăн пулса, пĕлĕтелле вĕçсе хăпарчĕ пек. Вара вăл мана çичĕ пĕлĕт çÿллĕшне илсе хăпарчĕ пек те, мана ÿкерсе, малалла кайрĕ пек. Пилĕк минутранах таврăнчĕ, мана пин тенкĕ укçа тыттарчĕ. Вара эпĕ, савăнса, лаша çине утлантăм та аялалла ана пуçларăм. Анса çитсен, хама çиме ăшаланă хур илтĕм те киле таврăнтăм,—тет.

Пуян, пупа пÿлсе, çапла калать:

— Эпĕ те сан хыççăнах кайса килтĕм, анчах ман лаша санăннинчен виç хут ытларах укçа илсе килчĕ,—тет.

Хресчен çакна итлесе ларсан-ларсан калать:

— Эпĕ хам лашапа сирĕн хыççăн хăваларăм-хăваларăм — хуса çитеймерĕм пек. Вара каялла çаврăнтăм та, кусем, нумай укçа илнĕскерсем, выçă лармĕç-ха тесе, хура пĕчченех çисе ятăм,—тет.

Пуянпа пуп хуран патне чупса пыраççĕ те — хуран тĕпĕнче хур шăммисем кăна выртаççĕ, тет.

## УЛПУТПА ШУЙТТАН

Пурăннă, тет, пĕр улпут. Пĕррехинче вăл тарçисем мĕнле ĕçленине пăхма каять. Улпута пĕр шуйттан тĕлпулнă. Шуйттан улпут хыççăн кайнă. Çул çинче вĕсем пĕр хресчен ака тунине курнă. Хресченĕ лашине вăрçнă:

— Эй, шуйттан илесшĕ, çавна та туртаймастăн!—тенĕ.

Улпучĕ каланă:

— Ав, сана лашине парасшăн, ил!—тенĕ шуйттана.

Шуйттан каланă:

— Вăл чунĕпе каламасть çав,—тенĕ.

Вĕсем малалла утнă. Вĕсем хресчен çемйи тырă акнине курнă. Ачи кăшкăрса макăрнă. Амăш каланă:

— Шуйттан илесшĕ, чарăнмарĕ паян!—тенĕ.

Улпут паçăрхи пекех каланă:

— Ав, сана ачине парасшăн, ил!—тенĕ.

Шуйттанĕ:

— Ачине памасть çав, хăратма çеç калать,—тенĕ.

Амăшĕ çав вăхăтра ачине тытнă та чуптăва-чуптăва ыталанă.

Кусем малалла кайнă та тарçисем ĕçленине курнă. Тарçисем каланă:

— Шуйттан илесшĕ, татах килчĕ!—тенĕ.

— Ав, сана илĕр, теççĕ, чунтан калаççĕ,—тенĕ шуйттанĕ.

Шуйттан улпута ярса тытнă та хăйпе илсе кайнă.



## ЧЕЕ ÇЕМЕН

Ĕлĕк-авал пĕр ялта Мирун ятлă çын пураннă, тет. Вăл питĕ пуян пулнă. Кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе ĕнепе лаша усранă, тет. Сурăхĕсен шучĕ те пулман, тет. Çĕрĕ те Мирунăн сахалах пулман. Хăй вăл питĕ хытă пулнă. Унăн патĕнче ĕçлесе пурăнакан тарçăсем икĕ-виçĕ эрнерен ытларах пурăнайман, тет, пăрахса тухса тарнă.

Пĕррехинче Мирун патне ĕçлеме Çемен ятлă ача тарçа кĕрĕшет, тет. Темиçе кун ĕçлесенех, вăл пуян Мирун мĕнле çын иккенне пĕлсе çитет. Çемен Мируна тавăрма шутлать. Ку вăхăталла тырă вырас вăхăт та çывхарса çитет.

Пĕр кун Мирун Çемене ирех вăратать те тырă вырма кайма хушать. Хайхи пуян Çемене пĕчĕк татăк çăкăр тыттарать:

— Ме, тыт. Тырра лайăх выр, хĕвел анса лармасăр киле ан таврăн,— тет Мирун ачана.

Çăкăр ытла сахал панине кура Çемен чăтса тăраймасть:

— Çăкăр ытла та сахал-çке, каçчен çимелĕх çитмест,—тесе калать.

— Çăкăр татăкне шыва ямалла, унта вăл хăех пысăкланать,—тет Мирун.

Çемен пуяна хирĕç нимĕн те шарламасть. Çурла йăтать те уялла тухса уттарать. Тырă ани патне çитсен, пĕр кĕлте вырать те Çемен выртса çывăрать.

Хĕвел анас умĕн Мирун уя тарçисен ĕçне тĕрĕслеме уттарать. Мирун Çемен вырнă ана патне те кайса

курма шутлать. «Ку ачи пĕр тăватă-пилĕк купа вырчĕ пулĕ-ха»,—кăмăллăн шутласа пырать Мирун.

Çемен ку вăхăтра тăнă та киле кайма хатĕрленет иккен. Ун умĕнче пĕр кĕлте анчах выртнине кура пуян урсах каять, сурчăк сирпĕтсе вăрçма тытăнать:

— Кун каçа та пĕр кĕлте çеç выртăн-и эсĕ?!—тесе кăшкăрать Мирун.

— Вăл темех мар,— тет чее Çемен,—вăл кĕлтене шыва ямалла, тен, вара унран купа çеç мар, икĕ-виçĕ çĕмел те пулĕ,—тет.

Мирун хăй малтан каланине аса илчĕ те шăпăртах пулчĕ. Çапла тавăрчĕ вара ĕмĕтсĕр Мируна чее Çемен.

## ИРТЕН-ÇЎРЕНЕ АН КЎРЕНТЕР!

Пĕр пуянтан та пуян улпут пурăннă, тет. Пĕрреччен улпут виçĕ лашапа ямшăкпа хулана кайма тухрĕ. Çул çинче вăл вутă турттарса килекен хресчене курать. Ăна курсанах:

— Сторонись!—тесе кăшкăра пуçларĕ.

Хресченĕн лаши, чуманскер, çулран пăрăнма ĕлкĕреймерĕ—улпут ун лавне кўмипе çапăнтарчĕ те, хресчен лавĕ тўнсе кайрĕ. Хресчен ăна тарăхса:

— Сана куншăн виççĕ хĕнĕп-ха!—тесе кăшкăрчĕ.

— Сантан, саплăкран, тата мана хĕнесси пулать-и?! Манăн вĕт йĕритавра хурал!—терĕ улпут кула-кула.

Хресчен лавне тăратса килне кайиччен çĕрле пулчĕ. Киле çитсенех, вăл улпута епле хĕртесси çинчен шухăшла пуçларĕ. Шухăшларĕ-шухăшларĕ те улпута платник пулса улталама шут тытрĕ.

Ирпе вăл, пăчкă, пуртă илсе, улпут ялне кайса:

— Камăн чăлан тумалли пур!—тесе кăшкăрса ута пуçларĕ.

Çавăнтах улпут ăна чăлан тума илсе кĕчĕ. Улпут хресчене чылай йывăç кăтартрĕ. Анчах:

— Кунта сан юрăхлă йывăç çук,—терĕ хресчен.

Унтан вĕсем ямшăкпа вăрмана кайрĕç (улпутăн пысăк вăрман пулнă). Вăрман хĕрне çитсен, улпутпа хресчен, хатĕрсем илсе, варнелле кайрĕç, ямшăка лашасем патне тăратса хăварчĕç.

Чылай кайсан, пĕр йывăçа касма тытăнчĕç. Унăн тăррине татрĕç те тĕпне савăлпа çурма тытăнчĕç. Сиве пирки улпутăн алли шăнса кайрĕ. Хресчен, çуракан йывăç çурăкне кăтартса:

— Çавăнта чиксе пăх, унта ăша пулмалла,—терĕ.

Улпут аллине чиксенех, хресчен йывăç савăлне çапса кăларчĕ те, улпут алли хĕсĕнсе ларчĕ. Унтан хресчен, тĕреклĕ рычак илсе:

— Иртен-çўрен хресчене ан кўрентер!—тесе ăшĕ каниччен хĕртрĕ те çаврăнса утрĕ. Улпут кăшкăрайми пулса юлчĕ.

Кайран ямшăк ăна кĕтсе ывăннипе аран йĕр тăрăх шыраса тупрĕ, тупрĕ те вилнĕ пексхерне килне илсе кайрĕ

Иккĕмĕш хутĕнче хресчен улпута юмăç пулса улталама шут тытрĕ. Кĕленчене шыв, алшăлли илсе, улпут ялне кайрĕ. Ял тăрăх вăл:

— Камăн пўр-суран тўрлетмелли пур!—тесе кăшкăрса ута пуçларĕ.

Улпут ăна хăйне тўрлетме илсе кĕчĕ. Хресчен, кĕрсен, сурана пăхкаларĕ те:

— Кăна пĕр вĕри мунча çеç кирлĕ,—терĕ.

Тарçисем çавăнтах мунча хутса пултарчĕç.

Мунчара хресчен улпута сентре çине лартрĕ. Чылай ларсан, улпут халран кайрĕ. Хресчен турчăка касси илчĕ те, улпута хĕнесе, кăштах чунне илмерĕ. Юлашки хут вăйпа çапрĕ те тухса кайрĕ.

— Иртен-ҫӳрен хресчене ан кӳрентер!—кӑшкӑрчӗ вӑл.

Тарҫисем улпут нумай тӑнине кура ун патне кайрӗҫ те вилнӗ пекскерне килне илсе таврӑнчӗҫ.

Хресченӗн улпута татах тепре хӗртмелли юлчӗ. Ку хутӗнче вӑл пиччӗшне чӗнтерчӗ те ӑна улпут ҫурчӗ умӗнчен: «Ман улпута тата тепре хӗртмелле!» — тесе кӑшкӑрса чупма хушрӗ. Пиччӗшӗ унӑн хытӑ чупакан сунарҫӑ пулнӑ. Вӑл мулкача та виҫӗ утӑм пуссах ярса тытнӑ.

Ирпе пиччӗшӗ шӑллӗ каланӑ пек кӑшкӑрса чупрӗ. Улпут ҫакна илтсен, пӗтӗм тарҫӑ-тӗрҫе, йыттисемпе тухса, хресчене вӗлерме хушрӗ.

Тарҫисем хӑвалама кайсанах, хресчен улпут патне кӗчӗ те:

— Иртен-ҫӳрен хресчене ан кӳрентер!—тесе хӗртме тытӑнчӗ.

Улпут, унччен хӗртнипе ура ҫине те тӑрайманскер, хресчене тилмӗрсе те пӑхрӗ, анчах лешӗ каҫармарӗ, виличченех хӗнерӗ. Улпут вилсе кайсан, тухса тарчӗ.

Хресчен пиччӗшӗ хытӑ чупнӑ пирки, ӑна хӑвалакансем ниепле те тытайман. Вӗсем каялла таврӑннӑ ҫӗре улпут та вилӗ выртать.

Ҫакӑн хыҫҫӑн тин вара хресчен вутта ирӗккӗн турттара пуҫларӗ, тет.

## ПУЯНПА ТАРҪИ

Елӗк пӗр питӗ хытӑ пуян пулнӑ. Ун патӗнче ӗҫлеме никам та килӗшмен. Вара пӗррехинче вӑл тарҫӑ шырама хӑех тухса кайнӑ. Ҫулпа пынӑ чух ӑна хирӗҫ пӗр яш каччӑ пынӑ.

— Ырӑ каччӑм, мана тарҫӑ кирлӗ, эсӗ ӗҫлеме пымӑн-ши?—тенӗ пуянӗ.

— Мӗн чухлӗ тӳлетӗн?—тенӗ каччи ӑна.

— Пӗр михӗ сӗлӗ парӑп сана пӗр ҫул ӗҫленӗшӗн,—тенӗ хыт пуянӗ.

Каччӑ каланӑ:

— Эпӗ пӗр михӗ сӗлӗшӗн кӗпе-йӗме ҫулталӑк ҫӗтместӗп,—тенӗ те малалла уттара панӑ.

Пуян, кӑн-кан пӑхкаласа, хырӑма каҫӑртса, малалла кайнӑ. Ӑна хирӗҫ каллех тепӗр ҫамрӑк ҫын килнӗ. Хирӗҫ тӗл пулсан, пуян каллех куна тарҫа пыма чӗннӗ. Ҫамрӑк ҫынна вӑл кашни уйӑхра пӗр укҫа тӳлеме пулнӑ.

— Ырӑ хуҫам, санӑн укҫусем миҫе тенкӗлӗх пулаҫҫӗ вара?—тенӗ ҫамрӑк ҫын.

— Пӗрер тенкӗлӗх пулаҫҫӗ,—тет хуҫа.

— Ҫук, эпӗ уйӑхра пӗр тенкӗпе тарҫӑра ӗҫлеместӗп,—тенӗ те ҫамрӑк ҫын малалла уттара панӑ.

Хыт пуян, питӗ тарӑхса, ӑна пӑхса кӑна юлнӑ. Вара ирӗксӗрех малалла утнӑ. Утсан-утсан, вӑл виҫҫӗмӗш ҫамрӑка курнӑ. Унран та вӑл тарҫа пыма ыйтнӑ.

— Мӗн чухлӗ тӳлеме шутлатӑн ху?—тенӗ ҫамрӑк ҫын.

Лешӗ мӗн чухлӗ тӳлесси ҫинчен калама та аптӑранӑ, ку ҫын та пӑрахса уттарӗ тесе шутланӑ. Вара ҫамрӑкки хӑех каланӑ:

— Мана хам йӑтса каймалӑх япала парсан, эпӗ тарҫӑра ӗҫлеме килӗшетӗп,—тенӗ.

Кунӑн ҫирӗп хул-ҫурӑмне курса, пуян пӗрре хӑраса кайнӑ, тепре савӑнса кайнӑ.

— Юрать, ҫамрӑк ҫыннӑм, атя апла ман пата ӗҫлеме,—тенӗ.

Вара ҫамрӑк ҫын килӗшнӗ те пуян хыҫҫӑн утнӑ. Пуян патне ҫитсен, апат ҫисе выртса ҫывӑрнӑ.

Тепӗр кунне пуян тарҫине пӗтӗм уй ҫӗрне сухаласа акма хушнӑ. Тарҫӑ пуян лашине кӳлнӗ те, тырӑ тиесе, уя кайнӑ. Кун каҫиччен сухаланӑ, сӳренӗ, акнӑ. Каҫчен хуҫа патне таврӑннӑ.

— Мӗнле, тарҫӑ, эсӗ часах уйран таврӑнтӑн?—тенӗ хуҫа.

— Эпӗ сан пӗтӗм уйна акса пӗтертӗм,—тенӗ тарҫи.

Хуçи ёненмен. Пĕр лашине кӳлтернĕ те пур уйне те йăлт тĕрĕсленĕ, анчах пур уйне те акнă пулнă.

Хуçа, киле таврăнсан, тарçине ним те калайман. Апат çитерме хушнă. Мĕн лартса панă, тарçи апата йăлт çисе пынă. Хыт хуçа тарçинчен хăра пуçланă: «Ку ман апата хама валли те хăвармĕ ĕнтĕ»,—тенĕ.

Хуçа пĕрреччен тарçа вăрман касса вут тума хушнă. Тарçи пуртта лайăх хăйранă та вăрмана тухса кайнă. Кун каçиччен вăрман касса, ларакан йывăç хăварман та: йăлт касса-татса вутă туса хунă. Унтан хуçа патне таврăннă та:

— Ырă хуçам, сан вăрманна йăлт касса вутă турăм,—тенĕ.

Вара хуçа хăраса кайнă. Хăй уçăлса çӳрекен илемлĕ хурăн вăрманне те каснă пуль тесе, часрах вăрмана пăхма кайнă. Чăнах, вăрманĕ пĕртте юлман. Хуçа лаш хуйхăрнă. Вăл тарçинчен мĕнле хăтăласси çинчен кăна шутланă. Вара вăл каланă:

— Ыран эсĕ каснă вăрман вырăнне йăлт çамрăк йывăç лартса тух,—тенĕ.

Тарçи килĕшнĕ. Тепĕр кунне кĕреçине лайăх хăйранă та вăрман лартма кайнă. Кун каçиччен каснă вăрман вырăнне йăлт çамрăк йывăç лартса тухнă. Хăй часрах хуçи патне таврăннă та:

— Ырă хуçам, сан вăрман вырăнне çамрăк вăрман лартрăм,—тенĕ.

Хуçи ёненмесĕр каллех кайса пăхнă. Чăнах та, вĕт вăрман кашласа ӳссе ларнă. Хуçи тĕлĕнсех кайнă. Халь хуçа ытлашши ĕç хушма та хăракан пулнă.

Çапла ĕçлесе пурăнсан-пурăнсан, çулталăк иртни те сисĕнмен. Хуçа, тарçи киле кайнă чух пĕр çĕклем хаклă япала йăтса кайĕ те хăйне валли хăвармĕ тесе, пӳртри укçа арчисене, хаклă япаласен арчисене, хаклă тумтирсене пĕр кĕлете тултарнă. Шутлă кун çитнĕ те, тарçи хуçине каланă:

— Манăн киле каймалли кун çитрĕ, халь хам йăтма пултарнине йăтса каям,—тенĕ.

— Ху йăтса каяс тенине йăтса кай, эппин,—тенĕ хуçа.

Тарçă тӳрех сар кĕлет патне утма пуçланă. Хуçа ăна пăхнă та, хăранипе унăн куçĕсем темле кура пуçланă, чарăлса кайнă. Хăй çĕр çине палт! кайса ӳкнĕ те тăнсăр пулса выртнă. Тăн килсе кĕрсен, хуçа сиксе тăнă, анчах сар кĕлет вырăнĕнче ним те пулман.

Ăна тарçă, çаплипех хулпуççи çине лартса, килне йăтса кайнă. Çапла вăл питĕ пуйса кайнă. Хуçа вара, хăйне-хăй тарăхса, кулянса, çинçе çип пек çинçелсе пынă, юлашкинчен вилсе выртнă.

## АШАТМАН ТАЛАП

Пĕр улпутăн кӳршĕ улпут патне пысăк ĕçпе каймалла пулнă. Çул çинче хырăм часах ан выçтăр-ха тесе, улпут тутлă апат нăках çисе тултарчĕ, тарçи кӳлсе тăратнă хысăлă çуна çине лаш кĕрсе ларчĕ. Тарçи ларкăч çине кушак пек ялт сиксе ларчĕ те, тилхепине кăрт-карт турткаласа, ура кукалесе тăракан лашасене хăваларĕ. Тройка улпут кил-çуртĕнчен вăш çеç уялла тапса сикрĕ.

Çанталăк калама çук сивĕ тăрать. Тимĕр çуна тупанĕсем, чуна çӳçентерсе, сиввĕн шăхăрса пыраççĕ. «Ух, сивĕ те паян!—тесе шухăшласа пырать улпут.—Тăлăп ăшĕнче капла сивĕ те, ямшăка мĕнле-ши?»

— Эй, тарçăм, шăнмарăн-и?—тесе ыйтать улпут.

— Каккуй шăнма, тарласа пыратăп!—кăшкăрать ямшăк, ларкăч çинче çил арманĕ пек хăлаçланса пыраканскер.—Эй, яра пар!..

— Мĕнле апла? Эпĕ питех те шăнтăм. Тăрат-ха лашасене, çуран утам кăштах.—терĕ улпут.

— Эх, улпутам, санӑн тӑлӑпу ӑшне сивӗ кӗрсе тулнӑ. Ниҫталла тухма ҫуккипе сивӗ тарӑхса сана шӑнтса вӗлерессшӗн,—хуравлать тарҫи.

— Ан кул, ҫӗтӗк ҫурханах!—ҫилленсех ҫитрӗ улпут.

— Тӗрӗс, улпутӑм. Ҫак ҫӗтӗк аҫам мана шӑнасран хӳтӗлет те ӗнтӗ: сивӗ пӗр ҫӗтӗкӗнчен кӗрет те тепӗр ҫӗтӗкӗнчен тухса та вӗҫет. Пӑх-ха эсӗ ман ҫине: епле ташласа кӑна ларатӑп вӗт эпӗ,—савӑнӑҫлӑн кулать ямшӑк.

Кайсан-кайсан, улпут тӳсеймерӗ:

— Шӑнса вилетӗп, иҫмасса! Хывса пар-ха мана аҫамна. Эсӗ ку путсӗр тӑлӑпа тӑхӑн,—терӗ.

Тарҫӑн хушнине итлес пулать. Шӑтӑк-шатӑк ала пек аҫамне хывса пачӗ те хӑй улпутӑн тилӗ тир тӑлӑпне вӑр-вар тӑхӑнса та лартрӗ, лешӗ — кун аҫамне. Кайрӗҫ вара каллех малалла. Кайсан-кайсан ямшӑкӗ:

— Ашӑнтӑн-и, улпутӑм?—ыйтать улпутран.

— Ҫук-ха,—тет лешӗ, кӳтсе кайнӑскер.

Каллех, кайсан-кайсан, тарҫӑ ыйтать:

— Ашӑнтӑн-и?

— Ҫу-ук-ха-а,—тет улпут аран-аран.

Кайсан-кайсан, татах чӗнет тарҫӑ, улпучӗ сасӑ та кӑлармасть. «Ҫывӑрса кайрӗ-ши ку?»—тесе, ямшӑк улпута хыпашласа пӑхать — лешӗ каска пек шак хытӑ: шӑнса вилнӗ улпут.

Тарҫӑ улпут виллине пӗр тарӑн сакӑлтана йӑвантарчӗ те вӗҫтерчӗ шахвурсем* патне. Лашисемпе хыҫлӑ ҫунана йӳнӗ хакпах сутса ячӗ, тет, вӑл шахвурсене. Тилӗ тир тӑлӑпне те сутрӗ, мӗншӗн тесен улпут тӑлӑпӗ ӑна пысӑк, шалпака-мӗн. Хайхи пирӗн тарҫӑ палламалла мар, хуҫа пек тумланса, кӗсъе тулли укҫапа ашшӗ-амӑшӗ патне таврӑнчӗ, тет. Ялти чи хитре те чипер хӗре качча илсе, калама ҫук вӑйлӑ туй турӗ, тет.

* Лаша вӑррисем.

## ПУППА ТИМӖРҪЕ

Пуп лаша таканлаттарма тимӗрҫе пычӗ, тет.

— Мӗн чухле таканлатӑн?—тесе ыйтрӗ, тет, пуп тимӗрҫӗрен.

— Такан пуҫне икшер тенкӗ,—тет ӑна хайхи тимӗрҫ.

— Ҫук, апла хаклӑ пулать,—тет пуп.

— Хаклӑ пулсан, урӑхла тӑвапӑр Пӑтаран тӳле, эппин,—тет пупа тимӗрҫ.—Пӗрремӗш пӑташӑн — пӗр пус, иккӗмӗшӗшӗн икӗ хут ытла — тӑвата пус, виҫҫӗмӗшӗшӗн виҫӗ хут ытла — тӑхӑр пус. Ыттисемшӗн те ҫапла: миҫе пӑта, ҫавӑн чухлӗ хаклӑрах тӳлӗн,—тет тимӗрҫ.

— Ак капла юрать!—терӗ, тет, пуп, савӑнса кайса.— Капла тӑватӑ урине те таканлаттаратӑп, йӳне ӳкет!

— Тӑватӑ урине пурӗ ҫирӗм тӑватӑ пӑта кирлӗ пулать,—тет тимӗрҫ.

— Юрать, юрать, килӗшетӗп,—тет пуп.

Лашана таканласа пӗтерсен, мӗн чухлӗ тӳлемеллине шутлама тытӑнаҫҫӗ те, пупӑн пӗтӗмпе тимӗрҫ малтан каланӑ сакӑр тенкӗ вырӑнне темиҫе хут ытла тӳлемелле пулса тӑнӑ, тет.

Пуп ӗнсине хыҫа-хыҫа тӳлесе хӑварчӗ, тет те, укҫине, лашине ҫавӑтса, лапсӑртатрӗ, тет, килнелле.

— Сан пек хытӑ пупа ҫапла кирлӗччӗ-ха!—тесе юлчӗ, тет, тимӗрҫ хӗртнӗ тимӗрне чӑнкки-чанкки шаккаса.

Миҫе тенкӗ тӳлесе хӑварнӑ пуп тимӗрҫе?

## КУКША ЙӐВАН

Ӗлӗк пӗр ялта Йӑван ятлӑ кукша сын пурӑннӑ, тет. Пӗрре вӑл килӗн-

чен ĕç шырама тухса кайрĕ, тет. Çул çинче ку пĕр улпут пар лашапа тĕрлеттерсе пынине курать. Йăван йăпăр-япăр çул хĕрринче ларакан хуран кутне пырать те хурăна тĕреленĕ пек таянса тăрать. Улпут Йăван тĕлне çитсен:

— Ма хурăна тĕрелесе тăратăн?— тет.

Лешĕ калать:

— Ку — тĕнчери мĕнпур хыпара пĕлтерекен хурăн.—тет.—Вăл йăванса кайсан, тĕнче те пĕтет. Çавăнпа тытса тăратăп,—тет.

Улпут калать:

— Итлесе пăх-ха эппин. Ман килтен мĕн пĕлтереççĕ?—тет.

Йăван итленĕ пек тăвать те:

— Сан арăмна вăрă-хурахсем пусмăрласа илсе кайнă,—тет.

Улпут хыпăнса ӳкет.

— Мĕн тумалла-ха капла? Арăма ăçтан шыраса тупмалла?—тет вăл.

Йăван калать:

— Ман вырăна хурăна тытса тăрха. Эпĕ пар лашупа туххăмах арăмна тупса килетĕп,—тет.

Улпут хĕпĕртесех килĕшет.

— Юрĕ, юрĕ,—тет вăл Йăвана.— Эсĕ тĕплĕрех шыра! Тупсан, ахаль тумăп,—тет.

Кукша Йăван тăрантас çине ларать те вĕçтере парать. Улпучĕ хурăна тӳнсе каясран тĕрелесе юлать. Йăван наччасах улпут килне тĕрлеттерсе çитет. Арăмĕ патне чупса кĕрет те:

— Пар-ха часрах пин тенкĕ укçа. Улпут пасарта сан валли тем тери чаплă парне илесшĕн. Укçине хăй килне манса хăварнă,—тет.

Улпут майри Йăвана çавăнтах сунтăхĕнчен пĕр ывăç ылтăн илсе тухса тыттарать.

— Чуптар часрах! Эсĕ çитиччен ыттисем ан илччĕр,—тет.

Кукша Йăван укçана кĕсйине персе чикет те лаши-мĕнĕпех килне ларса таврăнать.

Хурăн кутне тăрса юлнă улпут кĕтет-кĕтет Йăвана, ниепле те кĕтсе илеймест. Каç енне кун хырăмĕ чăтма çук выçса çитет. Хирте пĕр-пĕччен супса тăраканскер, тискер кайăксенчен те хăрама тытăнать.

«Ку çын арăма шыраса тупаймарĕ пулас. Киле таврăнса, хамăн та шырама пикенес пулĕ»,—тесе шухăшлать улпут. Хурăна тĕкĕлесе тăма пăрахать те ывăннипе килне аран сĕтĕрĕнсе çитет.

Улпут килне çитсенех, ăна хирĕç арăмĕ кулкаласа сиксе тухать.

— Ну, мĕнле парне илсе килтĕн пасартан?—ыйтать вăл упăшкинчен.

Улпут куçне-пуçне чарса пăрахать:

— Мĕнле парне? Эпĕ пасара кайман та-çке,—тет.

— Ăçта сĕтĕрĕнсе çӳрерĕн вара? Ман патăма эсĕ янă çын килчĕ те, эпĕ ăна, эсĕ пасара мана валли парне илме кайнă тесе, пин тенкĕ укçа парса ятăм,—тет улпут майри.

Улпут пушшех тĕлĕнсе каять.

— Ара, вăл çын сана таркăнсем патĕнчен тупса килмерĕ те-им?—тесе ыйтать вăл арăмĕнчен.

— Нимĕнле таркăнсене те курман эпĕ, килтех эсĕ парне илсе килессе кĕтсе лартăм,—тет арăмĕ.

Улпут тин хăйне Кукша Йăван улталанине ăнланса илет.

— Эккей! Вăл сана вăрă-хурахсем илсе кайнă терĕ те, эпĕ ăна, лашасем çине лартса, сана шырама ятăм. Хам ун вырăнне çул çинче пĕр хурăна йăванасран тĕрелесе тăрса юлтăм. Хурăнĕ йăванса кайнă пулсан, пĕтĕм тĕнче пĕтнĕ пулĕччĕ,—тесе каласа кăтартать арăмне.

— Эх, ухмах, ухмах!—тет арăмĕ тарăхса.—Хурăн йăваннипе тĕнче хăçан пĕтни пур! Ăна чи тăмсай этем те ĕненес çук вĕт!—тет.

— А эпĕ сан пек ухмах валли пасартан пин тенкĕлĕх парне илсе килессе кам ĕнентĕр?—тет улпучĕ те, арăмне çилленсе.

Çапла иккĕшĕ те вара Кукша Йăвана пула пĕр-пĕринпе каласма та пăрахаççĕ.

## УХАНТЕЙПЕ СЕЛЕНТЕЙ

Çĕн Якалĕнче Ухантей лавккапа тавар сутса пурăннă. Унăн тавар илме укçи çитмен. Вара вăл Матакри Селентейрен кивçен çĕр аллă манит укçа илнĕ. Вăл кивçен илнĕ укçине çулталăк çурăра та тӳлеймен. Селентей пĕрре пынă, иккĕ пынă Ухантей патне кивçен панă укçине ыйтма — Ухантей килĕнче пулман. Селентей çилленсе çапла каланă Ухантей йăмăкне:

— Çулталăк çуră çитрĕ, халь те тупса параймасть. Пĕрре те килтĕм, иккĕ те килтĕм — ялан килте çук. Виççĕмĕшне килсен те пулмасан, Çернюк, укçашăн сана илсе каятăп. Çĕр аллă маните ĕçлесе татиччен ямасăр, тертлентерсе усрăп. Пасар кунĕ çитиччен пиччӳ укçана пырса патăр; пырса параймасан, пасар кунĕ сана илсе каятăпах,—тенĕ.

Тепĕр кун, пиччĕш таврăнсан, Çернюк пиччĕшне Селентей каланă сăмахсене каласа кăтартнă. Пасар кунĕ çитсессĕн, Ухантей хăй йăмăкĕн кĕпине, тухйине тăхăнса йăмăкĕ пек пулса, чĕрçиттине çыхса, ăстанпа кĕнчеле авăрласа ларнă.

Селентей пасара пынă, тет. Мĕн илмеллине илнĕ те Ухантей патне кĕнĕ, тет, укçа ыйтма. Ухантей татах пулман килĕнче, йăмăкĕ кăна кĕнчеле авăрласа ларнă. Селентей:

— Пиччӳ ăçта?—тенĕ.

— Самара тавар тиеме кайрĕ,—тенĕ Сернюк.

— Самара кайма укçа пур, мана пама çук. Атя, Çернюк, сана илме хăех пырĕ,—тенĕ Селентей.

Çернюк каланă:

— Мана пурĕпĕрех пурăнасси, выçă усрамасан: икĕ алла пĕр ĕç, пырăп эппин,—тенĕ те Селентейпе ларса кайнă Матака.

Унта пурăннă чух арçын, хĕрле тумланнăскер, урай шăлса çӳп тăкасран пуçне урăх ĕç нимĕн те тăва пĕлмен. Хĕрарăм ĕçне тума пĕр эрне, ик эрне те усранă — ялан нимĕн те туман. Çавăнпа тарăхса, укçа таврăнтăр тесе, ку хĕре пĕр пуян ывăлне çĕр маните çураçнă. Хăйсен ялнех туй туса качча панă. Туй туса пĕтерсен, каччипе кинне хĕве хупнă. Хĕве хупсан, арăмĕ кĕлетрен тула тухнă та кĕлете хăй вырăнне качака тытса янă, хăй Çĕн Якалне киле таврăннă, йăмăкне Этелеке ларма леçнĕ. Тепĕр кун Ухантей Матака йăмăкне шырама тесе кайнă.

— Селентей патне укçа тӳлеме килтĕм. Ăçта манăн йăмăк?—тенĕ Ухантей.

Селентей каланă:

— Ан тарăх, Ухантей. Эпĕр тупрăмăр çав пĕр инкек. Эс те айăплă,—укçа тӳлеймерĕн; эп те айăплă,—укçа таврăнтăр тесе, Çернюка качча патăмăр та, хĕве хупсан, качака пулса тăнă. Кӳршĕри асамçă карчăкăн кăмăлне хăвартăмăр пулинех,—тенĕ.

Ухантей каланă:

— Эпĕ сирĕн пăсташăра пĕлместĕп. Мана йăмăка тупса парăр!—тесе айăпла пуçлана.

Хăташĕ йăлăна пуçланă:

— Пĕрре пулнă япалана кайран тума та çук. Каçар, Ухантей, çĕр аллă манит укçана та ыйтмăпăр, тата çине çĕр манит парăпăр,—тенĕ.

Ухантей çĕр манит укçана илнĕ, качакана илнĕ те каçарнă. Килне таврăннă та качакине пусса çинĕ, тирне тутарса сутнă.

Селентей кайран, Çернюка пасарта курсан, ыйтнă:

— Епле сана этем турĕç?—тенĕ.

Çернюк каланă:

— Тутар мулли патне илсе кайса тӳрлетрĕç, ик-виç çĕр манит тӳлерĕç,—тенĕ.

# УХМАХ ПУÇ УРАНА КАНĂÇ ПАМАСТЬ

## САРМАНТЕЙ

Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă; ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ. Сармантей те йĕрет, тет, сарă чăххи те какалать, тет. Хапхи калать, тет:

— Манăн та усăлса хупăнас,— тет.

Анать, тет, пĕр вăкăр шыва.

— Хапха, эсĕ мĕншĕн усăлса хупăнатăн?—тесе ыйтать, тет.

— Усăлса хупăнмасăр,—тесе калать, тет:—Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă, ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ. Сармантей те йĕрет, сарă чăххи те какалать!— тет.

Вăкăр калать:

— Эппин, манăн та мĕкĕрсе анас пулĕ,—тет.

Мĕкĕрсе анать, тет, шыв хĕррине. Шыв калать:

— Мĕншĕн, вăкăр, мĕкĕретĕн?— тет.

— Мĕкĕрмесĕр,— тет.— Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă, тет; ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет; Сармантей те йĕрет, тет, сарă чăххи те какалать, тет, хапхи те усăлса хупăнать, тет.

Шыв калать:

— Манăн та хумханас, эппин,— тет.

Пĕр çĕнĕ çын шыв ăсма анать.

— Шыв, эсĕ мĕншĕн хумханатăн?—тет.

— Хумханмасăр,—тет: —Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă, тет; ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет; Сармантей те йĕрет, тет, сарă чăххи те какалать, тет, хапхи те усăлса хупăнать, тет, вăкăрĕ те мĕкĕрет, тет.

Çĕнĕ çын калать:

— Манăн та пĕр витрине çапса çĕмĕрес,—тет.

Çапса çĕмĕрет витрине. Тавăрăнать киле. Хунямăшĕ чуста çăрать, тет:

— Кин, мĕншĕн хăрах витрепе анчах ăсса килтĕн?—тет.

— Хăрах витрепе анчах пулмасăр,—тет:— Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă, тет; ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет; Сармантей те йĕрет, тет, сарă чăххи те какалать, тет, хапхи те усăлса хупăнать, тет, вăкăрĕ те мĕкĕрет, тет, шыв та хумханать,— тет.

Хунямăшĕ калать:

— Манăн та чустана кăларса ывăтас эппин,— тет.

Кăларса ывăтать, тет, чустине.

Ывăлĕ кайнă вăрмана. Таврăнать вăрмантан. Ывăлĕ калать:

— Мĕншĕн яшка пĕçермерĕр?— тет.

Амăшĕ калать:

— Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă; ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ; Сармантей те йĕрет, сарă чăххи те какалать, хапхи те уçăлса хупăнать, вăкăрĕ те мĕкĕрсе анать, шыв та хумханать, çĕнĕ çын та хăрах витрине çапса çĕмĕрнĕ,—тет.

Ывăлĕ калать:

— Манăн та хăрах атта кăларса ывăтас,—тет.

Вăл та хăрах аттине кăларса ывăтрĕ, тет. Пĕтрĕ.

## ТĂХĂР ТУНКĂЛТĂК, ПĔР МАНКĂЛТĂК

Елĕк пĕр ялта тăхăр Тункăлтăк, пĕр Манкăлтăк пурăннă. Тункăлтăксем пурте пĕртăван пулнă. Çаксем çуна туса пурăннă.

Тункăлтăксем тăххăрăн тăхăр çуна тунă, Манкăлтăкĕ пĕччен тăхăр çуна тунă. Тункăлтăксем кураймасăр Манкăлтăкăн çунисене çунтарнă янă. Манкăлтăк кăмрăксене тиесе пасара кайнă та сутнă.

Манкăлтăк укçа пайтах илсе килнине курсан, Тункăлтăксем те çунисене çунтарнă та пасара кăмрăк сутма кайнă. Анчах кусен кăмрăкне никам та илмен.

Тункăлтăксем Манкăлтăка тата хытă çилленнĕ. Вăл килте çук чухне Тункăлтăксем ун патне пынă та амăшне çапса вĕлернĕ. Манкăлтăк нимĕн те каламан. Вăл амăшне чĕрĕ çын пекех тумлантарса çуна çине лартнă та пасара каяп тесе тухса кайнă.

Пасарлă яла çитсен, ку пĕр çын патне чей ĕçме хваттере кĕнĕ, амăшне çуна çинех лартса хăварнă. Хваттер хуçин висĕ хĕр пулнă. Чей ĕлкĕрсен, аслă хĕрĕ Манкăлтăка:

— Аннӳне чей ĕçме чĕн!—тесе каларĕ, тет.

Манкăлтăкĕ:

— Вăл кĕмест пулĕ, çынран пит вăтанать,—тесе каларĕ, тет.

Хĕр пусма çине тухнă та:

— Инке, кĕр! Чей ĕçмелле!—тесе кăшкăрнă. Карчăк нимĕн те чĕнмен. Хĕр пӳрте кĕнĕ те:

— Кĕмест,—тенĕ.

Унтан вăталăхĕ чĕнме тухать. Карчăк татах нимĕн те чĕнмест. Юлашкинчен кĕçĕн хĕрĕ çăтăр-патăр:

— Сиртен пулать-и!—тесе тухса кайнă.

Вăл карчăк патне пынă та:

— Инке, кĕр!—тесе, аллинчен турткаланă. Леш чĕнмен. Хĕр:—Акă эпĕ, чĕнсе кĕмесен, сĕтĕрсе кĕрĕп! — тесе, карчăка çуна çинчен сĕтĕрсе антарнă.

Карчăк вилĕ иккенне курсан, хĕр питĕ хăранă. Вăл часрах пӳрте чупса кĕнĕ те Манкăлтăка:

— Ара, санăн аннӳ вилнĕ-çке!— тесе калать, тет.

Манкăлтăкĕ:

— Вилменччĕ вăл, эсир вĕлернĕ пулĕ!—тесе кăшкăраша пуçларĕ, тет.

Унтан вара, хуçасем хăраса Манкăлтăка амăшĕ вырăнне кĕçĕн хĕрне парса янă.

Киле çитсен, Тункăлтăксем Манкăлтăкран тĕлĕнсе ыйтнă:

— Ку хĕре ăçтан илтĕн?—тенĕ.

Лешĕ:

— Ăçтан илесси... Аннене çуна çине лартрăм та пасара кайрăм. Унта: «Вилнĕ çынпа чĕрĕ çын кам улăштарать!»—тесе кăшкăрса çӳрерĕм те, пĕр çын тухса хăй хĕрĕпе улăштарчĕ,—тенĕ.

Тункăлтăксен вată амăшĕ пулнă. Кусем:

— Пирĕн анне ватă ĕнтĕ, яшкаçăкăр тăваймасть. Атьăр аннене вĕ-

лерер те çамрăк çын улăштарса килер!—тесе каланă.

Чăнах та, кусем амăшне çапса вĕлернĕ те, çуна çине лартса, пасарлă яла кайнă. Укăлчаран кĕрсенех:

— Вилнĕ çынпа чĕрĕ çын кам улăштарать!—тесе кăшкăрма тытăннă.

Ялти çынсем тухнă та Тункăлтăксене рычаксемпе хĕнесе янă.

Тункăлтăксем, улталанăшăн, Манкăлтăка пĕтерме шухăшланă. Вĕсем ăна пĕрре тытнă та, хап* ăшне чиксе, кӳл хĕрне кайса пăрахнă. Ĕç кĕркунне пулнă, кун питĕ сивĕ тăнă. Акă кӳл хĕрне кĕтӳçĕ лаша кĕтĕвĕ хăваласа пынă. Вăл кӳл хĕрринче хап выртнине курах кайнă. Пынă та:

— Хап ăшĕнче кам пур?—тесе ыйтнă.

Манкăлтăк хап ăшĕнчен:

— Эпĕ!—тесе кăшкăрнă.

Кĕтӳçĕ:

— Мĕн тума кĕтĕн унта?—тесе ыйтнă.

Лешĕ:

— Ăшăнма кĕрсе выртрăм,—тесе калать, тет.

Кĕтӳçи питĕ шăннă, тет. Вăл:

— Эпĕ питĕ шăнтăм, мана та кĕртсе ăшăтчĕ!—тесе йăлăнать, тет.

Манкăлтăкĕ:

— Салт, кĕртсе вырттарăп!—тесе кăшкăрать, тет.

Кĕтӳçĕ вара хапа салтнă та хап ăшне хăй кĕрсе выртнă. Манкăлтăк хапа çыхнă та кĕтӳçе шыва ывăтнă. Хăй пĕтĕм кĕтĕве киле хăваласа таврăннă.

Тункăлтăксем, Манкăлтăк пĕр кĕтӳ лаша хăваласа килнине курсан, уи патне пырса:

— Ку лашасене ăçтан хăваласа килтĕн?—тесе ыйтнă.

Лешĕ:

— Шывран хăваласа килтĕм,—тесе каларĕ, тет.

* Чăпта.

Тункăлтăксем:

— Атьăр эпир те шывран лашасем хăваласа килер!—тесе калаççĕ, тет.

Акă вĕсем кӳл хĕрне кайнă. Малтан кӳлле пĕри сикнĕ. Вăл шыва путсан, шыв пăкăр-пăкăр туса тăрать, тет. Тункăлтăксем:

— Улине-хăлине ан тирке! Пурне те хăвала!—тесе кăшкăраççĕ, тет.

Унтан, пĕччен хăваласа кăлараймасть пулĕ тесе, тепĕри сикнĕ, кăшт тăрсан — виççĕмĕш, унтан — тăваттăмĕш. Çапла пĕрерĕн-пĕрерĕн сике-сике, пурте шыва siксе пĕтнĕ.

Çапла вара Тункăлтăксем тăххăрăш те кӳлле путса вилнĕ. Манкăлтăк халиччен ырă курса пурăнать, тет.

## СĔМ-УХМАХСЕМ

Ĕлĕк пĕр карчăкпа пĕр старик пурăннă, тет. Вĕсен пĕр ывăлпа пĕр хĕр пулнă, тет.

Çак ватăсен ывăлĕ пĕрре вутă кӳме вăрмана кайрĕ, тет, хĕрĕ кĕпе çума çырмана вакка анчĕ, тет.

Хĕр кĕпе çуса тăнă чухне вак кутĕнченех пĕр хитре яшă ача иртсе кайрĕ, тет. Яшă ача çак хĕр çине çаврăнса та пăхмарĕ, тет. Вара хĕр, хурланса, макăрма тапратрĕ, тет.

— Ку хитре яш ача ман çине сивĕ куçпала та пулин çаврăнса пăхмарĕçке!—тесе ĕсĕклесе тăрать, тет.

Каç пулса килет, хĕр çаплах ĕсĕклесе тăрать. Килĕнче ашшĕпе амăшĕ хĕрне кĕтнĕ-кĕтнĕ, кĕтсе илеймен. Амăшĕ калать:

— Мĕншĕн капла пирĕн хĕр ку таранччен кĕпине çуса пĕтереймест?—тет те хĕрĕ патне каять.

Хĕрĕ йĕрсе тăрать. Амăшĕ ыйтать:

— Хĕрĕм, мĕншĕн капла пит хытă йĕретĕн?—тет.

Хĕрĕ йĕрсе калать:

— Йĕмесĕр! Çакăнтан пĕр хитре яш ача вак кутĕнченех иртсе кайрĕ те

ман çине сивĕ кусĕпеле те пулин çавăрăнса пăхмарĕ-çке!—тет. Унтан хĕр тата хытăрах ĕсĕклеме тапратрĕ.

Кăна илтсессĕн, амăшĕ те йĕре пуçларĕ, тет.

Ашшĕ те хĕрĕпе амăшне кĕтрĕ-кĕтрĕ те вак кутне кайрĕ, тет. Лешсем йĕрсе тăнине курсан, ыйтать:

— Мĕншĕн капла ĕсĕклесе йĕретĕр?—тет.

— Йĕмесĕр,—тет амăшĕ,—çакăнтан пĕр хитре яш ача иртсе кайнă та пирĕн хĕр çине сивĕ кусĕпеле те пулин çавăрăнса пăхман!—тет.

Ашшĕ те йĕме тапратрĕ. Каç пулса çитрĕ, ывăлĕ те вăрмантан таврăнчĕ, кусем çаплах йĕрсе тăраççĕ.

— Ăçта çăва патне кайса кĕнĕ кусем! Апат та пĕçермен, сивĕ, шăнса кил те выçă лар!—тесе ятлаçать, тет, ывăлĕ. Пускилсенчен ашшĕсем ăçта кайнине ыйтса пĕлет те, кантăраллă пушă илсе, вак кутне каять. Лешсем вак кутĕнче виççĕшĕ те ĕсĕклесе йĕрсе тăраççĕ. Ывăлĕ ыйтать:

— Мĕншĕн капла виççĕр те йĕрсе тăратăр?—тет.

Амăшĕсем йĕрсе калаççĕ:

— Йĕмесĕр! Вак кутĕнчен пĕр хитре яш ача иртсе кайнă та пирĕн хĕр çине сивĕ кусĕпеле те пулин çавăрăнса пăхман, пирĕн хĕр мĕнтен начар!—теççĕ.

Ывăлĕ кăна илтсессĕн, кантăраллă пушшине туртса кăларчĕ те макăракансене тапратрĕ хĕртме. Ашшĕне тăсать те:

— Ак сире, ял ухмаххисене!—тет. Амăшне туртать те:—Ак сире, ял ухмаххисене, ак сире!—тет. Йăмăкне тăсать те:—Ак сире, ял ухмаххисене, ак сире, кирлĕ-кирлĕ маршăн йĕме вĕрентем!—тет.

Ашшĕ, амăшĕ, хĕрĕ — виççĕшĕ те киле çиçĕм пек тарчĕçĕ, тет.

Ывăлĕ ашшĕсемпе йăмăкне хĕртрĕ-хĕртрĕ те, вĕсене евĕрлĕ ухмахсем тĕнчере тата пур-ши тесе, шырама тухса кайрĕ, тет.

— Сирĕн пек ухмахсем тĕл пулсан — таврăнăп, тĕл пулмасан — таврăнмăп,—терĕ, тет.

Пĕр ватсупнă пӳрчĕн маччи çине çарăк акнă та карчăкне, вĕренпе мăйĕнчен кăкарса, мачча çине çарăк çиме туртса хăпартать. Карчăкĕ пăванса шăлĕсене йĕрсе пăрахнă. Старик хĕпĕртесе калать:

— Карчăк, карчăк, çарăкне хăпарса курмасăрах хĕпĕртесе ан кул-ха!—тет.

Ухмах шыракан кăшкăрать:

— Мĕскер тăватăн эсĕ, старик?! Карчăку пăваннипеле шăлĕсене йĕрсе янă та, тата: «Хăпарса курмасăрах ан кул-ха»,—тетĕн. Часрах вĕренне пушатса яр, çапла хăпартаççĕ-и мачча тăрне?!—тет.

Старик, кăна илтсен, карчăкне касмăкланă вĕрене пушатса ячĕ. Ухмах шыракан ватта пусма илсе килтерчĕ те ун тăрăх мачча тăрне епле хăпармаллине каласа кăтартрĕ. Çапла вĕрентсе хăварчĕ те малалла кайрĕ.

Пырсан-пырсан, ку каллех ухмахсене тĕл пулать. Вуниккĕн пĕртăвансем килкарти варрине хуранпа вĕри нимĕр çиме кăларса лартнă. Кусем нимĕрне сĕтпе çиесшĕн. Сĕчĕ нӳхреппе. Хăйсем пĕр кашăк анчах илнĕ. Нимĕре çиме çаксем акă епле май тупнă. Пĕри кашăкне илет те, нӳхрепе чупса кайса сĕтне ăсса килсе, нимĕрпе сыпать. Тепри, кăмака çине йăпăр-япăр хăпарса, кашăкне илет те малтанхи пекех тăвать: кашăкĕпе нимĕр ăсса, нӳхрепе каять, унтан нимĕрне сĕтпе сыпать те, пӳрте кĕрсе, кашăкне кăмака çине ывăтать. Виççĕмĕшĕ те, кашăкне кăмака тăрринчен илсе анса, çаплах тăвать. Ыттисем те пĕрин хыççăн тепри малтанхисем пекех тăваççĕ. Нимĕре епле çимеллине нихăшĕ те пĕлмеççĕ. Ухмах шыракан калать:

— Ухмахсем! Апат çапла çиеççĕ-и? Эсир апла çисе кунĕпе те тăранаймастăр. Сĕтне нӳхрепрен илсе килсе,

хуран кутне лартăр. Вуниксĕр вуник кашăк илĕр. Малтан нимĕрне ăсса, унтан сĕтне ăсса сыпса çиййĕр,—тет.

Кусене капла вĕрентсе хăварчĕ, тет те, ухмах шыракан:

— Тĕнчере ухмах нумай пулĕ, килех таврăнас,—терĕ, тет.

## ЧĂШЛАТМАН ЯШКА

Пĕр пуян тимĕрçĕ лаççи, арман тата нумай çĕр тытса тăнă. Вăл ялана тарçисем мĕнле ĕçленине пăхса çӳренĕ.

Пĕр кунхине те вăл çаплах тунă Малтан тимĕрçĕ лаççине каять. Унта пуян хĕрлĕ тимĕр выртнине курать те ăна аллипе ярса тытать. Анчах ку хĕртнĕ тимĕр пулнă. Пуянăн аллисем хăпаланса тухнă. Çакна кура тимĕрçĕ ачи пуян патне пырса тăрать те калать:

— Тимĕре малтан сурса пăхмалла. Чăшлатсан, хĕртнĕ тимĕр пулать,—тет.

Пуян, килне кайсан, арăмĕ ăна яшка антарса парать. Пуян яшки çине сурать, анчах яшки чăшлатмасть Вăл яшкана, вĕри мар тесе, тӳрех çăварне персе чикет те яшки вĕри пулнипе вилсе те каять.

## ЛАША ШЫРАНИ

Пĕр çын хăй айĕнчи лашине виçĕ кун шыранă, тет. Пĕр яла пырса ыйтать, тет:

— Лаша курмарăр-и?—тет.

— Çук, курмарăмăр,—тесе калаççĕ, тет.

Тата тепĕр яла пырса ыйтать, тет:

— Лаша курмарăр-и?—тет.

— Çук, курмарăмăр,—тесе калаççĕ, тет.

Çапла ялтан яла тек çӳрет, тет. Çӳресен-çӳресен, пĕр ăслăрах çынна тĕл пулнă, тет те:

— Эсĕ ăçта та пулин ют лаша çӳренине курман-и?—тесе калать, тет

— Çук, курман,—тесе каларĕ, тет.

—Хăçан çухалчĕ санăн лашу?—тесе каларĕ, тет, ку çынни.

— Паянхипе виçĕ кун ĕнтĕ ак,—тесе каларĕ, тет, лаша шыраканни.

— Лашу мĕн тĕслĕччĕ?—тесе ыйтрĕ, тет, леш çынни.

— Шурă улаччĕ,—тесе каларĕ, тет, лаша шыраканни.

— Çак ху айăнтиех мар-и?—тесе каларĕ, тет, леш çынни.

Хайхи юланут çинчен анса пăхрĕ, тет те, лашине:

— Çакă, çакă, çакă!—терĕ, тет.

Лаши çине сиксе утланчĕ, тет те, савăнса чуптара пачĕ, тет, килне.

## СЕЛĔП ХĔРСЕМ

Пĕр карчăкпа старикĕн виçĕ хĕр пулнă, тет, виççĕшĕ те селĕп пулнă, тет. Хĕрĕсем ӳссе çитĕнеççĕ, тет, хăтана пыракан çук, тет.

Пĕрре кусем патне таçтан пĕр çын хăтана çаврăнса пырать, тет. Амăшĕ хĕрĕсене часрах пăлтăра чĕнсе кăларчĕ, тет те:

— Астăвăр, пĕри те пĕр сăмах ан чĕнĕр!—терĕ, тет.

Хĕрĕсем кĕрсе кăмака çине хăпарса ларчĕç, тет. Амăшĕ хăнине чыслама салма пĕçерет, тет. Салмине çăрчĕ, тет те, чарапа сĕтел çине лартрĕ, тет Кушакĕ сĕтел патĕнче сакă çинче ларать, тет.

Унччен те пулмасть сĕтел тăрăх пĕр шăши чупса пыра парать, тет. Кушак ялт! сикрĕ, тет те, чарине йăвантарчĕ ячĕ, тет. Аслă хĕрĕ:

— Ах, муй çăлаççĕ кушак! Сальмана тьăкса ячĕ,—тесе кăшкăрса ячĕ, тет.

Вăталăххи ăна чарать, тет:

— Акка, вая пие анне çын умĕнче нимĕн те каяçма хуçмайĕ вĕт,—терĕ, тет



Кĕçĕнни тата:

— Эсĕй тек çӳйăхатăй! Эпĕ пĕй çавламастăп, тĕк кăна лаятăп,—терĕ, тет.

Хăтана пынă çынни тăчĕ, тет те, тухрĕ кайрĕ, тет. Хĕрсем темĕнчченех кивве юлса пурăнчĕç, тет.

## ÇЕНЕ ÇЫН СЕТ ВЕРЕТНИ

Пĕр карчăкпа ывăлĕ пурăннă, тет. Çитĕнсе çитсен, амăшĕ ывăлне авлантарчĕ, тет. Хăйĕн кинне карчăк сĕт вĕретме хушрĕ, тет:

— Кин, сĕт вĕрет-ха, вĕретнĕ сĕт ĕçес килет,—тесе каларĕ, тет.

Çĕнĕ çын лаçça сĕт вĕретме тухрĕ, тет. Сĕтне хурана туллиех тултарчĕ, тет, вуттине чĕртсе, вăйлă хурса лартрĕ, тет. Часах сĕт вĕреме кĕчĕ, тет, кăпăкланса хăпарать, тет, урлă та тăкăнма тытăнчĕ, тет. Çамрăк арăм: «Сĕт хушăнать-ха»,—тесе пăхса тăрать, тет. Савăннипе:

— Тур парать, тур парать!—тесе калать, тет.

Сĕчĕ çаплах тăкăнать, тет. Кăшт тăхтасан, вутти те çунса пĕтрĕ, тет, сĕчĕ те хухрĕ, тет. Пăхать, тет, çĕнĕ çын хурана — сĕт хуран тĕпĕнче çеç юлнă, тет. Ку:

— Тур парать те тур илет,—тесе каларĕ, тет.

Çапла вĕретрĕ, тет, сĕте çамрăк кин.

## ПУСКИЛСЕМ ЯМАÇÇĔ

Пĕрин кинĕ туя каясшăн пулнă, тет.

— Пускилсем ямаççĕ пуль,—тесе калать, тет, хуняма карчăкĕ.

Хайхискер туя каймалли кун çитрĕ, тет. Пĕрин патне кайрĕ, тет,

кин — шӳлкеме памаççӗ, тет, теприн патне кайрӗ, тет,—пустав памаççӗ, тет.

— Шуйттан пускилли!—тесе ятлаçса тавраннă, тет, кин.

— Ара, сана каларăм-иç, пускилсем ямаççӗ тесе,—тесе каларӗ, тет, хуняма карчăкӗ.

## ХУНЯШШЕПЕ КИНӖ

Кинӗ хуран çуса яшка пӗçерме çакнă чухне хуняшшӗ ялан:

— Кинӗм мунча кӗнӗ чух пӗртте хăлхине çумасть,—тенӗ.

Кинӗ вара: «Пурне те çăватăп-çке кашни мунчарах, мӗншӗн апла калать-ши?»— тесе шутланă.

Хуняшшӗ çапла кашни кун каланă, анчах мӗншӗнне тӗплӗн пӗлтермен. Кашни мунча кӗмессерен кинӗ ăшă шывпа, супăньпе хăлхисене темиçе хут çунă — çав-çавах хуняшшӗ хуран çăвакан киннне çавăн пек каланă.

Вара, кинӗ тавçăрманнине сиссе, хуняшшӗ каланă:

— Эсӗ, кинӗм, хуран ăшне анчах мар, хăлăпне те таса çу-ха,—тенӗ.

## ЯЛ ЙӖРИ-ТАВРА ÇАВРĂН

Пӗр çӗнӗ çын апат çинӗ хыççăн сӗтел çинчен пуçтарать, тет. Сӗтел варрине шăлать, тет те, хӗррине шăлмасăр хăварать, тет. Хунямăшӗ куна, пăхса тăрсан-тăрсан, калать, тет:

— Ял йӗри-таврах çаврăн-ха, кинӗм, ял йӗри-таврах çаврăн,—тет.

Кинӗ, килтен тухса, ял тавра чупса çаврăнать, тет.

— Пăянам, ял йӗри-тавра чупса çаврăнтăм, халӗ ӗнтӗ мӗн тăвас?—тет.

— Эй, кинӗм, ял йӗри-тавра çаврăн тени сӗтел хӗррисене те шăл тени пулать,—терӗ, тет, хунямăшӗ.

## ЧАРАКСĂР АРĂМ

Ӗлӗк пӗрре Палиç ятлă вӗçкӗне тăванӗсем, хăйсен ывăлне авлантарнă чухне, ют яла туй пуçӗ туса янă, тет. Вăл хăйне мӗн хушса янине пурне те тума тăрăшнă. Хăта килне çитсен, тăрантас çине арăмӗпе юнашар ларнăскер, лашана çенӗк алăкӗ умнех илсе пынă:

— Трр, хамăр лаша-а!—тесе туртса чарчӗ, тет, лашине.

Арăмӗ ăна çавăнтах хулӗнчен кăт тӗкрӗ, тет:

— Чипер эсӗ, старик, мӗнле хамăрăн пултăр вара? Ара, Тавăт пăяхам хăйӗн лашине кӳлсе парса ячӗ-иç, мӗн суян?—тесе каларӗ, тет.

## КӖРПЕ ПӖРЧИ

Пурăннă, тет, пӗр ялта карчăкпа старик. Вӗсем питӗ чухăн пурăннă.

Пӗррехинче карчăк шăпăр илнӗ те урай шăлма пуçланă. Шăлать-шăлать, сасартăк пӗр кӗрпе пӗрчи тупать те:

— Ай-яй! Старик, пăх-ха, эпӗ мӗн тупрăм!—тесе кăшкăрса ярать.

Старик савăнсах каять.

— Карчăк, карчăк!—тет старикки.—Тавай кӗрпе пăтти пӗçерсе çиетпӗр.

Карчăкки урайне шăлма пăрахсах пăтă пӗçерме вучах патне пырать. Пӗр хуран шыв ярать, унтан хурана кӗрпе пӗрчи ярать. Хуран çинчи шыв вӗреме кӗрсен, вӗсем хурана, çулăм çинчен илсе, сӗтел çине лартаççӗ. Карчăкки эхх кӗрпе пӗрчине кашăкпа хуранта шырать, эхх шырать, тет. Старикки пысăк çӗçӗ илнӗ, тет те, кӗрпе пӗрчине касма хатӗрленнӗ, тет. Юлашкинчен карчăк кӗрпе пӗрчине тупать, тет те, сивӗтме чашăк хӗррине хурать, тет.

Карчăккипе старикки кӗрпе пӗрчи çине пăхса тăнă вăхăтра шăна вӗçсе пынă та кӗрпе пӗрчине йăтса кайнă.

Карчăкки кашăкпа, старикки йывăç çăпалапа шăнана хăвалаççĕ, тет. Эхх хăвалаççĕ! Шăна пӳрт пĕрени çине пырса ларчĕ. Старик пĕррех çапрĕ çăпалапа пĕренене — çăпали çавăнтах катăлса кайрĕ, шăни вĕçсе тарчĕ, тет. Эхх старик тарăхса кайрĕ! Пӳлĕме чупса кайса, тукмак илсе килчĕ, тет. Çав вăхăтра шăни кăмака кĕтессине пырса ларчĕ, тет. Старикки кăмакана тукмакпа ша-ап! тутарчĕ, тет, кăмаки тӳрех катăлса кайрĕ, тет. Шăни каллех вĕçсе тарнă.

Кĕçех шăна карчăк çамки çине пырса ларнă.

— Карчăк, карчăк! Ан хускал-ха. Шăна çамку çине ларчĕ вĕт. Эпĕ ăна халех вĕлереп!—тесе, карчăка пĕррех çапрĕ, тет, старикки — карчăкки палтăрт кайса ӳкрĕ, тет. Хай шăлне йĕрсе выртать, тет.

— Карчăк, мĕн ахăрса выртатăн, тăр-ха, тăр, шăна вĕçсе кайрĕ вĕт!— тесе калать, тет, старик. Старикки çаплах шăнана хăвалать.

Юлашкинчен шăна кантăк çине пырса ларчĕ, тет те, старикки пĕррех кантăка тукмакпа çапрĕ, тет, кантăкĕ çĕмĕрĕлсе кайрĕ, тет те, шăни çĕмрĕк чӳречерен вĕçсе тухса тарчĕ, тет. Старикки эхх хуйхăрать, тет, эхх хуйхăрать! «Шăнана вĕлерейменрĕм вĕт, вĕлерейменрĕм. Вĕлернĕ пулсан, кĕрпе пĕрчи çисе хураттăмччĕ»,—тесе калать, тет.

Карчăкки патне пырса пăхать те — карчăкки вилнĕ!

Çапла старик кĕрпе пĕрчишĕн карчăккине вĕлернĕ.

## АТĂЛ УРЛĂ КАÇСАН, ĂС КĔРЕТ

Елĕк-авал икĕ çулçӳрекенĕн лашапа Атăл урлă каçмалла пулнă. Тин ларнă пăр пĕр тĕлте яп-яка шăннă, унта лаши ури тытман, пырса кĕнĕкĕмен шуса ӳкнĕ.

— Мĕн тăвăпăр?—тенĕ пĕр çулçӳрекенĕ теприне.

— Нимех те мар, лашана чĕлпĕрпе çыхăпăр та сĕтĕрсе каçăпăр,—тенĕ лешĕ.

Калану та ĕçне те тунă. Вĕсем пăр çине шаплатса ӳкнĕ лашана чĕлпĕрпе çыхса çыран хĕррине сĕтĕрсе тухнă. Анчах лаша тирĕ, пăр çинче шуса пырса, юн тухичченех шăйăрăлнă иккен.

— Эх!—тесе каларĕ, тет, вара хай çулçӳрекен, ĕнсине хыçса.—Куна пĕлнĕ пулсан, лашана хуп çине хурса каçармаллаччĕ пирĕн.

— Çаплаччĕ те. Малтан эпир Атăл урлă каçман-çке,—терĕ, тет, тепри.



# ĔÇЛЕ, ĔÇЛЕ, ĔÇЛЕ ÇИ, ĔÇЛЕМЕСЕН АН ТА ÇИ

## КАХАЛ ПУППА МАЙРИ

Елĕк-авал пĕр ялта пуппа майри пурăннă, тет. Вĕсен ывăлпа хĕр таврашĕ пĕрре те пулман, тет. Вĕсем иккĕшĕ те питĕ кахал пулнă, тет. Пĕрне-пĕри нихçан та итлемен, тет.

Пĕррехинче, праçник кун, пуп майри чи тутлă апатсем пĕçерсе хурать, тет. Пупĕ килет те, çиме лараççĕ, тет. Анчах пĕр апатне те тăвар каламан, тет. Пупĕ калать:

— Тăвар илсе кĕр-ха,—тет.

Майри калать:

— Тух-ха ху, илсе кĕр-ха,—тет.

Хайхи пĕри те тăвар илсе кĕрес шĕн мар, тет. Пупĕ калать:

— Ну, юрĕ,—тет,—кам малтан пĕр сăмах чĕнет, çав тухса илĕ,—тет.

Лараççĕ-лараççĕ — пĕри те пĕр сăмах чĕнмеççĕ. Çав вăхăтра вĕсен пӳртне пĕр салтак пырса кĕрет, тет. Салтак:

— Аван-и?—тет.

Кусем çаплах чĕнмеççĕ, тет. Салтак татах чĕнет—пупсем каллех чĕнмеççĕ, тет. Салтакăн питĕ хырăмĕ выçнă пулнă, чĕнменнине кура ларать те çиме тытăнать, тет. Çук, çаплах чĕнмесĕр лараççĕ, тет, кусем. Салтак тăраниччен çиет те тухса каять, алăкне те хупмасăрах хăварать, тет.

Сасартăк алăкран автан вĕçсе кĕрет, тет, пӳрте. Автанĕ питĕ усал пулнă иккен кусен. Автанĕ майра пуçĕ çине хăпарть ларать. Ларсан-ларсан, майрине çамкинчен сăхма тытăнать, тет. Майра астумасăр кăшкăрса ярать, тет. Пупĕ калать:

— Э, хăвăнах тухса илмелле пулчĕ-и?—тет.

Вара пуп майри тăвар тухса илчĕ, тет. Тăвар илсе кĕрсен, сĕтел çине пăхать те — апачĕсем юлман та. Çапла вара пуппа майри тăвар илме тухма ӳркеннĕ пирки çимесĕрех юлаççĕ, тет.

## ÇĔВĔÇ

Елĕк-авал Йăван мучин виçĕ хĕр пулнă, тет. Вĕсем виççĕшĕ те йĕркеллĕн, сăмахсене илемлĕн çавăрса калаçнă, тет. Анчах ĕçре кахал пулнă, тет, çынран лайăх маррипе кăна ĕçленĕ, тет.

Пĕррехинче вĕсем аслă хĕрĕ валли сарă кĕрĕк çĕлетме вырăс çĕвĕç кěртнĕ, тет. Тепĕр кунне ирхине тăрсан, аслă хĕрĕ урай шăлчĕ, тет те, çӳпне çӳп шăтăкне пуçтарса хучĕ, тет.

Кăнтăрла вăталăх хĕрĕ те, амăшĕ тухса тăкасса шанса, çав шăтăках пуçтарса хучĕ, тет. Каçхине краççын çутсан, кĕçĕн хĕрĕ те, ыран тухса тăкăпăр-ха тесе, çав шăтăках купаларĕ, тет. Юлашкинчен урай çӳппи çӳп шăтăкĕнче пĕр таканана яхăн пулчĕ, тет.

Çакна сарă кĕрĕк çĕлекен вырăс çĕвĕç кунĕпех сăнаса ларчĕ, тет. Каçхине, апат пĕçернĕ чух, аслă хĕрĕ яшка çине тăвар яма тăрсан, вырăс çĕвĕç хĕртен пĕр ывăç тăвар ыйтсах илчĕ, тет те, кĕтесри çӳп купи çине сапма тытăнчĕ, тет. Хĕр тĕлĕннипе вырăс çĕвĕçрен:

— Мĕншĕн çӳп çине тăвар сапан?—тесе ыйтрĕ, тет.

— Тăвар сапмасан, çĕрет вăл!— терĕ, тет, вырăс çĕвĕç куларах.

Вара виçĕ хĕр вăтаннипе, сиксе тăрса, кĕтесри çӳппе çĕр хута тасатрĕç, тет.

Çавăнтан кайран хĕрсем кашни виçĕ кун пĕрре урай çума тытăнчĕç, тет.

## КИН ШЫРАКАН

Пурăннă, тет, пĕр ялта Иванпа амăшĕ. Пурăнсан-пурăнсан, Иван амăшĕ ывăлне авлантарма шутлать. Вара ял çине кин шырама михĕ йăтса тухса каять. Урамăн варринелле çитсен, çынсене калать:

— Камăн çӳп-çап пур, пурте мана парăр!—тет.

Пурте кун патнелле çӳп-çап йăтса чупаççĕ, тет. Пĕр çамрăк чиперкке хĕр ун çывăхĕнчен иртсе пынă пулнă. Иван амăшĕ калать, тет:

— Хĕрĕм, сирĕн çӳп-çап çукка-им?

Хĕрĕ калать, тет:

— Çуккă çав, эпир çийĕнчех тăкса пынă,— тесе калать, тет.

— Ну, ку ман кин пуласси!—тесе каларĕ, тет, Иван амăшĕ.

Вара кун патне хăтана ячĕç, тет, хĕре качча илчĕç, тет. Халĕ те аван пурăнаççĕ, тет.

## ТӲНИНЕ ШЫРАКАНСЕМ

Пĕр пӳртре карчăкпа унăн çитĕннĕ хĕрĕ пурăннă. Çулла çынсем хĕрсе тырă выраççĕ, ку амăшĕпе хĕрĕ хире тырă вырма пĕрре те тухмаççĕ.

— Эпĕ вилес карчăк, кăçал вилсен, эпĕ тырă вырни ахалех харама юлать. Çавăнпа манăн тырă вырма тухас мар пуль,—тет карчăкĕ.

Хĕрĕ калать:

— Эпĕ çитĕннĕ, качча каяс хĕр, мĕн тăвас манăн тырă вырса?—тет Тĕрĕ тытать те, сулхăнта тĕрĕ тĕрлесе, юрласа ларать.

Амăшĕ çăм арлать. Çынсем мĕнпур ĕçлеме пултараканни пурте хирте шăрăхпа пиçсе ĕçлеççĕ. Ку карчăкпа хĕре килте сулхăнта ларма пит аван.

Çынсем тырă вырса, хиртен пуçтарса кĕчĕç, авăн çапаççĕ. Кĕркунне пулса килет. Çынсем мĕнпур ĕçне пĕтĕмпе туса пĕтерчĕç, тырри-пуллине кĕлет тулли тултара-тултара хунă. Сăра туса, ĕçкĕ-çикĕре çĕмĕрĕлеççĕ. Хура кĕр çитрĕ. Пушанса юлнă хирте карчăкпа хĕр тырри пĕр-пĕччен тăлăххăн ларать. Юр та çăва пуçларĕ.

Вилес карчăк вилеймен, качча каяс хĕр каяймарĕ. Иккĕш те пĕрлех пурăнаççĕ. Çимелли пĕтрĕ. Мĕн тăвас? Хирти тырра кĕрт хӳсе кайнă. Выçă ларас килмест. Амăшĕпе хĕрĕ тырă вырма каяççĕ. Кĕрĕк-сăхман тăхăнчĕç. Пĕри юр хырма кĕреçе илчĕ, тепри çурла илчĕ, кайрĕç тырă вырма. Килĕнчен тухсанах, кусене кӳршĕ арçынни курчĕ те ыйтать:

— Эсир ăçталла каятăр капла?

— Тырă вырма каятпăр,—теççĕ лешсем.

— Хĕлле ĕнтĕ, мĕнле тырă выратăр? Пĕтрĕ ĕнтĕ вăл тырă вырасси. Атьăр сире пашалу туса пурăнмалăх урпа парса ярам,—терĕ те кӳршĕ çынни карчăкпа хĕре хăй патне ертсе кайрĕ. Кĕлетне уçса, карчăкпа хĕр валли калама çук аван, таса шултра урпа тăватă михĕ тултарса хучĕ.



Хӗр урпана ывӑҫласа илчӗ те пӑхать:

— Тӳнӗ-ши ку урпана?—тет.

Кӳршӗ калать:

— Тӳмен, эсир тӳнине шырама тухнӑ-и? Сире тӳни кирлӗ пулсан, эсир тӳнине кайса шырӑр,—терӗ те кӗлетне шалт питӗрсе хучӗ.

Карчӑкпа хӗр пӑхкаласа юлчӗҫ. Кӗреҫепе ҫурлине йӑтса, хӑйсен ани ҫине тырӑ вырма лапсӑртатрӗҫ.

## КАХАЛ ХӖР

Пӗр хӗр ӳссе ҫитнӗ те, ӑна ҫураҫса туй тӑвас кун ҫитнӗ, тет. Унччен ку ялан ял тӑрӑх чупкӑнта ҫӳресе ӳснӗ, тет. Ҫавӑнпа пӗр япала та тӑвайман, тет, вӑл качча каяс кун валли.

Хӑйне илме килекен туй хапха умне ҫитсен:

— Ай-уй, йӗкем ӑҫта-ши? Хапхам умне туй ҫитрӗ!—тесе калать, тет.

## КАХАЛПА ЮЛХАВ

Ӗлӗк пӗр кахалпа юлхав пурӑнаҫҫӗ, тет. Кахалӗ улма йывӑҫҫи айне кӗрсе выртнӑ, тет те:

— Ай-яй, манӑн ҫӑвара пӗрер улми татӑлса ӳкинччӗ!—тесе выртать, тет.

Юлхавӗ:

— Епле ӳркенместӗн ҫак эсӗ ҫав сӑмаха калама?—тесе калать, тет.

## ЧУСТА ҪАРМА ВӖРЕННИ

Пӗр хӗр качча кайнӑ, тет. Ҫӑкӑр пӗҫерсен, ҫӑкӑрӗ ӑнман, тет, унӑн, ӑшӗнчен ҫӑнӑх муклашкисем тухнӑ,

тет. Хуняма карчăк вăрçать, тет:

— Çăкăр пĕçерме пĕлместĕн, ухмах, чуста çăрма пĕлместĕн, чустана ăна хул хушшине тар тухиччен çăрас пулать,—тесе калать, тет.

Хайхи тепĕр кунне лăпах çăкăр пĕçермелле пулнă, тет. Çĕнĕ кин çăрать-çăрать, тет те, хул хушшине тытса пăхать, тет.

Кусем патне аппăшĕ пырса кĕрет, тет:

— Чуста çăратни-мĕн?—тесе калать, тет.

— Чуста çăрап-та-ха,—тесе калать, тет,—анне мана хул хушшине тар тухиччен çăрма каласаччĕ. Тарĕ те тухрĕ, те тухмарĕ — пăх-ха эс,—тесе калать, тет. Аллине çĕкленĕ, тет, аппăшĕ пăхрĕ, тет:

— Эй, сан кунта,—тесе каларĕ, тет, ку,—те тар тухнă, те кăпăклан-са ларнă, те чуста...—тесе каларĕ, тет.

— Апла пулсан, пăрахас-ши çăрма?—тесе калать, тет, çамрăк кин.

Çавăн чух вара, чăнахах та, шутсăр лайăх пулнă, тет, çăкри. Халь хуняма карчăк та мухтама пуçларĕ, тет.

— Вăт ман кин епле пултарать, кулачă пек çăкăр пĕçерсе çитерет,—тесе калать, тет.

Çавăнтан кайран вара шутсăр лайăх пĕçерме вĕренчĕ, тет, кин.

# «ТЕТ» САМАХ СУЯ, ТЕТ

## СУЯПА ЧАН

Елĕк икĕ пĕртăван питĕ чухăн пурăннă. Пĕрре шăллĕ пиччĕшне калать:

— Пуятпăр вĕт, пичче!—тет.

— Пуйма каларĕ-ха, тăкаксене сапласа пырсассăн та юрĕччĕ,—тет пиччĕшĕ.

Чылай калаçкаласа ларнă хыççăн пиччĕшĕпе шăллĕ иккĕш те çул çӳреме тухса каяççĕ. Шăллĕ, суеçĕ пулса, малтан пырать, пиччĕшĕ — ун хыçĕнчен. Шăллĕ, кайсан-кайсан, пĕр улпут çĕрĕ çине çитсе кĕрет. Улпут пăрçа акса тултарнă та майрипе пĕрле, тройка лаша кӳлсе, пăрçа курса çӳреме тухнă пулнă. Пăрçи питĕ лайăх пулнă.

— Ну, кăçал пăрçа илетпĕр иккен!—теççĕ улпутпа майри.

Шăллĕ илтет те калать кусене:

— Эй, вăл сирĕн пăрçăр пăрça пулать-и! Вăт пирĕн улпут пăрçа акса хăварнă та, пĕр пăрçи пĕрчĕкне виçĕ лашапа аран турттараççĕ!—тет.

— Мĕн суятăн! Унашкал пăрçа нихăçан та пулман, пулас та çук,—теççĕ улпутпа майри.

— Эпĕ суятăп пулсан, ман хыççăн чăнĕ килет. Унран ыйтса пĕлĕр,—тет те суеçи малалла утать.

Кайран пиччĕшĕ çитет. Ăна курсан, улпутсем:

— Санран малтан пĕр суеçĕ килчĕ те: «Пирĕн улпут пăрçа акса хăварнă та, пĕр пĕрчĕкне виçĕ лашапа аран турттараççĕ»,—тесе каларĕ. Тĕрĕс-и вăл?—теççĕ улпутпа майри.

— Эпĕ пăрçине курасси курман та, пăрçи хутаççине курнă. Пĕр пăрçи хутаççи çине Атăл урлă саккăрăн ларса каçатчĕç!—тет пиччĕшĕ.

— Çав пăрçа вăрлăхне пире тупса килсе параймăн-ши?—теççĕ улпутпа майри.

— Тупса памасăр. Улпучĕ кӳршĕрех пурăнать. Анчах çĕр тенкĕ сасаткă илес пулать,—терĕ, тет, пиччĕшĕ.

Улпутпа майри, ку ĕнтĕ чăнах калать пулĕ тесе, çавăнтах çĕр тенкĕ кăларса тыттараççĕ.

Чăнĕ çĕр тенкĕ илсе чикет те шăллĕ хыççăн малалла утать.

Кайсан-кайсан, шăллĕ тепĕр улпут çĕрĕ çине çитет кĕрет. Улпут купăста лартса тултарнă та, тройка лаша кӳлсе, майрипе купăста курма тухнă.

— Ну, кăçал купăста илетпĕр ĕнтĕ!—теççĕ кусем те савăнса.

— Эй, вăл сирĕн купăстăр купăста пулать-и! Пирĕн улпут купăста лартнă та, пĕр купăста пуçне вуникĕ çын аран-аран виçĕ лашапа турттараççĕ,—тет суеçĕ.

— Суятăн вĕт! Хăçан купăста пуçне вуникĕ çын виçĕ лашапа турттарни пур?—теççĕ улпутпа майри.

— Эпĕ суеçĕ пулам та, ман хыççăн чăнĕ килет. Унран ыйтса пĕлĕр,—тет суеçи.

Хайхи пиччĕшĕ çитсен, улпутсем:

— Эсĕ киличчен пĕр суеçĕ килсе: «Пирĕн улпут купăста лартнă та, пĕр купăста пуçне виçĕ лашапа аран-аран турттараççĕ»,—тесе каларĕ. Чăн-и вăл?—теççĕ улпутпа майри.

— Эпĕ купăсти пуçне курасси курман та, купăсти çулçи айĕнче пĕр рота салтак сулхăнра выртатчĕ,—тет.

— Çав купăста вăррине пире илсе килсе параймăн-ши?—теççĕ улпутпа майри.

— Парасса парăп та, пĕр çĕр тенкĕ сасаткă паратăр пулĕ?—тесе ыйтрĕ, тет, чăнĕ.

Улпутпа майри çĕр тенкĕ кăларса параççĕ те: «Ку чăн калать ĕнтĕ, вăрлăхлă пулатпăр!»—тесе хĕпĕртесе юлаççĕ.

Чăнĕ çĕр тенкĕ илсе чикет те кула-кула шăллĕ хыççăн утать.

Шăллĕ, кайсан-кайсан, пĕр хулана çитсе кĕрет. Çав хулара пĕр хуçа темиçе çурт тутарнă та, майрипе иккĕш савăнса пăхса тăраççĕ.

— Эй, ку çурт çурт-и сирĕн! Вăт пирĕн пĕр хуçа çурт тутарнă та — тăррине пăхсан, пуçри çĕлĕк хывăнса ӳкет, çапах тăррине курма çук,—тет суеçĕ.

— Суятăн эсĕ. Кунтан çӳллĕ çурт ниçта та çук,—теççĕ хуçапа майри.

— Эпĕ суятăп пулсан, ман хыçран чăнĕ килет, хăть унран ыйтса пĕлĕр,—тет те суеçĕ татах малалла утать.

Пиччĕшĕ çитсен, хуçапа майри калаççĕ:

— Эсĕ киличчен пĕр суеçĕ килчĕ те: «Пирĕн патра пĕр хуçа тăрри курăнмалла мар çӳллĕ çурт тутарчĕ, пăхсан пуçри çĕлĕк ӳкет»,—тесе каларĕ. Чăн-и вăл?—теççĕ.

— Эпĕ çĕлĕк ӳкнине курман та, автансем, çурт тăррине улăхса, çур уйăха çисе янă, тесе калаççĕ!—тет чăнĕ.

— Çав çурта тăвакан техника кунта илсе килсе, пире паллаштарайăн-ши унпа?—теççĕ лешсем.

— Паллаштармасăр, вăл техник кӳршĕрех пурăнать. Анчах çĕр тенкĕ сасаткă парса яратăр пулĕ?—тет чăнĕ.

— Ку чăн калать ĕнтĕ,—тесе, лешсем те çĕр тенкĕ кăларса параççĕ.

Чăнĕ çĕр тенкĕ илсе чикет те шăллĕ хыççăн кула-кула утать. Вара суяпа чăн виççĕр тенкĕ илсе таврăнаççĕ те:

— Тĕнчере улпутсемпе хуçасем çав тери ухмах-мĕн. Вĕсем ашшĕсенчен юлнă пурлăхпа кăна халăха çаратса пуяççĕ,—тесе, виççĕр тенкĕ укçана кула-кула уйăрчĕç, тет.

## ПӲРНЕСКЕ

Пурăннă, тет, ĕлĕк пĕр тăлăх арăм. Унăн пӳрнеске пек ачи пулнă. Хайсен нимĕн çимелли пулман. Ку пӳрнеске пек ачи амăшне калать, тет:

— Анне, эп çав пуян Эрхипĕнне ылтăнне вăрласа килем-и, унăн ылтăнĕ çăнăх ăшĕнче,—тесе калать, тет.

Амăшĕ ачине вăрлама ямĕччĕ, анчах çимелли ним те çук. Çавăнпа амăшĕ ку пӳрнеске пек ачана ылтăн вăрлама кайма чарсах каймасть. Ку Пӳрнески Эрхипĕн кĕлетне кĕрсе кайсан, Эрхип арăмĕ кăвас хума çăнăх илме тухать. Çăнăхне илсе кĕрсе, ăна алламасăрах кăвас çăра пуçлать. Ку Пӳрнески:

— Инке, аякка ыраттаран!—тесе темиçе хут кăшкăрать.

Унтан пуян арӑмӗ аптӑранипе кӑвасне ӗнине тухса парать, хӑй ӗне сума тухать. Вӑл вӑхӑтра Пӳрнеске ӗне хӑлхине кӗрсе ларать. Пуян арӑмӗ ӗне сума пуҫласанах, Пӳрнеске ӗне хӑлхинчен ҫыртать, унтан ӗне пуян арӑмне тапса ярать. Эрхип арӑмӗ ӗни патне:

— Хура ӗне — тӑпрукан, хура ӗне — тӑпрукан,—тесе пырать, тет; ӑна мӑшкӑлласа, Пӳрнеске селӗпле калать, тет.

Хайхискерсем, ӗне пӑсӑлнӑ тесе, ӗнине пусаҫҫӗ те пыршисене ҫырмана кайса пӑрахаҫҫӗ. Унта Пӳрнеске те ларса каять.

Ку пыршӑсене ҫиме кашкӑр пырать, тет. Пӳрнеске хӑвӑрт кӑна кашкӑр хӑлхи ӑшне кӗрсе ларать те шиши-ши! шӑхӑрать, унччен те пулмасть кашкӑр хӑраса ним пӗлми тарать. Пӳрнеске хытӑран хытӑ шӑхӑрать. Кашкӑрӑн хӑранипе чӗри ҫурӑлса каять те вилет. Пӳрнеске шухӑшлать, тет: «Епле куна илсе каяс?—тесе калать, тет.—Аннене кайса пӗлтериччен ҫынсем илсе кайӗҫ»,— тесе шухӑшлать, тет. Унтан вара ҫавӑнтах юлма шухӑшлать.

Ҫав кашкӑрсем патне купса тройкӑпа, тӑрантаспа питӗ хытӑ пырать, тет, тӑрантасӗ ҫине пӗчӗк арчапа ылтӑн хунӑ, тет. Кашкӑрсем патне ҫитсен, лашине чарать те кашкӑра хурса илсе каять.

Пӳрнеске: «Тинех пӗтрӗм»,—тесе калать, тет. Кӑшт кайсан, Пӳрнеске ши-ши! шӑхӑрать. Купса: «Кам шӑхӑрать-ши?»—тесе, лашине чармасӑрах ҫаврӑнса пӑхать.

Вӑл вӑхӑтра Пӳрнеске шӑхӑрмасть. Лешӗ тата кӑшт кайсан, ку тата шӑхӑрать. Купса лашисене чарса итлесе пӑхать, шӑхӑрма чарӑннипе каллех чуптарать. Пӳрнеске кӗҫех тата хытӑ шӑхӑрать. Купса аптӑранипе лаши ҫинчен анса итлесе пӑхать. Ҫав вӑхӑтра Пӳрнеске кашкӑр хӑлхи ӑшӗнчен тухса тилхепене туртать те лашана пушӑпа ҫапать. Купса ҫул ҫине пӗчченех тӑрса юлать. Пӳрнеске амӑш патне каять, тет те, пуйса пурӑна пуҫлать, тет.

## ПӖЛӖТ ҪӲЛЛӖШ ПӐРҪА ХӐМАЛӖ

Пӗр карчӑкпа старик пурӑнаҫҫӗ. Тырӑ вырас вӑхӑт ҫитрӗ —кахалскерсем тырӑ вырма каймарӗҫ, тырри ана ҫинчех юлчӗ.

Пурӑнаҫҫӗ-пурӑнаҫҫӗ — ҫиме ҫӑкӑрӗ пӗтет кусен. Ҫичӗ кун выҫах ларчӗҫ. Пӗр пӑрҫа тупрӗҫ те ҫавӑнпа выляса ларaҫҫӗ. Пӑрҫа ӳкрӗ те ҫухалчӗ. Ну хайхискерсем макӑраҫҫӗ! Шырарӗҫ-шырарӗҫ — тупаймарӗҫ.

Пӑрҫа сакайне ӳкнӗ. Шӳсе ҫитсен, пӑрҫа шӑтса ҫӗрелле тымар янӑ, ҫӳлелле хӑмӑл янӑ. Пӑрҫа хӑмӑлӗ ҫитӗнет, урай хӑмине перӗнесси инҫе мар, кӗҫех перӗнет. Пӑрҫа хӑмӑлӗ аталанчӗ, урай хӑмине перӗнчӗ, ҫурӑк тупрӗ, пӳрте шӑтса тухрӗ, карчӑкпа старикӗн пуканӗ тавра ҫаврӑнчӗ, малаллах пӑхать, ҫӳлеллех кармашать, ҫав мачча хӑмине перӗнсе пулӗ-и, тет.

Пӑрҫа ҫитӗнет, хӑмӑлӗ маччана перӗнчӗ, пит парка ҫитӗнет: чӑптам кӗлеткеллӗ, симӗс ҫулҫӑллӑ, тӑват-пилӗк туратлӑ. Карчӑкпа старик хӑмӑл кутне кӗре-кӗре выртаҫҫӗ. Пӑрҫа кусене ҫулҫисемпе хӳтӗлесе витсе усрать. Пӑрҫа ҫитӗнет, хӑмӑл мачча хӑминчен ҫӳле кайрӗ, хӗвел ҫутине тухрӗ.

Пӑрҫан шухӑш малаллах: ҫӳлте пӗлӗт курчӗ те: тавай, тет, ҫав пӗлӗте перӗнес, тет. Шухӑш тытрӗ — пулчӗ, хайхи хӑмӑл пӗлӗте перӗнчӗ.

Старик пӑрҫа татма сакайне анчӗ, пӑхать — пӑрҫан хӑмӑлӗ сип-симӗс, кучӗ те саралма шухӑшламан халӗ.

Пӗр ҫичӗ кун тӑхтарӗ те старик каллех кӗрсе пӑхрӗ — пӑрҫа хӑмӑлӗ сарарлнӑ, хутаҫҫисем анчах кӑштах тула пуҫланӑ. Старик ҫемҫе симӗс селӗм пӑрҫана пит юратрӗ. Татать,



татса пăрçа хăмăлĕ тăрăх çӳлелле хăпарать, пăрçа çулçи çине пусать те тата çӳлерех хăпарать. Симĕс пăрçана çисе тăранма пĕлмерĕ старик, пăрçа хутаççи пĕтичченех çисе хăпарчĕ, пĕлĕт çине юласси те нумай мар, çаплах çисе хăпарать.

Пĕлĕт патне çитрĕ те пăхать — тахçан-авал çанталăк пусланнă чухнехи арăм çăкăр пĕçернĕ те çăкăрне сивĕнме пĕлĕт хушшине хĕстерсе хунă. Пĕлĕт юхса кайнăçемĕн çăкăра çӳлелле хăпартнă. Çав çăкăр каллĕ-маллĕ — пĕрре хĕвелтухăçнелле, тепре хĕвеланăçнелле тата çурçĕрпе кăнтăр хушши пĕлĕтпе юхса çӳрет, тет.

Старик пĕлĕт çине пăхкаласа тăнă чух çав çăкăр, пĕлĕтпе юхса, старик патнелле пычĕ, тет. Старик çăкăра илесшĕн малалла кармашрĕ те çăкăра ячĕ илчĕ, тет. Пăрçа хăмăлĕ тайăлса-тайăлса кайрĕ те, старик çĕре пӳрт умне тĕп! ӳкрĕ, тет.

Карчăкки, старик анать-ши тесе, пӳртре ларать. Кантăк витĕр пăхрĕ те старик виллине курах кайрĕ, тет.

## ПУЯС ШУХĂША МĔНШĔН ПĂРАХРĂМ

Ĕлĕк-авал, асаттесем-асаннесем çураличчен, эпĕ питĕ пуянччĕ. Чăваш патши пулма та вăрттăн шухăш усраттăм. Мĕн чăрмантартăр-ха мана? Кĕлетсем тулли тырă, витесем тулли выльăх. Анчах мана хам хытă пулни пĕтерчĕ. Ĕç акă мĕнле пулса иртрĕ.

Манăн асар-писар йăйăр пурччĕ. Ăна пăхма уйрăм çын тытса, укçа пĕтерес килместчĕ. Выртмана та хамах илсе çӳреттĕм.

Пĕрре çапла хайхи йăйăрпа выртмана кайрăм. Ир енпе ытти çынсем, лашисем çине утланса, килĕсенелле вĕçтерчĕç. Пĕр эпĕ çеç йăйăр çине утланаймасăр асапланса юлтăм. Утланас тесе, çĕртен сикетĕп те вăшт çеç йăйăр урлă сиксе каçатăп. Тунката çинчен сикетĕп — лаша хырăмне те сиксе перĕнейместĕп.

Асапланса пĕтрĕм çапла. Юлашкинчен йывăç çинчен сикме шутларăм. Йăйăра пĕр çамрăк ăвăс айне пырса тăратрăм. Хам йывăç çине улăхрăм. Йывăç, ман йывăрăша чăтаймасăр, авăнсах ларчĕ. Эпĕ хăраса ӳкрĕм — сикрĕм. Йывăç тӳрленчĕ те, вĕçĕпе мана пырса çапса, пĕлĕт çинелле ывăтса ячĕ.

Хĕсĕнсе лартăм икĕ пĕлĕт хушшине. Куратăп: пĕлĕт çинче турă ларать. Шеллерĕ хайхи турă — туртса кăларчĕ мана. Эпĕ ăна хамăн инкек çинчен каласа патăм. Турă мана пăрçа хăмăлĕ пачĕ, пăрçа хăмăлĕпе явса анса кайма хушрĕ. Пăрçа хăмăлне ытама илтĕм — ытама кĕмест, ывăçа илтĕм — татах çавăн чухлĕ кĕрет. Явса анса кайрăм. Шăп çĕре çитес тенĕ чух манăн пăрçа хăмăлĕ пĕтрĕ ларчĕ. Çакăнса тăратăп çапла суллан-каласа, пĕлĕт çинелле пăхкалатăп. Курах кайрăм: пĕр пĕлĕт татăкĕ ман вĕрен патнелле шуçса килет. Пырса çапрĕ те ман вĕрене — эпĕ çĕре персе антăм. Эпĕ шăпах шурлăх çине вĕрен явса аннă иккен. Халĕ мăй таранах кĕрсе лартăм та шурлăха, шутлатăп: «Хытă çĕр пулнă пулсан — вилеттĕм, шурлăха кĕрсе ларни те пысăк савăнăçах мар».

Çапла шутласа ларнă вăхăтра ман пата пĕр кăвакал нартлатса çитрĕ Вăл тӳрех ман пуç çине хам çӳçренех йăва çавăрчĕ. Унтан çăмарта тума тытăнчĕ. Шăп хĕрĕх çăмарта турĕ. каттăршнăй. Çăмартисенчен чĕпписем те тухрĕç. Эх, шиплетеççĕ! Çакна кашкăр илтнĕ те ман пуç патнелле йăпшăнса пычĕ. Эпĕ ăна часрах хӳринчен ярса илтĕм те вăй çитнĕ таран кăшкăрса ятăм. Кашкăр хăранипе типçĕр çинелле тапса сикрĕ Ун хӳрине алран вĕçертмесĕр, эпĕ те типçĕр çине тухрăм.

Халĕ тин эпĕ иртенпех нимĕн те çименнине аса илтĕм. Çывăхра курăнса ларакан хăвăллă юман патнелле утрăм. Хăвăлта шăнкăрч чĕппи-сем чĕвĕлтетеççĕ. Алла чиксе пăхрăм — кĕмест. Пуçа чикрĕм те — пуç кĕчĕ кайрĕ. Часах кĕрсе лартăм, шăнкăрч чĕпписене çисе ятăм. Каялла тухасшăн пултăм— тухаймастăп. Мĕн тумалла? Аса илтĕм: ара, ман лупасайĕнче çĕнĕ пуртă пурччĕ вĕт! Часрах киле чупса кайса килтĕм те юмана касса ятăм. Хам тăнкăлт çеç хăвăлтан тухса ӳкрĕм. Ун хыççăн аран çеç киле çитрĕм.

Çавăнпа пуян пулас шухăша пăрахрăм вара.

## МУЛКАЧ

Эпир пĕрре асаттепе сунара кайрамăр. Пĕр мулкач куртăмăр. Хăваламa тытăнтăмăр. Хăваласа çитрĕмĕр те кӳсĕкпе иле-иле çапатпăр — вилмест. Эпĕ хам хыт куракпа кăна петĕм — мулкач вилчĕ кайрĕ.

Асаттепе иккĕн çĕклесе хума тăратпăр — хураймастпăр. Хам пĕччене тытрăм та мулкача çĕклерĕм хутăм.

Пар лаша кӳлнĕ хамăр. Пар лашана хăвалатпăр — туртаймаççĕ. Пĕрне тăварса, пĕрне кăна хăвартăмăр — туртать.

Киле таврăнтăмăр. Мулкача асаттепе йăтма тăратпăр — йăтаймастпăр Пĕччен тытрăм та вăштах йăтрăм.

Алăкран кĕртме тăратăп — кĕмест Тĕнĕрен тĕртрĕм те — кĕчĕ кайрĕ Мулкача хуранта пĕçерме тăратпăр— кĕмест. Çăпалана хуратпăр — тулмасть

Аннене пĕçерме хушрăм. Анне

пăхса тăман та, яшки хытă вĕренĕ, мулкач вĕренипе хурантан тухнă та ӳкнĕ. Ăна кушак çинĕ те янă. Мулкача хамăр çиеймерĕмĕр те.

## ТĂРИЛЛĔК ТĂРНА

Пĕр тарăн варта пĕр ватă тăрна пурăнать, тет. Хăйăр çиет, тет те, шыв ĕçет, тет, хăйăр çиет, тет те, шыв ĕçет, тет. Çӳллĕ ту çине хăпарать, тет те, калл хăсса кăларать, тет, çӳллĕ мисĕт* тăвать лартать, тет. Вăйлă çумăр килет, тет те, ишĕлтерет антарать, тет, мисĕте. Калл шуса анать, тет, хайхи хăйăр купи тарăн вараллa.

Тăрна тарăн вара анать, тет те, хăйăр çиет, тет. Хăйăр çиет, тет те, шыв ĕçет, тет, шыв ĕçет, тет те, хăйăр çиет, тет. Каллех çӳллĕ ту çине хăпарать, тет. Хăпарать, тет те, калл хăсса кăларать, тет, çӳллĕ мисĕт тăвать хурать, тет. Вăйлă çумăр килет, тет те, ишĕлтерет антарать, тет, мисĕте. Калл шуса анать, тет, хайхи хăйăр купи тарăн вараллa...

Тăрна тарăн вара анать, тет те, хăйăр çиет, тет. Хăйăр çиет, тет те, шыв ĕçет, тет, шыв ĕçет, тет те, хăйăр çиет, тет. Каллех çӳллĕ ту çине хăпарать, тет. Хăпарать, тет те, калл хăсса кăларать, тет, çӳллĕ мисĕт тăвать хурать, тет. Вăйлă çумăр килет, тет те, ишĕлтерет антарать, тет, мисĕте. Калл шуса анать, тет, хайхи хăйăр купи тарăн вараллa...

## ЙЫТĂСЕМПЕ КАЧАКА КӲЛСЕ, ПАСАРА КАЙРĂМ

Пĕрре эпĕ, йытăсене кӳлсе, качакана мала ятăм та, качака мăйраки вĕçне кукăль çакса, пасара кайрăм.

Йытăсем качака мăйраки вĕçĕнчи кукăле илесшĕн сиккипе пыраççĕ. Качака вĕсенчен хăранипе хӳрине тавăрса пăрахнă та тăрс-тăрс тапса кăна пырать. Тĕпри йытă та мĕнпур халĕ çитнĕ таран чупать. Качака, пырсан-пырсан, ме-ек çухăрать, йытă та хам-хам вĕрет. Çапла пасара çитнине те сисмерĕм.

Пасарта кулач илтĕм те каялла киле таврăнатăп. Киле çитсен, йытăсем кĕлет айне кĕрех кайрĕç те ман пуçа шан кăна тутарса хăварчĕç кĕлет пĕрени çумне. Пуçăм чутах çурăлатчĕ.

## СУЕÇĔ

Ĕлĕк пĕр суеçĕ тепĕр çынна тĕл пулнă. Тĕл пулнă та калать:

— Эпĕ тилĕ куртăм, хӳри висĕ аршăн тăршшĕ пулать,—тет.

Тепри калать:

— Çук, суятăн пуль, икĕ аршăн пулать пуль,—тет.

Лешĕ калать:

— Ну, виççĕ пулмасан та, иккĕ пулатех,—тет.

Тепри каллех калать:

— Çук, иккĕ те пулмасть, пĕр аршăн тăршшĕ пулать,—тет.

— Ну, юрĕ, чăнах та, тилĕ хӳри пĕр аршăн пулать,—тет суеçĕ.

— Çук вĕт, пĕр аршăн тăршшĕ те пулмасть,—тет лешĕ каллех.

— Чăнах та, эп висмен, пулмасть те пуль, тен, аршăн тăршшĕ...—тет суеçĕ.

Лешĕ ахăлтатса кулса ярать. Ăна илтсе, пĕтĕм сĕм вăрман ахăлтатса кулнă пек туйăннă.

Суеçĕн пичĕ пĕрре хĕрлĕ улма пек хĕрелсе, тепре чăкăт пек шуралса кайнă. Çавăн хыççăн вăл суйма та асăрханса суйнă.

## ТАРÇĂРА ĔÇЛЕНĔ ЧУХ

Пĕрре мана аттесем тарçа пачĕç. Ман хуçан висĕ лаша пулнă. Пĕрре

* Чиркӳ.

эпир, ачасем, çитерме кайрăмăр. Таврăннă чух ут ярса питĕ хытă таврантăмăр. Ман утланнă лаша хуп-хура шыва ӳкрĕ. Эпĕ çавăнпа хуçаран хăраса хам утланнă лашана анкарти хыçне кăкарса хăвартăм.

Хам киле таврăнсан, кăштах канам тесе, выртрăм та çывăрах кайнă. Лашана илсе тавăрăнма ас та тумарăм. Ирхине вăрантăм та лаша аса килнипе часрах анкарти хыçне чупатăп. Лашана кăкарнă вырăна пăхатăп та— лашан икĕ кайри ури те пуçĕ анчах юлнă. Хам куна курсан хăранипе часрах каялла киле чупса таврăнатăп. Хуçа ман лаша çуккине пĕлнĕ те:

— Санăн пĕр лашу ăçта?—тет.

Эпĕ:

— Пĕлместĕп!—теп.

Хам часрах тарса пытантăм. Хуçа мана шыраса тупрĕ те тытăнчĕ çаптарма! Тем тĕрлĕ хытă хĕнерĕ. Унтан суда пачĕ. Çапла вара мана хăйпе пĕрлех лартса кайрĕ. Çул çинче пынă чух та мана хĕнесе пычĕ.

Суда кайма инçеччĕ. Çавăнпа çул çинчех каç пулчĕ. Каç пулсан, хăйĕн хурăнташĕ патне ку выртма чарăнчĕ. Мана та пĕрлех илсе кĕчĕ. Кусем ĕçсе çие пуçларĕç, мана çиме те лартмарĕç. Эпĕ çавăнпа ялан: «Каçхине çăкăрне ăçта хураççĕ-ши?»—тесе пăхса тăратăп, кусем выртсан илсе çиме.

Кусем çăкăрне сентĕре çине хучĕç. Эпĕ ăна куртăм. Сентĕререн сăпка çакнă. Кусем выртсан, хăйă сӳнтерсен, эпĕ ерипе тăтăм та, сентĕре çине хăпарса, хăма тăрăх çăкăр патнелле пыратăп. Çăкăр пысăк пулчĕ. Манăн хăрах алăпа илме ниçтан та вăй çитмест. Ик алăпа илме кансĕр. Çавăнпа çăкăра йăтрăм та — çăкăр алăран вĕçерĕнчĕ кайрĕ. Тӳрех сăпка çине персе ӳкет. Сăпкара ача пулнă. Ача кăшкăрса та ячĕ. Ман хуçасем сисрĕç те хăй çутрĕç. Мана унтан-кунтан сентĕре çинчен тĕрте пуçларĕç. Çапла вара мана сентĕре çинчен сирпĕтсе те антарчĕç.

Ача патне пырса пăхаççĕ — ман çăкăр ачанăн пуç мимине сиктерсе те кăларнă. Хайхисем мана тата хытă хĕне пуçларĕç. Хĕнесен-хĕнесен, тула тĕттĕм çĕре — витене хупса хучĕç. Витере ман патăма темскер мекекек! тесе чупса та пычĕ. Эпĕ хăранипе алла унта-кунта хыпашларăм та — пĕр патак çакланчĕ. Куна илеп те тӳрех хайхи темскере çапатăп. Леш çавăнтах йăванса та кайрĕ. Кун хыççăн тата çавăн пеккиех ман патăма пырать. Эпĕ ăна та патакпа çапатăп та, вăл та çавăнтах йăванса каять. Хам вара кĕтессе кукленсе ларатăп.

Тулта кăвак çутă палăра пуçласан, хайхи темскерсене пăхатăп — вĕсем иккĕш те качакасем пулнă. Ирхине хуçасем кĕрсе пăхаççĕ те, качака виллисене курсан, мана:

— Мĕншĕн вĕлертĕн кусене?—тесе, тата хытă çаптарчĕç.

Унтан вара ку хуçа та ачине вĕлернĕшĕн, икĕ качакине вĕлернĕшĕн леш хуçапа пĕрлех мана суда илсе кайрĕ. Çул çинче кусем иккĕш те мана тем тĕрлĕ хытă çаптарчĕç. Эпĕ утайми пултăм.

Суда кĕрсен, малтан лаша хуçи хăй ĕçне каласа пачĕ. Унтан манран ыйтрĕç. Эпĕ епле-епле пулнине каларăм.

— Манăн хуçа питĕ усалччĕ,—терĕм.—Çавăнпа, хĕнесрен хăраса, лашана анкарти хыçне кăкарса хăвартăм,—терĕм.

Унтан судра каларĕç:

— Кунта ху айăплă!—терĕç ман хуçана.—Ху усал пулман пулсан, вăл лашине киле те илсе таврăннă пулĕччĕ,—терĕç.

Çавăнпа вара хăйне çирĕм пилĕк хутчен хулăпа çапмалла турĕç. Эпĕ уншăн хĕпĕртерĕм. Кун хыççăн качака хуçи кĕчĕ. Ку хăй ĕçне каласа пĕтерчĕ те, манран ыйта пуçларĕç. Эпĕ пĕтĕмпе каласа патăм. Вара судра каларĕç:

— Эсир ăна мĕншĕн выçă вырттартăр?—терĕç.—Сирĕн ăна çитермеллеччĕ, вăл вара апла туман пулĕччĕ!—терĕç.

Ку хуçана та вара, хăйнех айăпа хăварса, çирĕм пилĕк хутчен хулăпа çапмалла турĕç. Эпĕ тата хĕпĕртерех патăм. Вара, судран тухсан, хуçа килне каймасăрах, тӳрех хамăр киле таврăнтăм.

Çул çинче хамран инçе те мар икĕ тăрна тăра параççĕ. Кусене куратăп та, çавăнтах хыççăн чупса çитсе, урисенчен ярса та тытатăп. Кусем мана çаклатрĕç те çӳлелле йăтса вĕçе пачĕç. Эпĕ ним тăва та пĕлместĕп. Анма та хăратăп: анас марччĕ — тата çӳлелле илсе каяççĕ вара. Мĕн пулсан пулать тесе, алăсене яра патăм. Унччен те пулмарĕ — пĕр йӳçлĕх лачакана кĕрсе те лартăм кăкăр таран. Тухасшăн тапаланатăп, анчах тапаланнăçемĕн аяла анатăп.

Çавăнтах сасартăк ман патăма, уласа ярса, кашкăр персе çитрĕ те ман тавра çавăрăна пуçларĕ. Эпĕ ку хӳрине ман еннелле çавăрнă чух хӳринчен ярса илетĕп те — кашкăр хăранипе сирпĕне парать. Эпĕ мĕнле сиксе тухнине те сисеймерĕм. Кашкăр хăранипе имĕ-симĕ çук кайрĕ. Лере инçе те мар хăва тĕми ларать. Кашкăр курмасăр кун çине пырса кĕрет те, тирĕ хăва тĕми çумне çĕлĕк пек çакланса юлать. Хăй çавăнтах йăванса каять те вилет. Эпĕ, часрах чупса çитсе, çĕççе илсе, тирне сĕветĕп те киле илсе таврăнатăп. Киле çитсен, çавăнтан вара халиччен тарçа кайни çук. Каймастăп та, каяссăм та çук.

## ПИЧКЕ АШЕНЧЕ ÇУЛ ÇӲРЕРЕМ

Эпĕ аттепе вăрмана вутта кайнăччĕ Тĕттĕм пулсан, аташса юлтăм.

Ман умра пĕр пӳрт ларать, эпĕ унта кĕрсе кайрăм та вăрăм сак айне кĕрсе выртрăм. Ман çумра пăру выртать. Пăру мана çулла пуçларĕ те, эпĕ кусарпа пăру хӳрине лач татрăм. Пăру мя-е-е-ек! кăшкăрса ячĕ. Карчăкки калать стариккине:

— Çутă çут-ха.

Халь çутă çутрĕç те карчăккипе старикки мана туртса кăларчĕç. Карчăкки калать:

— Ма касрăн пăру хӳрине?—тет

— Мана çулласа выртать те, çавăн па касрăм,—тетĕп.

Карчăкки калать стариккине:

— Пичке илсе кĕр-ха, ăна пичке ăшне хупар,—тет.

Старикки пичке илсе кĕчĕ те, мана пичке ăшне хупса хучĕç. Пичкене, тула илсе тухса, çуна çине хурса, çырма патне çитсен, кустарса ячĕç. Эпĕ пичке ăшĕнче кăмпăртатса пыратăп Пĕр йывăç çумне пырса чарăнтăм Ман пата пĕр кашкăр пычĕ. Кашкăр пичке ăшне пуçне чиксе шăршла пуçларĕ. Эпĕ каларăм:

— Пуçна ан чик, хӳрӳне чик,—терĕм.

Вара хӳрине чикрĕ те, эпĕ хӳринчен ярса тытрăм. Кашкăр вăрманалла чупса кĕрсе кайрĕ. Эпĕ пичке ăшĕнче каллех кăмпăртатса пыратăп. Мана вăрманта пĕр хăвăл йывăç çумне çапăнтарчĕ те, пичке саланса кайрĕ кашкăрĕ хăраса тарчĕ. Эпĕ хăвăртрах йывăç хăвăлне кĕрсе лартăм.

Вăрмана çынсем йывăç касма пычĕç. Çитрĕç те çак хăвăл йывăçа касма пикенчĕç. Эпĕ кăптăртаттарма пикентĕм.

— Мĕскер ку?—теççĕ.

Эпĕ татах алăпа кăптăртаттаратăп Татах:

— Мĕскер ку?—теççĕ.

Хытă кăптăртаттартăм та, вара çынсем лашисене йăлтах пăрахса тарчĕç. Эпĕ хăвăл ăшĕнчен тухрăм та, пăчки-пурттисене илсе, лав çине хутăм та яла таврăнтăм. Çав лаша халь те колхозра ĕçлет.

# КУЛА-ЮМАХ — ÇУЛЛА САМАХ

## ТЕЛЕЙПЕ СИЕН

— Аçта кайрăн?
— Шăмата кайрăм та пăрçа илтĕм
— Ак, телей!
— Мĕн телейĕ. Килнĕ чух такăнса ӳкрĕм те, тăкăнса кайрĕ пăрçи.
— Ах, сиен!
— Мĕн сиенĕ. Киле килтĕм те, акрăм та — тӳшек пек пулчĕ пăрçи.
— Ак, телей!
— Мĕн телейĕ. Пуп сысни вĕренчĕ те çисе ячĕ.
— Ах, сиен!
— Мĕн сиенĕ. Пуп сыснине çапса пăрахрăм та пĕр кĕлет аш турăм.
— Ак, телей!
— Мĕн телейĕ. Пуп кушакĕ вĕренчĕ те йăлт çисе ячĕ.
— Ах, сиен!
— Мĕн сиенĕ. Пуп кушакне çапса пăрахрăм та — пĕр тăлăп пулчĕ.
— Ак, телей!
— Мĕн телейĕ. Пуп курчĕ те туртса илчĕ.

## КУПĂСТА ВĂРРИ

— Аçта кайрăн?
— Пасара.
— Мĕн илтĕн?
— Купăста вăрри.
— Акрăн-и, турăн-и?
— Акрăм-турăм та — Илме качаки çисе ячĕ.
— Ма хăваламарăн?
— Хăваларăм та — Атăл урлă каçсах кайрĕ.
— Атăлĕ çавнашкал пуль?
— Атăлĕ Атăлах: ача сиксе каçать.
— Ачу çавнашкал пуль?
— Ачи ачах: юман тăрне кутăн та пуçăн хăпарса анать.
— Юманĕ çавнашкал пуль?
— Юманĕ юманах: пĕр хĕл хутма çитет.
— Хĕлĕ çавнашкал пуль?
— Хĕлĕ хĕлех: хĕрсем хĕрĕх хутăр хутăраççĕ, арăмсем аллă хутăр хутăраççĕ.
— Хутăрĕ çавнашкал пуль?
— Хутăрĕ хутăрах: ял тавра вицçĕ çаврăнать.
— Ялĕ çавнашкал пуль?
— Ялĕ ялах: урлăшĕ ултă хăлаç, тăршшĕ тăхăр хăлаç.

## УЙĂХ ТУПНИ

Пĕр карчăкпа старик пурăннă, тет. Калăм каçхине карчăкĕ шыв ăсма тух-



нă, тет те, çăлта уйăх курнă, тет. Хăранипе пўрте чупса кĕрсе, старике каласа пачĕ, тет, ку.

Старикĕ турчăка илчĕ, тет те, карчăкĕпе уйăха çăлтан кăларма тухса чупрĕç, тет. Вĕсен турчăки çăл пуринчен çакланса ларнă, тет те, ну туртаççĕ, тет. Турчăкин аври тухса каять, тет те, карчăкĕ пĕр çĕре, старикĕ тепĕр çĕре сирпĕнсе каяççĕ, тет. Турчăки шыва шăмпăлт! тутарса анса каять, тет.

Старикĕ тăнă чух тўпери уйăха курах каять, тет, вара карчăкне, хулпуççинчен кăт! тĕксе:

— Ах, мур! Пўрте лартам теттĕм краççын вырăнне. Тухса хăпарса тарчĕ, шельмă!—терĕ, тет.

## ПУРПĔР ÇУРĂЛМАЛЛА

Пĕр çын пасара кайнă та такана илес тесе çўрет. Сутуçă патне пынă тет те:

— Такана мĕн хак?—тесе ыйтать, тет.

— Çав хак,—тесе калать, тет, сутуçă.

— Çурăкки пур-и, çурăкки?—тесе ыйтать, тет, лешĕ.

— Мĕншĕн сана çурăкки кирлĕ?—тесе ыйтаççĕ, тет, çынсем.

Вара:

— Вăл пурпĕр хăçан та пулсан пĕрре çурăлмалла,—тесе калать, тет, илекен.

Çапла укçа парса илнĕ те калană:

— Ме каллех, çур та çӗлесе пар,— тенӗ.

Сутуçӑ вара таканана çурса панӑ та уншӑн тата укçа илнӗ. Леш вара. çурса çӗленӗ таканана илсе, савӑнсах киле таврӑннӑ.

## ÇЫНСЕНЧЕН УЙРӐМ

Пӗр мухтанчӑк, хӑй валли пӳрт кӑмаки тутарма шухӑшласан, кӑмака тӑвакана чӗнсе пырса унран:

— Итле-халӗ, эсӗ ман пӳрт валли кӑмака туса парӑн-и?—тесе ыйта пуçларӗ, тет.

— Парӑп—тесе каларӗ, тет, кӑмака тӑваканӗ те.

— Туса парасса парӑн та, анчах эсӗ манӑн пӳрт кӑмакине мӗнле те пулин çынсенӗн кӑмакисенчен урӑх тӗрлӗ ту,—тет хуçи.

— Епле урӑх тӗрлӗ?—тесе ыйтать. тет, ку ӑнланаймасӑр.

— Мӗнле те пулин çынсенӗнчен урӑхларах пултӑр,—тет хуçи.

Кӑмака тӑваканӗ пӑртакçӑ шухӑшласа пӑхса тӑчӗ, тет те:

— Юрӗ, туса парӑп, çынсенӗнчен урӑхларах пулӗ,—терӗ, тет.

Хуçи киле кайсан, ку кӑмака тӑвакан ӑста пӳрт кӑмакине пӳртӗн тул енне турӗ хучӗ, тет те:

— Эпӗ пӳрт кӑмакине туса пӗтертӗм. атя епле тунине пырса пӑх,—тесе, хуçине кӑмака курма чӗне пуçларӗ, тет.

— Епле, çынсенӗн пек туса памарӑн-и?—тесе ыйтать, тет, хуçи.

— Çук, çынсенӗн пек тумарӑм,—тет ӑсти.

— Апла пулсан, атя-халӗ, епле тунине пырса курам,—терӗ, тет те, иккӗш курма тухса кайрӗç, тет.

Пӳрчӗ ӑшне кӗрсе пӑхсан, кӑмакине курмасӑр:

— Кӑмаку санӑн ӑçта?—тесе ыйта пуçларӗ, тет, хуçи кӑмака тӑвакан ӑстинчен.

— Пӳртӗн кӑмакине эпӗ тул енне туса лартрӑм,—тет ӑсти.

— Мӗншӗн апла унта туса лартрӑн?—тесе ыйта пуçларӗ, тет, хуçи тӗлӗнсе.

— Мӗншӗн тӑвасси-мӗнӗ, çынсенӗн пек тума хушмарӑн вӗт, çавӑнпа эпӗ пӳртӗн кӑмакине çынсенӗнчен мӗнпе те пулин уйрӑм тумашкӑн юри тул енне лартсаттӑм,—тет ӑсти те кулса.

## ВЫРӐСЛА ПӖЛЕКЕНСЕМ

Икӗ çын çулпа пынӑ, тет. Вӗсем иккӗш те вырӑсла лайӑх пӗлнипе мухтанаççӗ, тет. Пӗри:

— Торокӑ талеко твой?—тесе калать, тет.

Тепри:

— Хватайт ищӗ,—тесе калать, тет.

Малтанхи татах мухтанать, тет. Мухтанса пынӑ вӑхӑтрах чӗлӗмӗнчен хӗм сирпӗнсе сӑхманӗ çунма тытӑнчӗ, тет.

Тепри:

— Армяк корит твой,—тесе калать, тет.

Ку:

— Ӑнланмастӑп тесе калатним, ӑнланатӑп,—тесе калать. тет.

— Кориш вӗт!—тет тепри.

— Пӗлетӗп, пӗлетӗп,—тет ку.

— Армяк корит, армяк!—тет тепри.

— Снаю, снаю,—тет ку.

— Ну, сӑхману çунать вӗт ӗнтӗ. мӗн пуçна каçӑртса пыран!—тесе калать, тет, тепри, тӳсеймесӗр чӑвашлах.

— Эй-яй! Ма паçӑрах каламастӑн, çунса каятӑп вӗт!—терӗ, тет, ку.

## ТУТАРЛА ӐНЛАНМАНСКЕР

Мишер арӑмӗ пӗр чӑваш арӑмне хӑй патне хӑнана илсе каять. Сӗтел

çине питĕ нумай çимĕç касса хурать (баурсак, кăрт тата ытти те). Хай чăваш арăмĕн куçĕ-пуçĕ алчăрасах каять. Вăл пĕрне тутанса пăхать, тепĕрне тутанса пăхать. Çуне тивмествăл хăйĕн те пур, тутар япалисене çисе пăхма шутлать. Тутар арăмĕ куна çуне те çитерсе пăхтарасшăн, тет:

— Майĕпелен ашша, майĕпелен,— тесе калать, тет. («Çупала çи» тенине пĕлтернĕ ĕнтĕ ку.).

Чăваш арăмĕ, ăнланмасăр, ăнтан кайса ларать. Хăй ăшĕнче: «Халиччен ним курман пек васкаса çиме пуçларăм пуль»,—тесе калать, тет. Çапах та çикелет, тет-ха. Лешĕ татах:

— Майĕпелен çи, нестеке ашшамиссĕн?*—тет.

Ку пачах çиме чарăнать. Мишер арăмĕ халь пикенсех:

— Ницĕк ашшамиссĕн ами,** майĕпелен ашша, çиччас цей ĕçтереп,— тесе калать.

«Ку мана йĕкĕлтесе тарать иккен»,—тесе, пирĕн чăваш арăмĕ çилленсе партлатсах тухса каять.

Мишер арăмĕ: «Мĕнпе çиллентертĕм-ши?»—тесе, ăнтан кайса юлать. Тепĕр кун чăваш арăмĕ патне каçару ыйтма каять, хăй айăпсăррине пĕлмесĕрех. Калаçсан-калаçсан тин мĕншĕн çилленни палăрать. Тăраниччен кулчĕç, тет, хăйсем. Кайран пасара та пĕрле çӳретчĕç, тет, вĕсем.

* Мĕншĕн çиместĕн?

** Мĕн пирки çиместĕн?

## ПӐРНЕСЕМ

Пуç пӳрне ытти пӳрнесене:

— Атьăр кăвас хурар!—терĕ, тет.

— Çăнăх çук!—тесе калать, тет, шĕвĕр пӳрни.

— Кивçен илер!—терĕ, тет, вăта пӳрни.

— Илсен парасси!—тесе калать, тет, ятсăр пӳрне.

— Çиес те тарас!—терĕ, тет, кача пӳрне.

## ХӐЛХАСĂР КУМ

Пĕр çын пасара кайнă. Вăл кумăшне курчĕ те:

— Лайăх пурăнать-и?—тет.

Кумăш калать:

— Пуртă илтĕм!—тет.

— Сăра ĕçме пыр!—тет тепри

— Аллă пус патăм!—тет ку.

— Эс чăнахах пыр!—тет лешĕ.

— Эп, киле пырсан, аврине вĕренерен лартап,—тет кумăш.

— Ну, сыв пул, кум!—тет ку.

— Эпĕ ăна кĕленчепе якатап,—тет лешĕ.

## ТУПМАЛЛИ

Шăшие—вилĕм, кушака—кулă

Тилĕ тус . . . . . 3
Тилĕпе кашкăр . . 4
Тилĕпе упа . . . . —
Тилĕпе улакайăк . . . —
Кашкăр . . . . 5
Кашкăра ан шан . . . —
Ухмах кашкăр . . . 6
Упапа хĕрача . . . . 7
Ула качака . . . . 8
Качака такипе сурăх таки . 9
Вир юмахĕ . . . . 10
Мăйăр юмахĕ . . . 11
Вăкăр, така, автан, хур, кушак —
Пукане . . . . . 13
Юспа пăсара . . . 15
Чăхăпа услам çу . . . —
Ула куракпа хурчăка . . 16
Айван чăхă . . . . —
Виçĕ пулă . . . . —

Паттăрăн пуçĕ выртнă, хăравçăн йĕрĕ выртнă

Улăп ачи . . . . 17
Çунатлă урхамах . . . 18
Улăппа çăткăн алтăркуç . 19
Терпет хуна çĕнтерни . . —
Улăппа Супетей . . 20
Юман паттăр . . . 22
Туй-Тупалак . . . 36
Кĕрнĕк кайăк . . . 42
Иван . . . . . 49
Сарă кун çĕршывĕнче . . 52
Кехермен-Кетил . . . 58
Телей уççи . . . 60

Хăв тăвану—вут урлă!

Пикепе Хăрхăм . . . 63
Ультилет . . . . 67
Вупăр . . . . . 69
Альтук . . . . . 71
Амаçури . . . . . 73
Ылтăн шăллă хĕр . . 76
Хăв тăвану—вут урлă! . 77
Шанчăксăр çын йытăран начар 78
Ялан ăспа çӳресен, ялти ватă ятламан

Çĕр çинче мĕн вăйлă? . . 80
Ылтăн панулми . . . 81
Аслă хĕр . . . . . —
Асамçа вĕренни . . . 82
Чее кĕрӳ . . . . 85
Ялампи . . . . . —
Эсрел . . . . . 87
Хаяр карчăк . . . . 88
Кантăр кĕпи . . . 90
Ватă çынпа вилĕм . . 91
Шуйттанпа чухăн ача . —
Шуйттана хăратни . . 93
Иван кукăлĕ . . . 94

Тĕпсĕре тĕмен çитмен

Ултă хĕре çиекен . . . 95
Çил ачисем . . . 96
Пуйма каякан вилсе килнĕ . 98
Ултавçă пуян . . . 100
Ёмĕтсĕр пуян . . . —
Укçа . . . . . 101
Икĕ ывăл . . . . 102
Вăрăпа амăшĕ . . . 103
Çуллă пăтă . . . . 104
Мĕкĕте вăрă . . . —

Çын валли шăтăк ан алт, хăвах кĕрсе ӳкĕн

Йăванпа пуп . . . 107
Хуçапа тарçă . . . 109
Пуяна ултлани . . . —
Пуппа тарçи . . . 110
Чее хресчен . . . . —
Улпутпа шуйттан . . 111
Чее Çемен . . . . 112
Иртен-çӳрене ан кӳрентер . 113
Пуянпа тарçи . . . 114
Ашăтман тăлăп . . . 115
Пуппа тимĕрçĕ . . . 116
Кукша Йăван . . . —
Ухантейпе Селентей . . 118

Ухмах пуç урана канăç памасть

Сармантей . . . . 119
Тăхăр Тункăлтăк, пĕр Манкăлтăк 120
Сĕм-ухмахсем . . . 121

Чăшлатман яшка . . . 123
Лаша шырани . . . —
Селĕп хĕрсем . . . —
Çĕнĕ çын сĕт вĕретни . . 124
Пускилсем ямаççĕ . . —
Хуняшшĕпе кинĕ . . 125
Ял йĕри-тавра çаврăн . . —
Чараксăр арăм . . . —
Кĕрпе пĕрчи . . . . . —
Атăл урлă каçсан, ăс кĕрет . 126

Ĕçле, ĕçле, ĕçле çи, ĕçлемесен ан та çи

Кахал пуппа майри . . 127
Çĕвĕç . . . . . —
Кин шыракан . . . 128
Тӳнине шыракансем . . —
Кахал хĕр . . . . 129
Кахалпа юлхав . . . —
Чуста çăрма вĕренни . . —

«Тет» сăмах суя, тет

Суяпа чăн . . . . 131
Пӳрнеске . . . . 132
Пĕлĕт çӳллĕш пăрça хăмăлĕ . 133
Пуяс шухăша мĕншĕн пăрахрăм 134
Мулкач . . . . . 135
Тăриллĕк тăрна . . . 136
Йытăсемпе качака кӳлсе, пасара кайрăм . . . . . —
Суеçĕ . . . . . . —
Тарçăра ĕçленĕ чух . . . —
Пичке ăшĕнче çул çӳрерĕм . 138

Кулă-юмах — çуллă сăмах

Телейпе сиен . . . . 139
Купăста вăрри . . . —
Уйăх тупни . . . . . —
Пурпĕр çурăлмалла . . 140
Çынсенчен уйрăм . . 141
Вырăсла пĕлекенсем . —
Тутарла ăнланманскер . —
Пӳрнесем . . . . 142
Хăлхасăр кум . . . —

*Для старшего и среднего школьного возраста*

ЧУВАШСКИЕ СКАЗКИ

На чувашском языке

Составитель
*Г. Ф. Юмарт*

ИБ 1099

Редактор **П. Е. Димитриев**
Художник **В. И. Агеев**
Художественный редактор **Е. Е. Михайлова**
Технический редактор **Г. С. Самсонова**
Корректор **Н. П. Печникова**

Сдано в набор 5.01.82. Подписано к печати 13.05.82. НТ 11421. Формат 70×90¹/₁₆. Бумага типографская № 1. Гарнитура академическая. Печать высокая. Физ. печ. л. 9,0. Усл. печ. л. 10,53. Учетно-изд. л. 11,02. Усл. кр.-отт. л. 10,78. Тираж 60000 экз. Заказ № 28. Изд. № 84. Цена 60 коп. Чувашское книжное издательство, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли.
Чебоксары, Канашское шоссе, 15.